ШКУЛ БИБЛИОТЕКИ

*Кибеч*

# Улӑп таврӑнни

*роман-халап*

Шупашкар – 2001

***Çамрăк тусăм!***

*Вунулттăра-и эсĕ е вунçиччĕре – çакă вăл сахалах мар, шăпах хăвна çитĕннĕ çын пек тытмашкăн вăхăт çитнине пĕлтерекен тапхăр. Апла пулсан пурнăç лавне кӳлĕнсе хăв çине пысăкрах яваплăх илме иккĕленсе ан тăр, хăюллăрах пул.*

*Хамăр Улăп йăхĕнчен тухнине те манас марччĕ, чăваш чысне алла хĕç тытса хӳтĕленĕ паттăрсене тĕслĕх вырăнне хурса яланах асра тытасчĕ.*

**Чăн Улăп, ăçта эс!**

*Вăхăт-вăхăт Чăваш Улăпĕ – хисеплĕ Кибеч юлташăмăр çырса кăтартаканни пекки: чăваша чăмăртанма ăс-тăнпа пуçарулăх çитерекен, йăваш та сăпай пулнипе пĕрлех хăйне хисеплеме, хисеплеттерме, тивĕçлĕ шайра тытма пĕлекен, хăй халăхĕшĕн кар тăма хăват пур çын – ăçта çĕтсе çӳрет-ши çакнашкал Улăп, хăçан килет-ши, килетех-ши, килтĕрччĕ текен шухăш киле-киле хупларĕ мана Анатолий Ильич Кибечĕн «Улăп таврăнни» çĕнĕ кĕнекине вуланăçем. Пит кăмăлласа, пуçа ун-кун ĕçлеттерсе паллашрăм унпа. Авторĕ ăна литература жанрĕ енчен роман-халап тесе палăртнă.*

*Çĕр пичĕ çинчи ытти халăхсемпе пĕрле XXI ĕмĕре тĕпĕртетсе кĕрсе кайнă чăвашсемшĕн, ай, пит кирлĕ-çке хăйсен Улăпĕ – чăнчăн Аслă Ертӳçĕ. Аслă Ертӳçĕ тейĕпĕр тата! Тĕнче тăрăх сапаланнă вăйсене пуçтарма пултаракан, эрех-сăрана пула кунран-кун хавшаса пыракан наци генофондне сыхласа хăварма майсем туса паракан çыннăмăр ăçта-ши? Роман-халапри Эсрел сăнарĕ маншăн шăп та лăп çав эрех-сăра пек те туйăнса кайрĕ... Пире хирĕç тăракан, уççăнах инкек-синкек сунакан халăх çук пулĕ тетĕп паянхи саманара. Пĕр халăх теприне хирĕç тăни, пĕтерес, пăхăнтарас тени, пуринчен те хăрушши вара вăрçăпа килес тени пирки шутлассăм та килмест. Ку – хăрушă. Ку – çутçанталăка хирĕçлени, унăн саккунĕсене пăхăнманни. Эрех-сăра нушийĕ-терчĕ тесен вара... Çак усал та хăватлă япала этеме шалтан пĕтерет, шĕкĕ пекех шĕкĕлчет. Пурсăмăра та шĕкĕ ерсен пĕтетпĕр вара чăнласах.*

*Писатель шухăшлавĕпе килĕшмесĕр тăма пултараймастăп: эрехсăра халăх ăс-тăнне хытă хавшатать. Ĕçекен çын шухăшлама пăрахать. Уншăн пурте ик айкки те тăвайкки – çакнашкал малашлăхсăр принциппа пурăнма тытăнать вăл. Анчах кам килсе туса парĕ ку пурнăçри çăтмаха, ырă та урă пурнăça? Хамăр пулмасан – кам-ха тата! Халап-юмахри Улăп-шим пирĕн пĕртен-пĕр çăлăнăç? Вăл та, вăл кăна та мар. Пĕрремĕшĕнчен, чăваш ăс-тăнĕнче Улăп сăнарĕ ахальтен çуралман ĕнтĕ вăл. Мифологие ĕненме май пулмасан та, вăл чăнлăха çывăх. Çын хăй тăвас тенине, ĕмĕтленнине пурнăçра тăваймасан та, юмах-халапра та пулсан курасшăн çакна. Иккĕмĕшĕнчен, хамăр пурнăçăн хуçи эпир хамăрах. Шăпа вăл шăпана мар, ăна эпир хамăра валли хамăр суйласа илетпĕр: е – ун пеккине, е – кун пеккине. Кибечĕн роман-халапĕнчи Улăп сăнарĕ вăл – символла сăнар, ырра шырани, ырра кĕтни. Эппин, пирĕн пурăнăç çаврăмĕ*

*пĕтĕмпех эпир ăна мĕнле йĕркеленинчен майлашăнса пырать. Нарпи пек маттур пикесенчен, Алмас пек хăюллă йĕкĕтсенчен. Алмас сăнарне çыравçăн тата та вăйлатмалла пулнă-и, тен. Тепĕр паттăр герой – Юман пур-ха ĕнтĕ. Улăп тĕпренчĕкĕ, Улăп тĕпкĕчĕ вăл. Анчах ăна çуратнă Эльпин сутăнчăклăхне ан манăр. Чăвашсем çав-çавах сапаланчăк пулĕç-шим?!*

*Ырăпа Усал хирĕçтăрăвĕ, Ырăлăх çĕнтерме тивĕçли, çĕнтерессе ĕненни, çак аслă кĕрешӳре пĕрлĕх кирли пирки астутарать писатель хăйĕн кĕнекинче. Çынпа çын, йăхпа йăх, халăхпа халăх килĕшӳллĕ, туслă пурăнсан тин Ырă Усала çĕнтерме пултарĕ – акă произведенин тĕп шăнăрĕ, тĕп шухăшĕ.*

*Чăваш вăл йĕркеллĕ пурнăç йĕркине тытса пырать, ман шутпа: ĕçлесе çиет. Çĕр сухаласа, ака-суха ĕçне чыслăн туса. Ыттисем çине шăл хăйрамасть, ют пурлăха хапсăнмасть, вăрçă-çапăçу кăлармасть. Анчах хăйне кӳрентерме те памасть. Ан тив, ту-сăртсем çукрах пирĕн, çапах çынлăх пур-ха, чун ăшши пĕтмен, кăмăл-сипет пуянлăхĕ иксĕлми. Пуррине – сыхласа хăварасчĕ. Çырма-çатра тĕпĕнче мĕкĕлтетсе çӳренипе пит малалла каяймăпăр. Çаксем çинчен тата çаксем çинчен кăна та мар шухăшлама хистет çыравçă. Чĕлхи çăмăл та сĕтеклĕ писателĕн, ансат сăмахсемпех вулакан чун-чĕри патне çул тупать.*

*Тĕрĕссипе илсен, «Улăп таврăнни» роман-халап çырма Кибечĕн вăрăм та çăмăл мар пурнăç çулĕ утса тухма тивнĕ. Вăрçă ачи (1937 çулта çуралнă), выçăллă-тутăллă ӳснĕ, анчах вĕренесшĕн çуннă. Институт хыççăн педагогика наукисен кандидат диссертацине ăнăçлă хӳтĕленĕ, аслă вĕренӳ шкулĕсенче мĕн пурнăç тăршшĕпех доцент тивĕçĕпе студентсене вĕрентет, пĕрлех чăваш литературинче вăй хурать. «Пурнăç кĕнеки», «Пурнăç çулĕ такăр мар», «Хĕç тумалли хурçă», «Юратусăр телей çук» кĕнекесем çырса кăларса хăйĕн вулаканне тупрĕ, «Ĕмĕр сакки сарлака», «Тăван ялăм», «Телей» тата ытти хăшпĕр юрăсен сăмахĕсене çырса чăваш юрă искусствине малалла аталантарчĕ.*

*Ырми-канми ĕçлет те ĕçлет Анатолий Ильич Кибеч. «Улăп таврăнни» роман-халапĕпе тепĕр хут çирĕплетрĕ вăл хăйĕн чăваш литературинчи сассине. Чăн Улăп, ăçта эс? – çак шухăша чăнласах вăратрĕ вулакан чун-чĕринче.*

***Юлия Силэм, писатель,***
***ЧР культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ,***
***Петровски наукăпа искусствăсен академийĕн действительнăй членĕ.***

Тăвалла пулсан та харсăр
Утмалла сан малалла.
Ут, хуламăр, ывăнмасăр –
Улăп йăхĕ санпала.

*(«Шурă Шупашкар» мухтав юрринчен).*

## I

Уйăхпа та, Хĕвелпе те калаçрăм, Çĕр-Анненe хăлхапа тĕкĕнсе ун халапне тимлĕн итлерĕм, Атăл-Аттерен те чылай ыйтса пĕлтĕм; вара çакă паллă пулчĕ. Каласа парам-ха сана, хаклă вулаканăм.

Ку пулнă тахçан авал, ĕлĕкхи чăвашсем пурăннă вырăнта, Эсрел хуçаланнă вăхăтра.

Пурнăç йĕрки çапларах ĕнтĕ, кашни кунах мĕн те пулин пулса иртет; тĕлĕнмелли те, савăнмалли те, кулянмалли те тупăнсах тăрать. Тепĕр чух тата пĕр япалах пĕриншĕн – савăнăç, теприншĕн – куляну.

Акă паян тул çутăлнă-çутăлманах ирхи шăплăха юрă вăратрĕ.

Нимене! Нимене!
Хура халăх, нимене!
Ял-йыш, пускил, нимене!
Атьăр пурте нимене,
Арман пĕви пĕвелеме!
Хура халăх кар тухсан
Пĕве хăвăрт çĕкленет,
Тĕпне чипер хĕр хурсан
Пĕве çирĕпрех пулать.
Атьăр пурте нимене,
Нимене! Нимене!

Çакă юрра çынсем илтрĕç, алла кĕреçе тытрĕç те арман патнелле уттарчĕç. Çырми чылай тарăнскер, çавăнпа та пĕвине самай çӳллĕ хăпартмалла. Унсăрăн арман чулĕ çавăрăнмасть.

Пур япалан та йĕрки пур тенĕ пек кунта та çавах. Малтан шыв хĕринче ӳсекен тĕмĕсене каса-каса лашапа турттарчĕç, пĕлтĕрхи кивĕ улăм та тупăнчĕ; теприсем вара чава-чава пăхса тăмлăрах тăпра вырăнĕ тупрĕç. Аялта, çырма тĕпĕнче, арçынсем сăвай çапаççĕ, юрла-юрла ĕçлеççĕ.

Арман хуçи пире чĕнчĕ:
Сăвай çапса пар терĕ.
Сăвай, сăвай, çирĕп лар,
Çĕр тĕпнелле анах пар!
    Ай – пĕрре!
    Хай – иккĕ!
    Ай – виççĕ!
Арман хуçи пире чĕнчĕ:
Пĕве ĕçки пулать терĕ.
Сăвай укçи ан пултăр,
Шыв тулнипе хуçăлтăр,
Шыв юххипе укçи юхтăр!

Сăвай çапасси вăл самай кăткăс ĕç. Тукмаккине виççĕн е тăваттăн харăс çĕклесе хыттăн туртса çапмалла. Тӳрĕ лекмесессĕн усси сахал, вăй пĕтерни çеç. Сăвай тукмаккине йăтса хăпартнă чухне те ыттисенчен юлмалла мар, унсăрăн йывăр тукмак хăв еннелле сулăнма пултарать. Ун пек чухне ыттисем ятлаçса илеççĕ, вăй хумасăр ĕçлет теме те пултараççĕ. Кунта ыттисем çине тайăнса ĕçлеме май çук. Веçех сăвай тукмакки кăтартса парать. Паллах, вăйпитти арçынсемпе юнашар тăрса çам-

ракcен те çапса пăхас килет. Вĕсене те пĕрерĕн-пĕрерĕн тăратса пăхаççĕ, ĕçе хăнăхтараççĕ. Паян та çавах, чылайăшне тĕрĕслесе пăхрĕç, анчах шăнăрланса çитнисем нумаях мар-ха. Пуринчен маттурри Алмас пулчĕ, арçынсемпе шаях ĕçлерĕ, турхан ывăлĕ пулсассăн та халăхпа пĕрлех вăй хучĕ. Сăлтавĕ те паллă ĕнтĕ. Ватă Ватрас çапла хушрĕ. Хайĕн вăйĕ чакса пынăçемĕн турхан туйине ывăлне парас шухăш кунран-кун вăйланса пычĕ. Юратьха ăна арăмĕ арçын ача парнелерĕ. Атту хĕрача та хĕрача...

Алмас вара йĕкĕреш çуралнă пулсассăн та патвар ӳсрĕ, сăнран та илемлĕ, хăйĕнчен кăшт маларах çуралнă Калимаран туртса илнĕ тейĕн...

Юлашки сăвая çапнă чухне арçынсем тата савăнăçлăрах юрлама тытăнчĕç. Кун хыççăн вара шыва пӳлсе лартасси кăна юлать.



Акă инçех те мар макăрни, кăшкăрашни илтĕнсе кайрĕ. Пĕве тĕпне хума суйласа илнĕ хĕре çавăтса килеççĕ. Аллисене пăявпа çыхса иккĕн туртса пыраççĕ. Хыçалтан пĕр уксах арçын нухайккапа çапа-çапа илет, хĕрне çăлма пикеннĕ амăшне тĕке-тĕке ярать. Лешĕ уласах макăрать, нухайккапа туртса çапнине те туймасть. Ним тума аптранипе çынсем патнелле çавăрăнса тăрса: «Пулăшăр! Эсир те пулин хута кĕрĕр! – тесе кăшкăрса ячĕ. – Пĕртенпĕр ача вĕт-ха вăл манăн».

«Илемпие суйласа илнĕ иккен», – илтĕнчĕ пĕр сасă.

Пĕр самантлăха никам та нимĕн шарламарĕ, пурте Илемпие шăтарас пек пăхса тăчĕç. Лешĕ юлашки вăйне пухса каялла туртăнать, иккĕн аран уттараççĕ. Акă Илемпи тӳнсе кайрĕ. Ăна малалла сĕтĕре пуçларĕç.

Сасартăк Алмас сиксе тухрĕ те Илемпие çĕклесе тăратрĕ.

– Ярăр ăна! Аллисене салтăр! – терĕ Алмас.

– Пăрăн çул çинчен! Кашни шăхлич хушнине итлесе тăрсан кунта...

– Алмас, мана пĕве тĕпне хураççĕ, – илтĕнчĕ хурлăхлă сасă.

Алмас леш икĕ арçынна тĕксе ячĕ те Илемпи аллисене çыхнă пăява салтма тытăнчĕ.

– Мĕн пăхса тăрататăр! Кăçал пĕвесĕрех юлас тетĕрим?! – кăшкăрчĕ уксах арçын нухайккипе Алмас çинелле хăмсарса. Анчах тахăшĕ ун аллине ярса тытрĕ, турхан ывăлне çапма памарĕ. Алмас та çиллине чараймарĕ, нухайккана туртса илчĕ те уксах арçынна туртса çапрĕ.

– Турхан ывăлне хăмсаратăн иккен?! Аттене каласа парсассăн...

– Кала, кала. Çак ĕçе эпĕ шăпах турхан хушнипе тăватăп.

– Пулма пултараймасть.

– Ёненмесессĕн мăчавăртан ыйтса пăх. Иккĕш пĕрле шут тусах Илемпие суйласа илчĕç.

– Алмас! Çăлсам ман хĕрĕме! Юратать вăл сана! – кăшкăрчĕ пĕтĕм вăйран Илемпи амăшĕ.

Çак сăмахсене илтсен чылайăшĕ пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Чухăн Илемпипе пуян çын ывăлĕ Алмас хушшинче вăрттăн юрату пулнă-çке. Ку таранччен ăна никамах та сисмен. Çакă вара чăн-чăн тĕлĕнтермĕш мар-и? «Мăчавăра чĕнсе килем-ха. Ниме апачĕ пĕçернĕ çĕртехчĕ вăл», – терĕ те пĕри арман патнелле чупса кайрĕ...

Чăнах та, çурхи шав тапранса киле пуçласан çынсем тӳрех арман пĕвине аса илеççĕ. «Турă çăлса хăвартăр çав пĕвене», – текенсем темĕн чухлех. Уйрăмах çак тапхăр çитĕннĕ хĕр пуррисене канăç памасть. Ĕлĕкрен пыракан йăла пулсассăн та, никамăн та хăй ачине ирĕкпе парас килмест вĕт-ха. Çын вăл çав тери хаклă япала. Йӳнĕпе пулмасть. Ăна ӳстерме пайтах вăй хумалла: укçа-тенкĕ те, апат-çимĕç те, кĕпе-тумтир те...

Ĕнер каçпала вара шăпа Илемпи çине ӳкрĕ. Мăчавăр сĕннипе ĕнтĕ. Çавă çине тăчĕ. Ватрас турхан килĕшрĕ. Халĕ ĕнтĕ каялла çул çук. Вĕсен сăмахĕнчен иртме юрамасть.

Акă мăчавăр хăй те çитсе тăчĕ.

– Мĕншĕн ĕçлеместĕр вара. Кун пек каçчен те пĕвелесе пĕтерейместĕр вĕт, – терĕ сумлă шурсухал.

– Алмас чарать, – сас пачĕ уксаххи.

– Илемпие памастăп! – терĕ Алмас.

– Ывăлăм, çакă вăл санран килмест. Илемпие турă суйласа илнĕ. Унран никам та иртме пултараймасть, – лăплантарма пикенчĕ мăчавăр. – Пирĕнтен тухнă йăла мар. Чăтас пулать.

– Çук! Хĕрĕме памастăп! – сиксе ӳкрĕ каллех амăшĕ.

– Чарăн! – хытарчĕ сассине мăчавăр. – Турра ан çиллентер. Савăнас вырăнне йĕрсе тăратăн. Шыв туррине паратпăр вĕт.

– Мĕншĕн ман хĕрĕме илет-ха вăл? Сан мăнукна мар?

– Вăхăт çитсессĕн ăна та парăпăр, – терĕ те мăчавăр Алмаса аллинчен тытса айккинерех çавăтса кайрĕ.

– Мĕн çывăрса тăратăр! Туртăр малалла! – кăшкăрчĕ уксах арçын Илемпие çапса илсе. – Ут!

– Ут, Илемпи, ут! – илтĕнчĕ тахăшин сасси. – Пĕве никĕсĕ пулăн. Вара пире те çăмăллăх пулĕ.

– Эсир тата мĕн пăхса тăратăр! Пулăшăр! – хушрĕ уксаххи.

Унтан темиçе арçын пăяхран пырса тытрĕç те Илемпие сăвайсем патнелле çавăтса анчĕç.

– Алмас! Мана курас килсессĕн пĕве тĕпне анса пăх! – пулчĕç Илемпин юлашки сăмахĕсем. Çав самантра ăна шыва ӳкерчĕç, ун çине çапă çĕклемĕсем пăрахса темиçен улăхса тăчĕç. Йывăç тураттисем хуллен чĕтренсе илчĕç те лăпланчĕç. Вара пурте ĕçе пуçăнчĕç... Тавралăха хурлăхлă юрă сарăлчĕ.

Тĕпне чипер хĕр хурсан
Пĕве çирĕпрех пулать,
Тĕпне чипер хĕр хурсан
Пĕве ĕмĕрлĕх пулать.
Атьăр пурте нимене!
Нимене! Нимене!

Çак сăмахсене илтсен Алмас чăтса тăраймарĕ, куçне шăла-шăла килнелле вĕçтерчĕ...

Çамрăк Алмас çапла кулянса хуçăлнине килтисем ку таранччен курманччĕ-ха. Мĕн тăвас тейĕн, юрату хăватлă япала иккен. Алмасшăн вара чи пысăк çухату пулчĕ. Ăнсăртран та мар, ашшĕ ирĕк панипех.

– Пĕлмен эпĕ, ывăлăм, пĕлмен, – лăплантарма пикенчĕ Ватрас. – Пĕлнĕ пулсассăн та...

– Пĕлнĕ пулсан вара?

– Сан валли мар вăл. Чухăн хĕрарăм хĕрĕ кăна вĕт-ха. Эсĕ хăв камне пĕл. Турхан ывăлĕ валли урăххи кирлĕ.

– Çук, маншăн текех Илемписĕр пурнăç çуккă. Хĕвел те хура тĕслĕн курăнать.

– Тепĕр тесен тата... Тупнă кулянмалли. Хĕрарăм пур чухне хĕр пĕтмест теççĕ вĕт. Тата чиперрине тупăн-ха. Хулăм укçине лайăхрах тӳлесен Эсрел хĕрĕ те качча тухĕ сана.

– Атте, кала-ха, мĕншĕн ман юратăва шыва пăрахрăр. Тепĕр тесен... Пĕве патне каятăп та Илемпипе юнашар выртатăп.

Алмас юрта алăкĕ патневаскарĕ, анчах ун çулне Вартас турхан пӳлчĕ.

– Чарăн тенĕ сана! Кур-ха ăна... Кунта кам хуçа? Кама юратма хушатăп, çавна юратăн.

Çак самантра юртăна Ватрас арăмĕ Амине тата Алмас аппăшĕ Калима кĕрсе тăчĕç.

– Мĕн пулса иртет вара кунта? Хыттăн калаçни инçетренех илтĕнет, – терĕ амăшĕ.

– Çакă калаçнине илтес пулсассăн... Илемпипе пĕрле кайса выртатăп тет, – тĕллесе кăтартрĕ Ватрас турхан туйине çĕклесе.

– Илемпи пирĕн кин пулать пуль тенĕччĕ. Ай, мĕнле хитреччĕ вăл, – персе ячĕ аппăшĕ ăна-кăна чухласа илейменскер.

– Ку та çав юррах юрлать. Амăшĕ, чар-ха ăна.

– Ачамсем, лăпланăр-ха. Илемпие пире валли мар, турă çумĕнче пулма çырнă ĕнтĕ ăна. Халăх парни вăл. Ун пек чухне кулянма хушман. Пĕви кăна çирĕп лартăрччĕ. Атту каллех çăнăха алă арманĕпе авăртма тивĕ.

Тулта йытă сасси илтĕнсе кайрĕ. Хаяррăн мар ĕнтĕ, темле йăпăлтатса вĕрни кăна. Юртăна леш уксах арçын кĕрсе тăчĕ те Ватраса çынсем питĕ кĕтнине пĕлтерчĕ. Ниме апатне турхансăр пуçламаççĕ ĕнтĕ. Вара вĕсем хăвăрт тухса утрĕç.

– Çак уксаха хăйне пĕве тĕпне хумаллаччĕ, – пуçларĕ каллех калаçăва лăпланса çитеймен Алмас. – Çавă питĕ çине тăчĕ. Ун çине пăхас та килмест.

– Лăплан, ывăлăм, лăплан. Чăтас пулать. Алла ил хăвна. Юрату вăл ирĕклĕ кайăк мар çав. Ун çулне пӳлекенсем тупăнсах тăраççĕ.

– Чăнах та, уксах тарçă та ура хучĕ, – хутшăнчĕ калаçăва Калима, Алмас хутне кĕме киленсе.

Ачасем ĕнтĕ. Чылай япалана ăнланмаççĕ-ха. Хăйсем мĕнле шутланă – çавăн пек пулмалла теççĕ пуль. Ватă Ватрас шухăшне ăçтан пĕлччĕр-ха вĕсем? Ун халĕ пĕртен-пĕр ывăлне турхан пулма хатĕрлемелле. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна хăйпе пĕрле илсе çӳреме пуçларĕ, аслашшĕ çинчен те чылай каласа пачĕ. Япăх йăхран мар иккен вĕсем. Халăх та хисеплет, пăхăнать те. Апла-тăк, Алмасăн арăмĕ те лайăх йăхран пулмалла. Ку вăл каламасăрах паллă. Тепĕр тесен тата Алмаса авлантарасси пирки калаçма иртерех-ха. Пурнăç тути-масине чухлакан пултăр. Çапах та шăпа кăçал мĕншĕн Илемпие тиврĕ-ха, те ăнсăртран, те кăштах мăчавăр тăрăшнипе. Кун пирки каярах паллă пулĕ-ха...

– Ачамсем, çав уксах Миккана ытлашши ан ятлăр-

ха. Ун тивĕçĕ çапларах: турханпа мăчавăр хушнине тумалла. Тата çакна калам: вăл яланах уксах пулман, аçуна упа туртса çурасран çăлнă чухне суранланнă. Çавна шута илсех ĕнтĕ ăна хăй çумĕнче тытать. Шанчăклă тарçă вăл, куçĕ те, хăлхи те çивĕч. Вăл курни, вăл илтни аçушăн çеç мар, пирĕншĕн те усăллă.

– Анне, кала-ха, эсĕ аттене юратса качча тухнă-и? – ыйтрĕ сасартăк Калима.

– Ак тамаша, мĕнле юрату хурчĕ сăхнă çак сире? Ман юрату пирки тата мĕн тума... Аванах пурăнатпăр вĕт.

– Пĕлес килнипе ыйтатăп-çке, – çине тăчĕ Калима.

– Юрату пулмасассăн эсир те çуралас çукчĕ ĕнтĕ, – татса хучĕ амăшĕ çакă кĕтмен çĕртен сиксе тухнă калаçуран тĕлĕнсе.

Халиччен кун пекки пулманччĕ-ха. Вăхăтсăр çĕре кĕнĕ аслă хĕрĕсем урăхларахчĕ. Кусем вара... Алмаса кура Калима та хăюллансах пырать. Пăх-ха, мĕнле ыйтусем парать вăл?

Вăхăт каç еннелле сулăннă ĕнтĕ. Шăпах вăййа хатĕрленмелли самант. Ăна хĕрпе каччă чĕри хăвăрт сисет. Пуçра пĕртен-пĕр шухăш явăнма тытăнать: часрах вăййа тухасчĕ те савнă туса тĕл пуласчĕ. Калима Алмаса пĕрле чĕнчĕ, анчах амăшĕ урăхла шутларĕ, Алмаса ямарĕ. Çак пăлхануллă самантра ăна куçран вĕçертес мар терĕ пулас.

Калима тухса кайсассăнах ялăн тепĕр вĕçĕнче пурăнакан йăкăлти хĕрарăм Чĕкеç пырса кĕчĕ. Пулать вĕтха ун пекки, йĕвенсĕр кĕсре. Таçта та çитет, тем те илтет, арçынсене те тиркесех тăмасть. Яланах савăнăçлă. Халĕ те çавах.

– Ĕнер Анаткасра хăнара пулнă хыççăн унтах çы-

вăрнăччĕ те... Яла килсен никамах та тĕл пулмарăм, таçта кайса пĕтнĕ. Кунта калаçнине илтрĕм те...

– Халăх паян нимере, пĕве пĕвеленĕ çĕрте. Эсĕ кăна...

– Апла эппин. Килнĕ-килнех, Амине, кăштах тинкĕле парса ямăн-ши? Санран илни темшĕн тутлăрах пек туйăнать.

Амине сăмахласа тăмарĕ, хăвăрт чăланалла тухса кайрĕ. Лешĕ вара каллех Алмас çинелле шăтарас пек пăхса хăй сăмахне пуçларĕ:

– Мĕншĕн çав тери тунсăх вара эсĕ? Таврана çумăр пĕлĕчĕ хупласа илнĕ чухнехи пекех, пĕр çутă пĕрчи те сисĕнмест. Хĕрна вăрласа каймарĕç пуль те? Илемпипе çӳрет тетчĕç пулас.

Каллех çак хĕрарăм. Миçе хутчен асăрхаман ăна Алмас. Урамра тĕл пулсассăн та чарăнса тăрсах калаçма пикенет вара. Мĕн кирлĕ-ха ăна? Юлашки вăхăтра тата вылянуллăрах пăхнă пек те туйăнать. Нивушлĕ вăйпитти качча куç хывнă вăл? Çамрăксене юрату вăййине хăнăхма пулăшать теççĕ ун пирки. Хăй пирки мĕнле сăмах çӳренине пĕлет-ши? Ним именмесĕрех турхан килне кĕре-кĕре тухать тата.

– Чарăн-ха шăл йĕрме, çăварна хуп,– татса хучĕ Алмас.

– Апла мар, Алмас тусăм. Манпала хаяррăн калаçма кирлĕ мар, çепĕçрех пул. Хисепле мана.

– Мĕншĕн хисеплемелле сана?

– Кӳрентерме юрамасть мана. Ма тесессĕн эпĕ Ватрас килĕшĕн çав тери йӳнĕ çынах мар.

– Эсĕ мĕн хак тăнине пĕлетпĕр ĕнтĕ.

– Çук, йăнăшатăр, пурте йăнăшатăр. Тен, ман ăшра калама çук пысăк пуянлăх, тен, эпĕ тунă ĕçĕн пĕлтерĕшĕ çулран-çул ӳссе пырĕ. Тен, мана пĕтĕм халăх тав тăвĕ.

Çак сăмахсем Алмаса самай кулăшла илтĕнчĕç. Ун-

чченхи кăмăлпа пулсассăн ахăлтатсах кулса янă пулĕччĕ. Паян вара кулма вăй çитереймест.

Амине тинкĕле йăтса кĕчĕ, чĕрес туллиех. Ăçта ярса парас вара тесессĕн, хĕрарăм кĕпе аркине çĕклесе тытрĕ. Унăн çара урисем пĕççи таранах курăнса кайрĕç. Арçыншăн самай илĕртӳллĕ самант тесен те юрать. Илемĕ пурах çав. Çавă илĕртет. Чĕрес пушансассăн хĕрарăм тухса кайрĕ. Алмаса ятран чĕнсе сывлăх сунса хăварчĕ, хăй хаклă çын пулнине тепĕр хут аса илтерчĕ.

– Мĕншĕн хăйне питĕ хăюллăн тыткалать вара вăл? – ыйтрĕ тĕлĕнсе Алмас. – Темле вăрттăнлăх пур пек. Сисетĕп-ха, эсĕ те ун умĕнче парăмри çын пекех тыткалатăн хăвна, мĕн ыйтнине веçех паратăн. Пĕрремĕш хут кăна асăрхамастăп ĕнтĕ. Пирĕн килтен нихăçан та пушă алăпа тухса каймасть.

– Çынни çапласкер вăл, ĕçлеме юратманскер. Йăкăртатса çӳресех ĕмĕрне ирттерет пуль. Çитĕр ĕнтĕ. Çынна панипе чухăна юлас çук. Анчах аçуна калас марччĕ. Пурлăха салататăр тесе ятлаçма пултарать.

Чĕкеç килсе кайнă хыççăн Алмасăн кăштах лăпланма пуçланă чунĕ тепĕр хут ыратса кайрĕ, сывлăш çитмен пек туйăнчĕ. Вара вăл урама тухрĕ, ниçта та каймастăп тесе сăмах пачĕ. Тухнă-тухманах юрта çумĕнчи пысăк чул çине ларчĕ те шухăша путрĕ...

Мĕнле-ха капла, ку тарана çитиччен уншăн нимле чару та пулманччĕ. Мĕн çиес тенине çинĕ, мĕн тăхăнас килнине тăхăннă. Кăçал вара ашшĕ ун валли акатуйĕнче ăмăртса чупма тесе таçтан инçетрен питĕ чаплă урхамах тупса килчĕ. Пурте Алмас валли... Паян вара тĕнче тепĕр майлă çавăрănса ларчĕ тесен те юрать. Пулас турхана хирĕçле вăйсем те пур иккен. Веçех ваттисем шухăшланă пек пулса пырать. Юратупа та çавсем хуçа.

Ирĕклĕ ачалăх пĕтрĕ пулать. Пачах та çутçанталăкри пек мар. Акă инçех мар кăвакарчăн ушкăнĕ вĕçсе иртсе кайрĕ. Каçа хирĕç таçта васкаççĕ? Ирĕклĕ вĕсем. «Мĕншĕн аллăмсем вырăнне çунатсем мар-ши? Çавсемпе пĕрле вĕçĕттĕм те кайăттăм», – шухăшласа илчĕ Алмас.

– Çакăнта кам та пулсан пур-и çак? – илтĕнчĕ юнашарах хĕрарăм сасси. Шухăша путнă çамрăк хăй патне çын çывхарнине асăрхаман та. Ун патĕнченех туя тытнă суккăр хĕрарăм утса пырать.

– Кинеми, ăçталла çул тытатăн вара? – ыйтрĕ Алмас.

– Тинех сас паракан тупăнчĕ. Мĕнле йăх çыннисем пурăнаççĕ вара кунта, турханĕ кам?

– Кашкăр йăхĕнчен эпир, Ватрас турхан çыннисем.

– Эй, çӳлти турă! Тинех киле илсе çитертĕн, – терĕ те хĕрарăм чĕркуçленсе ларса çĕре пуç çапма пуçларĕ. Хулпуççи урлă çакнă хутаççи айккинелле ӳкрĕ. Шăп çав самантра Алмаса вăрттăн асăрхаса тăракан амăшĕ курăнса кайрĕ.

– Ăçтан вара эсĕ? – ыйтрĕ Амине.

– Эсрел патĕнчен килетĕп.

Çакна илтсессĕн ывăлĕпе амăшĕ нушаллă хĕрарăм вĕсен умĕнче мĕншĕн пуç çапнине тавçăрса илчĕç, хайскере икĕ енчен тытса ура çине тăратрĕç...

## II

Ниме çыннисем ĕç пĕтнĕ хыççăн çăвăнса тасалчĕç те арман çурчĕ патнелле утрĕç. Вĕсене халĕ сип-симĕс çерем çинче ниме апачĕ кĕтет. Вучахран инçех мар вăрăм каскасем хурса тухнă. Кăшт айккинерех кăвайт йăлкăшса



çунать. Акă арман хуçи пӳртĕнчен темиçе çын тухрĕ. Малта Ватрас турханпа мăчавăр утаççĕ, кăшт хыçаларах – арман хуçипе кĕске сакă йăтнă икĕ арçын, чи хыçалтан иккĕн вăйпа тĕксе сăра пички кустарса пыраççĕ. Турхан килнине курсанах çынсем ун еннелле çавăрăнса тăчĕç. Вăл çывхарсанах çамрăксем чĕркуçленсе ларчĕç, ваттисем пуçне пĕкрĕç. Ватрас турхан туйи çине тайăнса сак çине ларчĕ, хăйпе юнашар мăчавăра лартрĕ. Унтан вара вăрăм каскасем çине ватăраххисем вырнаçрĕç, çамрăксем çерем çинче вырăн тупрĕç.

Арман хуçи турхан еннелле çавăрăнса тăчĕ те:

– Эй, мухтавлă турханăмăр Ватрас, пире пичке пуçлама ирĕк парсам, – терĕ.

– Пуçлăр!

Малтанхи алтăра арман хуçи Ватрас патне йăтса

пычĕ. Анчах ăна мăчавăр тытрĕ те темиçе хутчен сыпа-сыпа пăхрĕ, вара тин турхана тыттарчĕ. Лешĕ ĕçсе пăхнă хыççăн: «Пĕви çирĕп лартăр!» – терĕ. Ун хыççăн ыттисем те пĕр харăссăн çав сăмахсенех каларĕç. Ватрас аллине сулчĕ. Арман хуçи сăра алтăрне чи ватă шурсухал умне йăтса пычĕ. Лешĕ ура çине тăрса алтăра икĕ аллипе тытрĕ те «Алран кайми аки-сухи...» тесе юрласа ячĕ. Ун хыççăн пурте ура çине тăрса çак авалхи юрра шăрантарчĕç. Вара тин ниме çыннисене темиçе алтăрпа ĕçтерме пуçларĕç. Ĕçрĕç, çирĕç, савăнчĕç. Каллех Илемпие аса илсе юрларĕç.

Нар пек хӳхĕм Илемпин
Ӳчĕ юлчĕ пĕвере,
Эпир панă пилпеле
Чунĕ кайтăр пĕлĕте.
Нар пек хӳхĕм Илемпи,
Асăнатпăр халь сана,
Хамăр пуçлăх сăрипе,
Асаттесен йăлипе.
Ан çиллентĕр шыв турри –
Çирĕп лартăрччĕ пĕви.

Йĕри-тавра пĕчĕккисем сиккелесе çӳреççĕ, хăваласа çитмелле выляççĕ. Акă йăлкăшса çунакан кăвайтăн пĕр енне каччăсем, тепĕр енне хĕрсем карталанса тăчĕç те сăвă калама тытăнчĕç.

Ким чечек, ким чечек,
Килме кура пĕр кура,
Сала-сала салашки,
Эс те яш, эп те яш,
Кил иксĕмĕр пĕр пулар,
Амантей!

Лешӗ, Амантей ятли, кӑвайт урлӑ сиксе каҫрӗ те хӑй килӗштерекен хӗр умӗнче тапӑртатса ташласа илчӗ, вара унпа юнашар кӗрсе тӑчӗ. Унтан каччӑсем мӑчавӑр мӑнукне Нарпие чӗнсе илчӗҫ. Ҫапла ҫамрӑксем чылайччен вылярӗҫ. Аслӑраххисем вара сӑра ӗҫнӗ май яш-хӗрсене пӑхса киленсе ларчӗҫ. Ватрас мӑчавӑрпа калаҫса илчӗ те аллисене хире-хирӗҫ тытса икӗ хутчен ҫапрӗ. Пурте лӑпланчӗҫ.

– Эпир ӑна ҫамрӑк чух кӑвайт урлӑ сикнипех ҫырлахмастӑмӑрччӗ, кӑвар ҫинче те ташлаттӑмӑрччӗ. Халӗ вара хӑюллӑ каччӑсем юлмарӗҫ-им?

– Алмас ташласан кӑна. Ҫавна чӗнсе килмелле, – илтӗнчӗ сасӑ.

– Эпӗ халех, – тесе пӗри чупса кайма тӑчӗ.

Анчах ӑна турхан чарчӗ. Паян Алмасшӑн йывӑр кун пулнине кӑштах ӑнланчӗ пулас. Уншӑн кунта куҫҫуль витӗр сӑрхӑнса тухакан савӑнӑҫ кӑна пулӗ.

Ватрас ҫамрӑксем ҫине тепӗр хут пӑхса илчӗ те:

– Е хамӑн пуҫласа парас-и? – терӗ.

– Ҫук, ҫук. Алмас вырӑнне хам ташласа парӑп, – пачах кӗтмен ҫӗртен персе ячӗ Нарпи. Пурте ун ҫинелле тӗлӗнсе пӑхса илчӗҫ.

– Кӑварне сапалӑр, – хушрӗ паттӑр хӗрача. Хӑй вара пӗр самантлӑха тӗмсем хыҫне кайса ҫухалчӗ. Ӑна темиҫе ҫул каялла алла пӗҫертсен мӗнле курӑкпа сӗрмеллине амӑшӗ каласа хӑварнӑччӗ. Ҫав курӑка шырарӗ. Тупрӗ. Вара унпала ура тупанне сӗрчӗ.

Вӑл пынӑ ҫӗре кӑвар хатӗр, Нарпирен кӑштах куҫ хӗссе кулнӑ пек йӑлкӑшса выртать. Тахӑшӗ шӑпӑр калама пуҫларӗ. Нарпи малтан хӑра-хӑра пускаласа пӑхрӗ, унтан варринех кӗрсе кайрӗ. Пуҫӗнче ун пӗрмаях пӗр шухӑш: «Эпӗ пӑр ҫинче ташлатӑп».

Çав самантра Калима хашкаса чупса пычĕ те ашшĕне хăлхаран темле хыпар пĕлтерчĕ.

– Чарăнăр! – кăшкăрса ячĕ турхан. – Алмас çухалнă. Çавна шырăр! Пĕве патне кайса пăхăр!

Çамрăксем чупрĕç. Ваттисем те ура çине тăчĕç.

Чăнах та, Алмас пĕве пусĕнче кĕреçепе чакалашать, Илемпие кăларасшăн тăрмашать. Вилнĕ пулсассăн та çын евĕрлĕ пытарасчĕ тет.

Малтан вăл юлташĕсене çывăха пыма памарĕ, кĕреçепе хăмсарса хăваласа ячĕ. «Кун пек вăл пĕвене те татса яма пултарĕ», – тенине илтсен темиçен харăссăн пырса кĕреçине туртса илчĕç те хăйне ашшĕ патне çавăтса пычĕç.

– Каланă вĕт сана килтен тухма юрамасть тесе! – ятлаçса илчĕ Ватрас. – Лăплан! Çак сăрана ĕç те кăвар çинче ташласа пар.

Алмас кĕттерсе тăмарĕ, ăш хыпнине пусарас тесе сăрине тĕппипех ĕçсе пачĕ, куçне шăла-шăла кăвар çине кĕрсе кайрĕ...

Выртать кăвар йăл-йăл çиçсе,
Пире парса хăй ăшшине.
Вут пек таса пулас тесе
Чăваш пуçлать хăй ташшине.
    Ташлать чăваш кăвар çинче –
    Çапла сирет чирне-чĕрне.
    Ташлать чăваш кăвар çинче –
    Çапла сыхлать хăй сывлăхне.
Кĕрсе каять кăвар çине
Вăл хăйшĕн хӳтлĕх шыраса.
Çарран сикет кăвар çинче
Те савăнса, те хурланса.

Ташлать чăваш кăвар çинче –
Çапла упрать чун хавалне,
Ташлать чăваш кăвар çинче –
Çапла сыхлать вăл хăй чысне.
Сикет чăваш кăвар çинче
Ниçта кайса кĕме çукран,
Ташланă чух кăвар çинче
Хăрушă мар нимле тăшман.
Ташлать чăваш кăвар çинче –
Çапла упрать таса ятне,
Ташлать чăваш кăвар çинче –
Çапла сыхлать хăй ирĕкне.
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Чăваш ташлать кăвар çинче...

Алмаспа пĕрле Нарпи те тепĕр хут ташша тухрĕ. Ыттисем вара алă çупса тăчĕç.

– Ну, çитĕ. Халĕ ыранхи пирки пĕлтерем, – терĕ турхан. – Кăнтăрла тĕлĕнче Эсрел çыннисем хырçă илме килеççĕ. Хатĕрленĕр. Камăн мĕн чухлĕ памаллине хăвăрах пĕлетĕр. Пĕлтĕрхинчен кая мар. Эпĕ халь кайрăм. Манăн ыранхи хăнасене кĕтсе илме хатĕрленмелле.

Çак сăмахсем хыççăн таврана тунсăх пусрĕ. Аслăраххисем килелле уттарчĕç, çамрăксем сăра пички патне чупса пычĕç...

Ватраспа уксах Миккана юрта умĕнче Аминепе суккăр хĕрарăм кĕтсе тăраççĕ.

– Алмас ăçта вара? – ыйтрĕ тӳрех Амине.

– Çамрăксемпе юлчĕ. Калима пĕрле илсе килетĕп терĕ.

– Ку тата кам? – асăрхарĕ ют çынна турхан.

– Паллаймарăн пуль çав, Ватрас.

– Сассуна таҫта илтнĕ пек те...

– Пăрчкан эпĕ.

– Ан тĕлĕнтер-ха!? Ăҫтан сиксе тухрăн вара эсĕ? Пăрчкан...

– Эсрел киле ячĕ. Халĕ ĕнтĕ сан сассуна илтрĕм, кайсан та юрать. Аванах пурăнатăр курăнать. Арăму аллинчен сан ҫăкăрна та ҫисе куртăм. Турă пулăшса пытăр сире.

– Чим-ха. Ăҫта кайăн-ха ĕнтĕ халĕ, Пăрчкан? Килӳ ҫуккă сан, йăху та пĕтнĕ... Темшĕн ҫапла-ҫке-ха унта Турикасра. Пушар хыҫҫăн пушар тухать. Сан тăванусене пурне те кăвар турри хăй патне илчĕ пулас.

– Кунта та хуйхă кăна кĕтсе тăрать мана... Пурпĕрех хамăр яла ҫитесчĕ. Кунтан инҫех марччĕ вĕт. Кам патне те пулин кĕрсе выртăп.

Пĕр самантлăха Ватрасăн куҫĕ хуралса килчĕ; ун умĕнче леш унчченхи Пăрчкан, таврари чи хитре хĕр тăрать пек. Ҫамрăк чухнехи ĕмĕчĕ халĕ пурнăҫланчĕ пек туйăнса кайрĕ. «Атя, кĕрер», – терĕ Ватрас Пăрчкана аллинчен тытса. Анчах ун алли пачах та ҫамрăк хĕр алли пулмарĕ, типшĕм те сивĕрехскер кăна. Унчченхи Пăрчкан алли мар иккен.

– Тен, каҫа хирĕҫ каймасан та юрĕ. Пĕр каҫлăха кунтах юлăн, – терĕ Ватрас тăна илсе. – Амăшĕ, эсĕ мĕн калăн?

– Сан кăмăлу, Ватрас. Эсĕ каланă пек пултăр... Эпĕ вучах патне каям-ха, апат хатĕрлем.

Ватраспа Пăрчкан шала кĕчĕҫ те чылайччен калаҫса ларчĕҫ. Турханăн, паллах, Эсрел патĕнчи йĕркесене ыйтса пĕлес килчĕ.

– Эсрел патне ҫитсессĕн, – пуҫларĕ каласа пама Пăрчкан, – пире ача ҫуртне вырнаҫтарчĕҫ.

– Ку тата мĕнле япала?

– Эсрел шутласа тупнăскер. Илемлĕ те тĕреклĕ чăваш хĕрарăмĕсене ача çураттарса усрать. Лешсене вара пĕчĕклех çар ĕçне вĕрентсе ÿстерет те ытти халăхсемпе çапăçма ярать. Эпĕ те пилĕк ача çуратса патăм: виçĕ ывăл та икĕ хĕр. Пурне те сывă хăварчĕç. Начар ачана çуралнă-çуралманах чăнкă çыранран шыва пăрахаççĕ. Хăй çарне, халăхне вăйлатса пырать. Юлашки вăхăтра вара хĕрарăмсене те çапăçма вĕрентет. Халĕ ун хĕрарăм юланутçăсем нумай, ухăпа та ăста переççĕ.

– Чăваш ывăлĕсемпе хĕрĕсем ĕнтĕ.

– Юнĕпе çапла пуль те, чĕлхипе тĕнĕ вĕсен пачах урăхла. Эсрел вăйлă вăл. Ăна çĕнтерекен ку тĕнчере тупăнас çук.

– Ан та кала-ха, малашне те çаплах пăхăнса пурăнма тивет пуль ĕнтĕ. Вăрçăпа кăна ан килтĕрччĕ. Ыттине чăтăпăр.

– Шухăшăмпа кашни кунах яла килсе каяттăм. Тĕлĕкре те пĕрмаях кунти вырăнсем курăнатчĕç. Тарса та пăхрăм, анчах хăваласа çитсе тытрĕç. Вирлĕ сыхлаççĕ. Чуна пусарас тесе ал ĕçне пикентĕм, илемлĕ тĕрĕсем тума пуçларăм. Пĕрре çапла лайăх хатĕрленсе юртăна çакмалли кавир тĕртрĕм. Самай хитрескер пулчĕ. Тахăшĕ çавăн çинчен Эсреле пĕлтернĕ. Лешĕ персе те çитрĕ. Тумĕ хăйĕн калама çук паха, ылтăн та кĕмĕл кăна çиççе тăрать. Тарçисем те пĕрле, пуç тайса кăна тăраççĕ.

– Çак кавира тĕрлесе илемлетекенни эсĕ-и-ха? – ыйтрĕ Эсрел.

– Эпĕ, – тетĕп.

– Ăста тунă. Вăл текех ман юртăра чи хаклă хăнасене кĕтсе илнĕ вырăнта çакăнса тăрĕ.

– Çакă маншăн калама çук пысăк чыс, аслă Эсрел, – терĕм.



– Апла пулсассăн сана çакăншăн тав тăвас шухăшăм пур. Мĕн кирлине ыйт.

– Вăйлăран та вăйлă Эсрел, киле кайма ирĕк парсам мана, – терĕм.

– Кунта мĕнрен япăх вара. Апатне япăх çитерес-çĕ-и? Е арçынсем япăх юратаççĕ-и? Эсĕ хăш енчисем вара? Турхану кам?

Эпĕ вара сан ятна каларăм, тепĕр хут тăван ене яма тархасласа ыйтрăм. Вăл вара тĕлĕннипе: «Çав чухăн та выçă çĕршывра мĕн кирлĕ-ха сире», – тесе хучĕ. Унтан тарçисемпе шăппăн калаçса илчĕ те: «Килĕшетĕп. Эсĕ каланă пек пултăр. Анчах çĕр çинче çакăн пек кавир урăх пулмалла мар», – терĕ.

Вара мана иккĕн алăсенчен ярса тытрĕç те виççĕмĕшĕ куçа темле шĕвек сапрĕ. Çут тĕнче ялтăр!

туса илчĕ те тĕттĕмленсе ларчĕ. Унтанпа куççăр тăрса юлтăм. Кунпа çĕре те пăтраштаратăп, кунта çити миçе кун килнине те уçăмлăн калаймастăп. Юрать-ха, ырă çынсем тупăнчĕç, çул кăтартрĕç, шыв урлă каçарчĕç.

– Эй, çĕр çăтман! Тем тăвăттăм çавна! Мĕншĕн аслати çапса вĕлермест-ши ăна?

Амине кĕчĕ те тулта уçăрах тесе апат çиме килкартине чĕнчĕ. Виççĕшĕ те тухрĕç...

## III

Ватрас паян час çывăрса каяймарĕ. Ыранхи кун канăç памасть ăна. Мĕнле иртĕ-ши вăл? Хысна илме мĕнлескерсем килĕç-ши? Пĕлме çук вĕсене, пĕрисем çын евĕрех килсе каяççĕ, теприсем вара ниçта кайса кĕрейми алхасаççĕ, çĕмĕреççĕ, çамрăк хĕрарăмсене, хĕрупраççене мăшкăлласа хăвараççĕ. Нимĕн тума та çук, вĕсен аллинче Эсрел панă ирĕклĕх тата хурçă хĕçĕ. Тĕреклĕ арçынсем. Те юриех çавăн пеккисене яраççĕ. Хирĕç тăнин усси çук, вĕсемех паттăр, вĕсемех вăйлă. Мĕнле сыхланса юлмалла-ши? Çапла чылайччен шухăшласа выртрĕ турхан. Çынсенчен пухнă пурлăха та аса илчĕ: миçе михĕ тырă, миçе чăпта типĕтнĕ пулăпа типĕтнĕ какай, сăсар тирĕсем, шăратнă çу, пыл, ятарласа çĕленĕ атă-пушмак, шап-шурă пир тĕркисем... Мĕн кăна сĕтĕрмест пулĕ Эсрел чăваш тăрăхĕнчен. Нихăçан та тăранассăн туйăнмасть.

Чăннипе каласассăн, Ватрасăн çывăрни те пулмарĕ, ирех тăчĕ те тарçисене пухса ялсем тăрăх тухса кайрĕ. Каярах вара мăн çул çине тухса инçетрен тусан пĕлĕчĕ капланса килнине пăхса тămалла. Эсрел çыннисене кĕтсе илмелле. Йĕрки çапла.

Пăрчкан вăраннă-вăранманах Аминене хăй патне чĕнсе илчĕ те тĕлĕк каласа пачĕ.

– Шыв ăсма кайрăм пек. Çăлĕ вара калама çук тарăн çырмара. Ăсма тăтăм та витре вĕçерĕнсе кайрĕ. Тытас тесе кармашрăм, ĕлкĕреймерĕм, витре путрĕ. Унтан тепĕр витрипе ăсма тăтăм. Такам аялтан карт! туртнă пекех туйăнчĕ. Вăл та путрĕ.

– Ак тамаша, икĕ витре? – хыпăнса ӳкрĕ Амине. – Икĕ витре – икĕ хуйхă мар-ши? Тата мĕн кĕтет-ши ĕнтĕ пире? Каллех ачасем-ши?

– Витресĕр тăрса юлнăскер, кĕвентене алла тытрăм та килелле уттартăм... Сасартăк хыçалтан темле сасă илтĕнсе кайрĕ. Çавăрăнса пăхрăм та пĕр кашкăр çăварĕпе витре йăтса пырать. Мана парасшăн пек. Шăтарас пек пăхать. Хăранипе малалла чупма пуçларăм. Кашкăрĕ ман хыçранах пырать, витрипех... Вара вăранса кайрăм. Çемçе вырăн çинче выртнине сисрĕм те хăрани иртсе кайрĕ. Темле питĕ пăтрашуллă тĕлĕк пулчĕ.

– Ырра мар ĕнтĕ. Витре путнине япăх теççĕ вĕт.

Хуйхă курнă çынсем пĕр-пĕрне хăвăрт ăнланаççĕ иккен. Кунта та çапла пулчĕ курăнать. Пăрчканпа тĕл пулсассăн Аминен малтан кăштах хăрани те сисĕнетчĕ. Халĕ вара çав шикленӳ сĕвĕрĕлсе пычĕ. Пăрчканăн нимĕнле усал шухăш та çук иккен. Ватрас çемйине мĕнпе те пулин пулăшас туртăм пурри те сисĕнет. Тен, çавна пулах тĕлĕк пирки калаçнă май Амине çемьери хуйхă-суйха пытармарĕ. Ватрас малтанхи ачиех ывăл пуласса кĕтнĕ иккен. Анчах хĕрача çуралнă. Иккĕмĕш те çавах. Вара ашшĕ Аминене ӳпкелешме пуçланă, ывăл çуратманшăн ятлаçнă. Хĕрарăм шăпи çапларах ĕнтĕ, чăтмалла. Тен, мĕнлерех ача çураласси ытларах ашшĕнчен килет. Сăмахне вара амăшĕн илтмелле. Тăхăр

уйăх хăй ăшĕнче пăхса çитĕнтернĕрен-ши? Арçынăн ун мĕскер, автан ĕçне тунă та лăпланнă. Яваплăхĕ хĕрарăмăнни пек мар. Тепĕр тесен тата Ватраса та ăнланма пулать. Ăна хăй пухнă пурлăха йышăнакан çын, тĕпкĕч кирлĕ. Хĕрача вăл качча каять те тепĕр çĕрте йăва тупать. Ывăлăн вара ашшĕ ĕçне малалла тăсмалла.

Тĕлĕк пирки... Пăрчкан каласа парсассăнах Амине малтанхи хĕрĕсене аса илчĕ. Юратнă вăл вĕсене. Анчах лешсем нумаях пурăнайман, шатра чирĕпе вилнĕ. Халĕ вара пĕртен-пĕр шухăш: Алмаспа Калимана турă сыхлатăрччĕ.

– Чим-ха, кайса пăхам-ха, – тесе Амине хăвăрт тухрĕ. Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ, Эсрел тарçисем валли апатçимĕç хатĕрлемелле. Пĕçерекенсем чылайăн-ха, яшкине те пысăк хурансемпех çакса янă. Какай шӳрпине самай килĕштерессĕ-çке, шăрттанне те хăвăрт тасатаççĕ, касса хума кăна ĕлкер. Килнĕ-килменех сăра ыйтаççĕ. Аминен вара çак ĕçе йĕркелесе пымалла, апат пахалăхне çисе пăхса тĕрĕслемелле.

Ав темиçе çул каялла апат пĕçерекен хĕрарăмсенчен тахăшĕ яшкана наркăмăш янă пулнă. Эсрел тарçисене сăтăр тăвас тесе ĕнтĕ. Анчах лешсен пуçлăхĕ тавçăрулăскер тупăннă. Малтан яшкине пĕçерекеннисенчен пĕрне çитерсе пăхтарать. Лешĕ кĕçех тӳнсе каять. Пуçланать вара... Юлашкинчен çав яшкана ытти хĕрарăмсене вăйпах çитереççĕ, виллисене вут çине пăрахса çунтарса яраççĕ, наркăмăшлă яшкана таврари ялсенчи çăлсене яра-яра хăвараççĕ.

Ватраспа вара çапла пулса иртет. Çар пуçлăхĕ ăна хăйне уйăрса панă хĕллехи пӳрте чĕнсе илет те калать:

– Кунта мĕн пулса иртнине Эсреле пĕлтермесен те пултаратăп, ыттисен çăварне те пăркăчлатăп, енчен те мана кирлине парсассăн.

– Хырçă шучĕпе памалли пурте хатĕр ман, – пĕлтерет турхан.

– Çук, мана урăххи кирлĕ.

– Мĕн-ши ĕнтĕ вăл?

– Арча тĕпĕнче выртакан ылтăн-ахах.

Ашшĕнчен юлнă пуянлăх вĕт-ха вăл. Ăна аларан вĕçертес килмест. Ылтăнсăр турхан пуçлăх та мар. Ашшĕ те çапла калатчĕ. Çав ылтăнпа пĕтĕм ăрушăн ниçта кайса кĕме çук йывăрлăх сиксе тухсан тин усă курма юрать тетчĕ вăл. Халĕ вара...

– Ылтăн таврашĕ çуккă ман.

– Ĕненместĕп. Апла пулсассăн... Шухăшласа пăх лайăххрах, çакă хыпар Эсрел патне çитсессĕн мĕн пулассине, хăвна мĕн кĕтнине. Енчен те çакăнта килнĕ çынсем вилсе выртнă пулсассăн. Пĕлетĕн вĕт Эсрел ахаль туманнине.

– Ылтăнĕ те, ахахĕ те нумай мар çав манăн, – парăнчĕ Ватрас.

– Мĕн чухлĕ пур, пурне те пар, унсăрăн...

Эсрел вăл Эсрел. Ун умĕнче пурин те чĕтресе кăна тăмалла. Уншăн чăвашсем патĕнчен пурлăх турттарса килнĕ тарçи те никамах та мар. Хăйне улталанине вара тӳсме пултараймасть, тарçисене те тĕрĕслесех тăрать. Хырçă пухса килсессĕнех пурне те хывăнтарать те шыва кĕртсе ярать, пĕтĕм тумтирне тĕрĕслеме хушать. Мĕн пулса иртнине хăй пăхса тăрать. Енчен те пытарнă япала тупăнсассăн, чăт вара...

Анчах Эсрелтен тавçăруллăраххисем те, чеереххисем те тупăнаççĕ. Леш Ватрасран илнĕ пурлăх Эсрел аллине лекмерĕ. Чее тарçă хуçи патне çитиччен ахах пĕрчисене хăй ăшне çăтса янă. Ылтăн чăмăрккисене никам куриччен вăрттăн урапа хыçне çакса янă тикĕт чĕрессине пăрахнă...

Çавăнтанпа вара Ватрас апат пĕçернĕ çĕре хăй лайăх пĕлекен тăванĕсене кăна явăçтарать. Асли, паллах, Амине. Ун пек шанчăклăрах.

Акă таврара шăв-шав çĕкленчĕ, лаша ури сассисем илтĕнсе кайрĕç, Ватраспа Эсрелĕн ятарлă çынни Озал çитрĕç, тӳрех юртăна кĕчĕç. Лешĕ унта ларакан Пăрчкана курсассăн тĕлĕннипе кăштах пăхса тăрсан тин сăмах тапратрĕ.

– Ак тамаша, кунта курасса шанманччĕ. Сывах иккен. Турхан патне килнĕ тата. Мĕн каласа пачĕ-ха?

– Ăçта кайтăр ĕнтĕ, килĕ çуккă, çунса кĕл пулнă, – лăплантарма тăрăшрĕ Ватрас.

– Кунта та ирĕклĕн калаçма çук, тухар-ха. Суккăр пулсассăн та хăлхи пур вĕт.

– Тен, хĕллехи пӳрте кайăпăр. Апатне те унта илсе пырĕç. Вăрăм çул хыççăн кăштах выртса канни те ытлашши пулас çук.

Тухрĕç. Пăрчкан пĕчченех ларса юлчĕ, шухăша путрĕ. Каллех асаилӳ. Çак арçын сассине илтсессĕнех ун куçĕ умне лери сăнарсем тухса тăчĕç. Ачисене аса илчĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Озал каялла пычĕ. Пăрчкан чĕри те сиснех пуль çав, лешĕ сăмах чĕнicченех палласа илчĕ, эппин, эсĕ килсе çитрĕн терĕ.

– Каçар мана, Пăрчкан, – пуçларĕ калаçăвне арçын, – хута кĕреймерĕм, пулăшаймарăм. Килĕштернĕ эпĕ сана, тен, кăштах юратнă та пулĕ. Тем тесессĕн те пĕрер ачи манранах пуль ĕнтĕ. Кала-ха, хăшĕ-ши?

– Ку тата мĕн тума? Текех ӳссе çитнĕ ĕнтĕ вĕсем.

– Питĕ пĕлес килет.

– Вĕсем пĕчĕккĕ чухне ăçта пултăн тата?

– Ун чухне ача пирки шухăшлама вăхăт пулман çав.

– Ăçтан вăхăт тупăнтăр ĕнтĕ. Сан тĕп тĕллев хĕрарăмсемпе йăваланасси çеç пулнă.

– Хам ирĕкпе мар вĕт-ха, Эсрел хушнипе. Халĕ вара арăм та çук, ачамсем хăшĕсем пулнине те пĕлместĕп.

– Апла эппин çулсем хăваланăçемĕн çын евĕрлех шухăшлама тытăнтăн курăнать. Çамрăк чухне вара... Миçе хĕр чысне пăсмарăн пулĕ.

– Ку енĕпе вара эпĕ чăннипех те телейлĕ. Хăвна аса ил-ха... Кăкрусем мĕнлеччĕ. Яштак пĕвӳ тата...

– Кай кунтан! Каллех кулма шут тытрăн-и-ха.

– Кулса мар эпĕ, аса илни теме тăрать. Мĕнле лайăхчĕ сан ытамра. Ман çимĕç те сана килĕшнех ĕнтĕ.

– Тьфу! Сана эпĕ нихăçан та юратман. Вăйăм çитнĕ пулсассăн леш вырăнтан çакнă пулăттăм... Ачасем пирки калаçса çӳрет тата.

– Суятăн эсĕ. Малтан кăна сиввĕн кĕтсе илеттĕн. Каярах хăнăхса çитрĕн. Туйăмна та шеллеместĕнччĕ. Кала, Пăрчкан, хăшĕ ман ача, мĕн ятли.

– Пĕри те санран мар.

– Ан суй. Енчен те каламасассăн...

– Вара мĕскер?

– Курăн-ха. Кунта халĕ эпĕ хуçа. Мĕн тăвас тенĕ, çавна тума пултаратăп. Кирлĕ пулсан сана та вĕрентсе илĕп.

Эсрел тарçи Пăрчкан патне пычĕ те икĕ аллинчен тытса силлерĕ. Лешĕ те хăраса тăмарĕ, ун çине сурчĕ. Шăп çав самантра Ватрас кĕрсе тăчĕ.

– Мĕн тăватăр вара эсир кунта? – пытараймарĕ тĕлĕннине кил хуçи. – Çакăнсăр пуçне çамрăкраххи тупаймарăн-им?

– Пирĕн лерех пуçланнă калаçу пур-ха, – терĕ Озал. Вара ним пытармасăр каласа пачĕ. Вăл хырçă пухма çеç килмен иккен. Урăхла тĕллев те пур: хăй ачин ятне пĕлмелле. Амăшĕ вара Пăрчкан, вăл кăна калама пул-

тарать. Анчах лешӗ темшӗн пӗлтересшӗн мар. Ватрасшӑн пулсассӑн ача ятне пӗлтересси нимех те мар пек. Ҫак пӗчӗкҫӗ кӑлтӑкшӑнах хирӗҫмелле мар ӗнтӗ. Пӑрчкан пуҫӗнче вара пачах урӑхла шухӑш. Уншӑн пур ачи те пӗр тан, пӗрин ашшӗ палӑрсассӑн теприсем вара... Ҫитменнине тата ачисем халӗ ӳссе ҫитнӗ те сапаланса пӗтнӗ. Ку ҫеҫ те мар-ха, ун умӗнче халӗ икӗ арҫын: пӗри ҫамрӑклах килӗштернӗ Ватрас, тепри Эсрел патӗнче тыткӑнра пурӑннӑ чухне ача ҫураттараканнисенчен пӗри. Ыттисем пекех тӗреклӗскер. Чӑнах та, ҫак арҫын Пӑрчкана кӑштах килӗшнӗ те пулас. Ахальтен мар ӗнтӗ суккӑр хӗрарӑмӑн вӑрҫса каланӑ сӑмахӗнче те темле ӑшӑлӑх пур пек. Хӗрарӑм кӑмӑлӗ ӗнтӗ. Вырӑн ҫинче пӗрле пулнӑ арҫын уншӑн пач ют ҫын пулма пултараймасть. Хӗрарӑм хаярлӑхӗ вӑл вӑхӑтлӑха кӑна. Апла пулин те Пӑрчкан парӑнма шутламарӗ, кӗтмен хӑна ыйтнине пурнӑҫламарӗ, Ватрас умӗнче калаҫӑва малалла тӑсас марччӗ тесе ҫӳхе чаршав хыҫне кӗрсе лӑпланчӗ, канма выртрӗ. Арҫынсем вара тухса кайрӗҫ. Эсрел ҫыннин сасси ҫаплипех хӑлхаран тухмарӗ.

– Калаттармалли мелсем тупӑнӗҫ-ха, – тени вара Пӑрчкана чылай шухӑша ячӗ. Апла пулин те уншӑн халӗ мӗн пулса иртнинчен хӑрушши пулас ҫук. Уншӑн текех вилӗм те хӑрушӑ мар.

Каҫӗ вара питӗ шӑв-шавлӑ пулчӗ. Эсрел ҫыннисем вӑрӑм ҫул хыҫҫӑн канса илчӗҫ те ялсем тӑрӑх тухса кайрӗҫ; алхасрӗҫ вара, хӗр-и?, арӑм-и? – пӑхса тӑмарӗҫ, пуса-пуса антарчӗҫ, тарса пытаннисем кӑна мӑшкӑлтан ҫӑлӑнса юлчӗҫ. Анчах нумайлӑха-ши?

Тепӗр кунне кӑнтӑрла тӗлне турхан килӗ умӗнчи тӑваткӑлта хырҫӑ пухас ӗҫ пуҫланчӗ. Мӗн кӑна хыпса ҫӑтмасть иккен Эсрел ҫӗршывӗ: тырӑ-пулӑ, пыл, ти-

пĕтнĕ какай, шăрттан, шăратнă çу, тăварланă пулă, сăсар тирĕ, кĕпе-тумтир, атă-пушмак... Эсрел çыннисем атă çĕлеме пĕлмеççĕ тесен те юрать, пĕтĕмпех кунтан сăтă-раççĕ. Юрать-ха, чăвашсем выльăх чылай усранине пула сăрансăр лармаççĕ. Кăçал вара çак тавар ытти çулхинчен те нумайрах. Пĕлтĕр типĕ çанталăка пула тырă питĕ сахал пухăнчĕ. Курăк япăх шăтнăран выльăх апачĕ те хĕсĕк пулчĕ. Тĕвесем пăявсене тата-тата тарса пĕтрĕç, чыла-йăшĕн лашипе ĕнине пусма тиврĕ. Выльăх шучĕ вăл пĕр чаксассăн часах хăпараймасть. Тыррине те кăçал аран-аран акса хăварчĕç. Вăрлăх çуккине пула пуянсене пуç тайма тиврĕ, кивçене кĕрекенсем те йышлăн пулчĕç.

Эсрелшĕн пулсан пурпĕрех, куланайне çулран-çул ӳстерсе пырать. Кăçал вара Ватрас тем пек çине тăрсан та апат-çимĕç сахал пухăнчĕ.

– Çакă кăна-и?! – кăшкăрса ячĕ нӳкерсен пуçлăхĕ Озал. – Мĕн эсĕ, Ватрас, манран кулма шутла-рăн-им? Çакăн чухлĕ япалапа Эсрел умне курăнсан... Ман пуçăм та, сан пуçу та сирпĕнет. Ĕçлейми пулнă иккен эсĕ.

– Мĕн пама пултарнине çĕнĕ çул умĕнех панăччĕ-ха. Ку вара – май килнĕ таран.

– Сахал ку. Эсреле нумайрах кирлĕ! Пуçтар халăхна!

Ватрас тарçисене чĕнсе илчĕ те ялсем тăрăх тухса хырçă карчĕсене тепĕр хут тĕрĕслеме хушрĕ. Эсрел тарçисем те вĕсемпе пĕрлех кайрĕç. Çапла шанчăклăрах пулать терĕç пулĕ. Кĕçех çынсене тыта-тыта киле пуç-ларĕç. Куланай параймannisene ĕнтĕ. Лешсем вара икĕ хуçа умне чĕркуçленсе ларса йăлăнаççĕ, куланая кĕр-куннене е тепĕр çула куçарма ыйтаççĕ. Эсрел çынни килĕшмест, нимĕн те çук тенине ĕненместĕп тет, вăр-çать, сурать, нухайккапа çапа-çапа илет. Çыннисем пур-

пĕрех нимĕн те шарламаççĕ, пуçне чиксе тăраççĕ. Сăмах чĕнменни пушшех тарăхтарса ячĕ. Вара çакă, урса кайнăскер, хăй çыннисене темле хушу турĕ. Лешсем чăвашсене пĕрле илсе килнĕ сăран михĕсенчи шĕвеке ĕçтерме тытăнчĕç. Хаяр эрех иккен. Çак усал шĕвек хăй ĕçне турех. Ӳсĕр çынсем чĕлхе чаракне çухатрĕç.

Акă пĕри Ватрас умнерех пырса тăчĕ те ятлаçма тытăнчĕ. «Ватрас, эсĕ начар турхан, хăв халăхна сыхлама пултараймастăн. Эсрел умĕнче чĕтресе пурăнатăн, хăвшăн çеç тăрăшатăн», – терĕ.

– Чарăн! Хуп çăварна! – кăшкăрчĕ Ватрас.

– Эпир панă ылтăн-кĕмĕле ăçта хутăн тата? – чарăнмарĕ лешĕ.

– Ăна веçех Эсреле парса янă.

– Чим-ха, чăвашсен пуçĕнче те кĕмĕл тетчĕç мари-çак. Çук, темшĕн çакна курмастăп. Е пытарса усратăр?!

– Пытармасассăн çара кут тăратса хăваратăр вĕт, – персе ячĕ пĕр ӳсĕр хĕрарăм.

– Эсĕ халĕ те çара кутах мар-и вара? – шӳтлеме пикенчĕ тахăшĕ.

Пуçланчĕ вара тавлашу, харкашу. Ют çĕртен килнĕ пуçлăха шăпах çакă кирлĕ пулнă та. Ватрас пĕлменни те чылай палăрчĕ. Ӳсĕр чăвашсем хуллен хăюлланса пычĕç, çав хаяр шĕвеке ыйтса ĕçекенсем те тупăнчĕç. Ун пек чухне пуçра мĕн пурри чĕлхе çине хăвăрт тухса ӳкет çав. Эсрел çынни эрех ярса пама чарчĕ те хăй шухăшне пĕлтерчĕ.

– Кам мĕн пытарнине каламасăр урăх ярса памастăп, – терĕ.

Пĕри чăтаймарĕ, кӳршĕ хĕрĕ ĕнер кăна тухьяпа çӳрени çинчен каларĕ, тепри тата çитĕннĕ хĕрне ăçта хупса

усранине систерчӗ. Пӗр-пӗрне сутрӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн хырҫӑ калӑпӑшӗ кӑштах ӳсрӗ, анчах пурпӗрех сахал пухӑнчӗ. Нимӗн те парайманнисене пӗр рете тӑратрӗҫ те чӑпӑрккапа ислетме тытӑнчӗҫ. Хыҫалта тӑракан Пӑрчкан чӑтса тӑраймарӗ, кӑшкӑрса ячӗ:

– Озал! Йыттусене чар-ха! Вара эсӗ ыйтнине калӑп!

Пуҫлӑх аллине ҫӗклесенех лешсем чарӑнчӗҫ.

– Кала эппин. Кӗтетӗп. Атту...

– Лешӗ вӑл, эсӗ пӗлесшӗн ҫунаканни, аслӑ хӗрӗм пулать, – терӗ Пӑрчкан.

– Ну юрӗ, ярӑр ирӗке. Анчах кунтах юлччӑр, – хушрӗ пуҫлӑх хӑй шухӑшлани пурнӑҫа кӗнишӗн савӑнса. – Ватрас! Кун пек ырхан лавсене Эсрел курсассӑн хӑвна мӗн кӗтнине чухлатӑн-и? Пӗлтӗрхипе те питӗ кӑмӑлсӑрччӗ вӑл. Кунта эпӗ пӗр ҫӑлӑнӑҫ кӑна куратӑп – Эсрел валли чиперккесем парса ярасчӗ санӑн... Шутла, Ватрас, шутла, Эсрел хӑватли пирки аса илтерме кирлех те мар пуль тетӗп.

Ҫичютран килнӗ хуҫа кӑштах кулса илчӗ те турхан патне пырса ыттисем илтмелле мар темӗскер каларӗ. Лешӗ уксах тарҫине чӗнсе илчӗ те парӑмлӑ ҫемьесенчи ҫитӗннӗ хӗрсене пурне те кунта илсе килме хушрӗ. Кунта тӑракан ашшӗ-амӑшӗ килелле тапса сикрӗ, анчах Эсрел тарҫисем тытса чарчӗҫ, пӗрне те ямарӗҫ.

Кӗҫех таврара кӑшкӑрашни, макӑрни илтӗнме пуҫларӗ, хӗрсене илсе килчӗҫ. Пӗр рете тӑратсан Эсрел ҫынни суйлама пуҫларӗ: хулпуҫҫинчен тытса пӑхать, кӗпе аркине ҫӗклесе урисене тӗрӗслет, шӑлӗсене пӑхас тесе ҫӑварне уҫтарать. Лешсем именнипе ниҫта кайса кӗреймеҫҫӗ, анчах тарма ҫук, вӑрӑм сӑналлисем, нухайкаллисем юнашарах тӑраҫҫӗ.

– Ку лутраскерсене мӗн тума илсе килнӗ тата? Эсре-

ле кун пеккисем кирлӗ мар, ӑрӑва вӗтетеҫҫӗ вӗсем, – ятлаҫса илчӗ Озал.

Илсе кайма пиллӗкӗш кӑна юрӑхлӑ пулчӗҫ. Питӗ макӑрнине курсассӑн Эсрел ҫынни шӳтлеме пикенчӗ.

– Ҫӑтмаха каятӑр вӗт. Тӑраниччен апат-ҫимӗҫ, чӑнчӑн арҫынсем... Сирӗн халӗ макӑрса сӑна чакармалла мар, Эсрел умӗнче хитререх курӑнма пӗлмелле. Вара сире те ҫӑмӑллӑх пулӗ, – терӗ куҫӗсене шӑлса тӑракан амӑшӗсем патнелле ҫавӑрӑнса.

Эсрел валли пухнӑ тупрана турттарса кайма лашисемпе ураписене турханӑн хӑйӗн хатӗрлемелле. Паян та ҫавах, анчах тӑвата лав кӑна кирлӗ пулчӗ. Хӗрсене вара юланутҫӑсем хӑйсен умне лартрӗҫ. Юлашки эрехе Ватраса парса хӑварчӗҫ. Эсрел ҫӗршывӗнче пурте урӑ пур-



нăçпа пурăнаççĕ иккен. Ӳсĕр çынна курсассăн тӳрех вĕлереççĕ. Пуçлăх хушнипе ĕнтĕ. Ун шучĕпе çак кăварлă шĕвеке тăшмансене ĕçтермелле е унпа хырçă пухнă çĕрте меллĕрех усă курмалла. Ӳсĕр халăх хăрушă мар. Кăшкăрашнисĕр пуçне нимех те çуккă. Ĕлĕкрех алла хĕç тытса хирĕç тăракансем те тупăнатчĕç, халĕ вара пăтрашу кăна. Лешсем тухса кайсассăн кунта мĕн пулса иртнине ăнланма май çук. Пĕри юрлать, тепри макăрать, виççĕмĕшсем пĕрне-пĕри ярса тытнă та сăмсаран юн тухиччен чышкăпа тăрслаттараççĕ. Турхан тарçисем хăвалanипе кăна саланса пĕтрĕç. Эрех ыйтакансем те тупăнчĕç. Ватрас пама хушмарĕ. Ялти шăв-шав çур çĕр тĕлнелле кăна лăпланчĕ...

Тепĕр кунне халăха хулăн сасăллă сăрнай вăратрĕ. Мăчавăр чĕннипе чӳк тума каймалла иккен вăрман хĕрринчи ятарлă вырăна. Кунти кашни йывăçа, кашни тункатана пулăшу паракан вăй вырăнне хурса чысласçĕ. Пĕтĕм ĕçе мăчавăр ертсе пынипе туса пыраççĕ.

– Веçех хамăр айăплă, – пуçларĕ мăчавăр. – Тырă лайăххрах пултăр тесессĕн Турă аллине ларма пĕлмелле, чӳк тумалла. Эй, хура халăх! Турра парне парар-и?

– Парас! Парас! – кăшкăрчĕç пухăннисем.

– Эй, хура халăх! Çăкăрлă-тăварлă пуласшăн-и эсĕ?

– Пуласчĕ, çăкăрлă пуласчĕ.

– Апла пулсассăн кĕлле тăрар.

Мăчавăр хĕвел тухăçнелле çавăрăнса тăчĕ. Ун хыççăн ыттисем те çавăнталла пăхрĕç, чĕркуçленсе ларчĕç. Мăчавăр хăй сăмахне малалла тăсрĕ.

– Эй Турă, Çӳлти Турă! Санран пулни пурте усăллă, пурте аван. Çавăнпа сана эпир яланах тивĕçлипе чӳклетпĕр!

– Чӳклетпĕр! Чӳклетпĕр!

– Чăваш йăхĕ сыпăкран сыпăка ĕрчесе тăтăр, вĕсене

пур инкекрен те хӑтарса пыр, мӗнпур тӑшманран, усалран, чир-чӗртен, вут-кӑвар тухассинчен, выҫлӑхран сыхласа тӑр.

– Сыхласа тӑр! Сыхласа тӑр!

– Мӑн Турӑ, ҫырлах.

– Мӑн Турӑ, ҫырлах.

– Мӑн Турӑ Амӑшӗ, ҫырлах.

– Пӳлӗхҫӗ, ҫырлах.

– Пӳлӗхҫӗ, ҫырлах.

– Пӳлӗхҫӗ Амӑшӗ, ҫырлах.

– Пӳлӗхҫӗ Амӑшӗ, ҫырлах.

– Пихампар, ҫырлах.

– Пихампар, ҫырлах.

– Ана Амӑшӗ, ҫырлах.

– Ана Амӑшӗ, ҫырлах.

– Ҫут ҫанталӑк тытан, ҫырлах.

– Ҫут ҫанталӑк тытан, ҫырлах.

– Ҫӗр-шыв тытан, ҫырлах.

– Ҫӗр-шыв тытан, ҫырлах.

– Хӗвел, ҫырлах.

– Хӗвел, ҫырлах.

– Уйӑх, ҫырлах.

– Уйӑх, ҫырлах.

– Эй, Турӑ, Ҫӳлти Турӑ! Карта тулли выльӑх пар. Тырра-пулла перекет пар!

– Карта тулли выльӑх пар, тырра-пулла перекет пар!

– Эпир сана хамӑр енчен чи вӑйлине...

– Чи вӑйлине...

– Чи хастаррине, чи хаклине...

– Чи хастаррине, чи хаклине...

– Кӗтӳ пуҫлӑхне паратпӑр!

– Кӗтӳ пуҫлӑхне паратпӑр!

– Çак хĕрлĕ вăкăра йышăн, парне начар тесе ан ÿпкелеш!

– Парне начар тесе ан ÿпкелеш!

Çак сăмахсем хыççăн пурте ура çине тăчĕç те тин çеç пуснă вăкăр какайĕпе пĕçернĕ пăри пăтти астиврĕç. Юлнă апатне киле юлнă ватăсем валли парса ячĕç. Вăкăр шăммисене пĕр çĕре пухса çунтарчĕç. Ашшĕ-амăшĕ саланса пĕтсессĕн çамрăксем вăйă пуçларĕç, юрларĕç, ташларĕç, вылярĕç. Нарпи Алмаса куçран вĕçертмерĕ, унпа юнашар пулма тăрăшрĕ. Карталанса юрланă чухне иккĕшĕн аллисем пĕрлешни вара Нарпишĕн чăннипех те савăнăç пулчĕ. Çак чиперкке аллинчен мĕнле çепĕçлĕх, ăшăлăх тапса тăнине Алмас та сисрĕ, вăйăран килнĕ чухне те пĕрлех утса пычĕ, хĕре киле çитиех ăсатса ячĕ, анчах хăйĕн кăмăл-туйăмне пĕлтерме шутламарĕ, ырă каç сунчĕ те уйрăлчĕ. Çапах та çак пултаруллă хĕрпе (кăвар çинче ташлама хăюлăх çитерет вĕт-ха!) пĕрле пулнă хыççăн каччăн чунĕнче темле лăпкăлăх сисĕне пуçларĕ. Пĕччен мар иккен вăл, юлташлă, туслă пулма тивĕç хĕр те пур.

Алмас килелле утнă чухне кашкăр улани илтĕнсе кайрĕ. Сасси инçе пулсассăн та, Алмас хăвăртрах утма пуçларĕ. Кашкăр кашкăрах вĕт, ăслă та хăюллă чĕрчун. Унтан тем те кĕтме пулать. Алмас чупнă пекех васкаса киле кĕчĕ. Кунта çывăрма шутламаççĕ те иккен, тăваттăн калаçса лараççĕ: Ватрас, Амине, Пăрчкан тата мăчавăр.

– Инçех мар кашкăрсем улаççĕ, – терĕ Алмас.

– Илтрĕмĕр-ха, ахальтен пулас çук,– пĕлтерчĕ Ватрас.

– Хуйхă-суйхăнах ĕнтĕ,– хутшăнчĕ калаçăва Амине.

– Çук, – терĕ татăклăн Пăрчкан. – Ку вăл çула йыхăрса улани. Вăл ман хăлхара ĕмĕрлĕхех юлчĕ. Çак сасă хыççăн килтĕм те ĕнтĕ тăван ене. Мĕншĕн çула

чĕннине те тавçăратăп эпĕ. Ватрас, çакăнтан тармалла сирĕн. Унсăрăн пĕтетĕр. Эсрел тĕп тăвать.

– Эпĕ те çаплах шутлатăп, – терĕ Амине. – Пĕтетпĕр капла. Улăпне те темшĕн вăратаймарĕç. Хытă сыхлаççĕ пулас.

– Ку хутĕнче, тен, вăратĕç-ха. Кĕтмелли нумай юлмарĕ, – терĕ мăчавăр. – Енчен ку хутĕнче те ĕç тухмасассăн, пурăнмалли вырăна улăштарма тивĕ. Çурçĕрелле сĕм вăрмансем пур теççĕ.

Çак самантра каллех кашкăр сасси илтĕнсе кайрĕ. Инçех те мар пулас.

– Чим-ха, – терĕ Пăрчкан, – тухса кăшкăрам, лăплантарам ăна.

– Кашкăр чĕлхине те пĕлет иккен ку, – терĕ Амине Пăрчкан тухсан.

Айккинче итлесе тăракан Алмас чăтса тăраймарĕ, хăйне тахçантанпах канăç паман шухăша каларĕ:

– Атте, кала-ха, пирĕн мĕншĕн çар çуккă вара. Нивушлĕ Эсреле хирĕç тăма май çук.

– Ывăлăм, эсĕ çамрăк-ха, чылай япалана пĕлместĕн. Эсрел вăл çав тери вăйлă та хăрушăскер. Ун патне пур енчен те пурлăх юхса пырать. Нӳкерĕсем унăн пурте хурçă хĕçĕпе, тимĕр вĕçлĕ сăнăпа. Çарĕ вара çав тери йышлăскер, юланут çине ларса çула тухсассăн пĕлĕте çĕкленнĕ тусан хĕвеле те хупласа лартать. Хамăр çар пирки... Вăл тахçан пирĕн те пулнă теççĕ, Улăп ертсе пынă ăна. Халĕ вара хăвах куратăн... Вăйсем пĕр тан мар пирĕн.

– Ку Улăпĕ вара? – пĕлме тăрăшрĕ Алмас.

– Кун пирки темле халап та çӳрет, – терĕ мăчавăр. – Атте мана çапла каласа панăччĕ: «Тахçан ĕлĕкех чăвашсемпе юнашар ытти халăхсем те пурăннă. Пĕрин

пуçлăхĕ Эсрел ятлăскер пулнă тет. Пĕррехинче вăл Улăпа хăй патне хăнана чĕнет. Лешĕ килĕшет, кӳршĕсемпе лайăх пурăнмалла вĕт-ха. Тутлă çимĕçпе хăналанă хушăра Эсрел çапла калать тет: «Эсĕ те вăйлă, эпĕ те вăйлă, атя иксĕмĕр пĕрле пĕтĕм тĕнчене çĕнсе илер. Вара пирĕнтен асли, пирĕнтен пуянни никам та пулмĕ». «Ку маншăн пачах кĕтмен сăмах, шутласа пăхăп-ха», – тет Улăп. Каялла таврăнма тăрсассăн Эсрел ăна çĕр выртмасăр ан кай-ха тесе ӳкĕтлет. Лешĕ куçне хупсассăнах пĕр тухатмăш хĕрарăм ăна вăранмалла марах çывратса ярать. Вăт çапла, те тĕрĕс, те урăхла – калама пултараймастăп.

Улăп çывăрса кайсанах Эсрел чăвашсене хирĕç вăрçăпа килет. Вăйлă çапăçаççĕ, анчах Улăп çукки сисĕнет çав. Эсрел çĕнтерет. Чăваш нуши шăпах çавăнтан пуçланать те ĕнтĕ. Пĕтĕмпех Эсрел мĕн хушнине туса пыма тивет, турхансене те вăлах суйласа лартать.

Миçе хутчен Улăпа вăратма хăтланман пулĕ чăвашсем, ĕç тухман. Керем патне çитсе вăрттăн сăнаса тăракансем те пулнă, анчах кĕреймен. Пĕрисем çавăнтах выртса юлнă, теприсем аран-аран тарса çăлăннă.

Турханпа мăчавăр вара çапла калаçса татăлчĕç: ку хутĕнче те Улăп патне çитеймесессĕн, кунтан тармах тивет.

## IV

**О**зал килсе кайнăранпа вăхăт нумай та иртменччĕ, каялла вĕçтерсе те çитрĕ. Ку хутĕнче вара илемлĕ кӳмепе. Унпа пĕрле юланутçăсем – тĕреклĕ нӳкерсем. Шĕвĕр сăнă вĕçĕсем хĕвел çинче йăлтăртатса тăраççĕ, хĕççисем те çирĕп хурçăран. Таврара халĕ вĕсене хирĕç тăма

пултаракан вӑй ҫук. Мӗн тӑвас теҫҫӗ, ҫавна тума пултараҫҫӗ, никамран та нимӗн те ыйтса тӑмаҫҫӗ.

Акӑ, кӳме кӳлнӗ лашасем Ватрас килӗ патне ҫитсе чарӑнчӗҫ. Кӗтсе илекенсем вара йышлӑнах мар, турханӑн ҫывӑх тарҫисем кӑна. Усал хыпар утпа ҫӳрет тенӗ пек, ял ҫыннисем кунталла кам ҫывхарнине сиссессӗнех килӗсене тарса кӗнӗ, хӑшӗ-пӗри пытанма та шут тытнӑ. Паллӑ ӗнтӗ, Эсрел енчен ырӑпа килекен пулас ҫук.

Кӳмерен малтан Озал тухрӗ, ун хыҫҫӑн – ҫамрӑк хӗрарӑм. Кӗтмен хӑна Ватрас патне пырса алӑ пачӗ те: «Ку манӑн арӑм пулать, Селиме ятлӑ», – терӗ.

Лешӗ пиҫнӗ ҫӗмӗрт пек хура куҫӗсемпе турхан ҫине именӳллӗн пӑхса илчӗ те пуҫне пӗкрӗ. Ак тамаша, Ватрас чӗрине темӗскер чӗпӗтсе илнӗ пекех туйӑнса кайрӗ. Мӗншӗн ҫак чиперкке питӗ палланӑ ҫын пек курӑнать. Пысӑк куҫсем, ҫӳхе тута, илемлӗ янах шӑмми...

– Пӑрчкан ӑҫта? – ыйтрӗ Озал.

– Пӳртреччӗ пулас, – терӗ Ватрас.

– Кӗрер апла, – аллине сулчӗ Озал ҫамрӑк арӑмӗ ҫине пӑхса илсе.

– Эй, хӗрарӑмсем, ӑҫта эсир, – кӑшкӑрчӗ кӗнӗ-кӗменех Ватрас.

Тӗпелтен Амине тухрӗ.

– Пӑрчкан ӑҫта тата?

– Кунтах-ха, – илтӗнчӗ хӗрарӑм сасси.

Кӗҫех хӑй те курӑнса кайрӗ. Селиме чӑтса тӑраймарӗ, анне! тесе чупса пычӗ те Пӑрчкана ыталаса илчӗ.

– Селиме, эсех-и ку, хӗрӗм? – терӗ амӑшӗ чӗтрекен сасӑпа. Иккӗшӗн те куҫӗсем шывланчӗҫ.

– Анне, сана илме килтӗм. Текех эпӗ тарҫӑ мар, Озал арӑмӗ, – пӗлтерчӗ хӑйӗн ырӑ шухӑшне Селиме. – Упӑшкам та кунтах.

– Эпӗ те кунтах, – сасӑ пачӗ Озал.

– Ав мӗнле иккен ӗҫсем, – терӗ Пӑрчкан хӑвӑрт капланса килнӗ ҫиллине чарса. Озал ятне илтсенех пӗтӗм ӳтне сивӗ ҫапрӗ. Эппин вӑл хӑй хӗрне качча илнӗ. Лешӗ, паллах, пӗлмест. Тен, пӗлмелле те мар. Ҫапла лайӑхрах та пулӗ. Халӗ пурпӗрех нимӗн те тума ҫук. Пӑрчкан хаш! сывласа илчӗ те лӑпланчӗ.

– Кӑмӑлу пулсассӑн эпӗ хирӗҫ мар, – сасӑ пачӗ Озал.

– Анне, манӑн санпа пӗрлех пурӑнас килет. Хӗрӳ текех чухӑн мар.

– Пӗрле пурӑннине мӗн ҫиттӗр ӗнтӗ, – хутшӑнчӗ калаҫӑва Амине кӗтнӗ самант ҫитнишӗн хӗпӗртесе.

Сӑлтавӗ пурах ҫав. Пӑрчкан кунта пурӑнма пуҫлани килти лару-тӑрӑва самаях улӑштарчӗ пек. Те Аминешӗн кӑна ҫапла пек туйӑнать, те чӑнах та ҫавӑн пек. Хӗрарӑм чӗри сисетех ҫав. Ватрас Пӑрчкана хӗрхенни паллӑ-ха ӗнтӗ. Анчах ҫак хӗрхенӳре темле кӑмӑл турамӗ те пур пек. Ӗлӗкхи юрату туйӑмӗ пачах сӳнмен пулас. Тепӗр чухне тата Ватрас Пӑрчканшӑн тем тума та хатӗр пек туйӑнать. Ҫитменнине тата ачисем те хӑвӑрт хӑнӑхса ҫитрӗҫ, Пӑрчкан аппа та Пӑрчкан аппа тени кӑна илтӗнет. Уйрӑмах Алмас килӗштерет. Иккӗшӗ калаҫса ларнине Амине пӗрре ҫеҫ курман. Пӑрчканӗ те ютшӑнми пулчӗ, суккӑр пулсассӑн та алӗҫпе те пулин пулӑшма тӑрӑшать. Акӑ, нумаях пулмасть Алмас валли хӗлле тӑхӑнмалли ӑшӑ кӗпе ҫыхса пӗтерчӗ. Халӗ вара Калима валли вӑрӑм чӑлха ҫыхать.

Тепӗр тесессӗн, Аминен кӗвӗҫме сӑлтавӗ пысӑках та мар пек. Йывӑр хуйхӑпа хуҫӑлнӑ куҫсӑр хӗрарӑм Аминепе танлашма пултараймасть ӗнтӗ. Ҫав хушӑрах ҫынсем калаҫнине илтсессӗн...

Халăх çăварне шăналăк карма çук. Ватрас икĕ арăмпа пурăнать тесе шăл йĕрекенсем те тупăнсах тăраççĕ.

Ытла та кĕтмен çĕртен сиксе тухрĕ-çке çак самант. Пăрчканăн халĕ мĕн тумалла-ха? Мĕнле çулпа кайсассăн тĕрĕсрех пулĕ-ши? Ашшĕ хăй хĕрĕпе пурăннине мĕнле чăтса ирттермелле-ха? Селиме калаçăвне илтсессĕн вăл хăйне телейлĕ хĕрарăм пекех тыткалани сисĕнет. Начар çын арăмĕ мар вĕт-ха. Юлашки вăхăтра тата чи кирлĕ ĕçсене Эсрел ытларах Озала хушать.

– Анне, ман сана пĕртте ют çын патĕнче усрас килмест. Сăмахлă çăкăр пыра хырать теççĕ.

Çак сăмахсене илтсен Ватрас кăштах сăнран улшăнчĕ пек. Сăмахлă çăкăр... Мĕншĕн çапла калать вара вăл? Тепĕр тесессĕн, амăшĕ хăйĕн ĕлĕкхи тусĕ патĕнче пурăннине ăçтан пĕлтĕр-ха вăл. Турхан килĕнче çăкăр çителĕклĕ. Пăрчкан сывлăхĕ те самаях лайăхланчĕ, сăнран та улшăнчĕ. Тимлĕрех пăхсан çамрăк чухнехи илеме те асăрхама пулать.

– Пăрчкан, хăвăн ирĕкӳ. Кунтан сана никам та хăваламасть. Кирлех пулсассăн уйрăм пӳрт те лартса парăпăр. Нимепе пуçăнсан часах пулĕ. Хăвна пăхакансене те тупăпăр, – терĕ Ватрас çамрăк тусĕ иккĕленсе тăнине сиссе.

– Хĕрĕм, ырă кăмăлушăн тавах сана. Мана кунтах лайăх, читлĕхри ырлăх кирлĕ мар. Маншăн Ватрас çăкăрĕпе пурăнни хăех пысăк парне.

«Пăх-ха эсĕ ăна, ниепле те килĕшмест, – шутласа илчĕ Амине. – Ĕмĕрĕме çак куççăр хĕрарăмпах пурăнса ирттерме тивет-ши вара?» Каламалли сăмахĕсем те пурччĕ те-ха унăн, Ватрасран иртеймерĕ. Турхан сăмахĕ халăхра çеç мар, килте те саккун.



– Кунтах юлатăп. Вилсессĕн те аттепе анне выртнă çĕре лекесчĕ, – терĕ татăклăн Пăрчкан.

«Вилĕме аса илет тата. Мĕнле çинине пăхсан çĕр çула та çитĕ. Куçĕ курманни çеç, ытти пурте сывах хăйĕн. Тен, эпĕ çук чухне Ватрас ун çумне кĕрсе выртмасть пуль те», – çуралчĕ чăн-чăн кĕвĕçӳ туйăмĕ. Амине тарăхнипе алăк патнелле утрĕ.

– Амăшĕ, хăнасем валли апат хатĕрле-ха. Лешсене те çитерме тивет пулĕ, – хушрĕ турхан...

Озал паян хырçă пухма килменнине çынсем чухласа илчĕç ĕнтĕ. Чăтса тăраймарĕç, турхан килĕ умне пуç-тарăнчĕç. Нарпи те кунтах. Сасартăк турхан килĕнче кăшкăрашни, макăрни илтĕнсе кайрĕ. Тухрĕç. Малта арçынсем. Çынсем пурте пуçне чикрĕç, калпакĕсене хывса хул хушшине хĕстерчĕç.

– Озал, тархасшăн, итле-ха, Алмаса хăвар. Ун вырăнне Эсрел ывăлĕ валли хĕрĕме парăп! – макăрса кăшкăрчĕ Амине.

– Çук! Эсрел мĕнле хушнă, çавăн пекех пулĕ, – татса хучĕ Озал. – Астăвăр, вăл хушнине пурнăçламасан – хăвăрах пĕлетĕр.

– Ватрас! Мĕн пулса иртет вара кунта? – ыйтрĕ маларах тухса тăнă Чĕкеç.

– Алмаса кунта хырçă япăх пухăнать тесе салукшăн илсе каяççĕ, – пĕлтерчĕ турхан.

– Эй, ял-йыш! Çамрăк турхана парса ямалла мар пирĕн! – кăшкăрчĕ Чĕкеç. Унтан никама пăхса тăмасăр Алмаса аллинчен ярса тытса халăх хушшинелле сĕтĕрчĕ. Ак тамаша, юнашарах Нарпи те курăнса кайрĕ, Алмаса тепĕр  аллинчен тытрĕ. Анчах ĕç ăнăçмарĕ. Эсрел çыннисем хĕççисене туртса кăларсассăн çынсем тарса пĕтрĕç. Кусене иккĕшне нухайккапа хĕртрĕç. Анчах Нарпи питĕ ыратнинех туймарĕ. Чăтăмлă вăл.

Урапа тапранса каяс умĕн Алмас Нарпи еннелле çаврăнса кăшкăрчĕ:счвыуц32

– Кĕт мана! Пурпĕрех таврăнатăп!

Нарпи макăра-макăра килелле утрĕ. Кĕçех ăна Чĕкеç хăваласа çитрĕ те кăштах та пулин лăплантарас тесе сăмах тапратрĕ.

– Маттур хĕрача эсĕ, Нарпи. Пурте сан пек пулсассăн... Çав хăравçă арçынсене вĕсене... Юрататăн пулас Алмаса. Хăй те килĕштерет ĕнтĕ, ахальтен-и кĕтме хушрĕ вăл  сана.

– Кĕтме пулĕ-ха. Çаврăнса килейĕ-ши? Эсрел вĕлерсессĕн...

– Çук, çук. Вĕлересси пирки калаçу та пулма пултараймасть. Эсреле кирлĕрен илсе кайрĕç ĕнтĕ ăна.

Ватрас шанăçран тухса пырать пулас. Курăн ак, Эсрел Алмаса турхана лартĕ. Эсĕ вара турхан арăмĕ пулса тăрăн. Çапла пуласса питĕ шанас килет. Маттур эсĕ, Нарпи, аçу пекех маттур.

– Ман атте мĕнлерех çын пулнă?

– Кукаçу каласа памасть-и вара?

– Вăл ытларах аннене кăна аса илет çав.

– О, сан аçу пек арçын ку ялта урăх пулман та пулĕ. Хитреччĕ, вăйлăччĕ. Акатуйсенче кĕрешсе яланах мала тухатчĕ, паттăр ятне илетчĕ. Санăн пулас аннўпе çўренишĕн кăштах кĕвĕçеттĕмĕр те, ăмсанаттăмăр та. Анчах вăйпа юраттарма çук. Хам еннелле çавăрас тесе самаях тăрăшрăм, юмăç патне те кайса пăхрăм, ĕç тухмарĕ. Юлашкинчен вара ман пуçăмра хăрушă шухăш çуралчĕ: çак юратнă арçынтан ача пултăр тесе тĕлпулу шырарăм. Меллĕ самант тупăнчех.

Пĕрре çапла сан аçу лавпала арманалла кайнине асăрхарăм. Эпĕ те килтисенчен ыйтса тăмасăрах пĕр михĕ тырă тултартăм та вĕçтертĕм. Вăхăт ун чухне каç еннелле сулăннăччĕ ĕнтĕ. Эпĕ çитнĕ тĕле аçу авăртма пуçланă иккен. Унăн тырри чылай пулнине кура армантах çĕр каçма тиврĕ. Телейлĕ каç пулчĕ вăл маншăн. Мĕнле пуçланса кайнине хальхи пекех астăватăп, аçу та куç умĕнчех.

Арманта унта çăнăхĕ мĕнлерех тухнине тĕрĕслесех тăмалла, вĕтĕ-и, шултрарах-и? – алла илсе пăхмалла. Шăпах çав самантра эпĕ аçу патне пытăм та пичĕ çине шап-шурă çăнăх сирпĕтрĕм. Вăл кула-кула хăвалама пуçларĕ. Ярса тытрĕ те хыттăн чăмăртарĕ, тутасем те пĕр-пĕрин патнелле туртăнчĕç...

– Эсĕ те çав, Чĕкеç, – терĕ Нарпи тĕлĕннипе.

– Юратнă эпĕ ăна. Тен, çавăнпах хама ирĕке ятăм.

– Авланнă пулнă-и вара вăл ун чухне?

– Туйĕ пулманччĕ-ха. Вăл вăхăтра мана тепĕр шухăш та канăç памастчĕ: тен, савăшу хыççăн ман еннелле çаврăнĕ? Çук, пулмарĕ. Эпир кунта хамăр юратупа та хуçа мар. Веçех турханпа мăчавăр аллинче. Кам кампа мăшăрланмаллине ытларах çавсем татса параççĕ.

– Çакна эпĕ хам та асăрханă-ха. Ачисене пĕрлештерес умĕн пурте кукаçи патне пыра-пыра каяççĕ. Лешĕ вара йăх пирки ыйтса пĕлет, çывăх тăвансен мăшăрланма юрамасть тет. Унсăрăн ăру начарланать тет.

– Халĕ вара сана никама каламаннине калас тетĕп. Анчах сăмах пар, никама та шарламастăп тесе хĕвелпе уйăх умĕнче тупа ту.

– Тупа тăватăп.

– Çĕр çырт.

Нарпи чĕркуçленсе ларчĕ те çăвара тăпра хыпрĕ. Чĕкеç айккинелле пăхса илчĕ те шăппăн:

– Тепĕр тăхăр уйăхран ман ача çуралчĕ, – терĕ. – Ывăл ача.

– Ан тĕлĕнтер-ха. Халь ăçта вара вăл?

– Малтан çине тăрсах кăкăр патне туртăнатчĕ. Виççĕмĕш кунне чирлерĕ, макăрма пуçларĕ. Вара эпĕ юмăç патне вĕçтертĕм. Çитнĕ çĕре сывлайми те пулчĕ. Юмăç та чĕртеймерĕ. Вилчĕ вăл.

– Апла эппин вăл ман пичче пулнă.

– Çапла пулса тухать ĕнтĕ.

– Пит ют çынсемех мар эпир санпала, Нарпи. Пуçна ан ус, хĕрĕм. Юрататăн пулсассăн кĕт. Куратăн пулĕ, Ватрас та ватăлса пырать. Çамрăк турхан пулатех ĕнтĕ.

Çак калаçу Нарпи шухăшне пачах та тепĕр майлă çавăрса ячĕ. Чĕкеç пирки ахалех япăх калаçаççĕ. Тавçăруллă хĕрарăмах иккен вăл. Телейсĕр юрату хуçнă ăна.

Çавна пулах вăл пурнăç çине урăхларах пăхать, хăйне те тивĕçлипе хакламасть. Анчах хăюллăхĕ те çук мар, Алмасшăн еплерех сиксе ӳкрĕ вăл. Тем тума хатĕр.

Чĕкеç килне кĕчĕ те каçхи апат пĕçерес тесе кăвайт чĕртме тытăнчĕ. Ку вăл час пулакан япала мар. Вутчульне хурçă тимĕрпе çапса кăларнă хĕм пĕрчисем малтан ăвă çине ӳкрĕç. Лешĕ кăштах мăкăрланма тытăнсан Чĕкеç хуллен вĕре-вĕре илчĕ. Ăвă йăлкăшсах çунма тытăнчĕ. Кăвар хуллен çӳхе те типĕ хăйăсем çине куçрĕ. Вучах чĕрĕлчĕ. Шыв вĕреме кĕрсессĕн типĕ тинкĕле ямалли кăна юлчĕ.

Шăп çав самантра пӳрт умĕнче ура сасси илтĕнсе кайрĕ. «Тахăшĕ килет ĕнтĕ», – тесе шутласа илчĕ Чĕкеç çи-пуçне, çӳçне тӳрлеткелесе. Пӳрте Амине кĕрсе тăчĕ. Аллинче пысăках мар чĕрес. Кил хуçи кун пек сумлă хăна килессе ĕмĕтленме те пултарайман. Турхан арăмĕ хăй çитрĕ.

– Алмас кайрĕ те кил пушанса юлчĕ, – пуçларĕ калаçăвне Амине. – Ăшăм вăркать. Никампа калаçма çуккипе килтĕм ĕнтĕ.

– Иртсе лар. Сире валли Пăрчкан пур мар-и вара? Хирĕçсе каймарăр пуль те?

– Йăлăхтарса çитерчĕ ĕнтĕ. Ларать тумлантарнă тунката пек. Ватраспа кăна калаçарах парать.

– А-а... Ахальтен каламаççĕ пуль çав турхан икĕ арăмпа пурăнать тесе, – кулса илчĕ Чĕкеç. – Кĕвĕçӳ пурри сисĕнет.

– Чĕкеç, пулăш-ха. Ахаль тумăп. Эсĕ çак пыл чĕрессине илсе ларт-ха, – сĕнчĕ Амине. – Пулăш мана, тепре пулăш.

– Мĕн тумалла вара?

– Çав Пăрчканран хăтăласчĕ.

– Тупнӑ кулянмалли, кӑлар та яр.

– Ватрас хӳттипе пурӑнать ҫав. Унтан епле иртӗнха. Пулӑш мана, Чӗкеҫ. Ылтӑнӑм та пур. Хӗрхенмӗп.

– Мӗнпе пулӑшӑп-ха сана? Кала эсӗ.

– Хам та пӗлместӗп ҫав. Нимӗн тума аптранипе килтӗм ӗнтӗ.

– Тен, ӑна наркӑмӑш ярса памалла?

– Ун пирки шутласа пӑхнӑ-ха эпӗ, анчах Ватрас хӑвӑрт тавҫӑрса илессӗн туйӑнать. Сӗтел хушшинчи вилӗмӗн сӑлтавне тупма йывӑрах мар. Апат юлашкине йытта парса пӑхӗ те... Кереме кӗлӗ тума кайнисӗр пуҫне ниҫта та тухмасть вӗт-ха.

– Эсӗ ӑна кӳлӗ хӗррине кӗпе ҫума яр хӑв тумна хӑвах ҫу тесе. Унта вара куҫ курӗ. Тӗттӗмленме пуҫласан хуш. Уншӑн пурпӗрех вӗт, яланах тӗттӗм.



Амине çапла турĕ те. Пăрчканăн хуралнă кĕпине кĕл шывĕнче вĕретрĕ. Унтан чирлерĕм пулмалла, пуç ыратать тесе кĕпине кӳлĕ хĕррине кайса чӳхеме Пăрчкана хушрĕ. Лешĕ итлерĕ. Акă вăл хăрах аллипе кĕпе янă йывăç витрене йăтрĕ те урама тухрĕ. Тепĕр аллинче – туя. Вăл пулăшнипе кӳлĕ хĕррине илсе çитерекен сукмака тупрĕ. Хăй тĕрĕс утни пирки те иккĕленмерĕ. Унăн çивĕч хăлхисем шапасен юррине инçетренех илтрĕç. Кӳлĕ хĕррине çитсессĕн туяпа шыва тĕрĕслесе пăхрĕ те витрери кĕпене кăларса чӳхеме тытăнчĕ. Йывăç тĕмми хыçĕнче пытанса тăнă Чĕкеç ун патнелле васкарĕ. Пăрчкан патне çитиччен тăват-пилĕк утăм кăна юлнăччĕ, çӳлтен тахăшĕ кăшкăрчĕ:

– Пăрчкан аппа, тăхта-ха, хамах чӳхесе парăп!

Чĕкеç шартах сикрĕ, çаврăнса пăхрĕ те Калима чупса аннине асăрхарĕ. Анчах хăвăрт тавçăрса илчĕ, Пăрчкан кĕпине хăй чӳхеме тытăнчĕ.

– Ах, çав Аминене, куç курман çынна çапла кăларса яма юрать-и вара? – вăрçса илчĕ Чĕкеç.

Калима та çитсе тăчĕ. Каялла вара виççĕн хăпарчĕç. Уйрăлнă чухне хăйне пулăшнăшăн Пăрчкан Чĕкеçе тав турĕ...

Çак ĕçе Амине те вăрттăн сăнаса тăчĕ, анчах хăйне палăртмарĕ, киле тепĕр енчен пырса кĕчĕ.

Тепĕр кунне Ватрас ялсем тăрăх тухса кайрĕ. Унсăрăн юрамасть. Сăнасах тăмасассăн пăхăнми пулас хăрушлăх пур. Ăна халĕ ытларах тырă-пулă еплерех ӳсни кăсăклантарать. Кăçал хырçă нумайрах тӳлесе хăйне Эсрел умĕнче лайăххрах кăтартмалла. Унсăрăн Алмаса йывăр тивет.

Ватрас тухса кайсассăнах Амине мунча хутса ячĕ. Шывне те нумай йăтрĕ, вуттине те шеллемерĕ. Мунча



кĕме хăйпе пĕрле Пăрчкана та илсе кайрĕ. Хывăнчĕç, кăштах тарласа ларчĕç. Пăрчканăн ӳчĕ пит ватах та мар пек. Амине мĕнлерехххине вара вăл нихăçан та курас çук. Милĕкпе те çапăнчĕç. Мунча умне тухса сывласа илнĕ хыççăн Пăрчкан çăвăнма тесе урайне ларчĕ. Амине пысăк тăм чашăка ăшă шыв тултарчĕ те Пăрчкан умне лартса пачĕ. Лешĕ питне çума тытăнчĕ. Çав хушăра Амине мунча кăмаки умĕнче ларакан савăтран çур витрене яхăн вĕри шыв илчĕ те Пăрчкан патнелле çаврăнса тăчĕ, лешĕ пуçне çĕкленĕ самантпа усă курса вĕреме кĕнĕ шывпа питĕнчен сапрĕ. Лешĕ аллипе питне хупласа кăшкăрса ячĕ. Амине витрене айккинелле печĕ те Пăрчкана хыçалтан пырса пусса пуçне шыва чикрĕ, лешĕ тем пек тапалашсассăн та тытса тăма вăй çитерчĕ. Чунĕ тухсан ун çине татах вĕри шыв сапрĕ. Вара хăвăрт тумланчĕ те

киле васкарĕ. Кăштах тăрсассăн урамра хĕрсемпе калаçса тăракан Калимана чĕнсе илчĕ те Пăрчкан аппăшне кайса пăхма хушрĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Калима чупса кĕчĕ.

– Анне! Пăрчкан аппа нимĕн те шарламасть, тăнне те çухатнă пулмалла, – терĕ макăрас пек сасăпа.

Вара вĕсем иккĕшĕ те кăшт айккинерех ларакан мунчана чупса кайрĕç. Амине Пăрчканăн юн тымарне тытса пăхам пекки турĕ, ятран та чĕнсе илчĕ. Лешĕ, паллах, нимĕн те шарламарĕ.

– Ним калама та аптратăп, те сĕрĕм тивнĕ, те вĕри шывпа пиçсе кайнă? Мĕншĕн пĕччен хăвартăм-ши? Пуçăм ыратнă пек пулчĕ те маларах тухрăм çав, – терĕ Амине.

– Атя-ха часрах илсе тухар, тен, уçă сывлăшпа тăна кĕрĕ, – сĕнчĕ Калима мунча алăкне уçса ярса. – Тăхăнтарар ăна.

Ӳчĕ Пăрчканăн хĕрлĕ хăмач тĕслех, ун çумĕнчи вĕри кĕпе витĕр те тапса тăрать. Йăтма пикенчĕç, анчах меллех мар. Йывăрскер иккен вăл. Вара ăна çавăнтах майлаштарса вырттарчĕç.

Кĕçех Ватрас та çитрĕ. Мунча умĕнче макăрса тăракан хĕрне курсассăн лашине кăкармасăрах чупса пычĕ.

– Мĕн пулнă вара? – ыйтрĕ турхан.

– Пăрчкан аппа вилсе выртнă, – терĕ Калима мунча умнелле тĕллесе кăтартса. – Вĕри шывпа пиçсе кайнă пулас.

– Аннӳ ăçта вара?

– Çынсене чĕнме кайрĕ.

Ватрас Пăрчкан патне çывхарса нимĕн шарламасăр чылайччен пăхса тăчĕ. Капланса çитнĕ куççульне чараймарĕ. Калима вара ашшĕ макăрнине пĕрремĕш хут курчĕ.

Пăрчкана тăванĕсем выртакан масарах пытарчĕç.

## V

Эсрел çĕршывĕ... Тĕнче хуçи хула варринчи капмар керменте пурăнать иккен. Çав çурт патĕнчен иртсе кайнă чухне кашниех пĕр самантлăха чарăнса тăрать те пуç таять. Йĕрки çапла. Алмаса илсе килекен тарçăсем те çаплах турĕç, çамрăк турхана та пуç тайтарчĕç. Мĕн тăвăн, итлес пулать, ют çĕрти йăласене пăхăнма тиветех ĕнтĕ.

Озал тӳрех Эсрел керменне кĕрсе кайрĕ. Алмаса чылай айккинерех вырнаçнă, йĕри-тавра хӳме тытса тухнă çурт патнелле илсе кайрĕç. Акă хапха уçăлчĕ, кăкарнă икĕ йытă хаяррăн вĕрме тытăнчĕç. Ют çын килнине сисрĕç пулмалла. Хуралĕсем те кунтах. Килкартийĕ самай сарлакаскер. Хӳме çумĕнче нумай кĕтеслĕ вăрăм пӳрт ларать, темиçе алăкласкер, пурте пĕр еннелле. Айккинерех пысăках мар юрта тата темле пĕчĕк çуртсем пур. Пӳртĕн тепĕр вĕçĕнче пахча евĕрлĕ вырăн курăнать. Пĕри Алмаса шăпах çавăнталла леçсе ячĕ те чи хĕрринчи алăка кăтартрĕ. «Сан йăву çакă пулать, – терĕ çинçе сасăпа. – Мĕн те пулин кирлĕ пулсассăн çав юртăна пыр. Асту, хурал патне ан çывхар».

Вăхăт каç еннелле сулăннă ĕнтĕ. Апла пулин те Алмас хăйне уйăрса панă пӳлĕмри йĕркелĕхе тӳрех асăрхарĕ, килтен парса янă япаласене лартрĕ те пăхкаласа çаврăнчĕ. Йывăç пӳртех иккен, тултан вара тăмпа сĕрсе шуратнă. Кантăкĕ пĕрре кăна, кил картишнелле пăхать, тумтир çакмалли, выртса çывăрмалли хатĕрсем те пур. Ĕçмелли шыв та кунтах. Вăрăм çул хыççăн ăшĕ хыпнăскер, тӳрех шыв патне пычĕ те тăм куркапа ăсса илчĕ, самантлăха чарăнса тăрса шыв турринчен ирĕк ыйтнă хыççăн çăвар туллин ĕçрĕ. Çакă вара вăл Эсрел

çĕршывĕн пĕрремĕш çимĕçĕ пулчĕ. Унтан шап-шурă пиртен çĕленĕ хутаçа салтрĕ те амăшĕ парса янă апат-çимĕçе кăларса апатланчĕ. Вара канма тесе нар çине выртрĕ. Çав самантра пĕри пӳлĕм алăкне уçрĕ те шала кĕмесĕрех каçхи апата чĕнчĕ.

– Çиес килмест ман. Тутă эпĕ, – хуравларĕ Алмас.

– Хăвăнне хăв пĕлетĕн, – терĕ лешĕ, каллех çинçе сасăллăскер.

Алмас алăк патне пырса питĕрме май çук-ши тесе хыпашласа пăхрĕ, нимех те тупмарĕ. Питĕрмесĕрех пурăнаççĕ иккен.

Алмас, самай ĕшеннĕ пулсан та, час çывăрса каяймарĕ. Пуçра пĕрмаях пĕр шухăш хуçаланать: мĕн кĕтет-ха çакăнта. Эсрел тискерлĕхĕ пирки каласа панисене аса илсессĕн халех ӳт чĕтреме пуçлать. Уйрăлу



саманчĕ те куç умĕнчен каймасть. Кам мĕн калани, Нарпи кăшкăрни халĕ те хăлхарах...

Çур çĕр тĕлнелле хурал пырса тĕрĕслерĕ. Алмас тарăн ыйха путнă, çын кĕрсе тухнине те сисмерĕ. Ирхине те çав çынах кăшкăрса вăратрĕ.

Пĕрремĕш кун. Вăл ирхи апатран пуçланчĕ. Çимелли килтен илсе килни те пурччĕ-ха, çапах та Алмас юртăна кĕрсе курас терĕ. Кайрĕ. Вăл пынă çĕре ыттисем çиме тытăннă иккен: икĕ арçын та пĕр хĕрарăм. Юрта варринче вучах, апат пĕçермелли савăт-сапа. Урайне хулăн кĕççе сарнă, пĕр çĕрте кавир хунă вырăн та пур. Тасалăха тытса пыни сисĕнет. Апат пĕçерсе çитерекенсем вара иккĕшĕ те арçын, çинçе сасăпа калаçаканскерсем.

– Лар çавăнтарах, – терĕ пĕри чăвашлах, хĕрарăмпа юнашар вырăна тĕллесе кăтартса. Кашнин уйрăм çĕре ларса çимелле иккен. Алмас пĕчĕкрен ӳснĕ йăлапа хĕвеле хирĕç тăрса çӳлти турăран ырлăх ыйтрĕ те ыттисем пек вырнаçса ларчĕ.

– Текех саншăн турру та, хуçу та Эсрел пулать. Çавна кĕлĕ тумалла. Апата кая юлса çӳремелле мар, Алмас турхан, – асăрхаттарчĕ лешĕ.

Анне пĕçерни пулмасассăн та вĕри апат меллĕрех çав. Арçынсем те аванах хатĕрлеççĕ иккен. Кунти йăласене ăнкартас тесе Алмас лешсем мĕнле çинине, хăйсене мĕнле тыткаланине пăха-пăха илчĕ. Камсем пулнине пĕлес шухăш та пурччĕ, анчах сăмах чĕнме хăяймарĕ. Лешсем те апат çисе пĕтериччен те нимĕн шарламарĕç. Унтан ура çине тăчĕç те Эсреле тав туса пĕрерĕн-пĕрерĕн тухса утрĕç.

– Алмас, санăн та тăма тивет, апатран пурин те пĕр вăхăтра, анчах уйрăмшаррăн тухмалла. Пĕр-пĕринпе

калаçмалла мар, пӳлӗмрен пӳлӗме çӳреме юрамасть. Эсреле тав ту та кай.

– Мӗн калас вара ăна, мӗншӗн тав тăвас?

– Эй, мухтавлă та хăватлă Эсрел, тавах сана çăкăрушăн, – темелле.

– Ун пек калама чӗлхем çаврăнмасть, – терӗ те Алмас алăк патнелле утрӗ. Çакна курсассăн чăвашла пӗлекенни чупса пычӗ те Алмас çулне пӳлчӗ.

– Чарăн! Мӗн хушнине ту. Кун пек хăвна çеç мар, мана та йывăрлăха кӗртсе ӳкерӗн. Кунта кашни утăма асăрхаса тăраççӗ, мӗн пулса иртнине аслисем патне хăвăрт çитереççӗ.

Мӗн тумалла-ха ӗнтӗ Алмасăн? Çăкăр-тăваршăн мӗн пӗчӗкренех турра тав туса ӳснӗскерӗн халӗ Эсреле мухтаса калаçма тивет-ши вара? Калас килмест. Сăмах çеç вӗт-ха, чӗлхе пурпӗрех пăханмасть. Акă тата тепӗр арçынӗ те ун умне пырса тăчӗ те лешне хăй чӗлхипе темӗскер каларӗ, аллипе кăтартса кунтан кайма ирӗк пачӗ. Алмас тухса утрӗ. Йытăсем каллех сиксе ӳкрӗç, ниçта кайса кӗрейми вӗреççӗ, енчен те кăкарнă вӗренӗ татăлса каяс пулсассăн... Саман кирпӗчрен тунă пӗчӗк çуртран пӗр тӗреклӗ арçын тухрӗ те йӗри-тавралла пăхса илчӗ, Алмаса курсассăн йыттисене чарса темӗскер каларӗ те хапха питӗркӗчне тӗрӗслесе пăхрӗ. Лешсем хуçине итлерӗç, йăвашшăнрах вӗре-вӗре хӳрисене выляткаласа илчӗç.

Юртăран маларах тухнисем курăнмаççӗ, пӳлӗмӗсене кӗрсе кайнă пулмалла. Шухăша путнă Алмас хăй алăкӗ патӗнчен иртсе кайнине те сисмерӗ, айккинчи йывăççем патне çитсессӗн тăп чарăнса тăчӗ те айккинелле пăхкаласа илчӗ. Темиçе улма йывăççи тата чечеке ларнă шăлан тӗмӗсем кăна, йăран тавраш ӗ çук. Леш арçын

сăнасах тăнă пулмалла, пĕр йыттине вĕçертрĕ те пахча патнелле пычĕ. Алмас патне çитсессĕн вĕрекен йыттине ирĕке янă пек туса хăратса илчĕ. Лешĕ вара харлатса çивĕч шăлĕсене уçса кăтартрĕ. Унтан арçын йытта картиш хӳминчен кăкарчĕ те каялла утрĕ. Тăвату ураллă хуралçи вара Алмас хăй пӳлĕмне кĕрсессĕн тин лăпланчĕ. Калама çук тунсăхлă шăплăх пуçланчĕ. Никампа та калаçма çук. Юрать-ха, вăл хăмăш вуллинчен тунă шăхличе манса хăварман. Алмас ăна алла илчĕ те хурлăхлă кĕвĕсем калама пуçларĕ. Вĕсенчен пĕри «Вĕç, вĕç, куккук» пулчĕ. «Вĕç, вĕç, куккук, вĕç, куккук, атте килне çитиччен», – тесе темиçе хутчен те ăшра юрласа илчĕ, халиччен каламан кĕвĕсене те ĕнĕрсе пăхрĕ. Унтан нимĕн тума аптранипе нар çине выртрĕ те шухăша путрĕ, тăван тавралăха, амăшне, ашшĕне, йăмăкне, Нарпие аса илчĕ... Шăплăха алăк сасси вăратрĕ. Тахăшĕ юнашар пӳлĕме кĕчĕ. Унччен унта никам та пулман иккен. Кăштах тăрсассăн каялла тухрĕ. Алмас сиксе тăчĕ те чупса пырсах кантăкран пăхрĕ, анчах хăмпă витĕр нимех те курăнмарĕ. Вара вăл алăка уçса пăхрĕ те леш хĕрача юрта патнелле васканине асăрхарĕ. Апат вăхăчĕ çитнĕ иккен.

Ирхи калаçу хыççăн юртăна каяс кăмăл хуçăлчĕ. Эсреле тав тумалла тата... Çимелли хăйĕн те пурччĕ-ха, типĕтнĕ какай та, шăрттан татăкĕ те, çăкăр та... Ак тамаша, апат хутаççи пуш-пушах, нимĕн те хăварман. Ыттисенчен юлас мар тесе Алмас тухса чупрĕ. Анчах ăна юрта умĕнче леш хуралçă тытса чарчĕ те аллипе тĕллесе каялла кайма хушрĕ. Апат çиесси пулмарĕ. Каллех хăй йăвине кĕрсе выртмалли кăна юлчĕ.

Акă çывăхрах ура сасси илтĕнсе кайрĕ, унтан алăк умне темĕскер татăлса ӳкнĕ пек туйăнчĕ, юнашар пӳлĕм

алăкĕ уçăлса хупăнчĕ. Хĕрача кăштах уткаласа çӳрерĕ те лăпланчĕ, канма выртрĕ пулас. Алмас пекех салукшăн тытса килнĕскер ĕнтĕ, хăш халăх хĕрĕ пулни паллă мар, тумĕпе те, сăнран та урăхларахскер. Хăй кӳрши мĕне пула çапла вы̆ртса канмалăхах ывăннине çамрăк турхан халлĕхе пĕлмест-ха.

Кун пек выртнипе пулмасть, кăштах уткаласа çӳресха тесе Алмас алăкне уçрĕ. Ак тамаша, пир таткипе чĕркенĕ япала вырта парать. Алмас хурал пӳрчĕ патнелле пăхса илчĕ те леш япалана хăвăрт çаклатса каялла кĕчĕ. Çăкăр чĕркесе хунă иккен, Алмас кăнтăр апатне пыманнине шута илсе ĕнтĕ. Тахăшĕ хăтланнă çав. Çапах та самай кăмăллă самант. Апла эппин кăштах та пулин пулăшас текен те пур. Тен, леш чăвашла пĕлекенни... «Чим-ха, – çиçсе илчĕ Алмас пуçĕнче ăнкару, – леш хĕрача мар пуль те. Шăпах çавă килнĕ чухне алăк умне темĕскер ӳкнĕччĕ пек. Çавах ĕнтĕ».

Вĕри апат çук чухне шывпа сыпса çинĕ çăкăр та тем пекех. Каçхи апата вăл ыттисемпе пĕрлех кайрĕ. Ку хутĕнче вара апат йĕркине пăхăнма тиврĕ. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, итлес пулать. Кунта килти мар, йăласем те пачах урăхла.

Каçпала Алмас патне лешĕ, апат çитерекенни пычĕ, кунта ăна Ахмат тесе чĕнеççĕ иккен, чурана илсе килнĕ чăвашсенчен. Хăй пирки вара урăх нимĕн те шарламарĕ. Юрамасть пулмалла. Ун халĕ хăйне хушнă ĕçе пуçăнмалла, Алмаса Эсрел чĕлхипе калаçма вĕрентмелле. Çамрăк турханăн вара çак йывăрлăха кĕске вăхăтра çĕнсе илмелле. Ма тесессĕн унăн кĕçех Эсрелпе хăйĕнпе тĕлпулма тивет. Лешĕ вара хăй чĕлхипе çеç калаçать иккен. Апла пулсассăн хатĕрленмелле.

– Тен, манăн сирĕнпе пĕрле апат пĕçернĕ çĕре

хутшӑнмалла мар-ши? – сӗнчӗ Алмас. – Вара ҫӑмӑлрах пулӗ.

– Мӗскер эсӗ, турхан ывӑлне апла юрать-и вара?

– Енчен те ирӗк паратӑр пулсассӑн – эпӗ хирӗҫ мар. Ӗҫрен хӑрамастӑп.

– Ыттисемпе калаҫса пӑхам-ха. Тен, ҫапла тумалла та...

Иккӗмӗш кун. Ахмат Алмаса ирех пырса вӑратрӗ. Вутӑ хатӗрлемелле иккен. Йӗкӗт хаваспах килӗшрӗ. Акӑ вӗсем юрта патне ҫывхарчӗҫ. Юнашарах самай мӑнтӑр йывӑҫ вуллисем выртаҫҫӗ. Ҫавсенчен пӗрне пуртӑпа касса ваклamалла. Ахмат юртӑран вӑрӑм авӑрлӑ пуртӑ илсе тухрӗ те хӑйне пулӑшакана тыттарчӗ. Хӑй вара пуртӑ, йывӑҫ, вутӑ, вучах, кӑвар, апат ячӗсене Эсрел чӗлхипе каларӗ. Алмас пӗр вуллине айккинерех илсе хучӗ те пуртӑпа ӗҫлеме пуҫларӗ. Ак чӗмере, пуртти пачах та касмасть. Пӳрнепе сӑтӑркаласа тӗрӗслесе пӑхрӗ: хӑйраманни те ҫӗр ҫул пулӗ. Ҫитменнине тата йӗсрен тунӑскер кӑна, тахҫанхи, авалхи япала.

– Вутӑ кирлӗ! – кӑшкӑрчӗ тахӑшӗ шалтан.

Алмас темиҫе йывӑҫӑн ҫинҫе вӗҫӗсене пуртӑпа ҫапа-ҫапа хуҫса кӗртсе пачӗ. Хӑйра таврашӗ ҫук иккен. Алмас вучах патӗнчи чулсене тыткаласа пӑхрӗ, юрӑхли тупӑнмарӗ. Ахмат ӑна мунчана кайса пӑхма сӗнчӗ.

Пӗр пӗчӗк ҫурчӗ мунча пекки иккен. Тӗрӗсрех каласассӑн – шыв ӑшӑтса ҫӑвӑнмалли вырӑн кӑна. Милӗк шӑрши-марши те ҫук. Кӗтесре чул купи, чӑп-чӑмӑр та якисем, кӑштах катӑлнисем. Самай тасаскерсемех, вучах ҫывӑхӗнчи пек хӑрӑмлӑ мар. Сӑлтавӗ те паллӑ ӗнтӗ. Ҫав чулсемпе сивӗ ҫанталӑкра пӳрт ӑшӑтнӑ ҫӗрте усӑ кураҫҫӗ. Малтан вӗсене шӗл кӑвар ҫине пӑрахса хытӑ хӗртеҫҫӗ, вара тимӗр савӑтпа пӳлӗмсене кайса лартаҫҫӗ. Ку вӑл,

паллах, сумлӑ ҫынсем валли. Калӑпӑр, Эсрел пурӑнакан ҫуртра пур пӳлӗме те ҫапла ӑшӑтаҫҫӗ. Кунта та ҫапла иккен. Сивӗ чухне ҫав чулсене юрта вучахӗнче хӗртеҫҫӗ. Хальлӗхе вара вӗсем мунчара выртаҫҫӗ.

Алмас пӗр-икӗ чулне суйласа илчӗ те тухрӗ. Унтан вӗсене пӗр-пӗринпе сӑтӑрса, урӑхла каласассӑн, чулпа чула хӑйраса тикӗслерӗ. Вара тин пуртӑ патне куҫрӗ. Чылай вӑхӑт хушши тӑрмашрӗ, хӑйрарӗ те хӑйрарӗ, чулӗсем те ҫӳхелсе кайрӗҫ, анчах ҫивӗчлетсех ҫитереймерӗ. Чулӗсенче хӑйӑр сахалрах.

Леш хурал йыттисене лӑплантарса Алмас мӗн тунине каска ҫинче тимлӗн пӑхса ларчӗ.

Тӑрӑшнин усси пурах ӗнтӗ, пуртти кӑшт лайӑхрах касакан пулчӗ. Ирхи апат хыҫҫӑн Алмас мӗхлесех тӑрслаттарчӗ, тар тухичченех ӗҫлерӗ, мӑнтӑртараххисене ҫурса пурне те пӗр купана пуҫтарчӗ.

– Паянлӑха ҫитӗ, – терӗ Ахмат. – Халӗ ҫак таврари япаласене калама вӗренер. Куҫна мӗскер ҫакланать, ыйт.

Утса ҫӳресех калаҫрӗҫ. Пахчари йытӑ каллех хаяррӑн вӗрсе илчӗ.

– Асту, Алмас, йытӑсем патне ан ҫывхарнӑ пул. Питӗ хӑрушӑскерсем вӗсем, ҫын какайӗпе тӑрантарса ӳстернӗскерсем теҫҫӗ. Хуҫине кӑна итлеҫҫӗ. Акӑ, нумаях пулмасть вӗсем сан пӳлӗмре пурӑннӑ ҫамрӑка тытса ҫурнӑ тет. Лешӗ кунтан тухса тарма шут тытнӑ, хӳме урлӑ сикнӗ те чупнӑ, паллах, хурал асӑрхаман вӑхӑтра ӗнтӗ. Анчах хуралӑн вӑхӑтран-вӑхӑта пӳлӗмсене кӗрсе пӑхас йӑла пур иккен. Лешӗ ниҫта та ҫуккине курсан йыттисене малтан пӳлӗме кӗртсе шӑршлаттарать те хӳмен тепӗр енне илсе тухать. Тӑватӑ уралла тарҫисем вара йӗр ҫине ӳкеҫҫӗ, хула хӗрринче каччӑна пусса

антараççĕ. Хуралĕ чупса çитнĕ çĕре вилмеллех туртса çураççĕ.

«Тарасран шикленсе çапла хăратса калаçать пуль ĕнтĕ», – шутласа илчĕ Алмас.

– Ман кӳршĕсене кашни кунах ăçта илсе каяççĕ вара? – ыйтрĕ вăл Ахматран.

– Тепĕр темиçе кунтан хăвах курăн-ха. Ытлашши ан васка.

– Ăçтан килнĕскерсем-ши вара вĕсем?

– Пĕлместĕп. Мана хама та ĕнер кăна килсе ячĕç.

– Хăв тата ăçтисем пулатăн вара?

– Минеслу йăхĕнчен эпĕ. Пиллĕкĕмĕш çул кунта ĕнтĕ.

Тепри юртăран тухрĕ те кусене чĕнсе илчĕ. Лешсем киличчен кăнтăрлахи апат хатĕрлемелле. Юрта патнелле утнăçем Алмас хăйпе юнашар пурăнакан хĕр пирки ыйтрĕ. Ольга ятлă иккен. Ăçтан илсе килнине Ахмат каламарĕ, пĕлместĕп терĕ.

Акă лешсем те çаврăнса çитрĕç, лашапах илсе килсе яраççĕ иккен. Ăсатса яракансем те темиçен. Ку хутĕнче вара Алмас кашнинех тимлĕн асăрхама тăрăшрĕ, сăнра мĕнле уйрăмлăхсем пуррине сăнарĕ. Ольга вара кăнкăвак куçлăскер, çивĕтленĕ сарă çӳçĕ пилĕк таранах. Сылтăм пит çăмартинче пĕчĕкçĕ тур палли ларать. Самай илемлĕскер. Çапах та... Шухăшран хăвăрт вĕçекен япала урăх çуках пуль. Куç умне Илемпи сăнарĕ тухса тăчĕ, ăна пĕве айне пăрахнă самант... Кам шутласа тупнă-ши çавăн пек усал йăлана? Çитменнине тата çакна турă ячĕпе тăваççĕ вĕт-ха, çынсем пĕр-пĕрне шеллемеççĕ. Ырăпа усал юнашарах çӳреççĕ иккен.

Тĕлĕнмелле япала, куç умĕнче пĕри тăрать, пуçра танлаштару хĕвĕшет, Нарпи те аса килет. Çук, Ольга

вăл Алмас хăнăхнă илем виçи картне лараймасть. Ун çумĕнче пурте килĕшӳллĕ, çапах та темĕскер çитмест пек.

«Чим-ха, – чарчĕ хăйне Алмас, – мĕн тăватăп-ха эпĕ, мĕнле шухăш хуçаланма тытăнчĕ-ха ман ăшăмра? Ман халĕ пĕртен-пĕр тĕллев пулмалла – кунти йывăрлăхсене чăтса тухасси. Атте килсе илсе каятех ĕнтĕ».

Алмас юртăран кăшт маларах тухрĕ те хуллен утса пычĕ, Ольга пӳлĕмĕ патне çитсессĕн чарăнчĕ. Лешĕ пĕр вунă утăм кăна каярах пынă иккен. Пĕр-пĕрин çине пăхса илсессĕн Алмас çăкăршăн тав турĕ. Урăх нимех те калаймарĕ, чĕлхе пĕлменни касать. Ольга вара хурал пӳрчĕ еннелле пăхса илчĕ те васкасах хăй пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ. Алмас та хăй йăвине кĕчĕ те тӳрех шăхличне ярса тытрĕ, хурлăхлă кĕвĕ пуçларĕ...

Кĕвĕ хыççăн кĕвĕ шăранчĕ. Калама çук асамлă самант, кĕвĕ çын туйăмне таçта çити çĕклесе ярать, вĕçтерет. Таврара мĕн пулса иртни те, кам пурри те вăхăтлăха манăçа тухать. Халĕ те çавах, Алмас пӳлĕме Ахмат кĕрсе тăнине те сисмерĕ, кĕтесселле пăраннă та хăй шăхличĕпе калаçса йăпанать. Кашни сасси куççулĕ витĕр тухнă пек туйăнать. Паллах, Ахмат чунĕ те хускалчĕ ĕнтĕ. Вăл та чăвашах вĕт-ха. Эсрел тĕнне йышăннă пулсассăн та тăван кĕвĕ хăй ĕçнех тăвать.

– Алмас, чарăн-ха, çитет чуна макăртса, – терĕ çемçен Ахмат.

Алмас шартах сикрĕ, таçтан таврăннă çын пек Ахмат çине тĕлĕнсе пăхса илчĕ. Тинех хăй ăçтине сисрĕ пулас. Каллех картишне тухса утса çӳрерĕç, ют чĕлхепе калаçрĕç. Пĕчĕк чухне Эсрел çыннисенчен илткеленĕ сăмахсем те тĕл пулкалаççĕ. Хырçă пухма е çынсене тытса

кайма пынисем пурте тенӗ пекех Алмассем патӗнче чарӑнса тӑратчӗҫ, темиҫе кун пурӑнни те пулнӑ. Хӑшӗ-пӗри вара Алмасран чӑваш сӑмахӗсене ыйтса пӗлетчӗ, ҫамрӑк турхан – вӗсенне. Те ҫавна пулах чӗлхе вӗренесси ӑнӑҫлах пырать.

Акӑ вӗсем калаҫса утнӑҫемӗн чутах пахча патӗнчи йытӑ патне ҫитсе тӑман. Юрать-ха, лешӗ хаяррӑн вӗрсе сике пуҫларӗ. Алмас кӗсйери шӑхличне туртса кӑларчӗ те хаяр куҫлӑ йытӑ ҫине пӑхса калама пуҫларӗ. Лешӗ вӗрме чарӑнчӗ те хыҫаларах чакса кайри урисем ҫине ларчӗ. Нивушлӗ шӑхлич сассинче йытӑ хаярлӑхне чакаракан вӑй та пур, нивушлӗ вӑл хӑй умӗнче ырӑ кӑмӑллӑ ҫын тӑнине сисрӗ? Акӑ, йытӑ пуҫне пӑркаласа, хӳрине выляткаласа илчӗ. Шӑп ҫав самантра леш хуралҫӑ васкаса пычӗ те йытӑ ҫине пӑхса хыттӑн кӑшкӑрчӗ. Каллех хаяррӑн вӗрни илтӗнсе кайрӗ. Кусене те ятласа илчӗ. Тепре йытӑ патне пырсассӑн вӗҫертсе яратӑп тесе хӑратрӗ...

Виҫҫӗмӗш кун. Ирхи апат хыҫҫӑн хуралҫӑ пурне те кил картине чӗнсе кӑларчӗ те кашнинех самай тӗреклӗ туя тыттарчӗ. Ахмат та кунтах айккинче пӑхса тӑрать. Хуралҫӑ мӗн каланине Алмаса куҫарса пачӗ.

– Паян туяпа мӗнле усӑ курмаллине вӗренетпӗр. Малтан унпала мӗнле ҫапсассӑн ӑнӑҫлӑрах пулнине каласа парам. Туяпа малтанах хӑлаҫланма кирлӗ мар. Вӑл тӑшмана сыхланма асӑрхаттарни пулать. Калӑпӑр, енчен те туяна ҫӳле ҫӗклерӗн пулсан, тепри хӑйне ӑҫтан ҫапма пултарнине тавҫӑрса сан туюна ярса илме е хӑй туйине хирӗҫ тытса сыхланма пултарать. Туяна урапа юнашар тытма тӑрӑшмалла, унтан питӗ хӑвӑрт хыҫалалла ҫавӑрса ярса сулмаклатмалла та кӗтмен ҫӗртен ҫапмалла. Туя вӑйӗ сасартӑк ҫапнинче. Ӑна алӑран алла хӑвӑрт куҫарма пӗлни те питӗ усӑллӑ. Акӑ, ҫапла.

Хуралçă туяна хăй вылятса кăтартрĕ. Пĕр аллăран тепĕр алла вĕлт кăна куçарать. «Халĕ вара çапма пуçлатăп. Эсир вара сыхланăр, кам мĕнле пултарать».

Малтан вăл туйипе леш арçынсенчен пĕрне пуçран çапнă пек сулса ячĕ, паллах, пĕтĕм вăйран мар ĕнтĕ. Лешĕ аллипе тытма хăтланчĕ, анчах ăнăçлах пулмарĕ. Хуралçă ăна хăй туйине икĕ алăпа тытса хирĕç тăма сĕнчĕ. Тепĕр хут çапма пикенчĕ, лешĕ вара мĕн хушнине турĕ. Унтан çак хăнăхтарăва кашнинпех туса пăхрĕ. Урăран е аллăран мĕнле çапмаллине те вĕрентрĕ.

– Халĕ вара мана çапăр, чăнласах. Махмуд, пуç-ла, – терĕ хуралçă.

Лешĕ маларах тухса тăчĕ те туйине çĕклерĕ. Çапма хăяймасть. Хăрать ĕнтĕ.

– Çап! – кăшкăрчĕ хуралçă.

Махмуд туйине сулса ячĕ, анчах лешĕ хăй туйине хирĕç тытма ĕлкĕрчĕ.

– Тепре çап! Урăран е аллăран.

Çук, ĕç тухмарĕ.

– Халĕ Остап çапать, – хушрĕ хуралçă. Вăл та лек-тереймерĕ. Ольга та çапса пăхрĕ, ăнăçлă пулмарĕ. Акă черет Алмаса çитрĕ.

– Пар-ха ăна лайăххрах, – терĕ сăнаса тăракан Ахмат.

Алмас тарăхсах çапрĕ, темиçе хут та. Анчах лешĕ тĕлĕнтерсех ячĕ. Ниепле те ӳтрен лектерме май çук, тем вăхăтра туйине лартса ĕлкĕрет. Вара вăл икшерĕн тăрса çапăçма хушса хăварчĕ те хурал пӳртне кĕрсе кайрĕ.

Алмасăн Ольгăпа тытăçма тӳр килчĕ. Лешĕ вара хĕрача пулсассăн та самай вичкĕнскер, аванах хирĕç тăрать, туйине çирĕп тытать. Вăл çеç те мар-ха, тапăнса çапма та пикенет. Çапла çапăçмалла чылайччен выля-

нă хыççăн леш хуралçă тухрĕ те хăй туйине илсе кусем патне пычĕ, ним тăхтаса тăмасăр Остапа çапма тытăнчĕ. Чăннипех шаплаттарать. Хăш-пĕр çĕртен лектерсе те илчĕ. Остап тарăхса кайсах хирĕç çапма пуçларĕ, анчах тĕл лектереймерĕ. Хуралçă кулса илчĕ те Махмуд патне куçрĕ, ăна та тĕрĕслесе пăхрĕ. Ольгăна та хĕрхенмерĕ, кула-кулах çапкаласа илчĕ. Кăштах йĕкĕлтесе вылянă пек те туйăнчĕ. Ун пекки пулать вăл. Хуралçă умĕнче паллă çынсен ачисем тăраççĕ вĕт-ха. Хăй вара вăл никамах та мар, Эсрел тарçи кăна. Апла пулин те çак тăватă çын ун аллинче, хăраççĕ вĕсем. Хăвна хуçа пек тытма май пурри самаях савăнтарать иккен.

Акă хуралçă Алмас умне пырса тăнăччĕ кăна, çамрăк турхан ăна пĕççинчен туртса илчĕ, самай ыраттармалла. Лешĕ çакна пачах та кĕтмен пулас, сыхланма ĕлкĕрей-мерĕ. Пуçланчĕ вара... Чăннипех çапăçрĕç. Алмас алли юнланнине курсассăн Ольга чăтса тăраймарĕ, туйине персе ярса иккĕшĕн хушшине кĕрсе тăчĕ. Лешсем вара лăпланчĕç. Хуралçă туясăр хĕрачана çапас мар терĕ пулмалла.

– Астăвăр, чурасене вăхăтран-вăхăта патак çитер-месессĕн кахалланса пыраççĕ, итлеми пулаççĕ. Ачаш-ламалла мар вĕсене, – терĕ Алмас çине сиввĕн пăхса. Туясене пуçтарса илчĕ те нимĕн шарламасăр хăй патнел-ле уттарчĕ.

Кусем вара тӳрех Алмас патне пычĕç. Ольга ун аллине тытрĕ те юн сăрхăнса тухакан вырăна ĕмсе илчĕ, шăнăр курăкĕ татса сурана хупларĕ.

– Пурпĕрех маттур эсĕ, – терĕ Остап Алмаса. Махмуд ăна çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ те:

– Пĕрлерех пулма тăрăшмалла пирĕн, – терĕ.

Çак сăмахсем вара Алмасшăн чи хаклă эмел пекех

туйӑнчӗҫ, ыратни те нимех те мар. Самаях ывӑннӑскер хӑй пӳлӗмне кӗрсе выртрӗ. Ун хыҫҫӑнах Ольга чупса пычӗ, аллинче шурӑ пир татӑкӗ. Суранланнӑ вырӑна майласа ҫыхнӑ ҫӗре хуралҫӑ персе те ҫитрӗ, сыхласах тӑнӑ иккен. Нухайккапа. Ӑна курсассӑн хӗрача алӑк патне тапса сикрӗ. Лешӗ нухайккине сулса ячӗ, анчах хытах лектерейменрӗ.

– Каланӑ сире пӗр-пӗрин патне кӗме юрамасть тесе! Тепре курсассӑн...

Хуралҫӑ тухса утрӗ. Алмас вара хӑй пӳлӗмӗнчен тухмарӗ, апат ҫиме те каймарӗ. Каҫпала ӑна Ахмат пырса ҫитерчӗ.

Ҫывӑрма выртсассӑн шухӑш каллех тӑван киле вӗҫсе кайрӗ. Акӑ пурте куҫ умӗнче: ашшӗ те, амӑшӗ те, Калима та, Пӑрчкан аппӑшӗ те... Чӗкеҫ те унтах пек, темшӗн питӗ ятлаҫать, тарӑхсах аллипе сулкалашать. «Каллех темӗскер ыйтма пынӑ-ха, те ҫимелли, те тумланмалли? Ку хутӗнче нимех те тивмерӗ курӑнать. Ҫавӑнпа кӑмӑлсӑр пуль ӗнтӗ вӑл». Ҫапла шухӑшласа выртнӑ хушӑрах Алмас вӑрмана пырса кӗчӗ пек. Ак чӗмере, унта Пӑрчкан тӑра парать. Аллисемпе хыпаласа пӗр йывӑҫа суйласа илчӗ те: «Ҫак ҫӑкана касмалла, вӑл шӑпах манпа пӗр ҫулалла», – терӗ. Алмас пуртӑ тытрӗ те вӑйпах кач-латтарма пуҫларӗ. Шурӑ турпас айккинелле сирпӗнет кӑна. Ак тамаша, йывӑҫ вулли варрине ҫитсессӗн сасартӑк юн сӑрхӑнса тухрӗ. Алмас касма чарӑнса айккинелле пӑхса илчӗ, Пӑрчкан курӑнмарӗ. Каччӑ пуртӑ ҫинчи юна симӗс курӑкпа шӑлса илчӗ те тепӗр енчен касма тытӑнчӗ. Пӗрре пуҫланӑ ӗҫе вӗҫлемеллех ӗнтӗ. Ҫав самантра темӗскер кӗмсӗртетни илтӗнсе кайрӗ. Алмас куҫне уҫрӗ. Урамра аслатиллӗ ҫумӑр чашлаттарать иккен...

Тăваттăмĕш кун. Типĕ çанталăка пула хăрăнса çитнĕ çĕр тинех ĕçсе тăранчĕ. Йывăç-курăк тата симĕсреххĕн курăнса кайрĕ. Ирхи апатран тухнă тĕле çанталăк уяртнă, хĕвел те такамран кулнă пек йăлкăшать.

Кăшт вăхăт иртсессĕн кунта пурăнакансене тăваттăшне те урапа çине лартса илсе кайрĕç. Озал визирь хăй килнĕ иккен. Халĕ, ав, пуринчен малта чаплă ăйăр çинче ларса пырать. Ăна курсассăн кунти çынсем чăрăнса тăрсах пуç таяççĕ. Пурте палласçĕ курăнать. Лешĕ вара пуçне пушшех каçăртса мăнаçланса илет. Эсрелĕн чи çывăх çыннисенчен пĕри вĕт, хулари йĕркене тытса пыраканни, халăха ĕçлеттерекенни.

Кĕçех вĕсем хула хĕррине çитрĕç. Йĕри-таври тăпра куписем. Çыннисем вара... Кăткăсем пекех хĕвĕшеççĕ. Çĕтĕк кĕпеллисем те пур.

– Мĕн тăваççĕ вара кунта? – ыйтрĕ Алмас Ольгăран.

– Хула йĕри-тавра тăпра купаласçĕ, çӳллĕ хӳме тăваççĕ.

Чăнах та, тинех тавçăрса илчĕ Алмас. Халĕ ĕнтĕ ăнлантарма та кирлĕ мар, пурте куç умĕнче. Лаша çинче ларса çӳлтен пăхкаласа çӳрекенсем те пур. Акă, пĕри пушăпа хăмсарса илчĕ, çапассипе хăратрĕ. «Чурасене ĕçлеттереççĕ», – шутларĕ Алмас.

Кайсан-кайсан çырмаллă-сăртлă вырăна çитсе чарăнчĕç. Кунта та çынсем. Чул йăтаççĕ. Çырмаран хăпартмалла иккен.

– Куратăр пулĕ, мĕнле мăран ĕçлеççĕ. Вĕрентсе илĕр-ха вĕсене, – терĕ Озал. Хăй лашине чăпăрккапа туртса çапрĕ те сиккипе хула патнелле вĕçтерчĕ. Кунти ертӳçĕсем тăваттăшне те нухайкка тыттарчĕç те çырма айккине тăратса тухрĕç. Ытлашши хуллен утакансене



хӑваламалла иккен. Паллах, нухайккапа ҫапсах. Акӑ лешсем пырса тӑнӑ-тӑманах чул йӑтакансене ҫапкаласа илчӗҫ. Йывӑр чула аран ҫӗклесе пыраҫҫӗ, ҫумӑр хыҫҫӑн урисем те шӑваҫҫӗ. Вырӑнӗ те тӑмлӑскер. Мӗнле хӑйса ҫапӑн-ха вӗсене? Ниепле те алӑ ҫӗкленмест.

– Мӗншӗн ҫапмастӑн?! – илтӗнчӗ пӗр ертӳҫин хулӑн сасси. – Хӑвна тутантарса пӑхмалла-им тата?

Алмас пӗрне ытахалӗнчен ҫапса пӑхрӗ.

– Хытӑрах пар! Ак ҫапла, – тесе ҫапса кӑтартрӗ.

Тахӑшне хӑваламалла? Лешӗ ҫаплипех пӑхса тӑрать. Вара Алмас хӑй патӗнчен иртсе пыракан ҫӗтӗк кӗпеллӗ арҫынна ҫапрӗ. Лешӗ ҫаврӑнса пӑхрӗ те: «Эсӗ-ҫке ку, Ватрас турхан ывӑлӗ», – терӗ.

Ҫак сӑмахсене илтсессӗн Алмас чӗри чутах сиксе тухатчӗ. Пӗрремӗш хут чӑннипех ҫапрӗ, вӑл та пулин

чăваша тиврĕ, хăйне паллакан çыннах иккен. «Мĕн тăватăп-ха эпĕ? Нивушлĕ çакăн пек ирсĕр ĕçпе аппаланса тăмалла вара манăн?» Тăвăлса çитнĕ чунне чарас тесеши, Алмас нухайккине айккинелле ывăтрĕ. Çакна Ольга асăрхарĕ, чупса пычĕ те нухайккана илсе Алмаса тыттарчĕ. «Асту, лешсем вĕсем никама та хĕрхенмеççĕ. Çак пушăпах хăвна хĕртсе илеççĕ ак. Остапа та çапла турĕç».

Çӳлтен Эсрел çыннисем иккĕн аннине курсассăн Алмас Ольга каланине итлерĕ, нухайккапа сулкалашма пуçларĕ...

Пиллĕкмĕш кун. Паян апат хыççăн каллех хула хĕрне илсе кайрĕç. Ку хутĕнче вара тăпра купаланă çĕре. Каллех ĕçлекенсене хăваламалла, васкатмалла. Пур ĕçе те Озал тĕрĕслесе тăрать иккен. Акă, сасартăк сăрнай сасси илтĕнсе кайрĕ. Пурте ĕçлеме пăрахсах чĕркуçленсе ларчĕç. «Лар часрах! – терĕ Алмаса Ольга. – Ав, курмастăним, Эсрел хăй килнĕ».

Чăнах та, Озалпа пĕрле шап-шурă йăйăр çинче тепĕр çын ларса пырать. Тумĕ вара, ылтăн-кĕмĕлпе илемлетнĕрен, аякранах çиççе тăрать. Питĕ тĕреклĕ арçын пулас, Озал ун çумĕнче пĕчĕк ача пек кăна курăнать. Аслă визирь хăй хуçине аллипе тĕллесе кăтартса ĕççем мĕнлерех пынине каласа парать. Каллех сăрнай сасă пачĕ. Пурте ĕçе пуçĕнчĕç. Пăхавçăсем чурисене çапа-çапа илчĕç.  Алмас та çапрĕ. Мĕн пулса иртет-ха? Алă хăех хăмсарать. Хăнăхса çитрĕ. Лашана е ĕнене çапнă пек çеç туйăна пуçларĕ.

Алмас пĕлменни кунта та темĕн чухлех. Малтан хăва авса çатан карта тытса тухаççĕ иккен, вара тин тăприне купалама пуçлаççĕ. Пĕрисем лавпа турттараççĕ, теприсем сăран михĕпе йăтаççĕ. Кун чухлĕ çын ĕçленине Алмас пĕрремĕш хут курать. Хӳми вара самай çӳллĕ пулать.

Пусмасăр хăпараяс çук. Тепĕр ушкăнĕ вара çырмаран йăтса килнĕ чула майлаштарса хурать. Тăм çăрсах çыпăçтарса пыраççĕ курăнать. Ку вырăна мĕншĕн чулпа çирĕплетеççĕ-ши вара? Ыйтса пĕлĕччĕ, ыттисем чылай инçе тăраççĕ. Пĕлес килни никама та канăç памасть. Алмас чăтса тăраймарĕ, Остап патне пырса ыйтрĕ. «Хула хапхи пулать вăл», – терĕ лешĕ.

Чăнах та, икĕ енчен чулпа çирĕплетсе пысăк хапха майлаштарса лартаççĕ пуль ĕнтĕ, тăшман тапăнсассăн хупăнса ларма: «Хăйне тĕнче пуçлăхĕ пек тыткалакан Эсрел те кăштах хăрать пулас. Камран-ши?» – шутласа илчĕ Алмас...

Акă, пĕри, пушă михĕпе иртсе пыраканскер, чарăнса тăчĕ те сиввĕн пăхса шăл витĕр: «Эх, Алмас, намăс мар-и сана. Халăха Эсреле хирĕç çĕклес вырăнне çакăнта чăвашсене çапса тăратăн. Аçу хăраххи», – терĕ.

Алмас пичĕ çуса тасатнă кишĕр пек хĕрелсе кайрĕ. Каламалли сăмах та тупăнмарĕ. Лешĕ вара михĕ тĕпĕнчи тăпрана Алмас ури çине силлерĕ те малалла уттарчĕ...

Ăçта кайса кĕмелле-ха? Атă ăшĕнчи тăпра туяпа çапнинчен те хытăрах ыраттарать. Намăс тăпри мар-и-ха вăл? Килелле тапса сикĕччĕ, усси пулас çук. Эсрел тыткăнĕнчен киле чĕррĕн таврăнакан пулман теççĕ. «Атте, мĕншĕн килсе каймастăн çак эсĕ? Ман çинчен мантăн-им?..»

Улттăмĕш кун. Кăнтăрлахи апат хыççăн Алмаса каллех чул кăларнă çĕре илсе кайрĕç. Ку хутĕнче вара пĕчченех.

Вăл çитнĕ çĕре ĕç вĕресе тăрать тесессĕн те юрать, ирех пуçлаççĕ курăнать. Паян вара тăр кăнтăрлах темиçе çĕрте те вутă йăлкăшса çунать. Пĕр вучахĕ инçех те мар, унта мĕн пулса иртни лайăхах курăнать. Чылай пысăк

чула хăйăртан тасатнă та йĕри-тавра вут хурса хĕртеççĕ. Кăварĕ те нумай. Питĕ вĕри курăнать, çыннисем кăшт айккинерех кайса тăнă. Тимлĕнрех пăхсассăн хĕрсе çитнĕ сывлăш выляни те паллă. Вутне вара хĕрхенмеççĕ, хураççĕ те хураççĕ. Алмас çакна чул йăтакансене çапма мансах чылайччен сăнаса тăчĕ. Ак япала, чулĕ те хĕрсе кайнă иккен, хĕрлĕ тĕс çапнă. Лешсем çаплипех шĕл-кăвара вăрăм шалчапа хускаткаласа илеççĕ. Акă, иккĕшĕ вăрăм валак йăтса пырса пĕр вĕçне чул çине тĕкĕнтерсех вырнаçтарса лартрĕç. «Аялтисем! Сыхланăр!» – кăш-кăрчĕ пĕри. Чул патĕнчисем те чылай айккине кайса тăчĕç. Унтан çӳлтисем валак тăрăх шыв ячĕç. Чашăл! туса пăс çĕкленнĕ хыççăн таврана шарт-шарт! тунă сасă сарăлчĕ. Самай пысăк чул татăкĕсем аялалла вăркăнса кайрĕç. Лере вĕсене часрах сивĕнччĕр тесе татах шывпа сапаççĕ иккен. Кайран çĕклесе хăпартаççĕ. Çакăнта та-паçланакансене хăваласа тăмалла та ĕнтĕ Алмасăн.

Кунта та чăваш тăрăхĕнчи ĕç йĕркипе танлаш-тармалли тупăнчĕ. Çамрăк турхан ашшĕпе пĕрле ялсем тăрăх çӳренĕ чухне çынсем пысăк чула мĕнле ватнине куркаланăччĕ-ха. Малтан çав чула тимĕр е пăхăр япалапа шăтарса чылай тарăн шăтăк тăваççĕ. Унтан çав шăтăка питĕ типĕ йывăçран тунă пăта çапса кĕртеççĕ те шыв яраççĕ. Йĕпенсе сарăлнă йывăç вара хăй ĕçне аванах тăвать, чула çурса парать. Ку мелпе чăвашсем мĕн авалтанпах усă кураççĕ иккен. Кунта вара урăхла. Каç тĕлнелле хĕртнĕ чулсем татах шартлата-шартлата çу-рăлчĕç...

Алмас çитнĕ çĕре лешсем каçхи апат çисе канма выртнă пулмалла. Пĕри те курăнмаççĕ. Ахмат та çуккă, унпа пĕрле ĕçлекенни кăна. Апат çинĕ май кăштах пуплешсе илчĕç те лăпланчĕç.

Чул кăларнă çĕрте пулни самаях ывăнтарать иккен. Шăм-шакран ытла ăшри йывăрлăх пусать, шăхлич те тытас килмест. Алмас вара выртнă-выртманах çывăрса кайрĕ.

Ольгăшăн паянхи кун калама çук пысăк хуйхă илсе килчĕ. Хĕрарăмран тăранма пĕлмен Эсреле пулах ĕнтĕ. Ольга ашшĕ, Танаис шывĕ пуçланнă çĕрте пурăнакан ăру пуçлăхĕ, хăй хĕрне Эсреле качча пама килĕшнĕ, кăштах та пулин çăмăллăх шыраса ĕнтĕ. Чылайăшĕ çапла тăваççĕ те. Эсрел арăмĕсем хушшинче мĕнле халăх хĕрĕ çук пулĕ.

Ыран вара Ольгăна Эсрел çуртне куçараççĕ, арăм тума хатĕрлеççĕ. Ашшĕ те килет ĕнтĕ. Унсăр мĕнле-ха?

Малалла мĕн пулса иртессине ăнкартма май çук. Пĕр пĕччен вĕт-ха вăл, калаçса чуна пусарма та çын çук. Тĕрмери пек пурăнать. Алмас патне кайĕччĕ, хуралтан хăрать. Енчен те вăл сиссессĕн, ахаль ирттерсе ярас çук. Тен, халĕ Ольгăна тивмĕ-ха, çапах Эсрелĕн пулас арăмĕ. Патакĕ Алмаса лекме пултарать. Уншăн сăлтав кăна пултăр, çапать те хуçать.

Çапла çывăрса каяймасăр пĕр енчен тепĕр енне çаврăнкаласа выртнă çĕре вăхăчĕ самаях шурĕ. Акă, алăк сассисем те илтĕне пуçларĕç. Пурте пӳлĕмрех-ши тесе тĕрĕслет ĕнтĕ. Ольга куçне хупса çывăрнă пек туса выртрĕ. Лешĕ алăка уçса кăштах итлесе тăчĕ те тухрĕ, унтан Алмас патне кĕрсе пăхрĕ. Вара хăй патне уттарчĕ. Халĕ ĕнтĕ урăх тĕрĕслес çук. Йĕрки çапла, çур çĕр тĕлнелле кĕрсе пăхатех.

Тепĕртак тăрсассăн Ольга питĕ хуллен алăкне уçрĕ те çарранах, ура сасси ан пултăр тесе ĕнтĕ, Алмас алăкĕ патне пырса тăчĕ. Ăна уçиччен йĕри-тавра пăхса илчĕ. Нимĕнле сас-хура та илтĕнмерĕ, пĕр йытти кăна кăшт

йынăшса илчĕ те лăпланчĕ. Вара тин питĕ хуллен уçса кĕрсе тăчĕ те çаплипех васкамасăр хупрĕ. Унтан çывăракан Алмас патне пырса тăчĕ те питĕнчен шăлса илчĕ. Лешĕ вăранмарĕ. Хĕрача вара каччă хăлхи патне пĕшкĕнсе: «Алмас, вăран-ха», – терĕ. Илтрĕ пулас, чĕтренсе илчĕ те хăравçă сасăпа: «Кам кунта?» – терĕ.

– Ан хăра. Эпĕ ку, Ольга.

– Мĕн пулчĕ вара? Лешĕ килсен...

– Урăх килмест вăл... Калаçас килет манăн, чунăм çунать. Кунта эпĕ юлашки каç, – терĕ Ольга Алмаспа юнашар ларса. – Ыран мана Эсрел килне куçараççĕ.

– Ку мĕне пĕлтерет тата?

– Хăй арăмĕ тăвасшăн вăл мана. Аттепе те калаçса татăлнă.

– Мĕн тăвăн ĕнтĕ, Ольга, турă çырнинчен иртеймĕн. Шăпу çапла пулĕ.

– Мĕнле турă... Каяс килмест ман унта, чысăма та уншăн упраман.

Ним кĕтмен çĕртенех Ольга Алмаса ыталаса илчĕ те чуптума тытăнчĕ. Хăйĕнчен вĕри сывлăш çапать.

– Алмас, юрат мана, пĕрремĕш арçын эсĕ пул, – пăшăлтатрĕ Ольга.

Алмас тĕлĕннипе хĕр ытамĕнчен вĕçерĕнсе ура çине тăчĕ. Унччен вăл кун пеккине тĕл пулманччĕ-ха, мĕн тумаллине те пĕлмест. Лешĕ вара хăйĕннех перет, юратма йăлăнать.

«Мĕнле-ха капла? Чунăм та туртмасть, юратнă хĕр те мар. Çук, кун пек юрамасть», – чарчĕ хăйне çамрăк турхан.

– Лăплан-ха эсĕ. Тен, кун пекех хуçăлма кирлĕ те мар. Керменти пурнăç тем тесессĕн те кунтинчен лайăхрах ĕнтĕ.

– Эх, эсӗ те ҫав, – терӗ те Ольга ӗсӗклесе йӗрсе тухса кайрӗ.

Алмасăн вара ҫывăрасси пулмарӗ. Ольга та лăпланаймарӗ, ирччен макăрчӗ. Мӗн шутларӗ-ши ӗнтӗ вăл Алмас пирки...

## VI

Ҫынна ăна пурăнса ирттернӗ ҫулсенчен ытларах хуйхă-суйхă ватăлтарать, сывлăха кăшлать. Алмаса илсе кайни, халӗ тата Пăрчкана пытарни Ватрасшăн та ахаль иртмерӗ: сăнран та улшăнчӗ, утнă чухне те туйи ҫине ытларах тайăнма пуҫларӗ. Тăр кăнтăрлах выртса каннине те асăрхама пулать. Вăйӗ чакса пынине туять вăл, керем патӗнчен иртнӗ чухне унта кӗрсе тухатех. Улăпа ҫавăрса кил тесе турра кӗлӗ тунă чухне те мăчавăрпа пӗрле пулчӗ. Паян вара ирхине тăрса кăштах утса ҫӳрерӗ те тепӗр хут выртрӗ. Мӗн ыратнине те каламасть.

Кăнтăрла тӗлнелле Ватрас патне мăчавăрпа ҫамрăк арҫын пычӗҫ. Лешӗ кӗнӗ-кӗменех чӗркуҫленсе ларчӗ те хăй сăмахне пуҫларӗ:

– Аслă турхан, каҫар пире, эсӗ хушнă ӗҫе тăваймарăмăр. Ҫичӗ юхан шыв урлă, тусем-сăртсем урлă каҫрăмăр, Улăп патне ҫывхарма май килмерӗ. Эсрел тарҫисем питӗ тимлӗн сыхлаҫҫӗ ăна, унта пыракансене тӳрех вӗлереҫҫӗ. Иккӗн кăна ҫăлăнса тухрăмăр. Тепри аманнине пула кунта килеймерӗ, вилес пекех выртать. Унта ҫитме вăйлă ҫар кирлӗ. Пӗчӗк ушкăнпа кайнин усси ҫук, ҫынсене вӗлерсе пӗтерни кăна.

– Ун пек ҫара ăҫтан пухăпăр-ха, вăйлă каччăсене Эсрел валли суйлаҫҫӗ вӗт, – пăшăрханса каларӗ мăчавăр. – Тармалла кунтан, тармалла. Ватрас, эсӗ мӗн

шутлатăн. Пĕр кунне калаçса татăлнăччĕ мар-и çак.

Турхан пĕр вăхăт нимех те шарламарĕ. Чăнах та, кун пирки калаçнăччĕ-ха вĕсем. Анчах унтанпа самай пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Уйрăмах Алмаса Эсрел патне илсе кайни шухăша тепĕр майлă çавăрса ячĕ. Кунтан тапранма юрамасть. Унсăрăн Алмаса йывăр килет, вĕлерме те пултарĕç. Чăтас пулать.

– Хăвăрах куратăр вĕт, кун пек сывлăхпа ăçта кайăпăр ĕнтĕ. Эсрел çыннисем шыраса тупсан тата... Çук, хальлĕхе кунтах пурăнар-ха, – лăплантарма пикенчĕ Ватрас. – Кăштах вăй илем-ха, ун чухне калаçăпăр.

Мăчавăр нимех те шарламарĕ. Мĕн калăн ĕнтĕ, чирлĕ çынпа тавлашни пит вырăнлă япалах мар.

– Алмаса та илсе кайнă терĕç. Хамăр кунтах пулнă пулсассăн, тен, çăлса хăвараттăмăр, – тăсрĕ калаçăва çамрăкки.

– Çук ĕнтĕ, йăли çапла. Çапăçни кунта пачах та вырăнсăр, Эсреле тарăхтарни çеç, – терĕ йăваш сасăпа унччен хăйне хăватлăн тытакан турхан.

Çамрăк арçын калаçу çапла пуласса кĕтмен иккен. Ватрас та самаях улшăннă. Ун сăмахĕсем вилĕмрен çăлăнса юлнă çынна тивĕçтерме пултараймаççĕ. Вара вăл килелле кайма шухăш тытрĕ. Мăчавăр ăсатма тухрĕ те лешне шурсухалсене пухма хушрĕ, хăй каллех Ватрас патне кĕчĕ, юн тымарне тытса пăхрĕ, мĕн ыратнине ыйтса пĕлчĕ. Турхан каланинчен çакă паллă пулчĕ: ура вăйĕ самай чакнă, утнă чухне сывлăш пӳлĕнет, чĕре патĕнчен пĕрмаях темскер хĕсет. Мăчавăр Аминене чĕнсе илчĕ те чирлĕ çынна суккăр вĕлтрен шывĕ ĕçтерме хушрĕ.

– Ватрас, эсĕ вара тем пек йывăр пулсассăн та кереме çитме тăрăш, Турра парне парса кĕлĕ тăвăпăр, сана сыватма ыйтăпăр, – терĕ мăчавăр тухса каяс умĕн.

Кăшт вăхăт иртсессĕн Амине юмăç карчăк патне вĕçтерчĕ. Ашшĕне пăхма Калимана хушса хăварчĕ.

– Атте, кала-ха, – терĕ Калима патнерех пырса ларса, – ман шăпам пирки кăштах та пулин шутлатăн-и эсĕ? Мĕнлерех пурăнмалла-ха манăн малашне? Манпа пĕр çулти хĕрсен каччисем те пур, эпĕ вара пĕчченех.

– Турхан хĕрне тивĕç каччă ку таврара тупăнмасан та пултарать.

– Тепĕр чухне тата сан хĕрӳ пулни те чăрмав кӳрет пек. Именеççĕ хăшĕсем.

– Пайтах пуçăма ватрăм: ăру пирки те, сан пирки те... Эсрел капкăнĕнчен çăлăнасси пулмарĕ. Тем сиксе тухсассăн та турхан туййине хамăр алăран вĕçертмелле мар пирĕн. Аслаçу та турхан пулнă. Алмас валли çăмăллăх шырасчĕ.

– Ытла та инçе вĕт-ха вăл. Хĕрхенетĕп ăна, кашни кунах аса илетĕп.

– Пĕр варта выртнă çынсен яланах çапла çав. Вĕсен пĕрне-пĕри çывăх пулма тăрăшмалла. Унсăрăн чуна тăлăх туйăмĕ хĕсĕрлеме пуçлать. Санăн та çавăн пек пуль.

– Йĕкĕреш ача çуратасси йăхран килет теççĕ, пирĕн аннен хăш енчен-ши вара?

– Пирĕн йăхра ун пек пулнине астумастăп, аннӳ енченех пулĕ... Хĕрĕм, итле мана, лайăх итле. Ӳссе çитрĕн ĕнтĕ. Кун пек калаçу хыççăн хам шухăша пĕлтерме те юрать пуль тетĕп.

Ватрас тăрса ларчĕ те ӳсĕрсе илчĕ, калаçăва малалла айăпа кĕнĕ çын евĕр тăсрĕ. Ун сассинче темшĕн ӳкĕнӳ туйăмĕ те пур пек.

– Хĕрĕм, – терĕ турхан, – тем тесессĕн те санăн Эсрел çемйине çывăх пулма тăрăшмалла.

– Атте! Эсĕ аташмастăн пуль те. Чирлĕрен мар-и?

– Çук, çук, хĕрĕм. Çакна эпĕ тахçанах шухăшласа хунă. Эсрелĕн икĕ ывăл пур, иккĕшĕ те вăйпитти. Ашшĕпе калаçса татăлсассăн ывăлĕ хирĕç пулас çук. Алмаспа хамăр ăру шăпи санран та нумай килет. Кĕскен каласассăн, Алмас вырăнне санăн юлма тивет.

– Ав мĕнлерех иккен, юратнă аттем, санăн ĕмĕтӳ. Ăнланма та хĕн, ырлăх-и ку, хурлăх-и, ниепле те тавçăрса илейместĕп.

– Тăванлашмалла вĕсемпе пирĕн, хамăр валли çămăллăх шырамалла.

– Ывăлĕсем авланнăскерсем пулсассăн вара мĕн тăвăпăр?

– Уншăн хăрама кирлех мар. Пуян арçынсем унта пурте тенĕ пекех темиçе арăмпа пурăнаççĕ.



– Атте, мӗн калаҫатӑн эсӗ? Нивушлӗ ҫавӑн пек ҫӗре пуҫӑма пырса чикмелле вара манӑн? Нивушлӗ ман валли ырӑ ҫын шӑпи ҫук?

– Ҫак утӑма пирӗн хамӑршӑн тума тивет. Сывалсассӑнах эпӗ Эсрел патне каясшӑн, Алмаса турхана лартма ыйтасшӑн. Иксӗмӗр пӗрле кайӑпӑр. Ӑрӑва упраса хӑварас тесе тӑрӑшрӑм. Тен, ку тӗлӗшпе сирӗн, ҫамрӑксен, ӑнӑҫлӑрах пулӗ. Ывӑнтӑм эпӗ, ывӑнтӑм... Хӗрӗм, санран та нумай килет, текех пӗчӗк ача мар.

– Енчен те Эсрел килӗшмесессӗн...

– Килӗшет. Мӗн тумаллине, мӗн памаллине веҫех шухӑшласа хунӑ. Чеелӗхӳ ҫитсессӗн Эсрел ҫемйине шалтан аркатас ӗҫе те чӗртсе яма пулать. Ҫамрӑк хӗрарӑмӑн ун мел нумай, ашшӗпе ывӑлӗсене е пиччӗшӗпе шӑллӗне хирӗҫтерсе яма та юрать. Тен, ваттине пуҫтарса хумалли мел те тупӑнӗ...

– Ав мӗнле инҫе пӑхатӑн эсӗ, атте. Атя-ха, тытман упан тирне сӗвер мар.

Шӑп ҫав вӑхӑтра Чӗкеҫ пырса кӗчӗ, Амине ӑҫтине ыйтрӗ, пӗр самант нимӗн шарламасӑр пӑхса тӑчӗ, турхан сывах маррине тавҫӑрса илчӗ пулас.

– Мӗн ыйтма килтӗн-ха каллех? – терӗ сиввӗн Калима.

– Ҫук, мӗн кирли манӑн хамӑн та ҫителӗклӗ. Каламалли пур ман.

– Кала эппин, анчах кӗскен. Аттене халӗ канӑҫ кирлӗ.

– Ватрас, ҫынсем шанми пулчӗҫ сана, урӑх турхан кирлӗ текенсем те пур. Мӗншӗн Алмаса Эсреле сутрӑн? Хӑв вырӑнна йышӑнасран хӑрарӑн-им?

– Кам вара эсӗ мана вӗрентме? – тарӑхса кайрӗ Ватрас. – Хамӑнне хам пӗлетӗп... Чӗнмесӗрех килсе кӗреҫҫӗ, хурал ӑҫта ҫак...

Ватрасӑн чӗри хыттӑнрах тапма пуҫларӗ, тӑнлавӗ те

хĕрсе кайрĕ, сылтăм алли ирĕксĕрех чĕре патнелле туртăнчĕ. Калима ăна выртма пулăшрĕ.

– Çӳреççĕ кунта... Хăв ытлашши çын пулнине курмастăн-им? Уттар хăв çулупа, – хушрĕ Калима.

– Хăвалатăн эппин, – терĕ те Чĕкеç тухса ăсанчĕ.

– Вĕлтрен шывĕ пар-ха, çавна ĕçсен çăмăлрах пек.

Калима ашшĕ патĕнчен каймарĕ, амăшĕ киличченех ларчĕ. Çывăрса кайнă турхана вăратма шутламарĕç.

Мăчавăр килĕнче вара урăхла калаçу пырать, шурсухалсем канашлаççĕ. Кун пекех пулсассăн ăру пĕтсе ларас хăрушлăх пур. Мĕнле пурăнмалла, мĕн тумалла? Миçе хутчен Эсреле ылханса кĕлĕ туман пулĕ, усси пулмарĕ. Турă хăвачĕ ун патне çитмест. Улăп çывăрнипе усă курса алхасать те алхасать.

– Тармалла кунтан, вăрманлă вырăна каймалла, – терĕ пĕри. – Улăп килессе шанни кăлăхах пулчĕ.

– Эсрелĕ вара пирĕн юна ĕмсех вăйланса кайрĕ. Ун умĕнче халь тĕнче чĕтрет, – терĕ тепри. – Тен, чăнах та тарса пытаннинчен ырри çук-тăр.

Вара мăчавăр сăмах илчĕ, турхан çак шухăша хирĕçленине пĕлтерчĕ.

– Ăна та ăнланма пулать, кунтан кайни ывăлне пăрахса хăварни пулмасть-и-ха. Хамăр та ватă турханпа инçех каяймăпăр. Çамрăкки кирлĕ, çамрăкки, – терĕ мăчавăр.

– Тем çав, Эсрел ăна та хăйне майлă ĕçлеме вĕрентесси пирки манăн нимĕнле иккĕленӳ те çук, – каларĕ хирĕçлесе юнашар ялтан килнĕ шурсухал. – Мĕншĕн кайăк пулса вĕçсе кайма май çук-ши, Улăпа вăратнă пулăттăм.

Сасартăк Нарпи тухса тăчĕ. Вăл тĕпелте кунта мĕн калаçнине веçех итлесе тăнă иккен.

– Кукаçи, – терĕ Нарпи, – куртăм ĕнтĕ арçынсем

виле-виле выртнине. Каялла килнисем те аманса пĕтнĕ. Улăпа вăратма хам каятăп. Ирĕк пар мана.

Шурсухалсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те ним калама аптраса тăчĕç. Çапах та пĕри сăмах пуçларĕ.

– Ку вара пачах та хĕрупраç ĕçĕ мар. Хăй мĕн каланине ăнланать-ши вăл?

– Кун пирки нумай вăхăт хушши шухăшласа çӳрерĕм, Улăпа вăратмасăр ĕç тухманнине пĕлтĕм. Унсăр пирĕн телей пулас çук, – хуравларĕ Нарпи.

– Ку çаплах ĕнтĕ, пĕртен-пĕр мăнукăм. Пирĕн çăлăнăç Улăпра.

– Апла пулсассăн ирĕк пар мана, кукаçи.

– Шурсухалсем, эсир тата мĕн шутлатăр? – ыйтрĕ мăчавăр. – Тен, чăнах та... Çук, ватлăхра пĕччен тăрса юлас килмест манăн.

– Асаттесем, ирĕк парăр мана. Çак ĕçе мĕнле тумаллине чухлатăп эпĕ.

– Мĕн тăвас тен? Хăвна кирлĕ паттăрсене суйласа ил, эппин. Хĕçпе ухă тупассине хамăр çине илĕпĕр, – парăнчĕ кукашшĕ.

– Çук, эпĕ пĕччене х каятăп. Мана никам та кирлĕ мар.

Ку сăмахсем вара шурсухалсен пуçне анратсах ячĕç. Чылайăшĕ Нарпие çăмăлттай хĕрача выранне хучĕç, кулкаласа илчĕç.

– Хĕçпе ухăсăр Эсрел тарçисене çĕнтереймĕн, – терĕ пĕри.

– Курăпăр-ха унта кам кама çĕнтернине, – хуравларĕ хăюллă хĕрача.

– Апла эппин Турă пулăштăр сана. Эпир вара кунта саншăн кĕл тăвăпăр, – килĕшрĕç ваттисем. Кĕçех пурте килĕсене саланса пĕтрĕç.

Нарпи вăрăм çула хатĕрленме пуçларĕ...

## VII

– Пысăк хуйхă кĕтет сире, – терĕ юмăç карчăк. – Ӳчĕпе килте пулсассăн та чунĕпе сирĕнтен уйăрăлса пырать. Таçта урăх çĕрте ăна илĕртекен вăй пур. Çавă хăй патне чĕнет. Кун пек туртăмран çăлăнма çăмăлах мар, уйрăмах чылай çулланнă çынна.

Аминене çак сăмахсене илтме çав тери йывăр пулчĕ. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, чăтмалла. Ку ватă карчăк суяс çук, хăй ĕмĕрĕнче кун пеккине пайтах курнă-тăр.

«Ах, çав Пăрчкана, чунĕ унăн кунтах явăçса çӳрет иккен, – вăрçса илчĕ Амине килелле васканă май. – Чим-ха, мĕн тăватăп-ха эпĕ?» Вара вăл лашине каялла çавăрчĕ те каллех юмăç патне вĕçтерчĕ, Ватрас сывлăхне тĕрĕслетĕр тесе хăйпе пĕрлех лартса тухрĕ.

Вĕсем çитнĕ çĕре Ватрас выртмаллипех выртать иккен. Калима та питĕ тунсăхлă, куçĕсене шăла-шăла илет. Юмăç карчăк кĕнĕ-кĕменех йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ те турхан патне пырса тăчĕ. Çав самантра Аминене унччен Пăрчкан ларнă вырăнта такам пур пек туйăнса кайрĕ, чăтса тăраймарĕ, шикленерех утса чаршав хыçне кайса пăхрĕ. «Такам пур пек туйăнчĕ те», – терĕ вăл каялла тухсан ыттисем патне çывхарса.

– Пурри – пур-ха, анчах хăй курăнасшăн мар, – çирĕплетрĕ ним иккĕленмесĕр тенĕ пек юмăç карчăк. Икĕ аллине çĕклесе йĕри-тавра уткаласа çӳренĕ хыççăн хăй шухăшне пĕлтерчĕ. Пĕр алли çине ăшă хум, теприн çине сивĕ хум çапать иккен.

– Мана хама та темшĕн сивĕ, – терĕ Амине.

– Пăрчкан, эсĕ-и ку? – ыйтрĕ Ватрас пурте илтмеллех.

– Атте, Пăрчкан аппа кунта çук вăл, – хыпăнса ӳкрĕ Калима. – Тĕлĕкре калаçать пулас.

Ватрас аташнине курсассăн Амине юмăçа Пăрчкан чунне хăваласа  яма ыйтрĕ. Лешĕ вара хăй мĕн пултарнине турĕ, асамлă сăмахсем каларĕ, куркари шыва тăвата еннелле сирпĕтрĕ, Ватраса та пĕрĕхсе илчĕ. Лешĕ вăранчĕ. Аптраса ӳкнĕ Амине тӳрех пире пăрахса ан кайха тесе йăлăнма тытăнчĕ.

– Мĕскер эсир мана чĕрĕллех пытаратăр? Çук, ман халех кайма юрамасть. Малтан Алмас патне çитсе килем-ха. Ăна пил парасчĕ, – лăплантарма пикенчĕ Ватрас.

Паллă ĕнтĕ, юмăççем вĕсем чирлĕ çынна мĕн каламаллине аван чухлаççĕ, шанăç кӳрекен сăмахсем хатĕрех. Вĕсем чирлĕ турхан валли те çителĕклех пулчĕç. Хăйне ăсатма тухнă Аминене вара юмăç карчăк тĕрĕссине калас терĕ: «Сывлăхĕ чаксах пырать унăн», – çапла пĕлтерчĕ. Турхан арăмĕ ватă çын мĕн каласшăн иккенне тӳрех тавçăрса илчĕ. Вара ун пуçĕнче урăхларах шухăшсем явăça пуçларĕç. Паллах, малалла мĕнле пурăнасси канăç памасть ăна. «Алмаса турхана лартсассăн йĕркеллех пулĕха. Анчах... Эсрел умĕнчи парăма мĕнле татмалла-ха? Унсăрăн килĕшмесен те пултарать. Пачах ют çынна илсе килсе лартĕ те... Çук, мĕн те пулин тумаллах ĕнтĕ». Çак тĕллевпе вăл турхан патнерех пырса тăчĕ те Калимана тарçăсем мĕнле ĕçленине кайса пăхма хушрĕ. Лешĕ тухрĕ.

– Ватрас, – пуçларĕ сăмахне Амине, – кала-ха, эсĕ тахçан ман валли пĕр вăрттăнлăх пур теттĕнччĕ. Астăватăп-ха, пурлăх пирки калаçнă чухнеччĕ.

Çак сăмахсем пачах та кĕтмен çĕртен пулчĕç. Турхан шикленӳллĕн арăмĕ çине пăхса илчĕ те:

– Ку тата мĕн тума кирлĕ? Мĕншĕн çак самантра ыйтатăн? – терĕ.

– Вилём вăл куçа курăнса килмест. Паян капла та, ыран темле. Каламаллине хăвпа пĕрле илсе каймалла мар ĕнтĕ.

– Эсĕ эпĕ каясса кĕтетĕн иккен, – тарăхрĕ турхан.

– Çук, çук, пачах та апла мар. Хамшăн мар, ачасемшĕн ыйтатăп. Тен, Алмаса çавăрса килме май çукши тетĕп-çке.

Кун пек чухне ăçтан чăтса тăрăн-ха, калама тиветех. Арăмĕ те хăй пекех шутлать-çке.

– Амине, кил-ха кунтарах. Мĕн илтнине никама та каламалла мар. Тĕрĕсле-ха, вăрттăн тăнласа тăракансем çук-и унта.

Амине тухса пăхрĕ, никам та çуккине пĕлтерчĕ.

– Манăн аттерен юлнă ылтăнăм пур. Пытарса хунă эпĕ ăна Эсрел тарçисенчен те, пушартан та шанчăклăрах вырăна.

– Ăçта-ши ĕнтĕ вара вăл?

– Пахча кĕтессинчи ват йăмра хăвăлĕнче вăл. Çӳллĕ пусмапа хăпарсассăн çурçĕр енче тăмпа сĕрнĕ вырăн пур. Çавна ватсассăн алă кĕмелĕх шăтăк уçăлать. Сăранпа чĕркесе хунăччĕ. Анчах хам сывă чухне ан тĕкĕн. Сывалăп та унпа усă курма тăрăшăп, Алмасшăн парăп. Пĕтĕм шанчăк та çавăнта. Алмас валли, Алмас... – тесе ватă турхан çывăрса кайрĕ.

Кун пек хыпар хыççăн Амине шалтах аптраса ӳкрĕ. Мĕн тумалла-ха? Турхан сывлăхĕ чакса пыни те куçкĕретех. Ылтăнне те тытса пăхас килет. Тепĕр кунне ирех тăчĕ те пахчана тухрĕ, курăк татам пекки тукаласа леш йăмра патне çывхарчĕ. Йĕри-тавралла пăхкаласа илчĕ те пусне каçăртса Ватрас કаланă вырăна шырама тытăнчĕ. Чăнах та, пĕр шултра туратран кăшт çӳлерех сарă тĕслĕн курăнакан вырăн пур, пĕр ал лаппи пысăкăш

пулĕ. Унтан Амине вăрăм пусма ăçта тăнине шыраса тупрĕ. Пусми пур-ха, тăмне вара... Хытса ларнăскерне алăпах çĕмĕреймĕн. Тен, кусарпа?.. Вăхăчĕ вара... Паллах, тăр кăнтăрла мар ĕнтĕ. Ку ĕçе çынсем курмалла мар. Пач тĕттĕмре те меллех пулас çук. Тен, тул çутăлнă тĕлелле, пурте тарăн ыйăхра чухне çапса ватас?



Çапла турĕ те Амине. Çывăрса каяймасăр асапланса выртнă хыççăн кил картине тухрĕ те вăрăм пусма патне пычĕ. Самай йывăрскер иккен. Çапах та пĕчченех йăтса утрĕ, йăмра патне çитсессĕн тайăнтарса тăратма пикенчĕ. Ĕç тухмарĕ. Тепĕр çынсăр май çуккине курсассăн Амине çывăракан хĕрне кĕрсе вăратрĕ те йăмра патне илсе пычĕ. Иккĕн иккĕнех çав. Амине шĕвĕр вĕçлĕ кусара илчĕ те хăпарса кайрĕ, Калима пусмине тытса тăчĕ. Акă, хĕвелпе

хытса ларнă сарă тăм катăкĕсем çĕр çине пере-пере анчĕç. Амине аллине хăвăла чиксе хыпаласа пăхрĕ те сăран чăмăркка туртса кăларчĕ. Хытă туртса çыхнă кантрине салтасшăн пулчĕ, кусарне те Калимана лекесрен айккинелле ывăтса ячĕ, анчах салтаймарĕ. Шăлпа турткаласа пăхни те пулăшмарĕ. Вара вăл чăмăрккана çĕр çине пăрахрĕ те анчĕ.

– Мĕн япала вара ку? – ыйтрĕ Калима.

– Аçу валли питĕ хаклă эмел, – чăнне каласшăн пулмарĕ амăшĕ. Тинех тавçăрса илчĕ вăрттăнлăха, хĕрĕ умĕнче салтма кирлĕ маррине. Ашшĕне калĕ те пĕтрĕ пуç вара.

– Эсĕ кĕрсе çывăр, – хушрĕ хĕрне амăшĕ. Хăй вара мунча патнелле утрĕ. Калима кайсанах леш япалана салтса пăхрĕ. Ак тамаша! Унта пысăках мар мунча чулĕ кăна выртать иккен.

Çакна курсассăн Амине чутах тӳнсе каятчĕ. Çапах та вăйне пухрĕ те киле чупса кĕчĕ, турхан чирлине пăхмасăрах кăшкăрса ячĕ:

– Ватрас, тăр-ха! Çаратнă пире! Эс каланă ылтăн çуккă!

Çывăрнă-çывăрман выртакан турхан хăвăрт сиксе тăчĕ те арăмĕ çинелле куçне чарса пăхрĕ. Пĕр самантлăха ним калама аптраса тăчĕ. Сăмах та тупăнмарĕ пулас.

– Мĕн кирлĕ мара пуплешетĕн эсĕ? Ылтăн пирки ăçтан пĕлетĕн?

– Улăхса пăхрăм эпĕ. Акă, кур унта мĕскер выртнине, – тесе Амине сăранпа чĕркенĕ чула упăшкине тыттарчĕ.

– Ку мĕн япала тата?

– Йăмра хăвăлĕнчен илтĕм ăна.

– Пулма пултараймасть.

– Урӑх нимӗн те ҫук унта. Ӗненмесессӗн Калимаран ыйтса пӑх.

Ашшӗпе амӑшӗн калаҫӑвне хӗрӗ вӑрттӑн итлесе тӑнӑ иккен. Шӑп ҫак самантра вӗсем патне пырса тӑчӗ те хӑй сӑмахне пуҫларӗ:

– Капла вара мӗн пулса тухать-ха? Ман пуласлӑх пирки епле? Мӗнле, мӗнле пурлӑхпа хӑваратӑр эсир мана? Турхан хӗрӗ тесе ӳстертӗр те чухӑнлӑха хӑвартӑр. Ӑҫта кайса кӗнӗ вара ҫав ылтӑн? Эсӗ тата мӗншӗн улталарӑн мана, – сиввӗн пӑхса илчӗ амӑшӗ ҫине.

– Хӗрӗм, мӗн калаҫатӑн эсӗ.

– Йӑмра хӑвӑлӗнчен мӗн илтӗн тесессӗн аҫуна кирлӗ эмел темерӗн-и-ха... Чим-ха, мӗншӗн тӳрех мунчана кӗрсе кайрӑн-ха эсӗ? Ылтӑна ҫавӑнта пытарса хуман-и-ха вӑл?

Ватрас леш чула ҫавӑркаласа пӑхрӗ те шухӑша кайрӗ. Мунча чулӗ иккен, кӑштах тӗтӗмпе вараланни те паллӑ.

– Апла эппин эсӗ упӑшкуна улталама шут тытнӑ? Кала, ӑҫта пытарса хутӑн!

– Курман эпӗ вӑл ылтӑна. Ҫак чул кӑна пулнӑ унта. Ӗненмесессӗн турӑ умӗнче сӑмах паратӑп, ҫӗр ҫыртма та хатӗр.

– Суять вӑл, – ҫине тӑчӗ хӗрӗ. – Пӗччен салтса пӑхрӗ те, мана кӑтартмарӗ. Тен, ылтӑнӗ хӑй ҫумӗнчех ун.

– Халех панӑ пул, – хушрӗ турхан. – Кӑларса хур! Унсӑрӑн ак...

– Каларӑм вӗт нимле ылтӑн та ҫук тесе. Чул татки кӑна.

Ватрас чӑтса тӑраймарӗ, сылтӑм аллинчи чулпа арӑмне пеме тӑчӗ, анчах аллине ҫӗклесенех вырӑн ҫине тайӑлса анчӗ. Калима чупса пычӗ те ашшӗне май-

лаштарса вырттарчӗ, унтан амӑшне ҫавӑтса тула илсе тухрӗ, халех кӑтартнӑ пул ӑҫта пытарнине тесе ҫурӑмӗнчен тӗксе илчӗ.

– Хӗрӗм, мӗн тӑватӑн эсӗ, аннӳ ҫине алӑ ҫӗклеме те именместӗн.

– Ут мунчаналла, – каларӗ хыттӑн Калима. – Мана кӗлмӗҫе хӑварасшӑн эсӗ. Ҫуррине те пулин пар.

– Ҫук! Ниҫта та каймастӑп. Каларӑм вӗт, нимӗнле ылтӑн та пулман унта.

– Ан суйса тӑр. Ут!

Калима амӑшне хыҫалтан тӗке-тӗке мунча умне илсе ҫитерчӗ. Амине хӗрне хирӗҫ ҫаврӑнса тӑчӗ те тепӗр хут йӑлӑнма пуҫларӗ.

– Хӗрӗм, чарӑн-ха. Хӑвна алла ил. Енчен те ылтӑнӗ ман алӑра пулсассӑн, нивушлӗ санран пытарӑттӑм. Эпӗ ӑна тӳрех Алмасшӑн кайса панӑ пулӑттӑм. Турхан туйине алӑран вӗҫертмелле мар пирӗн. Аҫу та ҫаплах шутлать.

– Пӗлетӗп сире, мана нимӗн выранне те хумастӑр. Ман шӑпам ҫине тахҫанах сурса хунӑ эсир. Калаҫса ан тӑр, пытарса хунине илсе тух, – терӗ Калима амӑшне тӗксе кӗртсе ярса. – Унсӑрӑн кунтан кӑлармастӑп.

Аминене кӗртсе ярсанах Калима мунча алӑкне кӗтесре тӑракан йывӑҫ кӗреҫепе чаракларӗ.

Ҫак пӑтӑрмах ҫав тери хӑвӑрт тата веҫех хӑйне хирӗҫле ҫаврӑнса тухнине пула Амине самантлӑха чӑннипех ҫухалса кайрӗ. Хӗрӗ те нихӑҫан курманнине кӑтартрӗ вӗт, ҫапса пӑрахманни ҫеҫ. Кӑштах лӑплансан Амине алӑка тӗртсе пӑхрӗ. Питӗрнӗ иккен.

– Пытарса хунине тупрӑн-и? – ыйтрӗ хӗрӗ.

– Халех уҫнӑ пул! – кӑшкӑрчӗ лешӗ. – Кунта сан валли те пур.

Калима чарака илчӗ те алӑка уҫрӗ. Амӑшӗ тухма тӑчӗ.

Аллинче унăн чул татки. Çакна курсан Калима пĕтĕм вăйĕпе алăка тĕкрĕ те каллех чаракласа лартрĕ. Унтан нимĕн шарламасăр пăрăнса утрĕ, амăшне кăштах тăна илтĕр терĕ пулас...

Амине чунĕ çав тери тăвăлса çитнипе макăрса ячĕ. Упăшки те, хĕрĕ те ăна хирĕçле иккен. Ним сăлтавсăрах айăпласа кӳрентереççĕ. Калима тата, ах, Калима...

Сасартăк мунча лавкки айĕнче темĕскер йăшăлтатса илчĕ.

– Кам унта? – ыйтрĕ хăраса Амине.

– Эпĕ-ха ку, – илтĕнчĕ Пăрчкан сасси.

– Чур! Пăрчкан, чур! – кăшкăрса ячĕ Амине. – Эсĕ вилнĕччĕ вĕт-ха. Халĕ вара ăçтан сиксе тухрăн?

– Вилнĕччĕ мар, вĕлернĕ темелле. Çапах та эсĕ манран ан хăра. Усал тума килмен эпĕ. Ватрас халĕ вилес пек выртать, ман паталла васкать, курса юл ăна чĕрĕлле. Киле васка.

– Епле тухăп-ха кунтан? Кăлармаççĕ вĕт мана.

– Алăк уçах унта. Вĕçтер часрах.

Чăнах та, Амине çитнĕ çĕре Ватрас тăнне çухатнă, арăмне те палласа илеймерĕ. Леш уксаххи те кунтах. Калима киличчен вăл пĕчченехчĕ.

– Ватрас, веçех эсĕ хушнă пек тăвăп, – терĕ турханăн чи çывăх тарçи.

«Юмăç карчăк чăннинех каларĕ иккен», – аса илчĕ Амине. Калима вара кăшкăрсах макăрма пуçларĕ.

– Атте, мĕн туса хутăн эсĕ? Мĕншĕн мана пăрахса каятăн? Çакăн пек чухăн турхан хĕрĕ кама кирлĕ? Мана малашне мĕн кĕтет-ши?

– Калима, ытлашши ан хуçăл-ха эсĕ. Хам пулăшса пырăп. Турхан туйине вăхăтлăха мана парса хăварчĕ вăл, – йăпатрĕ тарçă.

Ку вара Аминешĕн уяр çанталăкра аслати кĕрленĕ пекех туйăнса кайрĕ. Мĕнле-ха капла? Тĕрĕссинех калать-ши вара вăл?

– Çук, ĕненместĕп. Ватрас ун пек хушу тума пултарайман. Турхан туйи Алмас аллинче пулмалла вăл. Ватрас яланах çапла калатчĕ. Хальлĕхе вара ăна эпĕ хам тытса усрăп, – терĕ те Амине турхан çумĕнчи туяна ярса тытрĕ. Анчах та пĕр самантрах тенĕ пекех уксаххи те ĕлкĕрчĕ. Арçын арçынах, туяна туртса илчĕ.

– Алмаса турхана лартиччен пурин те эпĕ хушнине тума тивет. Ватрас вилнине халăха пĕлтерер те чысласа пытарасси пирки калаçар, мăчавăрпа канашласа пăхар...

Сăмах çинех тата чĕнме янă тарçăпа мăчавăр килсе çитрĕç. Мăчавăр тӳрех турханăн аллинчи юн таппине тĕрĕслесе пăхрĕ. Амине чăтса тăраймарĕ, уксах тарçă мĕн хăтланнине каласа пачĕ, мăчавăртан çак ыйтăва татса пама ыйтрĕ.

– Хĕрарăм ĕçĕ мар вăл! – кăшкăрса ячĕ уксаххи.

– Мĕншĕн çапла калатăн вара? Япалан йĕрки пур, – лăпкă сасăпа ăнлантарма пикенчĕ мăчавăр. – Ăру пуçĕ пирĕн хĕрарăм та пулнă. Ăнăçлах ертсе пынă. Кунта вара турхан туйи ывăлне куçмалла.

– Вăл ăçтине пĕлетĕр вĕт-ха. Унччен вара...

– Нивушлĕ пирĕн çак тарçа пăхăнса пурăнмалла вара? – чăтса тăраймарĕ Калима, – эпир турхан йăхĕнчен мар-им вара?

– Турхан туйине Аминене пама тивет,– хушрĕ мăчавăр.

– Çук! Никама та памастăп! Ватрас мана хушса хăварчĕ, – терĕ те алăк патнелле утрĕ тарçă. Амине ун çулне пӳлчĕ, Калима та чупса пычĕ. Анчах тепĕр тарçи уксаххин хутне кĕрсе хĕрарăмсене тытса чарчĕ. Лешĕ ăнăçлах тухса шăвăнчĕ.

Усал хыпар таврана хăвăрт сарăлчĕ. Кĕçех Ватраспа Амине тăванĕсем килсе çитрĕç. Виççĕмĕш кунне Ватраса масар çине йăтса кайрĕç. Халăх таçтан та пухăннă, анчах ытти чăваш турханĕсем çук. Мăчавăр ертсе пынипе кĕлĕ тунă хыççăн Ватраса тарăн шăтăкри ятарласа тунă йывăç пурана вырттарчĕç, юнашар чустаран тунă лаша кĕлетки, хăй ярăнса çӳренĕ йĕнер, хурçă хĕçĕ, уявра тăхăнмалли тум хурса пачĕç. Вара тин тăпрапа витрĕç. Питĕ пысăк купа турĕç, тăприне лавпа турттарсах. Тăприне каярах юман юпа лартрĕç. Ун çинче çын сăнĕ пулĕ. Паллах, çамрăк арçын сăнĕ. Çынна пытарнă хыççăн ун чунĕ çамрăкланать те тепĕр пурнăçпа пурăнма пуçлать, имĕш. Ватрас чунĕ те çаплах, ӳчĕ кунта пулмасан та ун çамрăкланнă чунĕ çынсем хушшинчех, киле те пырса çӳрĕ-ха. Çавăнпа та масар çинчен таврăннă чухне макăрма кирлех мар, юрлани те вырăнлă. Çапла турĕç те: яла юрласах пырса кĕчĕç, ташлакансем те пулчĕç...

## VIII

Вăхăт пек вăйлă япала çук та пулĕ. «Паян капла та ыран темле», – тесе ахальтен каламаççĕ ĕнтĕ. Вăхăт хăйпе пĕрле çĕнĕрен те çĕнĕ пулăмсем илсе килет. Турхан туйи уксах Микка аллине лекесси пирки Нарпи шутлама та пултарайман. Çамрăк турхан пур чухне çапла пулмалла мар ĕнтĕ. Анчах мĕн тăвăн-ха? Ĕç пачах та ăнмарĕ. Алмас çаврăнса килесси те паллă мар. Эсрел ăна киле ямасан та пултарать. Ку уксаххи Эсрелĕн шанчăклă тарçи пулса тăрасси пирки вара нимĕнле иккĕленӳ те çук. Çынни çавнашкал, Эсрел çӳç касма хушсан вăл кунта пуç касма хатĕр. Турхантан ытларах çавăнтан хăратчĕç. Халĕ вара çавскер турхан туйине вăйпа туртса илнĕ хыççăн хăйне



мĕнлерех тыткалĕ-ши? Каллех, вăхăт кăтартĕ, çавă тĕрĕслесе пăхĕ.

Улăп патне кайма Нарпи питĕ тĕплĕн хатĕрленчĕ: Эсрел çыннисен чĕлхине пĕлекенсемпе калаçрĕ, темиçе хутчен те малтан кайса килнĕ арçынсемпе тĕл пулчĕ, мĕнле çулпа каймаллине ыйтса пĕлчĕ. Лешсем вара питĕ тĕплĕн каласа пачĕç, ытларах мăн çулсенчен айккинерех çӳреме хушрĕç, çĕр хута утни шанчăклăрах терĕç. Эсрел çыннисем хăйсен çĕршывне питĕ тимлĕн сыхлаççĕ иккен, ют çынна курсанах тытса чараççĕ. Чи усăлли вара çĕрле те малалла кайнă чухне тӳпери çăлтăрсемпе мĕнле усă курмаллине вĕрентни пулчĕ. Уя илсе тухсах ăнлантарчĕç, уттарса та пăхтарчĕç. Пĕр арçынĕ вара мăчавăр хушнипе Нарпие чăваш çĕрĕн чиккине çитичченех лашапа ăсатса ячĕ. Малалла, паллах, пĕччен

кайма тивет. Çапла пуçланчĕ çамрăк пикен вăрăм та тумхахлă çулĕ.

Малтан вăл тĕм хыçне кайса çи-пуçне ылмаштарчĕ, тумĕпе Эсрел çĕршывĕнчи хĕрарăмах пулса тăчĕ. Кун пек шанчăклăрах. Чăнах та, ăна хирĕç пулакансем те, хăваласа çитсе иртсе каякансем те нимех те шарламарĕç. Пĕрисем тата урапа çине ларма та сĕнчĕç, Нарпи килĕшмерĕ. Кĕçех çул пĕр пысăк яла илсе çитерчĕ. Нарпи чарăнса кăштах шухăша кайса тăчĕ: «Мĕнлерех тусан лайăхрах-ши? Ял витĕрех тухмалла-ши е айккинчен иртсе каймалла?»

Çак самантра ял патне тата темиçе çын çывхарчĕ, лаша кӳлсе тухнисем те пур. Вĕсем калаçнине илтсессĕн Нарпи тинех тавçăрса илчĕ: пасара килеççĕ иккен. Апла пулсан вĕсемпе хутшăнса каяс та пасара кĕрсе курас...

Пасарĕ вара... Кун пеккине Нарпи тĕлĕкре те курман. Мĕн кăна çук пулĕ! Çыннисем тата... Ăçтан килсе тулман пулĕ. Халиччен пач курман тумпа çӳрекенсем те пур, калаçăвĕ те вĕсен ку таврари пек мар. Лавккисем патне çывхарсан куç алчăраса каять. Çынсем укаллă пурçăн илнине курсан Нарпи чылайччен пăхса тăчĕ. Хаклă япала пулсан та илекенсем тупăнаççĕ, укçине хĕрхенмеççĕ.

Ак тамаша, юнашарах чăвашла калаçни илтĕнсе кайрĕ. Сасси те палланă çынăнни пекех. Нарпи çаврăнса пăхрĕ те уксах Миккапа икĕ арçын тăнине асăрхарĕ, айккинерех пăрăнчĕ те питне хупларĕ. Микка купса патне çывхарчĕ те питĕ илемлĕ пурçăн тутăр çине тĕллесе кăтартрĕ, укаллă пурçăна та пĕр пилĕк аршăн виçтерчĕ, хăйĕн валли питĕ паха бешмет туянчĕ. Енчĕкĕ вара хăйĕн самай пысăкскер, укçа-тенкĕрен аптрамасть курăнать. Унтан çак арçынсем урапа-çуна сутнă çĕре пычĕç. Кăштах пăхкаласа çӳренĕ хыççăн Микка илем-

летсе тунӑ ҫатан урапа патне пырса тӑчӗ, унтан йӗри-тавра пӑхса ҫаврӑнчӗ те силлесе пӑхрӗ, вара тин хакне ыйтрӗ. Хуҫин сутмалла ӗнтӗ, ҫине тӑрсах урапине ырлама пуҫларӗ, Миккана ларса пӑхма сӗнчӗ. Лешӗ килӗшрӗ, хуллен хӑпарса ларчӗ те ыттисем ҫине мӑнаҫлӑн пӑхса ҫаврӑнчӗ.



– Ну, мӗнлерех курӑнатӑп эпӗ ку урапа ҫинче? – ыйтрӗ Микка.

– Чӑн-чӑн турхан пекех, – терӗ пӗр арҫынӗ.

– Апла пулсан илӗпӗр. Эсӗ вара ӑйӑра ҫавӑтса кил.

Лешӗ айккинелле васкарӗ. Миккана урапа ҫинчен анма тепӗр арҫынӗ пулӑшрӗ. Унтан хакӗ пирки калаҫрӗҫ.

– Ҫук, ҫук, урӑх чакараймастӑп. Хӑвӑрах куратӑр, кун пек урапа пасарӗпе те ҫук, – илтӗнчӗ сутуҫӑ сасси.

Çав хушăра леш арçын тĕреклĕ лашапа çитрĕ. Иккĕшĕ кӳлме пуçларĕç. Микка сутуçăпа татăлчĕ, унтан леш капăр тума тăхăнчĕ те урапа çине хăпарса ларчĕ. Пĕр арçынĕ ямшăк вырăнне ларчĕ те тилхепене алла илчĕ. Тепри кĕç-вĕç тапса сикме хатĕр йăйăра çавăтса пычĕ. Пасар айккинче вĕсене хăйсем ларса килнĕ урапине сыхласа тăракан арçын кĕтсе илчĕ. Вырнаçса ларчĕç те чăвашсем патнелле çул тытрĕç. Малта уксах Микка саркаланса ларса пырать...

Микка Алмаса илсе килесси пирки пачах та шухăшламанни çакăнтан та паллă ĕнтĕ. Ун халĕ питĕ турхана тухас килет. Çакна пурнăçлас тесен Эсрел аллине ларма пĕлмелле. Тĕлпулăва хатĕрленет ĕнтĕ.

«Çук, кун пек юрамасть. Часрах Улăпа вăратасчĕ те саманана улăштарасчĕ. Çавă кăна йĕрке тума пултарĕ», – тесе Нарпи малалла васкарĕ. Çул çинче пĕр ватăрах хĕрарăма хăваласа çитрĕ те сăмах тапратрĕ, япалине йăтса пыма пулăшрĕ. Ку та самай усăллă пулчĕ, Нарпи каланине тĕрĕсех ăнланать иккен. Çапла вĕсем чылайччен пĕрле утрĕç. Хăйсен ялĕ патне çитсессĕн хĕрарăм Нарпие тав турĕ, чей те пулин ĕçтерсе ярам тесе килне кĕрсе тухма сĕнчĕ. Пĕчченех пурăнаканскер иккен. Упăшки вăрçăра вилнĕ. Анчах çăкăр-тăвартан аптрамасть. Эсрел хушнипе кун пек хĕрарăмсене ял пуçлăхĕн пулăшса пымалла, вĕсенчен куланай илмелле мар. Ялти йăласем те урăхла, эрехпе иртĕхекен çук, çамрăксем ваттисен сăмахĕнчен иртмеççĕ. Тĕн йĕрки те урăхла, пĕр турра кăна пуç çапаççĕ.

Кил хуçи Нарпие каçа хирĕç çула тухни ырра мар тесе ĕнентерме пикенчĕ, кунтах çĕр каçма сĕнчĕ. Килĕшме тиврĕ. Кун пек меллĕ самантпа усă курса Нарпи çине тăрсах калаçрĕ, хăш-пĕр сăмахсене ыйтса пĕлме

тăрăшрĕ. Çапла чылайччен калаçса выртнă хыççăн çывăрса кайрĕ.

Каллех пĕр тĕлĕк, каллех амăшĕ курăнчĕ. Вăл сывă чухне апла марччĕ, тĕлĕкре унта выляни те, шыва кĕни те, улăхра чечек татни те, вăййа тухни те пулатчĕ. Çĕкленсе вĕçсе çӳренисем те асрах. Юлашки вăхăтра ытларах амăшĕ курăнать. Ашшĕне вара Нарпи пачах та астумасть. Ун çинчен вăл амăшĕ каласа панă тăрăх кăна пĕлет.

Çамрăклах пуçне хунă вăл. Хăюллăскер пулнă теççĕ, Ватрас ĕçĕсемпе кăмăлсăр пулнине те уççăнах калама пултарнă. Уйрăмах ăна турхан Эсрел умĕнче чĕтресе пурăнни килĕшмен. Ирĕклĕх çукки канăç паман.

Пĕрре çапла Эсрел çыннисем куланай пухма килсен самай тĕлĕнмелле ĕç пулса иртет. Нарпи ашшĕ таврари паттăрсене пухать те лешсене мăн çул çинче тивĕçлипе кĕтсе илет, тĕмсем хыçĕнчен сиксе тухаççĕ те лавсене тытса чараççĕ, хуралсене те тăн кĕртсе илеççĕ. Лешсем чăваш çĕрĕнчен нимсĕрех тухса каяççĕ. Кусем вара туртса илнĕ япаласене çынсене тавăрса параççĕ.

Кун хыççăн Эсрел питĕ йышлă çар ярать. Паллах, Нарпи ашшĕ хăйĕн пĕчĕк ушкăнĕпе хирĕç тăраймасть. Вара вăл тарса çӳреме пуçлать. Апла пулин те ăна турхан çыннисем пулăшнипе ярса тытаççĕ. Çак паттăра Эсрел патне илсе каяççĕ, лешĕ вара ăна хăй аллипе хăй çав тери асаплантарса вĕлернĕ теççĕ. Çак ĕçе тăвас умĕн Эсрел Ватраса хăй патне чĕнсе илнĕ тет, чăваш турханĕ курса хăраса тăтăр тесе пулĕ ĕнтĕ. Эсрел çилли Нарпи амăшĕ çине те ӳкме пултарнă. Уксах Миккана кăна хуш... Мăчавăр хĕрĕ пулнипе çеç çăлăнса юлнă вăл. Атту Нарпи шăпи çав тери йывăр пулатчĕ. Амăшĕ пур çын тăлăх мар ĕнтĕ.

Нарпи амăшĕ вара таврари паллă алăсти шутланнă. Турхан шупăрне те вăл тĕрлесе панă теççĕ. Хăйĕн ăсталăхне хĕрне пиллесе хăварни пирки нимĕнле иккĕленӳ те çук. Нарпи вара амăшĕнчен те ирттерет пулĕ. Вăл тума пĕлмен ĕç çук. Халĕ вăл виççĕмĕш çул ĕнтĕ амăшĕсĕр пурăнать. Лешĕ хытă чирлесе ӳкнĕ хыççăн ура çине тăраймарĕ.

Нарпи кĕçĕр те тĕлĕкре амăшĕпе пĕрле пулчĕ. Вăл çӳпçерен питĕ илемлĕ кĕпе илчĕ те çакă вăл телей кĕпи пултăр тесе Нарпие пачĕ. Хĕрĕ хĕпĕртесе тыткаласа пăхнă вăхăтра амăшĕ чакса-чакса пычĕ те темле пĕчĕкленсе кайса мĕлке евĕр курăна пуçларĕ. Нарпи кĕпине сак çине хучĕ те амăшĕ патнелле чупса пычĕ. Лешĕ куçран çухалчĕ. Нарпи амăшĕн парнине тăхăнса пăхас тесе каяллa çаврăнчĕ. Ак тĕлĕнтермĕш, çав кĕпепе пачах та ют хĕрарăм тăра парать. Алăк патнелле пăрăнчĕ те кула-кула тухса кайрĕ. Нарпи алăк патне чупса пычĕ, туртрĕ, алăкĕ уçăлмарĕ. Вара вăл нимĕн тума аптранипе макăрса ячĕ.

– Мĕн пулчĕ-ха, хĕрĕм? – илтĕнчĕ хĕрарăм сасси.

Нарпи куçне уçрĕ те ун умĕнче кил хуçи тăнине асăрхарĕ. Хăвăртрах сиксе тăчĕ те йĕри-тавралла пăхса илчĕ, йывăç пăта çинче çакăнса тăракан уртмаха ярса тытрĕ, унти япаласене хыпашласа пăхрĕ. Пурте вырăнтах иккен.

– Тĕлĕкӳ япăхскер пулчĕ-им? – терĕ хĕрарăм пĕлнĕ пекех.

– Тĕлĕк вăл тĕрлĕрен пулать, – ляплантарма пикенчĕ хăйне хăй Нарпи.

Чăнах та, мĕншĕн питĕ пăшăрханмалла вара, амăшĕпе пĕрле илемлетсе çĕленĕ шурă кĕпе уртмахрах выртать. Çимеллисене те никам та тĕкĕнмен. Нарпи çăвăнса тасалчĕ те сывпуллашса çула тухрĕ.

Нумай кайрӗ-и, сахал-и, анлӑ юхан шыв хӗррине ҫитсе тухрӗ. Ун халӗ тепӗр енне каҫмалла. Инҫех те мар урапа сасси илтӗнсе кайрӗ. Тавар тиенӗ лав хыҫҫӑн иккӗн утса пыраҫҫӗ. Кусен те леш енне каҫмалла иккен. Нарпи тимлӗнрех сӑнама пуҫларӗ. Лавҫӑсем шыв хӗрринех пырса тӑчӗҫ те лашине шӑварчӗҫ. Вӑхӑт чылай та иртмерӗ ку еннелле сулӑ ҫывхарни курӑнса кайрӗ. Акӑ ӗнтӗ инҫех те мар кӗписене хывса хурсах вӑрӑм кӗсменсемпе тӑваттӑн авӑсаҫҫӗ. Сарлака ҫурӑмлӑ тӗреклӗ арҫынсем. Сулӑ чарӑнмалли ятарласа чулсем пӑрахса хӑпартнӑ вырӑн пур иккен. Лешсем ҫав тӗле ҫитсе чарӑнчӗҫ те сулла тӗреклӗ пӑявпа юпаран кӑкарчӗҫ. Унтан урапа патне пычӗҫ. Ҫак ҫынсенчен юлас мар тесе Нарпи те ҫывхарса тӑчӗ. Лашине тӑварнӑ иккен. Малтан урапине вырнаҫтарма шутларӗҫ, сулӑ ҫине алӑпах туртса кӗртме тытӑнчӗҫ. Лашине тытса тӑраканни чӗлпӗре Нарпие тыттарчӗ те лава хыҫалтан тӗртсе ыттисене пулӑшрӗ. Унтан лашине кӗртсе тӑратрӗҫ. Пӗр лавҫи лаша умне пырса тӑчӗ те ҫамкинчен шӑлса ачашласа илчӗ, сулӑ кӑштах силленнине пула хӑрасран лӑплантарма тӑрӑшрӗ. Тепӗр арҫынӗ Нарпи ҫине пӑхса илчӗ те:

– Каҫарнӑшӑн тӳлемелли пур-и вара санӑн? – терӗ.

Укҫи Нарпин кӑштах пур-ха, анчах шыв урлӑ каҫарнӑшӑнах пӗтерес темерӗ.

– Эпӗ сире ҫимелли парӑп, – хуравларӗ хӗрача уртмахран самай пысӑк шӑрттан туртса кӑларса.

– Ку мӗн япала вара, мӗнрен пӗҫернӗ? – ыйтрӗ арҫын шӑрттана шӑршласа пӑхса. – Какайран иккен, – хуравларӗ хӑех.

– Тутанса пӑхӑр эсир. Тен, килӗшӗ?

– Ну, юрӗ. Лере ҫитсен ҫисе пӑхӑпӑр. Кайрӑмӑр, – терӗ асли. Ҫыран енчи карлӑк шалчине ҫирӗплетсе хучӗҫ

те кĕсменпе ĕçлеме тытăнчĕç. Леш арçын чĕлпĕре урапаран çыхрĕ те лашана курăк хурса пачĕ. Апла пулин те çакă тĕреклĕ выльăх лăпкă тăмарĕ, пĕрмаях урисене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса пычĕ. Сулă хытăрах ярăнса илнĕ самантсенче выльăх пăлханчĕ. Лаша урисем чалăштарса тăратнă чараксем пекех курăнса кайрĕç. Ăсĕ хăйне пурăнмалăх лашан та пур иккен, сулă çинче мĕнле тытмаллине чухлать.

Нарпи леш енне каççассăнах ыттисене пăхса тăмарĕ, малалла васкарĕ. Вăхăт хăвалать, паянхи кун вĕçлениччен инçетрен курăнса ларакан сăрт урлă каçма тăрăшмалла. Çулĕ вара унталла ансăрскер кăна. Лашапа çӳрекенсем инçетрен çаврăнаççĕ пулас.

Тăвалла çул çăмăлах мар, хулпуççи урлă çакнă уртмах та йывăрланса пырать, шыв ĕçес килет. Юрать-ха, сăрт хĕрринче сивĕ шыв сăрхăнса тухакан вырăнсем пур. Ларса канас шухăш та пурччĕ, анчах Нарпи сăрт тăррине çитмесĕр чарăнас темерĕ. Туя çине таянса кăштах пăхса тăчĕ те çӳлелле тапалашрĕ. Çапла хыттăн тапса утса пынă çĕртех ун çулне çĕлен пӳлсе хучĕ. Самай вăрăмскерех, анчах темшĕн чул айĕнчен тухаймасть, пуçне çĕклесе ниçта кайса кĕрейми авкаланать. Хăраса ӳкнĕ Нарпи пăрăнса иртес тесе пĕр-ик утăм кăна тунăччĕ, «çăлсам мана» тени илтĕнсе кайрĕ. Хĕрача тинех тавçăрса илчĕ: çĕлене çӳлтен ишĕлсе аннă чул хĕстерсе лартнă иккен. Апла пулсассăн – çăлмалла ăна: пĕтĕм вăйне пухса чула катертме пикенчĕ, анчах ĕç тухмарĕ. Çапах та тавçăрса илчĕ, кукашшĕ ĕçленине аса илчĕ: инçех мар выртакан самаях хулăн йывăç вуллине илчĕ те пĕр вĕçне чул айне чиксе хирчĕ. Чул кăштах çĕкленчĕ. Çав самантпа усă курса çĕлен маларах шума ĕлкĕрчĕ, чул айĕнчен тухрĕ. Унтан кăштах çĕкленчĕ те темиçе хутчен пуçне тайрĕ.

Хӑйне ҫӑлакана тав турӗ ӗнтӗ. Ҫӗлен – хӑй ҫулӗпе, Нарпи хӑй ҫулӗпе малалла кайрӗҫ.

Сӑрт ҫине хӑпарса ҫитнӗҫемӗн ҫил хытӑрах вӗрме тытӑнчӗ. Акӑ Нарпи чи ҫӳллӗ вырӑнта чарӑнса тӑчӗ те йӗри-тавра пӑхса илчӗ: пӗтӗм тӗнче ура айӗнче тейӗн. Инҫех те мар ӑмӑрткайӑк ярӑнса ҫӳрет. «Мӗншӗн манӑн та ҫунатсем ҫук-ши? Ҫитес ҫӗрелле вӗҫӗттӗм те кайӑттӑм», – шутласа тӑчӗ Нарпи ӑмӑрткайӑка ӑмсанса. Лешӗ ҫав самантра чул пек персе анчӗ те каллех вӗҫсе хӑпарчӗ. Чӗрнисемпе темле чӗрчуна ҫаклатма ӗлкӗрнӗ иккен, лешӗ тапалашни курӑнать. Анчах ҫак чи вӑйлӑ кайӑкӑн сӑнӑ пек шӑтарса кӗнӗ чӗрнисенчен ҫӑлӑнма май ҫук пуль ҫав.

Сӑртӑн тепӗр енче вӗҫӗ-хӗррисӗр вӑрман сарӑлса выртать. Нарпин ҫак вӑрман витӗр те тухмалла. Ҫакӑн пек тӗллевпе вӑл аялалла васкарӗ. Ак тамаша, анма та пӗлмелле иккен, аялалла чуптарасшӑн, такӑнса ӳкес хӑрушлӑх та пур. Юрать-ха, туя пулӑшать, кӑштах таянса илни те теме тӑрать. Тӳрем вырӑна ҫитесси нумаях та юлманччӗ, сасартӑк аялта юланутҫӑсем курӑнса кайрӗҫ. Вӑрӑм сӑнӑсемпе. Таҫта васкаҫҫӗ. «Эсрел хуралҫисем», – тавҫӑрчӗ Нарпи. Вӗсем асӑрхасран часрах пӗр лутра тӗм хыҫне пытанчӗ. Лаша ури сасси илтӗнми пулнӑччӗ кӑна, юнашарах йыт ҫури йынӑшни илтӗнсе кайрӗ. Нарпи пырса пӑхрӗ. Мӑйкӑча ҫакланнӑскер, ҫынна курсассӑн тата хыттӑнрах тапӑлтатма тытӑнчӗ янавар, чутах пӑвӑнса ларатчӗ. Юрать-ха, Нарпи вӗҫертсе ячӗ. Лешӗ вара ним ҫаврӑнса пӑхмасӑр малалла вӗҫтерчӗ. Нарпи сунарҫӑсене вӑрҫса илчӗ те мӑйкӑча йывӑҫран салтса айккинелле печӗ. Кӗҫех тикӗс вырӑн пуҫланчӗ, сипсимӗс курӑк, чечексем... Утма та лайӑх. Нарпи ӑҫталларах каймаллине тӗрӗсрех суйласа илес тесе хӗвел ҫине

тимлĕнрех пăхрĕ, часах вара вăрманалла кĕрсе çухалчĕ. Кăштах кайсассăн пĕр ансăр сукмак çине ӳкрĕ, те пăши çулĕ, те пăлан çулĕ, тавçăрсах илеймерĕ, утрĕ те утрĕ. Кĕçех каç сулхăнĕ те сисĕнме пуçларĕ, тĕттĕмленсе пычĕ. Самаях ывăнса çитнĕ Нарпи выртса канмалли ӳпле тума шутларĕ. Пĕр йывăç вулли тавра хуçăлса ӳкнĕ шалчасем тăратса тухрĕ те çулçăллă туратсем хуçса хатĕрлерĕ. Малтан вĕсене выртса канмалли çĕре пăрахрĕ, унтан йĕри-тавра тăратса тухрĕ. Шала кĕрсессĕн юлашки шăтăка та хупларĕ. Самай меллĕ вырăн пулчĕ, çумăр та йĕпетес çук, тискер кайăк та кĕрес çук. Нарпи чĕре сури турĕ те канма выртрĕ, кĕçех тарăн ыйăха путрĕ...

Нумай çывăрчĕ-и, сахал-и: «Хĕрĕм, тăр!» тени илтĕнсе кайрĕ. Нарпи вăранчĕ, анчах ӳплере никам та çук. Тул çутăлнă, çулçăсем хушшинчен çутă пайăркисем



сăрхăнса кĕреççĕ. Нарпи япалисене илчĕ те тухрĕ. Ак тамаша, инçех те мар пĕр кашкăр лара парать. Тĕреклĕскер. Хĕрача хăранипе ӳплене чăмрĕ те алăк тĕлне туратсемпе хупласа лартрĕ.

– Ан хăра, – калаçма пуçларĕ çын чĕлхипех кашкăр, – сана пулăшма килнĕ эпĕ. Эсĕ ĕнер ман ачана майкăчран вĕçертсе вилĕмрен хăтартăн. Сана çавăншăн тав тăвас тетĕп.

– Кашкăра пĕлетпĕр ĕнтĕ, улталатăн эсĕ.

– Ĕнен мана. Калаçса тăрса вăхăтна ан пĕтер. Ман çине лар та малалла вĕçтерер. Çулу санăн кĕске пулас çук.

Кашкăр сăмахĕнче нимле хаярлăх та çукки Нарпи кăмăлне самаях çемçетрĕ. Туратсене кăштах сирсе пăхсан кашкăр чăнах та ырăпа килни сисĕнчĕ. Нарпи шикленерех пулин те уçă вырăна тухрĕ.

– Ăçта çитмеллине кала та ман çине улăхса лар, – терĕ кăвак тукмак.

– Улăп çывăрнă вырăна çитмелле манăн.

– Апла пулсан кайрăмăр.

Нарпи вырнаçса ларсанах кашкăр малалла юртрĕ. Çурран утни мар ĕнтĕ, çухрăм хыççăн çухрăм хыçа юлса пычĕ. Акă çаксем каллех шыв хĕррине çитсе тухрĕç. Ку хутĕнче вара нимĕнле кимĕ те, сулă та курăнмарĕ. Нарпи уртмахран çинçе çăварлă тир михĕ кăларчĕ те вĕрсе хăпартрĕ. Унтан кĕпипе пушмакне хывса уртмаха чикрĕ. Вара пĕтĕм япалине çурăм çине майлаштарса хурса сăран михĕ çине выртрĕ. Кашкăр маларах ӳксессĕн Нарпи пĕр аллипе ун хӳринчен ярса тытрĕ, тепринпе вара кăштах çăмăллăх пултăр тесе авăсса пычĕ. Леш енне каçса канса илнĕ хыççăн каллех Улăп патнеллеваскарĕç...

Кашкăр çине тăнипе çĕрле те чарăнмарĕç. Нарпи темиçе хутчен те çăлтăрсем çине пăхса илчĕ, çаплах каятпăр-ши тесе хăйне хăй тĕрĕслерĕ. Ире хирĕç кашкăр чарăнчĕ.

– Малалла санăн пĕчченех кайма тивет. Хурал тăрать, – терĕ тукмак.ьторгн76

Нарпи ăна тав турĕ те çăра çулçăллă тĕм патнелле утрĕ. Лешĕ вара каялла вĕçтерчĕ. Хĕрача ирхи сывлăм шывĕпе çăвăнчĕ те çи-пуçне улăштарса тăхăнчĕ, чăн-чăн чăваш пики пулса тăчĕ. Унтан тин çеç йăлкăшса тухакан хĕвеле хирĕç тăрса кĕл турĕ, малалла уттарчĕ.

– Кам çӳрет кунта? Мĕн тума килнĕ? – илтĕнчĕ арçын сасси. Нарпи умне тĕреклĕ хуралçă тухса тăчĕ. Аллинче вăрăм сăнă.

– Ăçтан вара эсĕ нихăçан курман тумпа килнĕ-скер? – тĕлĕнсе пăхса илчĕ арçын. – Мĕн туса çӳретĕн?

– Уйăх çинчен антăм эпĕ, – персе ячĕ Нарпи нимĕн калама аптранипе.

– Уйăх çинчен? Ун пекки те пулать-и вара?

– Нивушлĕ уйăх çинче кĕвентепе тăракан хĕре курман вара эсĕ?

Хуралçă аптраса ӳкрĕ, пĕлĕт çинелле пăхса илчĕ. Хĕвел тухсан уйăх пытаннă ĕнтĕ.

– Мĕн тума килнĕ вара эсĕ кунта?

– Курса çӳреме. Çĕр çинче питĕ илемлĕ иккен. Чечексем те, çырласем те пур, – терĕ те Нарпи малалла утма тăчĕ. Хуралçă вăрăм сăнне урлă тытса çула пӳлчĕ.

– Унталла кайма юрамасть.

– Питĕ хăрушă-им вара? Кашкăрсем нумай-им?

– Кашкăр мĕн вăл... Унта Улăп çывăрать. Вăратма юрамасть ăна.

– Кам вара вăл вăрманта çывăраканскер?

– Улăп камне те пĕлместĕн-и-ха? Чăвашсен паттăрĕ вăл.

– Курасчĕ ăна. Инçетрен кăна пăхса илесчĕ. Çĕр çинчех выртать-и вара вăл?

– Мĕскер эсĕ, чăнах та, уйăх çинченех аннă пулмалла, кунти йĕркесене пачах та пĕлместĕн. Уйрăм çуртра выртать вăл. Кунтан иртсессĕн вилĕм кăна кĕтет сана, капăр тумланнă пике.

– Ирттерсе яр-ха, тархасшăн, çуртне кăна пăхса илем. Акă сана уйăх çинчен илсе килнĕ япала парнелетĕп.

Нарпи арçынна пысăках мар кĕмĕл чăмăркки тыттарчĕ. Лешĕ ăна çавăркаласа пăхрĕ те мĕн иккенне тавçăрчĕ.

– Ку япала татах та пур-и вара унта?

– Кирлĕ пулсан уйăх çинчен тӳрех персе парăп. Кун пекки унта темĕн чухлех.

– Кĕмĕл мар пуль те? – тĕкĕнсе пăхрĕ Нарпи пуçĕнчи тухьяна.

– Килĕшет пулсассăн ил эппин, – сĕнчĕ Нарпи тухьине хывса парса.

– Самай йывăрскер, кĕмĕлренех пулас, – терĕ те лешĕ пуçне тăхăнса пăхрĕ. – Çуртне çеç курас тетĕн пулсассăн ирт, эппин. Анчах асту, эпĕ сана курман... Панă сăмаха пурнăçла. Леш уйăх çинчине персе пар...

Нарпи малалла утрĕ. Кăштах кайсассăн ун умне иккĕмĕш хурал тухса тăчĕ. Аллинче пысăк чукмар.

– Чарăн! Малалла çул çукка. Унта Улăп çывăрать.

– Маттур каччă, ирĕк парсам мана Улăп выртакан çурт çине аякран та пулин пăхса илме.

– Çук, юрамасть. Эсрел хушман. Чим-ха, эсĕ кам пулатăн вара, ăçтан килтĕн?

– Уйăх çинчен аннă эпĕ, чипер каччă.

– Чăнах-и? Малтанах сисрĕм çав кунти çын маррине. Кĕпӳ тата... Кун пеккине курманччĕ.

– Килĕшет пулсассăн ил эппин, – терĕ те Нарпи кĕпине хывса тыттарчĕ.

– Шăрçуна та, суллуна та пар!

Нарпи хуралçă хушнине итлерĕ. Лешĕ ăна чармарĕ. Кăштах утсассăн хура вăрман çуталса кайрĕ. Умра пысăках мар уçланкă. Унта чулран тунă çурт ларать. Сасартăк виççĕмĕш хурал тухса тăчĕ.

– Малалла пĕр утăм та ярса ан пус. Часах пуçу сирпĕнсе кайĕ, – хăмсарса илчĕ вăрăм хĕççипе. – Кам вара эсĕ? Мĕн туса çӳретĕн?

– Улăп виллине сыхлаканĕ питĕ маттур каччă терĕç те...

– Маттурри-мĕнĕ... Улăп вилмен вăл, çывăрать кăна, – терĕ хуралçă хăй çине пăхса илсе.

– Мĕншĕн вăратмастăр вара эсир ăна?

– Эсрел хушмасть, Улăпран хăрать вăл.

– Хăй мĕншĕн вăранмасть тата? Пĕрмаях çывăрать-им?

– Нумай çул хушши ĕнтĕ. Ун пуçĕ патне çывăрттаракан курăк хурса тăраççĕ. Çав курăк ăçта ӳснине, унпа мĕнле усă курмаллине пĕр хĕрарăм çеç пĕлет. Çав пăхса пурăнать те ĕнтĕ Улăпа.

– Нивушлĕ ун пек курăк та пур вара? Пĕртте ĕненес килмест. Курăк шăршипе те çывăрса кайма пулать-ши вара?

– Пулмасăр. Ĕненмесен шăршлаттарса пăхтарам, эппин.

Хуралçă Улăп çурчĕ патнелле утрĕ. Нарпи те пĕрле кĕресшĕнччĕ, анчах лешĕ чарчĕ. Кĕçех пĕр ывăç пек курăк илсе тухрĕ.

– Акă, шăршласа пăх, – тăсрĕ аллине.

– Э-э-э... Чеескер иккен эсĕ, мана çывăрттарса ярасшăн. Пĕлетĕп сана, куçу, ав, мĕнлерех вылять. Шан сана.

– Тыт. Килĕшмесен...

– Çук, çук, кирлĕ мар.

Хуралçă Нарпие шăршлаттарас тесе курăка вăйпах ун тути патнелле илсе пычĕ. Лешĕ пăркаланма тытăнчĕ, кулкаласа курăка туртса илсе айккинелле печĕ те арçынна чуптурĕ. Лешĕ хĕççине пăрахрĕ те Нарпие ыталаса илсе тутинчен те, çара ӳтĕнчен те чуптума пуçларĕ. Кĕçех симĕс курăк çине тӳнсе кайрĕç те йăваланма тытăнчĕç.

– Ку мĕнле хывăнма пĕлмен япала пулчĕ вара? – илтĕнчĕ арçын сасси.

– Чыс пиçиххийĕ вăл. Уççисĕр уçăлмасть.

– Халех уçнă пул.

– Манра мар çав, Улăп айĕнче выртать вăл, – терĕ Нарпи ура çине тăнă май. – Çавна илсе тухмасăр санăн пулаймăп. Улăп патне кĕрт мана. Вара эсĕ ĕмĕтленни пурнăçланĕ.

Хуралçă йĕри-тавралла пăхкаласа илчĕ те килĕшрĕ, анчах леш хĕрарăм килсе тухма пултарать тесе Улăп патĕнче нумай тăма хушмарĕ.

– Эсĕ леререх кайса тăр та пăхкала. Вăл килнине курсассăнах шви! шăхăр...

Арçын, чăнах та, леш хĕрарăм çӳрекен çул патнерех кайса тăчĕ. Нарпи васкасах пӳрте кĕрсе кайрĕ. Чаплă вырăн çинче выртать иккен Улăп. Калама çук тĕреклĕ те илемлĕ арçын лăпкăн çывăрать. Нарпи ăна пĕрремĕш хут курать пулин те, пăхса киленсе тăмарĕ, ун пуçĕ тавра хунă курăка пуçтарчĕ те алăкран тухса печĕ. Унтан Улăпа вăратма пикенчĕ, икĕ аллипе тытсах силлерĕ.

Лешӗ вӑранмасть. Аптранипе чуп туса та пӑхрӗ. Питӗ тарӑн ыйӑха путнӑ иккен вӑл. Улӑп хускалма пуҫланӑччӗ кӑна, лешӗ шви! шӑхӑрса ячӗ. Нарпи чупса тухрӗ. Асамҫӑ хӗрарӑм тӗрӗслеме килет иккен. Хуралҫӑ хӗрачана айккинерех ҫавӑтса утрӗ. Хӗрарӑм Улӑп патне кӗнӗкӗменех каялла чупса тухрӗ те пӗтӗм тавралӑх илтмелле: «Улӑп вӑраннӑ!»–тесе кӑшкӑрса ячӗ. Каллех кӗрсе кайрӗ.

Хуралҫӑ хӑраса ӳкрӗ, Нарпирен уҫӑ ыйтрӗ. Лешӗ пушӑ алӑпах тухнине пӗлсессӗн тарӑхса кайрӗ.

– А-а-а... Эсӗ улталарӑн иккен. Эсех вӑратрӑн пулас. Сана-и... Вӑхӑт питӗ сахал-ха, хӑвӑртрах Эсреле пӗлтермелле.

Куҫне чарса пӑрахнӑ арҫын Нарпие йывӑҫ ҫумне ҫурӑмпа тӑратрӗ те аллисене хыҫалалла туса ҫыхса хӑварчӗ. Хӑй вара пушарти пек васкаса куҫран ҫухалчӗ...

Леш хӗрарӑм тӑрса ларнӑ Улӑп умӗнче ним тума аптраса тӑрать. Халӗ вара нимӗнле курӑк та пулӑшас ҫук. Эсрел килсессӗн... Ун умӗнче явап мӗнле тытмалла? Тӳрех касса пӑрахать ӗнтӗ.

Хӗрарӑм куҫне лайӑххӑн уҫайман Улӑпа питӗнчен, ҫӳҫӗнчен аллипе шӑлса ачашласа илчӗ.

– Аран вӑратрӑм сана, юратнӑ Улӑпӑм, – терӗ.

– Ӑҫта вара эпӗ? – ыйтрӗ Улӑп пӑхкаласа илсе. – Мӗншӗн вырӑн ҫинче выртатӑп?

– Ҫывӑрнӑ эсӗ, нумай ҫул хушши ҫывӑрнӑ. Юратьха хам ҫине тӑрса вӑратрӑм. Эсрел пӗлсессӗн вӗлерет ӗнтӗ мана.

– Эпӗ халь Эсрел патӗнче-им вара?

– Ҫапла, сана кунта питӗ хытӑ сыхлаҫҫӗ, никама та ҫывхартмаҫҫӗ. Аран кӗрсе вӑратрӑм сана, юратнӑ Улӑпӑм.

– Ав мӗнле иккен. Мӗн ятлă пулатăн-ха эсӗ, ырă çыннăм?

– Элпи теççӗ мана.

– Тавах сана, Элпи, мана вăратнăшăн. Чим-ха, халăхăм ăçта вара манăн? Мӗншӗн вӗсем вăратман?

– Инçе вӗсем, тарса сапаланса пӗтнӗ. Маннă вӗсем сана.

– Апла эппин Эсрел халӗ те пурăнать?

– Вăйлă вăл, паян вара нихçанхинчен те вăйлă. Çарӗ ун çав тери йышлă. Юратнă Улăпăм, итле мана. Санăн халӗ сапаланса пӗтнӗ чăвашсем патне каймалла та мар, Эсрел çӗршывне хăв аллуна çавăрса илмелле. Эсреле хирӗçле çынсем вӗсем кунта та пур. Çавсене хăв тавра пухмалла.

– Çук, мана ют çӗр пачах та кирлӗ мар. Ман хăвăртрах чăвашсем патне çитмелле. Çавсем мӗнле пурăннине курасчӗ.

– Ну юрӗ, санпа тавлашма йывăр. Хăвăнне хăв пӗлетӗн. Эсӗ вăраннă, эсӗ халь вăйлă. Анчах манăн халӗ ăçта кайса кӗмелле-ха? Хăвна юратса вăратрăм та... Эсӗ çывăрнă чухне юнашар выртса сахал мар ăшăтрăм. Халӗ вара?.. Пӗлетӗн-и эсӗ кунта мӗн пулса иртнине? Эсрел хушнипе ман сана наркăмăшлă курăк хурса памалла пулнă. Эпӗ вара çывăрмалли хурса пурăнтăм. Лешне вара Улăп вăл наркăмăш курăкӗпе çывăрать тесе улталарăм. Сана юратнипе ӗнтӗ. Çав Эсрел чирлесе е вăрçăра вилессе кӗтсе пурăнтăм, ӗç тухмарӗ. Пурăнать те пурăнать. Халӗ вара чăтса тăраймарăм, сана вăратрăм. Эсрел умӗнче явап мӗнле тытмаллине ниепле те тавçăрса илейместӗп. Мӗн кӗтет-ха ӗнтӗ мана?

– Кала, мӗн тума пултарăп-ха эпӗ саншăн, хăюллă Элпи. Тен, манпала пӗрле пырăн?

– Кам шучĕпе пырăп-ха?

– Мĕнле калас...

– Çук, çук. Ман кунтан кайма юрамасть, – терĕ Элпи ăна Улăп хăй арăмĕ тăвасшăн маррине туйса. Çапах та парăнма шутламарĕ, шухăшне кăна кăштах улăштарчĕ.

– Енчен те мана кăштах та пулин тав тăвас тетĕн пулсан, ыталаса чупту, анчах чăмăртаса ан вĕлер. Юрат мана. Тутанса пăх хăвна юратса пурăнакан хĕрарăма.

Элпи кĕтсе тăмарĕ, Улăп мăйĕнчен çакăнчĕ те ăна вĕçĕмсĕр чуптума пуçларĕ. Хĕрарăмшăн антăхса çитнĕ вăйпитти арçыншăн ку пачах та кĕтмен çĕртен сиксе тухнă парне тесен те юрать. Вырăнĕ те хатĕрех...

Йывăç çумне çыхса хăварнă Нарпи вара чунĕ тăвăлса çитнипе макăрса ячĕ. Ун чĕрине халĕ, çак йывăр самантра, ним тума пултарайманни кăшлать. Айван вăл халĕ. Кĕçех акă тата Эсрел тарçисем йышлăн килсе çитĕç. Çамрăк Нарпирен мĕн тăрса юлĕ? «Нивушлĕ пурнăçăм çакăнпа вĕçленет вара, нивушлĕ ман валли нимĕнле çăлăнăç та çук вара? – пĕтĕм вăйĕпе туртăнса илчĕ хăраса ӳкнĕ Нарпи. – Нивушлĕ çакăнта, ют çĕрте, манăн çамрăк ӳтĕме выçă çăхансем сăха-сăха тăпăлтарса çийĕç. Нивушлĕ текех Алмаса кураймăп, хамăн юратăва ăна параймăп... Улăп! Çăлсам мана!»

Сасартăк çыхса лартнă алăран такам карт! туртрĕ. Унтан татах. Нарпи çаврăнса пăхрĕ: леш кашкăр иккен. Акă вăл кантрана кăшласа татрĕ те пуçне сулласа илсе айккинелле персе ячĕ.

– Тавах сана, шанчăклă тусăм, – терĕ савăннипе Нарпи.

– Çăкăр-тăвар хире-хирĕç вăл. Васка хĕрĕм, васка. Кунти хыпара Эсрел патне çитерчĕç ĕнтĕ.

Нарпи Улăп çурчĕ патнелле вăркăнчĕ. Ак япала, алăк патĕнчен инçех те мар вăрăм хĕçĕ йăлтăртатса выртать, леш хуралçă питĕ васканипе манса хăварнă иккен. Хĕрача хĕççе икĕ аллипе ярса тытрĕ те алăк патнелле чупрĕ. Шăп çав самантра Элпипе Улăп тухса тăчĕç. Нумай çул хушши çывăрнăскер, аллисене çӳлелле çĕклесех карăнса илчĕ. Нарпи чăтса тăраймарĕ:

– Улăп! Паттăр Улăп! Тытсам часрах çак хĕççе. Васкамалла санăн, чăвашсем патне васкамалла.

– Кам вара эсĕ? – ыйтрĕ Улăп.

– Нарпи эпĕ. Мана сан пата хăв халăху ячĕ. Сансăр аптраса çитнĕ вăл. Çавăнпа килсе вăратрăм та ĕнтĕ сана.

– Чим-ха... Хăшĕ вăратнă вара мана, – пăхса илчĕ Улăп хĕрарăмсем çине.

– Суять вăл! Эпĕ вăратрăм сана, эпĕ... Вăл кунта çывхарма та пултарайман.

– Улăп, ан ĕнен ăна, çак ултавçа. Юрать-ха, вăл хурса тăракан çывăрттаракан курăка тухса петĕм. Ĕненмесессĕн çĕклемне кăтартам. Ав çавăнта выртать вăл, – терĕ Нарпи тĕллесе кăтартса. – Улăп, тыт çак хĕççе. Васкамалла пирĕн.

– Хăшĕ тĕрĕссине калать вара кунта? – ыйтрĕ хыттăн Улăп хĕççе тытса пăхса.

– Ĕненмесессĕн, акă сана хамăр укçа. Пĕрле илсе килтĕм, – терĕ Нарпи.

Улăп паттăр тимлĕн пăхса илчĕ укçана, унтан тавăрса пачĕ. Элпи вара çакна ним шарламасăр пăхса тăчĕ. Вырăнлă сăмах тупаймарĕ. Капланса çитнĕ хаярлăхне чараймарĕ, аллине ирĕке ячĕ, Нарпие вăйпах паккама пуçларĕ. Улăп чарман пулсассăн тем сиксе тухатчĕ. Нарпи хăй те начарскер мар иккен, хирĕç тăма хăюллăх çитерчĕ.

– Ултавçă иккен эсĕ, – терĕ Улăп Элпие хăрах аллипе çӳлелле çĕклесе. – Апла мана çывăрттарса усраканни эсĕ пулнă-ха?

– Хăватлă Улăп, каçар мана. Айăпли кунта эпĕ мар. Пĕтĕмпех Эсрел хушнипе пулса пычĕ. Тĕнче халĕ çавăн аллинче. Ан вĕлер мана, юратнă çыннăм. Каçар мана. Хам ирĕкпе туман эпĕ çак ĕçе.

– Юрĕ, хĕрарăм çине алă хурса çылăха кĕмĕп, – терĕ паттăр Элпие айккинелле ывăтса ярса.

– Тавах сана, Улăп паттăр. Тен, пурнăçра эпĕ те кирлĕ пулăп-ха, – тесе Элпи вăрманалла утрĕ.

Çак самантра çынсем кăшкăрашни, лашасем тулхăрни илтĕнсе кайрĕ. Эсрел тарçисем çывхараççĕ пулас. Улăп çакна сисрĕ, хĕççине сулкаласа илсе темиçе йывăçа касса пăхрĕ, çивчĕшне тĕрĕслерĕ. Унтан вăл çинçе йывăç вуллине касса шĕвĕртрĕ те Нарпие тыттарчĕ, çапăçма тивет терĕ.

– Улăп паттăр, сана пулăшайăп-ши? Тен, çапăçса вăхăта ирттерер мар, килелле васкар, – сĕнчĕ Нарпи.

– Улăп чакма хăнăхман вăл.

– Вăл çапла пуль-те-ха, анчах çапăçмалли самантсем малашне те пулĕç-ха. Вăйна тепĕр чухне кăтартăн. Атя, каяр кунтан, – терĕ те Нарпи Улăпа аллинчен туртрĕ. Лешĕ килĕшрĕ...

Улăппа шай ăçтан чупса пырăн-ха ĕнтĕ? Вăл пĕрре ярса пуссах таçта çити мала ӳкет. Нарпи юлма пуçларĕ. Çав самантра леш кашкăр сиксе тухрĕ те хĕре хăй çине лартрĕ. Вара вĕсем ăнăçлах малалла вирхĕнчĕç...

## IX

Уксах Микка ял патне çывхарнăçемĕн лашине хулленрех яма хушрĕ, кăштах кантăр терĕ пуль ĕнтĕ. Унтан пачах чартарчĕ, лавçа сӳсмен-пăява тĕрĕслеме хушрĕ. Хăй те анса уткаласа çӳрерĕ, çи-пуçне тӳрлеткелесе илчĕ. Вара каллех лав çине улăхса ларчĕ те лашине хăвалама хушрĕ...

Турхан пурăнакан ял вăл таврара чи пысăкки. Пурăнасса та сумлăрах йăхсем пурăнаççĕ. Кашнин хăйĕн вырăнĕ. Авланнă ывăлĕсем çурчĕсене ашшĕ килĕпе юнашар лартма тăрăшаççĕ. Çавна пула тӳрĕ урамсем çукпа пĕрех. Апла пулин те Микка кашни йăх патĕнчен иртсе кайма шутларĕ. Курччăр Микка камне! Чылайччен кукăр-макăр çулпа çӳрерĕ те Аминепе Калима пурăнакан кил умне çитсе чарăнчĕ, парнесене илчĕ те кĕрсе кайрĕ.

Малтан вăл сĕтел çине пасарта туяннă тутлă кучченеçсене кăларса хучĕ, хăналанма сĕнчĕ. Лешсен умĕнче паян пачах урăхла Микка: тумĕпе те, кăмăлĕпе те. Чура туйăмĕ те сисĕнмест. Хăйне хуçа пекех тыткалать. Çакă вара Амине чĕрине самаях сăхса илчĕ. Мĕнле чăтса тăрăн-ха?

– Кучченеç çисе ларма кунта сăлтав çук,– терĕ кил хуçи хĕрарăмĕ. – Тутлă çимĕç валли савăнăçлă вăхăт кирлĕ.

– Амине, кун пек макăрса ларнипе Ватраса чĕртсе тăратаяс çук. Ахалех ытлашши хуçăлатăр. Хам сывă чухне сире пăрахмăп.

– Ав мĕнле калаçатăн эсĕ. Турхан туйине паянах килсе панă пул. Ватрас йăхĕ пĕтмен-ха вăл. Ывăлĕ сывă çĕртенех турхан туйине тепĕр çынна памăпăр. Ыранах Эсрел патне каятăп.

– Вара мĕскер тăвас тетĕн?

– Сан çинчен каласа паратăп, Алмаса турхана лартма ыйтатăп.

– Хĕрарăм пуçупа тем сиктерсе кăларăн. Эсĕ нимĕн те пĕлместĕн иккен. Эсрел умĕнчи парăма татмасăр Алмаса кураймăн. Мĕнпе тӳлесе илĕн? Ылтăну ăçта?

– Кайсассăн курăпăр унта.

– Кун пирки ан та шухăшла, Эсрел патне пĕр çынна та ямастăп. Пĕтĕм ыйтăва хам татса парăп. Эсир халĕ пурте манăн алăра, – терĕ Микка чышкине кăтартса. Кăштах кулма та пикенчĕ, анчах çакă вăл пит ăнăçлах пулмарĕ. Ма тесессĕн ун халь калаçăва пачах урăх çĕрелле куçармалла. Мĕнлерех тусассăн лайăх-ши?

– Алмас шăпи те манран килет, – хăйса пычĕ Микка. – Эпĕ çеç çăлма пултаратăп. Паллах, мĕн ыйтнине тивĕçтерсессĕн.

– Тата мĕн кирлĕ-ха ĕнтĕ сана?

– Калима...

– Ак тамаша! – пĕççине шарт! çапса илчĕ Амине. – Вăл тата мĕн тума?

– Арăм тума.

– Мĕн калаçатăн эсĕ, ват супнă. Кикен тымарĕ çимерĕн пуль те? Калима! Хĕрĕм, илтетĕн-и? Кил-ха кунтарах.

Калима тĕпелте чаршав хыçĕнче пулнă иккен. Веçех итлесе ларнă, анчах Микка патне тухма шутламан. Халĕ вара...

– Ак тамаша, мĕне пула визирь евĕрлех тумланнă вара эсĕ? – тĕлĕнсе пăхса илчĕ Микка çине Калима. – Мĕн эсĕ, Эсрел тарçи пулма хатĕрленместĕн пуль те? Туму веçех çавсенни пек.

– Калаçăва айккинелле пăрса ярар мар-ха. Мĕн

каланине илтрĕр пуль. Эпĕ вара хам сăмахран пĕр шит те чакмастăп. Енчен те пурнăçăра йĕркеллĕ, çăкăрлă-тăварлă пурăнса ирттерес тетĕр пулсассăн, сирĕн эпĕ каланипе килĕшме тиветех. Кĕçех акă Ватрас хатĕрленĕ пурлăх çунакан çурта пек ирĕлме пуçлĕ. Ытти çынсем пек тар кăларса ĕçлеме хăнăхман эсир. Шухăшласа пăхăр-ха, мĕн кĕтет-ха сире?

– Алмас пур чухне аптрамăпăр-ха, – терĕ Калима.

Микка ахăлтатса кулса ячĕ шăпах çак саманта кĕтсе тăнă пекех. Пĕлет вăл, веçех ăнланать, Эсрел хăйне турхана лартманнине те чухлать. Анчах саманчĕ питĕ меллĕскер-çке. Усă курса юлмалла унпала.

– Ну юрĕ, шухăшласа пăхмалăх вăхăт пур-ха сирĕн. Çапах та, Амине, ман сана тав тăвас шухăшăм пур. Çак киле нумай çул хушши кĕрсе çӳрерĕм, санран сивĕ сăмах илтменччĕ. Илсем манран çак парнене, – терĕ Микка питĕ паха тутăра хĕрарăм хулпуççийĕ çине çакса ярса. – Урана камшăн амантнине те пĕлетĕн вĕт.

Амине сăмах хушма ĕлкĕриччен Микка Калима хулпуççийĕ çине те укаллă пурçăн çакса ячĕ. Йăлкăшса кăна тăрать.

Шăп çак самантра кăшкăрашса çапăçса Чĕкеç кĕрсе тăчĕ.

– Кӳртмеççĕ тата çак мурсем. Ватрас пур чухне нимле чару та çукчĕ... Ак чĕмере! – Аминепе Калима çинчи парнесене асăрхаса çăварне карса пăрахрĕ Чĕкеç. – Мĕн пулса иртет вара кунта? Микки тата мĕнле тумланнă! Туй каччи пек... Чим-ха... Туя хатĕрленместĕр пулĕ те?..

– Çук, çук – хирĕçлеме тытăнчĕ именнипе пичĕ пиçнĕ çырла пек хĕрелнĕ Амине. Кам шутланă-ха Чĕкеç çапла леш арçынсене тĕке-тĕке ярсах кĕрсе тăрасса.

Тепӗр тесессӗн, арçыннисем те пит тӗреклӗскерсемех мар та... – Миккана пасартан илсе килме хушнăччӗ те, тыткаласа пăхатпăр-ха, – чееленчӗ çавăнтах. – Мӗнле пек?

Чӗкеç малтан Калима çинчине тытса пăхрӗ, унтан Амине тутăрне хăй çине çаксах, урлă та тăрăх пăхкаларӗ. «Ватрас укçипе ырă куратăр ӗнтӗ», – шухăшларӗ ăшӗнче.

– Мана сирӗн пурлăхăр пит кирлех мар-ха. Алмас пирки...

– Тутри килӗшет пулсассăн сана пултăр эппин. Ил, – пӳлсе хучӗ Амине Чӗкеç темӗскер персе ярасран хăраса. – Ватрас ырлăхӗ кăштах сана та тивтӗр.

– Анне! Мӗн тăватăн эсӗ? – сиксе ӳкрӗ Калима. – Кашни килмессеренех мӗн те пулин парса ятатăн.

Чӗкеç тутăра тавăрса пачӗ. Лешсем япалисене хăвăрт пуçтарса хучӗç. Миккашăн çакă кӗтмен çӗртен сиксе тухнă кăмăллă самант пулчӗ. Парнене каялла персе памарӗç, эппин, шанчăк пачах çухалман-ха.

– Калăр-ха мана, мӗншӗн Алмаса илсе килместӗр? – пуçларӗ хыттăн калаçма Чӗкеç. – Мӗншӗн халӗ те Эсрел патне кайман вара?

– Мӗнпе кайăпăр-ха; парăма парса татмасăр усси пулас çук тет Микка, – лăплантарма пикенчӗ Амине. – Ыранах тухса кайăттăм, усси пулӗ-ши?

– Хаклă япаласем илсе укçа пӗтериччен ӗç тăвасчӗ. Çак Миккана шанатăр пуль-ха. Кӗтсе илейӗр-ши? Çывăрнă чухне те турхан туйине ыталаса выртать пулӗ. Сире курсассăн кăмăл пăтранать ман. Хам каятăп. Паянах ялсем тăрăх çӳресе укçа пухма тытăнатăп.

Чӗкеç аллине сулчӗ те тухса утрӗ.

– Эсреле кирлӗ чухлӗ пурпӗрех пухаймасть вăл, – терӗ Микка.

Çакӑнта мӗн пулса иртнине Калима питӗ тимлӗн пӑхса тӑчӗ. Чӗкеç хӑйне мӗнлерех тыткалани, мӗн каласни чӑннипех те тӗлӗнтерчӗ. Мӗншӗн-ха вӑл çине тӑрсах Алмасшӑн калаçать, ӑна çӑлас тесе Эсрел патне кайма та хатӗр. Чӗкеç килсе кайни уншӑн хӑйне çупса янӑ пекех туйӑнчӗ. «Анчах мӗнле пулӑшма пултарӑп-ши вара эпӗ тӑван пиччеме?» – ыйтрӗ хӑйӗнчен хӑй.

– Амине, тӑнла-ха мана, – çине тӑчӗ Микка, – енчен те Калимана мана парсан, Алмаса хӑтарассине пӗтӗмпех хам çине илӗп. Эсрел умӗнчи куланая парса татма укçине, ылтӑнне хам парӑп. Кала татӑклӑн.

– Ӑçтан тупнӑ вара эсӗ çав пысӑк пуянлӑха? – пӑхса илчӗ иккӗленӳллӗн Амине.

– Вӑл сан ӗç мар. Пӗлетӗр ӗнтӗ, енчен те сӑмах патӑм пулсассӑн пурнӑçлатӑп. Пурлӑхӑм манӑн Калима валли те çителӗклех, патша арӑмӗ пекех пӑхса усрӑп. Чи паха çи-пуç, чи лайӑх урапа унӑн пулӗ. Калима ман пата куççассӑнах Алмаса илсе килӗпӗр, турхан туйи те ун аллинчех пулӗ.

– Анне, – чӑтса тӑраймарӗ Калима, – маншӑн халӗ Алмаса илсе килессинчен ырӑ ӗç пулма та пултараймасть.

– Апла пулсан Микка каланипе килӗшмех тивет тесшӗн мар пуль те эсӗ, хӗрӗм?

– Килӗшетӗп эпӗ. Анчах та асту! Алмаса хӑтарас ӗçе санӑн та хутшӑнма тивет. Паллах, аттерен туртса илнӗ ылтӑнран уйӑрса памаллах пулать.

Аптраса ӳкнӗ Амине хӗрне ӑнлантарма пикенчӗ, турӑ умӗнче пуç çапса çӗр çыртма сӑмах пачӗ. Анчах лешӗ ӗненмерӗ. Йӑмра хӑвӑлне пытарса хунӑ ылтӑн ӑçта кайса кӗнине мӗнле пӗлтӗр-ха ӗнтӗ вӑл?

Ӗçӗ вара çапла пулса иртнӗ.

Тĕттĕм каç тĕнче çывăрать тесе ахалех калаççĕ. Чылайăшĕ, чăнах та, çывăраççех пулĕ-ха. Çав хушăрах каçхине пулса иртекен ĕçсем те темĕн чухлех. Хĕрарăмпа арçын хушшинчи кăнтăрлахи хирĕçĕве тĕттĕм каç татса пани вăл пуриншĕн те паллă-ха. Урăххи те сахал мар вĕт-ха.

Пĕрре çапла уксах Миккана турхан хăй патне чĕнсе илчĕ те çапла каларĕ: «Юлашки вăхăтра темшĕн ыйăх килми пулчĕ-ха. Кĕçĕр кунта хамах уткаласа çӳрĕп. Эсĕ вара кайса çывăр».

Микка савăнсах килелле уттарчĕ. Анчах çур çула çитсессĕн чарăнса тăчĕ те кĕсйисене хыпаласа пăхрĕ. Çуккă. Паян тупнă питĕ хăватлă хĕм сирпĕтекен вутчульне манса хăварнă. Ун пеккине килтисем те питĕ ыйтатчĕç. Микка каялла васкарĕ. Хăй выртса тăракан сарай патнелле çывхарнăçемĕн пахчари ватă йăмра патĕнче çын тăрмашнине асăрхарĕ. Чее хуралçă йăпшăнса пычĕ те йывăç тĕмми хыçнерех тăрса сăнама тытăнчĕ. Çыннине те палласа илчĕ, Ватрас иккен. Вăрăм пусма вырнаçтарса тăратрĕ те çӳлелле хăпарса кайрĕ. Пĕр аллинче пысăках мар витре. Акă, улăхса çитрĕ. Анчах мĕн туни паллах мар. Тĕттĕм. Кĕçех анчĕ те пусмине айккинелле кайса хучĕ, витрине мунча умне кĕртсе лартрĕ. Унтан пӳрт çумĕнчи тулли каткара аллисене çуса илчĕ те пӳрте кĕрсе кайрĕ.

Микка пĕр самантлăха нимĕн тума аптраса тăчĕ. Мĕн пулса иртнине ниепле те тавçăрса илеймест. Мунча умне кĕрсе леш витрене тупрĕ те аллине чиксе пăхрĕ. Йĕпе тăм иккен. Ку нимех те пĕлтермест. Тăмпала йывăç тăрринче мĕн тума пулать-ши вара? Ватрас çывăрса кайтăр тесе тăхтаса тăчĕ те ĕçе пуçăнчĕ...

Ак тамаша, ватă йăмра тăрринче тăмпа сĕрсе лартнă

вырӑн пур. Микка нӳрлӗ тӑма аллипе чавса илчӗ те айккинелле вӑркӑнтарчӗ. Хӑвӑлтан чӗркенӗ япала туртса кӑларчӗ. Ҫинҫе чӗнпе хытӑ туртса ҫыхнӑскер. Пусма ҫинче тӑнӑ чухне салтма меллех мар, ӳкес хӑрушлӑх та пур. Ансан салтса пӑхрӗ те... Ылтӑн чӑмӑрккисем иккен! Ёненменнипе шӑлпа ҫыртса пӑхрӗ. Кӗтмен ҫӗртен алла лекнӗ пуянлӑха кӗсйине чикрӗ те ун вырӑнне мунча чулӗ ҫыхса хучӗ. Шӑтӑка чиксе унчченхи пекех тӑмпа сӗрсе лартрӗ...

Ватрас вара мӗн виличченех шанса пурӑннӑ, кашни кун тенӗ пекех йӑмра патне пыра-пыра кайнӑ, тӑмпа сӗрнӗ вырӑна курнӑ та лӑпланнӑ. Шалта вара нумай ҫул хушши мунча чулӗ кӑна выртнӑ.

Пурнӑҫра хурапа шурӑ юнашарах ҫӳреҫҫӗ. Микка ӗнер кӑна савӑнӑҫлӑччӗ, мӗн шухӑшлани ун пурнӑҫа кӗрсе пыратчӗ. Калима пирки те калаҫса татӑлнӑччӗ, мӑчавӑра та пӗлтернӗччӗ. Паян вара пачах урӑхла ҫаврӑнса кайрӗ.

Эсрел каллех вӑрҫа хатӗрленет пулмалла, каччӑсене пухма ун тарҫисем персе ҫитрӗҫ. Ертӳҫи вара кунтан кайнӑ чӑвашах. Ҫак ӗҫе йӗркелессине Миккан пӗтӗмпех хӑй ҫине илме тиврӗ. Халӑх умне ҫӗнӗ тумпа, турхан туйипе тухрӗ. Тарҫисем те юнашарах, мӗн хушнине пӗтӗмпех туса пыраҫҫӗ. Халӗ те ав хӗсмете илсе каймалли каччӑсене пурне те пухса килнӗ. Пуҫӗсене пӗксе тӑраҫҫӗ. Хыҫаларах савнийӗсем макӑрни, амӑшӗсем нӑшӑклани-кӑшкӑрашни илтӗнет. Пӗрне те каччӑсем патне ямаҫҫӗ, ҫывхарма хӑтланакансене Эсрел тарҫисем нухайккапа пӗҫертсе илеҫҫӗ.

– Эй, турӑ! Мӗншӗн пирӗн хута кӗместӗн ҫак? Мӗншӗн ҫак усалсене ҫиҫӗмпе ҫунтарса илместӗн? – илтӗнчӗ хӗрарӑм сасси.

Акă мăчавăр та çитрĕ. Ăна хисеплесе ял çыннисем пуç тайрĕç.

– Мĕншĕн каллех килтĕр вара? Кăçал илсе каймалла мар тесе пĕлтĕрех калаçса татăлнăччĕ вĕт-ха. Турхан та çапла калатчĕ, – хута кĕме пикенчĕ ватă мăчавăр.

– Эсрел халĕ тĕнчене пăхăнтарма хатĕрленет. Ун валли вăйлă арçынсем кирлĕ, – ăнлантарчĕ асли.

– Пĕлетпĕр ĕнтĕ Эсрел çарĕнчен çаврăнса килекен çуккине. Ял вара кампа юлĕ... Чим-ха, эсĕ хăв та хамăр енчисемех марччĕ-и-ха?

– Юнашар ялти Архан вăл! – кăшкăрчĕ пĕри.

Çав самантра пĕр çамрăкĕ сасартăк тӳнсе кайрĕ те тапаланма пуçларĕ, аллисемпе сулкалашать, пуçĕпе çĕре çапать. Çăварĕнчен кăпăк тухма пуçларĕ. Мăчавăрпа тепĕр арçын чĕркуçленсе ларса лăплантарма пикенчĕç.

– Сахалрах ĕçмелле, – терĕ Эсрел тарçи.

– Ӳсĕр мар вăл, тытамак тытать ăна! – пĕлтерчĕ тахăшĕ.

– Чирлисене, ырханнисене илсе килмелле те пулман. Пире лайăх сывлăхлисем кăна кирлĕ.

– Архан, хамăр ăру çынниех вĕт-ха эсĕ. Кунти пурнăç пирки мĕншĕн кăшт та шутламастăн. Кун пек чи маттуррисене илсе кайсассăн хамăр хĕрсем валли камсем юлĕç, – ăнлантарма тăрăшрĕ мăчавăр.

– Ку вăл ман ĕç мар. Манăн Эсрел хушнине тумалла, – терĕ Архан.

– Чим-ха, – сăмах хушрĕ Микка çамрăксем çине тимлĕнрех пăхса илсе, – кунта пурне те пухса килмен пулмалла. Леш, çырма хĕрринчи Хĕвелпи ывăлĕ ăçта тата? Кăçал паттăр ятне çавă илтнĕччĕ мар-и-ха? Халех шыраса тупăр! – хушрĕ тарçисене.

Çав самантра çак тавралăхшăн хуйхă капланса çитнĕ вырăна ватăрах хĕрарăм хашкаса чупса çитрĕ.

– Эй, ывăлăм! – кăшкăрса ячĕ вăл. – Çылăха хăв çине ан ил-ха. Шăллу та кунтах вĕт. Çавна та пулин хăварха. Акă вăл, сан шăллу, Энки ятли, – тĕллесе кăтартрĕ кĕçĕн ывăлĕ çине амăшĕ. – Аçу та вăйсăр выртать, хăварсамччĕ çавна.

– Çук, юрамасть. Эпир курнине пурин те курмалла, эпир тӳснине пурин те тӳсмелле. Тепĕр тесессĕн, çар хĕсмечĕн тути-масине пĕлмен çын вăл чăн-чăн арçын та мар, – хуравларĕ Архан.

– Кун пекех пулсассăн пĕтетпĕр вĕт-ха. Пире тирпейлесе пытаракан та юлмĕ. Ямалла мар çамрăксене! – каларĕ кăшкăрсах ватă мăчавăр çынсем çинелле тархасуллăн пăхса. Лешсем татах та хытăрах шавлама тытăнчĕç. Темиçе каччă айккинелле тапса сикрĕ. Анчах ĕç тухмарĕ. Эсрел çыннисем тытса чарчĕç, нухайккасемпе хăмсарчĕç, Микка та вĕсемпех пулчĕ.

– Эсрел хушнине тумасассăн хăвăра мĕн кĕтнине пĕлетĕр-и эсир?! Тĕп тăвать вăл сире. Ахалех пуласлăх пирки палкатăр эсир кунта. Пĕтнĕ эсир. Тепĕр вăтăр çултан чăвашсем пăч-пач кăна тăрса юлĕç. Эсрелпе пĕрлешсе пурăннинчен пахи çуккă сирĕн. Çавна та чухласа илейместĕр, – ăс пачĕ Архан.

Амăшĕ вара нимĕн тума аптранипе чĕркуçленсе ларсах йăлăнма пуçларĕ. Унăн халĕ калама çук пысăк хуйхă. Капланса çитнĕ куççульне тытса чараймарĕ.

– Ывăлăм, тархасшăн йăха хирĕç ан кайччĕ. Аçупааннӳне çылăха ан кĕрт. Халăх мĕн калĕ? Эй, турă! Хам кăкăр сĕчĕпе ӳстерсеттĕм вĕт сана. Чунна кама сутрăн-ши?

Архан пĕчĕкреххисене, айвантараххисене айккинелле тĕке-тĕке ячĕ те:

– Кусем сирӗн валли пулччӑр. Ача тутарма пӗлеççӗ пулӗ-ха, – терӗ.

Çав хушӑра тарçи чупса çитрӗ те Миккана хӑлхаран темскер пӑшӑлтатрӗ. Лешӗ Архана пӗлтерчӗ.

– Апла эппин, – тӗлӗнчӗ Эсрелӗн шанчӑклӑ тарçи мӑчавӑр çине пӑхса. – Кала-ха, ватсупнӑ, мӑнуку ӑçта сан?

– Мӗн тума кирлӗ вӑл кунта?

– Ӑна хамӑр пӗлетпӗр. Кала, ӑçта вӑл?!

– Килте çук вӑл.

– А-а. Ют çӗре ӑсатрӑн эппин. Эп сана-и...

Архан мӑчавӑра кӑкӑрӗнчен ярса тытрӗ те силлеме пуçларӗ. Мӑчавӑра кун пек тапӑннине нихӑçан курман çынсем аптрасах ӳкрӗç. Мӗн тумаллине никам та пӗлмест.



Сасартăк пĕри: «Кашкăр! Тытăр ăна!» – тесе кăшкăрса ячĕ. Чăнах та, инçех те мар кашкăр пăхса тăрать. Çынсем патнелле Нарпи утса пырать. Темиçен алла мĕн лекнĕ – çавна тытса кашкăр патнелле чупрĕç.

– Ан тивĕр ăна. Пирĕн тус вăл, – чарчĕ Нарпи. – Кунта мĕн пулса иртет вара?

– Хĕрĕм! Нарпи! Кай кунтан! Тар! – кăшкăрчĕ мăчавăр.

– А-а... Хăех килчĕ иккен. Тытăр ăна!

Икĕ тарçă чупса пычĕ те Нарпие ярса тытрĕ. Лешĕ хирĕç тăмарĕ, хăюллăнах çывхарчĕ.

– Эй, тăвансем! Пăхăр çавăнталла. Улăп таврăнать! – кăшкăрчĕ вăл мăнаçлăн.

– Чăнах та, Улăп килет! – илтĕнчĕ сасă.

Улăп çывхарнине курсан Эсрел тарçисем çĕр çуммипе вĕçекен çăхансем пек вĕçтерчĕç. Пĕлеççĕ унпа тытăçнин усси çуккине. Микка та ниçта кайса кĕрейместь, мĕн тумаллине тавçăрса илеймест. Ак тамаша, леш капăр тума та хывса пенĕ, чăваш тумĕпех тăрать. Нарпи кукашшĕ патне пырса тăчĕ. Лешĕ типшĕм аллипе мăнукне пуçĕнчен шăла-шăла илчĕ.

– Маттур хĕрĕм, маттур. Çапах та Улăпа вăратса илсе килтĕн эппин. Çакна турă та, халăх та манмĕ, – терĕ савăнса.

Çынсем чĕркуçленсе ларчĕç. Акă Улăп та çитсе тăчĕ. Пурте шăтарас пек пăхаççĕ. Пĕрремĕш хут кураççĕ вĕт. Илтме илтнĕ, анчах курман. Халăх Улăпсăрах пурăннă.

– Салам сире, чăвашсем! – чĕтретрĕ таврана Улăп сасси. – Курманни чылай пулать! Тăрăр! Ура çине тăрăр!

Пурте ура çине тăчĕç те юрласа ячĕç.

Çут хĕвел çуталса тухнă пек,
Улăп килчĕ пире ыр сунса.
Турри панă телей çитнипе,
Халăх ячĕ тинех сывласа.

Мухтав турра,
Мухтав турра,
Мухтав паттăр Улăпа!

Хӳтлĕх çитрĕ кунта халь тинех,
Паянтан чăвашсем тăлăх мар.
Пирĕнтен Эсрел кулмĕ текех,
Малашне ун тарçи пулар мар!

Мухтав турра,
Мухтав турра,
Мухтав паттăр Улăпа!

– Чимĕр-ха, юрласса чăвашлах юрлатăр-ха. Анчах темшĕн палласа илеймерĕм-ха сире, – терĕ Улăп çынсем çине пăхкаласа. – Сăнран та, çӳллĕшĕпе те... Ман халăхăн пурччĕ тĕреклĕ паттăрсем, хĕвел пек çиçсе тăракан пикесем. Кунта курмастăп вĕсене.

– Ун пеккисем вĕсем пурте Эсрел патĕнче вăй хураççĕ. Пĕрисем пуç çĕклемесĕр ĕçлеççĕ, теприсем ун çарĕнче хĕсметре тăраççĕ. Хамăр та çавах, акнă тыră та, кĕтнĕ кĕтӳ те ăна валлиех. Хырçă шучĕпе сăтăрасăтăра илсе каяççĕ, – пĕлтерчĕ мăчавăр.

– Хĕç тытма вара пачах та мантăр-им?

– Хĕççи пулсассăн тытма пĕлекенсем тупăнĕç-ха, анчах ăна тума хурçă çук. Шăратма та, сутма та чарчĕç... Улăп-паттăр, пирĕн шанчăкăмăр пĕтĕмпех санра.

– Турханĕ кам вара сирĕн?

– Хальлĕхе турхансăрах çав. Ватти вилнĕ...

– Çамрăкки Эсрел патĕнче тыткăнра, – персе ячĕ Нарпи. – Çавна çăласчĕ.

– Микка, кӳр-ха турхан туйине, – ыйтрĕ мăчавăр.

Лешĕ нимĕн шарламасăр пырса пачĕ те айккинерех кайса тăчĕ. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, Улăп пур чухне хирĕç тăни усăсăр. Мăчавăр ĕмĕртен ĕмĕре куçса пыракан çав туяна Улăпа тыттарчĕ те пил сăмахне каларĕ:

– Ăрăва ертсе пыма сана чăваш турри пулăшса пытăр. Эпир вара эсĕ каланине, эсĕ хушнине итлесе пурăнăпăр. Шĕкĕр турра сана çавăрса килнĕшĕн. Эпир паян, тен, сан умра тăма та тивĕç мар, юратнă Улăпăмăр. Каçар пире, хăвăн айван ачусене. Вăй пар пире, ертсе пыр ăрăва. Пирĕн шăпамăр текех пĕтĕмпех сан алăра. Шанатпăр сана.

– Юрĕ. Хам та чăн-чăн пурнăç пирки тунсăхласа çитнĕ ĕнтĕ, суха туманни те, хĕç тытманни те тахçантанпах. Халĕ вара саланăр. Кунти ĕçсемпе паллашма мана мăчавăр пулăшĕ...

Чылайччен калаçса çӳрерĕç вĕсем. Ватă çыннăн кунти пурнăç пирки каласа памалли темĕн чухлех. Улăп та тĕплĕнрех ыйтса пĕлме тăрăшрĕ. Халăх Эсреле хирĕç тăрайми пулнине те ăнланчĕ курăнать. Хăйне хăй те ятласа илчĕ. Сăлтавĕ пурах çав.

Ун чухне ку таврара икĕ вăйлă ăру кăна пулнă: пĕрне – Улăп, теприне Эсрел ертсе пынă. Пурнăç пурнăçах, хирĕçкелени те пулкаланă, анчах Эсрел уççăнах тапăнма хăранă, Улăп хăй кăна мар, çĕршывĕ те шикленӳ çуратнă. Кунта тырри-пуллине те йĕркеллĕ туса илнĕ, кĕтĕвĕсем те йышлă пулнă. Çакă Эсрелĕн кĕвĕç чунне шĕкĕ пекех кăшланă. Ку çеç те мар-ха, Улăп йăхĕ вăйли ăна тĕнче патши пулма чăрмантарнă. Хăй вара туслă пурăнасси

пирки пакӑлтатнӑ. Ырӑ кӑмӑллӑ Улӑп ӗненнӗ ҫав, элчӗсем янӑ, парнепе ҫӳрени те пулнӑ.

Пӗрре ҫапла Эсрел тархасласах чӗннине пула Улӑп ун патне хӑнана кайнӑччӗ. Малтанхи самантсене лайӑхах астӑвать-ха вӑл: Эсрел кӗтсе илни, тутлӑ ҫимӗҫпе хӑналани, ташӑ-юрӑ ӑстисем кӳршӗ умӗнче явкаланса ҫӳрени, сунарта пулнӑ хыҫҫӑн канма выртни... Ыттине вара пачах та астумасть. Ултавҫӑ вӑлтине ҫакланчӗ вӑл.

Улӑп ҫывӑрнӑ вӑхӑтра усал вӑйсем алхаснӑ, чаракан пулман. Чӑвашсем хушшинчи туслӑх та хавшама пуҫлать. Чылайӑшӗ хӑй телейне пӗчченшерӗн шырама тытӑнать. Халӑх вӑйӗ чакса пырать. Юрать-ха, паян Улӑп ҫаврӑнса ҫитрӗ.

Акӑ мӑчавӑрпа Улӑпа хирӗҫ лутраскерсем иккӗн тайкаланса пыраҫҫӗ. Тавлашса, харкашса калаҫнипе ыттисене асӑрхаман та пулас. Улӑп патне ҫывхарсассӑн чарӑнчӗҫ те кӑн-кан пӑхкаласа илчӗҫ.

– Ку кам вара, ҫав тери шултра арҫын? – ыйтрӗ пӗри.

– Кала! Кам пулатӑн. Ӗҫмелли пур-и? Ҫук пулсассӑн кай кунтан, пӑрӑн. Ҫул пар пире, – сиксе ӳкрӗ тепри.

– Намӑса пӗлесчӗ. Курмастӑр-им сирӗн умра кам тӑнине? Улӑп вӑл. Паянтан ӑру пуҫлӑхӗ, – ятлаҫса илчӗ мӑчавӑр.

– Мӗнле Улӑп?.. Пире нимӗнле пуҫлӑх та кирлӗ мар. Эпир ирӗклӗ ҫынсем. Эрех пар!

– Мӗн ыйтаҫҫӗ вӗсем? Ку чирлӗ ҫынсем камсем пулаҫҫӗ? Ӑҫтан килнӗскерсем? – ыйтрӗ тӗлӗнсе ӑру пуҫлӑхӗ мӑчавӑртан.

– Хамӑр ҫынсемех-ха вӗсем.

– Чирлӗ мар эпир. Кирлӗ пулсан хӑлха чикки те пама пултаратпӑр. Эрех парсан тӗкӗнместпӗр.

– Эрех те эрех теççĕ, эрехĕ мĕн вара вăл?

– Çăвара çунтаракан шĕвек кăна, – терĕ мăчавăр. – Пуçран çапакан наркăмăш тесен те ытлашши пулас çук. Ăслă çынна та ухмаха кăларать. Айвансем вара пачах картран тухса ӳкеççĕ.



– Çук! Суять вăл. Çĕр çинче эрехрен тутли урăх нимĕн те çук, – çине тăчĕ пĕри.

– Апла пулсан мĕншĕн-ха хăвăра чирлĕ çын пек тыткалатăр? Куççем те чалăш пăхаççĕ, урасем те çирĕпех мар, – кăларĕ тĕрĕссине Улăп.

– Савăннипе çавăн пек, савăннипе! – терĕç те ӳсĕрсем ташлама пикенсе тапăртаткаласа илчĕç, аллисемпе сулкалашрĕç. Вĕсем аппаланнине ташă теме те хĕнтерех ĕнтĕ. Чухăн ташшинче савăнăç çукпа пĕрех.

– Эх, сирĕнпе калаçса тăрса... Кайрăмăр эпир, – терĕ кăшт аванрах тумланни.

– Чим-ха, – терĕ Улăп, – кăштах ыйтса пĕлем. Çемйӳ пур-и санăн?

– Ара, пулмасăр. Арăм та пур, ачасем те...

– Выçлă-тутлă ӳсеççĕ ĕнтĕ, – терĕ мăчавăр. – Вăл та пулин арăмĕ çине тăнипе çеç. Ачисем вара хăйĕнчен те ырхантарах. Апачĕ начар вĕсен.

– Мĕн çикелетĕр вара? – ыйтрĕ Улăп.

– Арăм пур чухне выçă лармăпăр-ха.

– Хăв мĕн тăватăн тата? Ăсталăху мĕнре?

– Ун халĕ пĕртен-пĕр ăсталăх кăна: ĕçесси. Алла кĕреçе е пуртă тытманни те темиçе çул. Яланах ӳсĕр çӳрет, – пĕлтерчĕ мăчавăр.

Ӳсĕр арçын сасартăк мăчавăр çине сиксе ӳкрĕ те кăкăртан тытса силлеме пуçларĕ. Лешĕ чутах тӳнсе каятчĕ. Юрать-ха, Улăп хăрах аллипе ӳсĕре йăтса илчĕ те айккинерех кайса тăратрĕ.

– Ку тата мĕнлескер? – ыйтрĕ ăру пуçлăхĕ теприн пирки.

– Авланманскер вăл. Ăна качча пырас текенсем те тупăнмаççĕ.

– Арăм çук та – парăм çук. Ирĕклĕ эпĕ. Мĕн тăвас тенĕ – çавна тăватăп, ăçта каяс тенĕ – çавăнта каятăп, кама чăмăртас тенĕ – çавна чăмăртатăп...

– Ха-ха-ха, – кулса ячĕ çемьелли. – Ахалех мухтанать вăл. Аялти туратти ĕçлеме пăрахнă унăн.

– Эп сана! – хăмсарса илчĕ авланманни хăй тусне. Анчах çапмарĕ, пĕрне-пĕри пĕлсе çитнĕ курăнать. Тем каласан та каçараççĕ.

– Эй, Улăп, эрех çук пулсан укçа пар. Питĕ ĕçес килет. Çакăнта темĕскер кăтăклать, – терĕ çемьелли

пырне тӗллесе кӑтартса. – Эсӗ чӑннипех ӑру пуҫлӑхӗ пулсан санӑн пире пӑхмалла. Хӑнала пире.

– Чим-ха, чӑвашсем пӗрне-пӗри сӑрапа хӑналатчӗҫ мар-и-ха? – пӑхса илчӗ Улӑп мӑчавӑр ҫине.

– Сӑра вӑл нимех те мар. Пире хаярри, пыра хыраканни кирлӗ, – пӗлтерчӗ авланманни.

Курманнин курас килет тенӗ пек, Улӑпӑн та ҫав шӗвеке тутанса пӑхас шухӑш ҫуралчӗ, хӑйне эрех сутакан патне илсе кайма хушрӗ. Лешсем хаваспах килӗшрӗҫ, паллах, Улӑп вӗсене ӗҫтерессе шанчӗҫ. Чӗкеҫ килӗ патне ҫитсен чарӑнчӗҫ.

– Ҫакӑнта вӑл, – терӗ авланманни. – Анчах укҫасӑр никама та ярса памасть.

Ҫакӑ вара мӑчавӑршӑн питӗ тӗлӗнмелле хыпар пулчӗ. Чӗкеҫ пирки шутлама та хӑйман. Мӗнле майпа эрех сутса укҫа тӑвас ҫул ҫине тӑнӑ вара вӑл? Апла пулин те леш арҫынна Улӑп ячӗпе тесе укҫа тыттарчӗ. Лешӗ кӗрсе кайрӗ. Кӑштах тӑрсан тӑм куркапа эрех илсе тухрӗ те Улӑпа тыттарчӗ. Ӑру пуҫлӑхӗ куркари шӗвеке шӑршласа пӑхрӗ, унтан пӳрнине йӗпетсе чӗлхине сӗрсе илчӗ те айккинелле сурчӗ. Килӗшмерӗ. Вара вӑл ӗҫме хушса куркана авланман арҫынна тавӑрса пачӗ. Лешӗ хаваспах ӗҫме тытӑнчӗ. Тепри шӑтарас пек сӑнаса тӑрать. «Ҫитет сана! Ман валли хӑвар!» – тесе икӗ аллипе куркана туртса илчӗ те юлашки эрехе ӗҫсе ячӗ. Икӗ тус каллех сулкаланма пуҫларӗҫ.

– Лайӑх ҫын иккен эсӗ, Улӑп, – терӗ пӗри.

– Эрех ӗҫтерекен ҫын мӗншӗн япӑх пултӑр вӑл? – терӗ тепри.

– Ку шӗвеке сутма чармалла. Чӗнсе тух-ха кил хуҫине, – хушрӗ мӑчавӑра Улӑп.

Чӗкеҫ Улӑпа курсанах чӗркуҫленсе ларчӗ те пуҫне чикрӗ.

– Тăр, хĕрĕм. Кала-ха, çак шĕвек халăха мĕнле сиен кӳнине чухлатăн-и эсĕ? Пăх-ха, мĕн хăтланаççĕ вĕсем, – терĕ ӳсĕрсем çине тĕллесе кăтартса. – Эрехне кам парса тăрать вара сана?

– Хамăн мар вăл. Ют çĕртен килекен купсасем параççĕ.

– Çăмăл майпа пуйма шутларăн, эппин, Чĕкеç, – хушса хучĕ мăчавăр.

– Каçарăр мана. Хамшăн мар эпĕ, Эсрел патĕнче пурăнакан çамрăк турханшăн. Çавна çавăрса килме укçа пухатпăр эпир. Турхансăр мĕнле пурăнăпăр?

Çак сăмахсене илтсен Улăпăн кăмăлĕ кăштах улшăнчĕ, çемĕçрĕ тесен те юрать. Шухăшламалли те çук мар. Тыткăнри турхана хăтарассине хĕрарăм хăй çине илнĕ. Улăпа вăратаканĕ те хĕрарăм. Арçынннисем вара ăçта, мĕн тăваççĕ вĕсем?

– Шухăшу санăн, хĕрĕм, япăх мар. Анчах ку ыйтăва малашне пачах урăхла татса парăпăр, текех Эсрел умĕнче чĕтресе тăмăпăр. Сутмалли япалуна илсе тухха, кунталла мĕнле савăтпа турттарнине курам.

Чĕкеç самай пысăк сăран михĕ йăтса тухрĕ. Эрехĕ нумаях юлман курăнать. Ӳсĕррисем асăрхарĕç те хĕпĕртенипе сиккелесе илчĕç, ярса парасса шанчĕç. Улăп вара урăхла шутларĕ, эрех миххине çĕре пăрахрĕ те:

– Çак усал шĕвеке текех хамăр пата кĕртмĕпĕр, чикĕ хĕрринчех чиксе юхтарăпăр, – тесе хĕççи вĕçĕпе миххе шăтарчĕ.

Эрех юхса тухрĕ. Лешсем çакна асăрхарĕç те шĕвек çĕре сăрхăнса çухаличчен ӳпĕнсе выртса темиçе хутчен лĕрплеттерсе ĕçрĕç, унтан чĕркуçленсе ларчĕç те Улăп çине сиввĕн пăхса илчĕç.

– Мĕн чухлĕ эрех сая кайрĕ. Веçех сана пула, – терĕ çемьелли.

– Пухнă укçу хăвнах юлтăр, – терĕ Чĕкеçе Улăп. – Кун пеккисене вара пĕр çĕре пухмалла та сулă çине çыхса пăрахса Атăлпа юхтарса ямалла.

– Çук, пире кун пек пуçлăх кирлĕ мар, – терĕ аллисемпе сулкалашса илсе авланманни.

– Ан хăра, – лăплантарма пикенчĕ тепри, – эрехе çĕнтерекен пуçлăх çуралман-ха вăл. Курăпăр ак, эрехсĕр хăй те нимех те тăваймĕ. Укçапа эрех такама та çĕнтерĕç.

Ӳсĕрсем ура çине тăма пикенчĕç, тăраймарĕç, тӳнсе кайрĕç. Мăчавăрпа Улăп малалла уттарчĕç. Ватă мăчавăр хăйĕн чун ыратăвне пĕлтерчĕ. Ун шучĕпе чылайăшĕ турра хисеплеми пулчĕç. Ӳсĕр çыншăн турă та, усал та çук. Ку çеç те мар-ха, чăвашсем хăйсене хăйсем хисеплеми пулчĕç, Эсрел çыннисен пурнăçне, вĕсен тĕн йĕркине ăмсанакансем самаях йышланни сисĕнет. Вăйлă халăх йăлисем илĕртеççĕ, хăй патнелле туртаççĕ, ахăр.

Çапла чылайччен калаçса çӳрерĕç вĕсем. Уя та тухса пăхрĕç. Пăшăрханмалли вара Улăпшăн кунта та тупăнчĕ, анасем çум ăшне путнă.

Улăп çӳллĕрех вырăнта чарăнчĕ те айлăмри ял çине нимĕн шарламасăр пăхса тăчĕ. Мĕнле шухăшсем хĕвĕшрĕç-ши çак самантра унăн пуçĕнче, пĕлме çук. Анчах тунсăхлă сăнне курсассăн кăштах та пулин тавçăрса илме пулатех. Ун куçĕнче халĕ пăшăрхану, пысăк хуйхă хуçаланать. Ăна паян хăй халăхĕ çакнашкал хавшаса çитни канăç памасть.

Ял хĕрринче вĕсем тепĕр ушкăна асăрхарĕç. Ăçта каяççĕ, мĕнле тĕллевпе, хăвăрт тавçăрса илеймĕн. Аллисене çыхса лартнă арçынна хыçалтан тĕке-тĕке пыраççĕ. Лешĕ утасшăн мар, анчах ушкăн вăйне пăхăнма тивет. Акă вĕсем çул хĕрринчен инçех мар ӳсекен ватă йывăç патнелле пăрăнчĕç.



– Айăпа кĕнĕ çынна илсе килчĕç, – терĕ мăчавăр. – Кайса пăхар-ха,васкар. Çынна вĕлерме пит васкамалла мар тенине темшĕн итлесшĕн мар вĕсем.

Ятарлă вырăн иккен. Айăплă çынна ватă хурама çумне тăратаççĕ те чулпа переççĕ. Чул купийĕ вара хатĕрех выртать, тыт та вăркăнтар кăна. Юрать-ха, Улăппа мăчавăр вăхăтра çитсе тăчĕç. Вĕсене курсанах чарăнчĕç усал шут тытнисем.

– Мĕн туса айăпа кĕнĕ вара ку çын? – ыйтрĕ Улăп.

– Сутăнчăк вăл! – кăшкăрчĕç харăссăн. – Кунти вăрттăнлăхсене веçех Эсреле пĕлтерсе тăнă. Камăн миçе лаша, камăн ӳссе çитнĕ ывăлсемпе хĕрсем пур...

– Тинех шăпи тулчĕ. Ун пек çылăхлă çынна мĕн хĕрхенсе тăмалли пур? – терĕ пĕри аллине чул илсе.

– Тăхтăр-ха эсир, – чарчĕ Улăп, – сутне кам турĕ вара?

– Хамăр çапла шут турăмăр. Чысне сутнă çыннăн шăпи урăхла пулмалла мар, – çине тăчĕ тепри. – Эпир ăна унччен те сиснĕччĕ-ха. Халĕ хытăрах хĕстертĕмĕр те веçех каласа пачĕ. Ялĕпех курăймаççĕ ăна.

Сутăнчăк чĕркуçленсе ларчĕ те йăлăнма тытăнчĕ.

– Улăп-аттемĕр, каçар мана. Хам ирĕкпе мар эпĕ, Эсрел çыннисем хăратнипе. Итлемесен вĕлеретпĕр терĕç те. Каçарăр мана. Хам чыса ĕçпе тавăрăп, мĕн хушнине пĕтĕмпех тăвăп.

– Чулне вара пуçласа кам перĕ-ха. Пач çылăхсăрри сирĕн хушăра пур-и?

– Апла пулсан мăчавăр петĕр, эппин, – терĕ леш арçын чулне пăрахса.

– Çук, çук. Мĕн калаçатăр эсир? Сутăнчăка каçармалла маррине пĕлетĕп-ха. Анчах... Хамăр ăру арçынни çине алă çĕклейместĕп. Тен, çак ыйтăва Улăп хăй татса парĕ.

Ак япала, кун пек калаçу Улăпа та шухăша ячĕ. Мĕн тумалла-ха? Пĕр енчен пăхсан ку çын, паллах, айăплăскер. Ял-йыш тĕрĕсех тăвать ĕнтĕ. Анчах кашни ушкăн хăй тĕллĕн сут тума тытăнсассăн йĕрке пулĕ-ши? Çук пуль çав.

– Атьăр-ха, сут тума васкар мар, – терĕ Улăп лăпкă сасăпа. – Тăвăлса тăракан тарăхăва пусарар та шухăшласа пăхар. Тен, вĕлерме кирлех те мар. Пурăнтăр хăйне хăй ӳпкелешсе. Çук, эпĕ те чулпа пеме хăяймастăп. Тепĕр тесен тата эпĕ хам та пач çылăхсăр çын мар. Халăхăм умĕнчи айăпăм пысăк. Çывăрса пурăнтăм.

Çак сăмахсем хыççăн çынсем аптрасах ӳкрĕç. Мĕн тумалла-ха? Улăп та иккĕленсе тăрать иккен. Мĕнле-ха капла, вăйлă та паттăр ертӳçĕ те хăюлăх çитерейместь-и? Пĕр çын сахалрах, пĕр çын ытларах – нимех

те пĕлтермест-çке. Ыттисем хăраса тăччăр тесен ку çынна хĕрхенмелле мар пек. Улăп вара...

Шăп çак самантра тепĕр ушкăн персе çитрĕ. Пынăпыманах алла чул тытрĕç. Вĕсен хушшинче Микка та пур. Кăшт каярах леш икĕ ўсĕр те çитрĕ. Сутăнчăка кунта илсе килнисем Улăппа юнашар пырса тăчĕç. Леш айăплă арçын ниçта кайма аптраса тăрать, тин çеç килнисем патнелле пĕр-ик утăм турĕ те чарăнса тăчĕ. Темле вăй малалла утма чарчĕ пулас, вăл та Улăп енне куçрĕ. Лешĕ унăн аллине хăй салтса ячĕ, ирĕклĕх пачĕ. Тин çеç вилĕмрен çăлăннă арçын хыçаларах чакса пычĕ те икĕ ушкăн пĕр-пĕрин çине сиксе ўкес пек хаяррăн пăхса тăнă самантпа усă курса ялалла вĕçтерчĕ.

– Мĕн кирлĕ вара сире? Мĕншĕн алла чул тытрăр? – ыйтрĕ мăчавăр.

– Улăп! Кала-ха пире, эрех ĕçекенсене Атăла пăрахатăп тени чăн сăмахах-и е ахаль пакăлтатаççĕ? – ыйтрĕ хăюллăраххи маларах тухса тăрса.

– Каларĕ çав. Хам хăлхапа хам илтрĕм! – кăшкăрчĕ леш ўсĕрсенчен пĕри.

– Кала чăннине, – çине тăчĕ хăюллăраххи.

– Каланă пулсан вара мĕскер? – хутшăнчĕ тавлашăва мăчавăр. – Тĕрĕссине калать вăл. Ĕçкĕпе иртĕхнине пулах пурнăç чакса пырать.

Хыçаларах тăракан Микка хăй умĕнчисене шăппăн темĕскер хушать, вĕрентсе калать. Лешсем вара кăштах сыпнипе Улăпран та хăраман пек тыткалаççĕ хăйсене.

– Улăп, кала-ха, мĕн тума килнĕ эсĕ кунта, эпир ĕçес эрехе тухса силлеме-и? – ыйтрĕ малта тăраканни.

– Улăп! Тухса кай кунтан!– кăшкăрчĕ тепри.– Пире сансăр лайăхрах. Ĕçетпĕр те çиетпĕр, савăнăçлă пурă-

натпăр. Кай кунтан! Ăна хăйне чулпа ăшаласа илмелле!

Ӳсĕрсем чулпа перес тесе аллисене çĕкленĕ самантра мала ватă мăчавăр тухса тăчĕ те:

– Апла пулсан малтан мана вĕлерĕр, перĕр! Мĕншĕн пеместĕр, – терĕ.

Шăпах çак вăхăтра леш Улăп вилĕмрен хăтарнă арçын чĕннипе ыттисем чупса çитрĕç. Кам сенĕк тытнă, кам вăрăм патакпа. Паллă ĕнтĕ, Улăп майлăскерсем.

– Çук, ниçта та каймастăп, – терĕ Улăп. – Çемçе кăмăллă пулнипе ырă ят илтиччен тĕрĕс ĕçпе усал ят илтем. Малтан чăваш çĕрне ӳсĕрсенчен тасатасчĕ.

Улăп аллинчи хĕç йăлкăшса илсен ун майлисем хавхаланса кайрĕç, алăра мĕн пуррине çĕклерĕç те ӳсĕрсене хĕсме пуçларĕç. Лешсем чулсене пăрахсах тарма тытăнчĕç. Малтанхи икĕ ӳсĕр те вĕсем хыççăн танкăшрĕç. Анчах Улăп вĕсене хул хушшине хĕстерчĕ те Атăл еннелле васкарĕ...

Пĕччен тăрса юлнă мăчавăр хĕвеле хирĕç чĕркуçленсе ларчĕ те чылайччен чăваш туррипе калаçрĕ, пулăшу ыйтрĕ. «Эй, çӳлти турă, вăй пар пире, тăнăçлăх пар, пире çăлма килнĕ Улăпа упра!»

– Кукаçи, – чĕнчĕ Нарпи, – киле каяр. Аран шыраса тупрăм сана. Эсĕ паян апат та çимен вĕт-ха. Атя, кайрăмăр.

Чăнах та, ватă мăчавăр кил, апат çиесси пирки мансах кайнă. Ăна паян çак таврара мĕн пулса иртни канăç памасть. Ăру шăпи пуçран тухмасть.

– Хĕрĕм, хăв мĕнле паха ĕç тунине ăнланса илтĕнши эсĕ? Улăпа илсе килтĕн вĕт-ха. Пирĕн халĕ чăн-чăн пуçлăх пур. Ку çеç те мар-ха... Нарпи, хĕрĕм, манăн Улăппа юнашар сана курас килет. Халĕ ĕнтĕ ун мăшăрĕ пулма санран тивĕç хĕр çук.

– Кукаçи, – тӗлӗнсе пăхса илчӗ Нарпи, – мӗн ка-лаçатăн эсӗ? Ун пек пулма та пултараймасть.

– Санăн Улăппа пӗрлешсе тӗреклӗ ачасем çурат-малла, ăрăва вăйлатмалла.

– Кукаçи, ăнлан мана. Эпӗ Алмаса юрататăп. Вăл та кашни каçах тӗлӗкре кунта киле-киле каять. Тен, Улăп çине тăрсассăн ăна та çăлма май килӗ. Çавна кӗтетӗп эпӗ.

– Темле çав, манăн чунăм Улăп патнеллех туртать. Санăн вара...

– Ӳсӗрсене Улăп Атăл тăрăх сулăпа юхтарса ячӗ! – сарăлчӗ сасă пӗтӗм таврана...

## X

Ырă хыпар утпах çӳремесен те тепӗр кунне Улăп патне чăваш турханӗсем пухăнчӗç. Ватрас вилнӗ хыççăн тăваттăн кăна тăрса юлнă вӗсем. Пурте чылай пурăнса курнă сумлă çынсем. Пӗри – хӗрарăм, Минеслу ятлă-скер.

Калаçăвӗ вара вӗсен пурин те Улăп кӗтнӗ пек мар, пӗр майлăрах пулчӗ. Кашниех кӳренӳ туйăмӗпе килсе çитнӗ иккен. Ыйтăвне вара Улăпăн татса памалла. Турхансем пӗр-пӗринпе килӗштерсе пурăнаймаççӗ иккен.

Пӗри, ав, хăйсем пурăннă çӗрти сарлаках мар юхан-шыва пӗвелесе лартнă та унти шывпа пахчасемпе уйсене шăварать, самай тухăçлă пахча-çимӗç туса илет. Аяларах пурăнакан тепӗр йăх вара шыв çитменнипе аптăрать. Тарăхнипе лешсен пӗвине вăрттăн татса яни те пулнă. Икӗ турхан пӗр-пӗринпе ниепле те калаçса татăлайман. Паян кун та хирӗçсе пурăнаççӗ.

Теприн çĕрĕ çине юнашар турханăн кĕтĕвĕсем кĕрекĕре каяççĕ иккен, курăка çисе пĕтереççĕ. Сунарçăсем те иртĕхеççĕ, вăрманти кайăксене тыта-тыта каяççĕ.

Çак сăмахсене итлесе ларма Улăпа çăмăл пулмарĕ. Ма тесен вăл турхансенчен пачах урăхла калаçу кĕтнĕччĕ. Çук, кĕтсе илеймерĕ. Эсреле хирĕç тăрса чуралăхран çăлăнасси пирки сăмах хускатакан тупăнмарĕ. Юрать-ха, мăчавăр çине тăнипе шурсухалсем килсе çитрĕç. Тинех вара чăн-чăн калаçу пуçланчĕ.

– Улăп – паттăр, эсĕ килни çирĕп шанчăк çуратрĕ, – пуçларĕ сăмахне чи ватти. – Эсреле çапса çĕмĕретĕнех пуль тетпĕр. Кала, мĕнпе пулăшмалла сана? Турхансемпе калаçса татăлтăр пуль ĕнтĕ. Эпир те хутшăнасшăн, çак ĕçрен айккинче тăрасшăн мар.

Ватă çын калаçăвĕ Улăпшăн чĕрене услам çу сĕрнĕ пекех туйăнчĕ. Ырă кăмăл, паттăрлăх туйăмĕ сӳнмен-ха. Пуçлăхсем пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнаççĕ пулсан та, ахаль çынсем вара урăхларах тытаççĕ хăйсене, Улăпа пулăшас шутпа килнĕ.

– Тавах сире, шурсухалсем, – терĕ Улăп. – Мана çеç шанни çителĕксĕр пуль тетĕп. Пурин те хĕç тытма хăнăхмалла. Çапăçма та манма пуçланă курăнать.

– Сăмахху сан, Улăп, тĕрĕсех ĕнтĕ. Чăнах та, чăваш çынни мĕн кăна тума пĕлмест. Алли унăн ĕçрен хăрамастчĕ-ха. Халь кăна кăштах наянланчĕ курăнать. Хĕç тытманни вара чăнах та чылайранпа, – калаçрĕ Улăп хутне кĕрсе чи ватти.

– Каланăччĕ-ха, хĕçне тума хурçă çук тесе, – хутшăнчĕ калаçăва мăчавăр. – Тимĕрçĕсем ĕççĕр лараççĕ.

– Ку таврара тимĕр тăпри пур-и? – ыйтрĕ Улăп. – Тен, шăратма тытăнмалла?

– Çук çав. Пĕрмаях куçса çӳренипе çĕр айĕнчи

пурлăхсем те Эсрел аллине юлчĕç, – пăшăрханса илчĕ пĕр шурсухалĕ.

Улăп ваттисемпе чуна парса калаçни турхансемшĕн самай йывăр самант пулчĕ. Нимĕн шарламасăр ларасси те çăмăл япалах мар иккен. Ыттисем калаçаççĕ те калаçаççĕ. Эсĕ вара хăвна ытлашши çын пек туйса ларатăн. Калаçăва хутшăнмаллах вĕт-ха. Çитменнине тата Улăпĕ турхансене пĕр ыйту та памарĕ, вĕсем кунтах ларнине шута илес темерĕ. Ăна та ăнланмалла: турхансем ырă сĕнӳсемпе килнĕ пулсан, тен, калаçу пачах урăхла çулпа кайĕччĕ. Хăйсемех айăплă апла-тк..

– Халăхран тимĕр пухма тытăнмалла, – хутшăнчĕ калаçăва хĕрарăм турхан. – Кашнин мĕн те пулсан памалла.

– Тимĕр пухассине хамăр çине илĕпĕр, – терĕç турхансем Минеслуна вырăнлă сăмах тапратнăшăн тав тăвас тесех ун çине кăмăллăн пăхса илсе. Атту, чăтса лар-ха кунта нимĕн калама аптраса. Юрать-ха, хĕрарăм тавçăруллăрах.

– Тимĕрне пама пулĕ-ха ăна, – иккĕленсе givenларĕ пĕр шурсухалĕ. – Хамăр вара мĕнпе тăрса юлăпăр? Ĕç хатĕрĕсĕр, савăт-сапасăр-и?

– Савăтне ăна йывăçран та, тăмран та тума пулĕ-ха, – терĕ мăчавăр. – Тăшманĕ çав тери вăйлăскер-çке. Çарĕ йышлă. Пирĕн вара нимех те çук.

– Апла питĕ тĕплĕн хатĕрленмелле: хĕç туптамалла, сăнă çивĕчлетмелле, вăйпитти арçынсене пухса вăрçă вăййисем ирттермелле. Лаша, тĕве, урапа, апатçимĕç, тумтир... Ĕçĕ кунта пурин валли те тупăнĕ. Турхансем, çитĕ сире пĕр-пĕринпе тавлашса пурăнса. Чăн-чăн ĕçе пуçăнар, – асăрхаттарчĕ Улăп.

– Эсĕ хушнине пурне те тăвăпăр,– сăмах пачĕç турхансем.

Минеслу вара тепĕр сĕнӳ пачĕ, чăваш хĕрарăмĕсем мĕн ĕлĕкренпех ăста юланутçăсем, ухăçăсем иккенне аса илтерчĕ.

– Тĕл перес енĕпе, тен, арçынсенчен те ирттереççĕ вĕсем. Мĕншĕн çакăнпа усă курмалла мар? Ку ĕçе эпĕ пĕтĕмпех хам çине илетĕп, – терĕ хĕрарăм турхан. – Паллах, Улăп паттăр хирĕçлемесен ĕнтĕ.

– Каларăм вĕт пурин те хутшăнмалла тесе. Пĕтĕм халăха çĕклемелле.

– Сана çак ĕçре пулăшса пыма хам мăнукăма Нарпие паратăп, – терĕ мăчавăр Минеслу пуçарăвне ырласа.

Çапла калаçса татăлчĕç чăваш ертӳçисем, пĕр-пĕрне ырă сунса уйрăлчĕç. Малашне вĕсен Улăп ялавĕ айне тăрса халăх умĕнчи тивĕçе тӳрре кăлармалла.



Кĕçех тимĕрçĕ лаççисем пĕрин хыççăн тепри ĕçлеме тытăнчĕç, таврана мăлатук сасси сарăлчĕ. Мĕн тери ырă сасă: юрăран та, шăпăртан та пахарах. Чылайăшĕ ку сасса пĕрремĕш хут илтет. Ваттисен вара савăннипе куçĕсем шывланчĕç. Ма тесен çакă тахçантанпах кĕтнĕ сасăра пурнăç кĕвви янăрать.

Ял хĕрринче вара вăрçă ваййи пырать. Çар çынни пулас текенсем йышлăн пухăнаççĕ. Малтанхи кунсенче аплах марччĕ. Халĕ вара халăх вăранчĕ тесен те юрать. Тĕлĕнмелле япала, унччен пуçне чиксе çӳрекен арçынсемех алла сăнă е хĕç тытсан пачах урăхла курăнса каяççĕ. Хăюллăх, паттăрлăх аталанса пыни сисĕнет.

Улăп малтан вунпӳсемпе çĕрпӳсене пухрĕ, вĕсен ăсталăхне тĕрĕслерĕ, вĕрентрĕ, вара тин ыттисемпе ĕçлеме ирĕк пачĕ. Унтан çӳллĕрех вырăна хăпарса вĕренӳ ĕçĕ мĕнле пынине асăрхаса тăчĕ, кирлĕ хушусем турĕ. Çар йышланса пынăçемĕн пуринчен те çӳллĕ Улăпшăн та чăрмав тупăнчĕ, пурне те асăрхайми пулчĕ. Тата çӳллĕрех вырăн кирлĕ. Вăйлă Улăпшăн тăпра купаласа сăрт туса лартасси нимех те мар-ха, анчах васкамарĕ, хăйне мĕн кирлине пĕр турханне систерчĕ. Лешĕ тӳрех тавçăрса илчĕ. Ватти-вĕтти пурте вунă кун тăпра йăтрĕç, Улăп валли сăнав сăрчĕ туса хучĕç. Кăткă пекех ĕçлерĕç.

Улăп кăштах пăхса тăчĕ те сăрт çинчен чул пусмапа анса утлă çар патне çывхарчĕ. Лешсем ăна курсассăн тӳрех утăрья! тесе кăшкăрса ячĕç. Пуçлăхĕ ĕçсем мĕнле пыни çинчен пĕлтерчĕ. Улăп кăмăллă пулчĕ.

Чылай инçерех хĕрарăмсем ухăран переççĕ. Улăм кĕлтисене çӳллех мар шалчасем çине çыхса хунă та унталла ухă йĕпписене вăркăнтараççĕ. Акă пĕр ушкăнĕ чупса пыракан лаша çинчен пере-пере иртсе кайрĕ. Тĕрĕслесе тăраканĕсем вара Минеслупа Нарпи. Хĕрарăм

турхан Улăп патне сăрантан çĕленĕ япала йăтса пычĕ.

– Ку мĕн япала вара? – ыйтрĕ Улăп çавăркаласа пăхса.

– Кăкăр çине çакмалли хӳтлĕх вăл. Нарпи çĕленĕ, – терĕ Минеслу. – Нарпи, çыхса кăтарт-ха.

Чăнах та, питĕ меллĕ япала, тĕве тирĕнчен тунă хытă сăрана икĕ хут хурса çĕленĕскер. Инçетрен пенĕ ухă йĕппи пит çăмăллăнах шăтараяс çук. Улăм катемпи çине çакса темиçе хут та тĕрĕслесе пăхнă ĕнтĕ. Самай шанчăклă япала.

– Çак хӳтлĕхе ыттисем валли те çĕлеме сăран нумай кирлĕ. Тĕве тирĕнчен туни, – пĕлтерчĕ Минеслу. – Анчах тĕвисем ахаль те питĕ сахал тăрса юлнă вĕт. Лава кӳлме те кирлĕ.

– Куна ăçтан тупрăн вара? – ыйтрĕ Улăп Нарпирен.

– Юрта çине витнĕ тиртен касса илтĕм кукаçи асăрхаман чухне.

– Апла пулсан тĕве тирĕ çук мар. Пăхăр-ха ялсем çинелле, унта та кунта юрта ларать. Юрĕ. Сирĕн ĕç – çĕлесси. Тирне тупса парассине хам çине илĕп... Ну, Нарпи! Тавçăруллăскер иккен эсĕ. Маттур, маттур, – терĕ те Улăп ыттисем патнелле утрĕ.

Ваттисем те ĕçсĕр лармарĕç, мăчавăр ертсе пынипе халăхран укçа пухассине йĕркелесе ячĕç. Ытларах пуянраххисем патне кĕрсе çӳрерĕç, купсасемпе калаçрĕç. Турă ячĕпе, Улăп хушнипе ыйтсан кам хирĕç пултăр-ха?

Амине патне вара мăчавăр хăй кайрĕ. Пĕчченех пурăнать иккен. Сывлăхĕ чакнипе сăнран самаях улшăннă. Çынсемпе хутшăнсах каймасть, кăнтăрла та питĕрĕнсе ларать. Мăчавăра курсан самантлăха нимĕн шарламасăр пăхса тăчĕ те макăрса ячĕ.

– Телейсĕр эпĕ, телейсĕр. Ватлăхра пĕччене тăрса

юлтăм. Пуçăм та ыратать, вăй та çук. Çывăрма выртсассăн куç хупăнмасть.

– Калима пăхмасть-им вара?

– Миккапа пĕрлешнĕ хыççăн пачах улшăнса кайрĕ. Пĕрмаях атте ылтăнне ăçта чикрĕн тесе вăрçать, тыта-тыта силлет. Таçта кайса кĕнĕ-çке-ха ылтăнĕ. Ватрас пытарса хунă çĕрте, пахчари йăмра хăвăлĕнче, тупăнмарĕ. Кам аллине лекрĕ-ши? Тавçăру кăштах пур-ха манăн, анчах калама шикленетĕп.

– Кам пирки вара эсĕ, Амине?

– Мĕн калас... Çын укçине шутлама хушман теççĕха та. Мĕнле хăвăрт пуйса кайнине курсассăн... Чим-ха, ытлашширех калаçма тытăнтăм. Çук, çук, нимĕн те пĕлместĕп. Куçпа курман, алăран тытман...

– Эсĕ мĕн каласшăн пулнине тавçăрса илеймерĕмха. Кам çинчен эсĕ?

– Урăх нимĕн те каламастăп.

– Амине, кала-ха, хĕрна уксах Миккана хăв ирĕкпех патăн-и? Çамрăк та илемлĕ Калима тата... Мĕне пула унпа пĕрлешме килĕшнĕ-ши вара вăл? Лешĕ тата мĕнпе çĕнсе илнĕ-ха çамрăк чĕрене? Пĕтĕм ял тĕлĕнет.

– Улталарĕ вăл мана Алмаса хăтаратăп тесе. Кайран вара каймарĕ те. Юрать-ха, Калимана лайăх пăхать, патша майри пек тумлантарать, çатан урапапа çеç çӳретет, тарçăсем те тытать. Юратать.

Мăчавăр мĕнле тĕллевпе çӳренине пĕлсен Амине пăркаланса тăмарĕ, Ватрас ячĕпе тесе мĕнпур укçине пĕтĕмпех парса ячĕ. Кунта калаçни вара мăчавăра тарăн шухăша ячĕ. «Турхан ылтăнĕ Микка аллине çакланман-ши? – çиççе илчĕ пуçра. – Ытла хăвăрт пуйса кайрĕ. Ăна çитекенни халĕ таврара та çук». Мăчавăр ун патне пĕччен кайма шутламарĕ. Миккапа калаçаканнисем урăххисем

пулмалла. Тен, ун пирки Улӑпа хӑйне каласа пӑхмалла? Ӑна хирӗҫ тӑракансене вӗскӗртсе яраканни шӑпах Микка пулнӑ теҫҫӗ. Тен, кун пек ыйтупа Улӑпа хӑйне чӑрмантармалла та мар, ун ячӗпе калаҫни те ҫителӗклех.

Ватӑ ҫын – тӑватӑ ҫын тесе ахаль каламан. Пурне те шута илме тӑрӑшрӗ мӑчавӑр. Микка ют ҫӗрти пасарта укҫине мӗнлерех тыткалани пирки Нарпи каласа панине те аса илчӗ. Турхан туйишӗн ҫапӑҫни те... Кама пӗрле илсессӗн лайӑхрах-ши? Пуҫра шухӑш хӗвӗшет. Пӗр самантрах темӗн те пулса иртет унта. Ӗлӗкхи те, хальхи те, хӑв курни те, ҫын калани те – пурте хӑй ҫулӗпе чупать. Ҫав хушӑрах вӗсем хушшинче пыра-пыра ҫапӑнни те, хирӗҫсе илни те, килӗшӳлӗх тупни те пур. Ҫапла ҫуралать те ӗнтӗ тӗрӗс йышӑну. Мӑчавӑр шучӗпе вара ҫак ӗҫре чи усӑлли леш вилӗм хурами патӗнчи арҫын пулассӑн туйӑнчӗ. Халӗ вӑл Улӑпӑн чи шанчӑклӑ ҫумӗ, пулӑшаканӗ ӗнтӗ.

Акӑ вӗсем иккӗшӗ Микка патне ҫитрӗҫ. Килӗ-ҫурчӗ капӑр, тулӑх пурнӑҫпа пурӑнни пӗрре пӑхсах паллӑ. Ҫӗнӗ мӑшӑр шучӗпе уйрӑлса тухнӑскерсем ӗнтӗ. Иккӗшӗ те килтех. Мӗнле тӗллевпе килнине каласан Микка укҫа енчӗкне туртса кӑларчӗ те темиҫе пӑхӑр укҫа тыттарчӗ. «Урӑх нимӗнпе те пулӑшаймӑп», – терӗ.

– Ку вӑл саншӑн ҫав тери сахал, – хирӗҫлерӗ ӑна Улӑп ҫумӗ. – Куратӑр пулӗ ыттисем мӗнле тӑрӑшнине. Эсир вара айккинчен кӑна пӑхса тӑратӑр. Пӗрремӗшӗ, виҫӗ лашаран иккӗшне ҫара памалла. Иккӗмӗшӗ...

– Ай тур-тур, пӗтрӗмӗр капла, – хыпӑнса ӳкрӗ Калима. – Хамӑрӑн вара мӗнле пурӑнмалла?

– Ку ҫеҫ те мар-ха, – тӑсрӗ калаҫӑвне малалла ҫирӗпрех сасӑпа Улӑп ҫумӗ, – пӑхӑрпа мар, кӗмӗлпе е ылтӑнпа пар.

– Мĕнле ылтăн? – хăраса ӳкрĕ Микка. – Манăн нимĕнле ылтăн та çук.

– Турхан ылтăнне, ăру пурлăхне пĕтертĕн те-им вара? – ыйтрĕ мăчавăр лăпкă сасăпа.

Микка ку сăмахсене пачах та кĕтменччĕ. Сăнран улшăнчĕ, пичĕ çине самай пысăк хĕрлĕ пăнчăсем туха-туха ларчĕç.

– Ватрас мана нимĕнле ылтăн та паман.

– Йăмра хăвăлĕнчен илни вара? – аса илтерчĕ мăчавăр.

Арçынсен калаçăвне сăнаса тăракан Калима çывăхрах пырса тăчĕ те Микка çине шăтарас пек пăхса илчĕ, анчах нимĕн те шарламарĕ.

– Пирĕн санпа тавлашса тăма вăхăт çук. Атя, кайрăмăр. Ку ыйтăва Улăп хăй татса патăр, – терĕ ăру пуçлăхĕн çумĕ. – Унта вара ӳсĕрсене ăна хирĕç мĕнле тĕллевпе пухса пынине те каласа парăн.

– Çук, çук, Улăп патне кайма кирлĕ мар. Хам ирĕкпех... Тухса кĕрем-ха, – терĕ те Микка алăк патнелле утрĕ. Улăп çумĕ те унпа пĕрлех тухрĕ.

Кĕрессе те пĕрлех кĕчĕç. Микка аллинче Калима халиччен курман сăран енчĕк. Чĕтрекен аллисемпе салтрĕ те нар çине силлерĕ. Çаврака укçасемпе пĕрле икĕ ылтăн чăмăркка тухса ӳкрĕ. Калима шăши тытакан кушак пек сиксе ӳкрĕ те пĕр чăмăрккине ярса тытса çăвара хыпма пикенчĕ. Юрать-ха, Улăп çумĕ чарма ĕлкĕрчĕ, хĕрарăм аллине тута патĕнчен пăрса ячĕ те ылтăн чăмăрккине вăйпах туртса илчĕ.

– Пар ылтăна! – кăшкăрчĕ Калима. – Манăн вăл. Атте ылтăнĕ. Эсĕ те вара, тунката, алăри пурлăха кам çапла вĕçертет? Манран пытарса усранă тата, – тустарса илчĕ нимĕн тума аптраса тăракан Миккана.

– Чарӑн! Хӗрарӑмӑн хутшӑнмасан та юрать. Пӗлместӗн-ха эсӗ, Улӑпран унран темӗн те кӗтме пулать. Пуҫа та касса ывӑтӗ. Ун чухне вара нимӗнле ылтӑн та кирлӗ пулмӗ.

– Вӑт ку вара пачах урӑхла калаҫу, – терӗ Улӑп ҫумӗ.

– Тархасшӑн, пурне те илсе ан кайӑр-ха, пире пурӑнмалӑх хӑварӑр. Хам ирӗкпе паратӑп вӗт-ха Улӑпа пулӑшас тесе, – йӑлӑнма пуҫларӗ Микка.

– Юрать, – терӗ мӑчавӑр. – Килӗшӗпӗр. Анчах тӗрӗс ӑнлан, ҫак пулӑшу вӑл Улӑпшӑн кӑна мар, халӑхшӑн та.

– Ҫапла пултӑр эппин. Тархаслатӑп сире, укҫасӑр ан хӑварӑр пире. Лашисене те хамах пырса парӑп.

Лешсем нар ҫине пӑхӑр укҫасемпе пӗрле кӑштах



ылтӑнран тунисене хучӗҫ те тухса кайрӗҫ. Пуҫланчӗ вара... Куҫӗсене чарса пӑрахнӑ Калима мӗн кӑна каламарӗ Миккана, вӑйӗ ҫитсен тытса та силлӗччӗ. Юрать-ха, лешӗ айван арҫын мар, уксах та, ал шӑнӑрӗ пурпӗрех ҫирӗп. Анчах чӗлхерен илсессӗн хӗрарӑма ҫитекенни ҫук.

– Пар! Ылтӑн укҫисене мана пар! – кӑшкӑрчӗ Калима. – Сана пӑхӑр та юрать. Ҫав пуянлӑха эсӗ вӑрламан пулсан пӗтӗмпех манӑн алӑра пулатчӗ. Вӑрӑ эсӗ.

– Ман пай та пур унта. Ватрасшӑн, сирӗншӗн пайтах тар юхтарнӑ, ҫывӑрмасӑр сыхласа пурӑннӑ, сывлӑха панӑ. Пӑх ҫак урана! Сан аҫушӑн амансах ӗмӗр тӑршшӗпе уксахласа ҫӳреме тивет. Санӑн вара ҫав ылтӑнпа нимӗнле ӗҫ те ҫук.

– Ах, апла эппин. Эсӗ мана нимӗн вырӑнне те хумастӑн иккен. Тӗрӗссипе каласан... Эсӗ-и?.. Сана-и?.. Сана эпӗ нихӑҫан та юратман.

– Ҫу-у-к, суятӑн. Вырӑн ҫинче авкаланнӑ чухне мӗн калаттӑнччӗ-ха?

– Пурпӗрех юратса мар. Кураймастӑп сана. Ӑраскалӑма пӑсаканни эсӗ. Ман чыса, ман ҫамрӑклӑха ҫисе ятӑн. Сана пулах аннепе хирӗҫсе кайрӑм. Пачах та айӑплӑ мар иккен вӑл. Ахалех кӳрентертӗм. Ҫук! Пурӑнмастӑп кунта, халех тухса каятӑп.

Калима ҫӳпҫери япалисене туртса кӑларчӗ те пысӑк ҫыхӑ турӗ. Унтан пӑтаран ҫакӑнса тӑракан тумтирне нар ҫине пӑрахрӗ. Самай пысӑк купа пулса тӑчӗ. Паллах, йӑтса кайма май ҫук.

– Ӑсатса яр, кӳл лашуна!

– Ан ухмахлан-ха, чарӑн. Пулас ача пирки шутлаха эсӗ.

– Сансӑрах ӳстеретӗп.

– Калама çеç çăмăл. Çăкăр-тăвартан мĕнле пурăнăн? Хăв та ĕçпе пиçĕхсе ӳснĕскер мар.

– Алмас килсессĕн пурнăç урăхларах кайĕ.

– Çук ĕнтĕ, Улăп таврăннă хыççăн Эсрел Алмаса килме ирĕк парас çук. Лăплан, Калима. Кам пĕлнĕ-ха пурнăç çапла çаврăнса каясса? Ӳкессе пĕлсен тӳшек сарма калană. Тен, чăнах та айăплă эпĕ. Каçар мана. Ачамăр пирки ытларах шутла. Атя, аннӳ патне каяр та каçару ыйтар. Ăнланĕ вăл пире. Пурте пĕр çăмхара эпир халĕ. Ылтăнĕ пирки вара... Акă, кирлех пулсан ил. Анчах унпала тĕрĕс усă курма пĕлĕн-ши? Телейлĕ пулăн-ши? Эпĕ пурпĕрех выçă ларас çук. Алăсем ман нимĕнле ĕçрен те хăрамаççĕ.

Сăмахăн та вăйĕ пур иккен. Хĕрсе кайнă Калима самаях лăпланчĕ. Чăнах та, мĕн кĕтет-ха ăна малашнехи пурнăçра? Кам çине таянмалла? Микканах итлеме тивет. Тумланчĕç те сывлăхĕ хавшаса çитнĕ Амине патне тухса утрĕç...

Улăп кăмăлĕ паян аван. Сăлтавĕ те паллă ĕнтĕ: çар ăсталăхĕ кунран-кун ӳссе пырать, пулăшакансем те йышланчĕç, акă тин çеç ваттисем халăхран пухнă укçана çар хыснине хыврĕç, ылтăн та пур! Халĕ ĕнтĕ хĕç тумалли хурçă шырама купсасене ытти çĕре яма та юрать. Улăп мăчавăрпа пĕрле килнĕ шурсухалсене тав турĕ те сăнав сăрчĕ патнелле утрĕ. Çав самантра чикĕре тăракансенчен пĕри чупса çитрĕ. Сывлăшне аран çавăрса илет.

– Улăп паттăр, каçар пире. Ниепле те тытса чарайманăмăр вĕсене.

– Камсем пирки эсĕ? – тĕлĕнсе пăхса илчĕ Улăп. – Эсрел çарĕ мар-и?

– Çук. Иккĕн çеç вĕсем, хĕрарăмпа арçын. Леш

çамрăкки питĕ вăйлă иккен, ниепле чарма çук. Чышки те çын пуçĕ пек. Ав вĕсем, кунталла çывхараççĕ, – тĕллесе кăтартрĕ чикĕ хуралĕ.

Чăнах та, тĕреклĕ каччăпа унтан чылай аслăрах хĕрарăм çитсе чарăнчĕç.

– Улăп! Кĕтсе ил. Эпир çитрĕмĕр, – терĕ пуçне тайса хĕрарăм.

– Элпи? Эсĕ-çке ку. Ку тата кам?

– Санăн ывăлу Юман.

– Пулма пултараймасть. Мĕнле-ха çав тери хăвăрт ӳссе çитĕннĕ вăл?

– Çулпа мар, уйăхпа мар, кунпа ӳссе пычĕ. Халĕ вара аттене курас килет тесе канăç памасть. Тинех сана шыраса тупрăмăр.

– Ну, ывăлăм, кил кунтарах, ыталам сана.

Ашшĕ ывăлне сарлака çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ, хăй пекех тĕреклишĕн савăнса. Пĕр-ик хутчен çепĕççĕн çапкаласа та пăхрĕ. Çакна пăхса тăракан Элпин пичĕ çине савăнăç куççулĕ юхса анчĕ...

– Атте! Эпĕ текех тăлăх мар иккен. Пĕлесчĕ санăн мĕнлерех сана курас килнине!

– Маттур, маттур, питĕ вăхăтра çитрĕн. Мана халĕ шăпах сан пек паттăрсем кирлĕ. Пăх-ха çавăнталла, иртенпех вăрçă вăйййи пырать.

– Ашшĕ, ытлашши ан васка-ха. Юман вăл пăхма кăна çӳллĕ. Çулĕпе çамрăк-ха. Хĕç тыттарма ан васка.

Кĕтмен хыпар, лайăх хыпар. Апла пулсассăн ватă Улăп ывăлне çамрăкки ӳсет, халăх малашлăхĕ те ĕмĕртен-ĕмĕре çирĕпленсе пырать. Шурсухалсем çакна туйса илчĕç, Улăп пурнăçĕнче мĕн пулса иртнине ăнланчĕç.

– Апла эс, Улăп, çемьеллĕскер иккен,– терĕ мăчавăр.

– Хăвăрах куратăр ĕнтĕ, ывăлăм та пур.

– Кун пек пулсассăн халăх йăлине тума тиветех. Манăн сире пил памалла. Унсăр юрамасть. Çĕнĕ çынсене хамăр йыша илмелле. Чăваш турри çапла хушать.

Ним шарламасăр пăхса тăракан Элпишĕн çак сăмахсем тутана пыл сĕрнĕ пекех туйăнчĕç. Кĕтни, ĕмĕтленни çывхарчĕ. Акă вĕсем виççĕшĕ те юнашар тăчĕç, Элпи икĕ тĕреклĕ арçын хушшинче. Хĕрарăмшăн кунтан пысăк савăнăç çук та.

Ача вăл – ача. Ун пĕлтерĕшĕ пурнăçра çав тери пысăк. Кăмăл-туйăма улăштарнипе пĕрлех кашнинех çĕнĕ ят парса тухать: анне, атте, асатте, асанне, кукаçи, кукамай, кукка, инке, аппа, йăмăк... Çаксем пурте тĕнчене пĕчĕк пепке килнĕ хыççăн илнĕ ятсем. Ку çеç те мар-ха, ача вăл хĕрарăмпа арçын хушшинчи çыхăнăва татах та çирĕпрех çыпăçтарса лартакан çилĕм. Ăслă хĕрарăм ача çуралнă хыççăн упăшки умĕнче хăй пирки, хăйне юраттарасси пирки сахалрах калаçать. Ытларах ача пирки. Арçын киле чылай кая юлса таврăннă чухне те: «Нивушлĕ санăн пĕчĕкçĕ пепкемĕр патне васкас килмест», – тесе асăрхаттарать. Тĕрĕсех тăвать, хĕрарăма ăна пĕлсе пĕтерме çук. Ун çумĕнче яланах темле вăрттăнлăх пур...

– Халĕ вара кăштах ыйтса пĕлем, – пуçларĕ пил сăмахне мăчавăр. – Элпи, хĕрĕм, ăçтисем пулатăн-ха эсĕ?

– Анне каласа панă тăрăх, йăхăм манăн кунтан Эсрел патне хăваласа кайнисенченех. Çавăнпа ятăм та кунти пекех.

– Апла пулин те тупа тума ыйтатăп. Пирĕн пурнăç йăлисене йышăнатăн-и?

– Йышăнатăп.

– Пирĕн тĕн йĕркисене йышăнатăн-и? Чăваш туррине кӳрентерместĕп тесе сăмах паратăн-и?

– Паратăп.

– Пирĕн чĕлхемĕре йышăнатăн-и?

– Йышăнатăп.

– Çамрăк Юман, ывăлăм, эсĕ тата мĕн калăн?

– Пурне те йышăнатăп.

– Тата çакна асăрхаттарам, кунти йăласем çапларах: çамрăккин ваттине сума сумалла, итлемелле. Аçу санăн çакна çирĕп тытса пырать, ăру пуçлăхĕ пулсассăн та ваттисем каланине итлет, хăйне мăнна хумасть. Çакна тытса пыма сăмах паратăн-и?

– Сăмах паратăп, тупа тăватăп.

– Улăп паттăр, халĕ эсĕ сăмах пар. Элпипе Юмана йышăнатăн-и?

– Йышăнатăп.

– Ĕмĕр тăршшĕпех пĕрле пурăнса ирттерме Хĕвелпе Уйăх умĕнче тупа тăватăн-и?

– Тупа тăватăп, – терĕ те Улăп Хĕвеле хирĕç тăрса аллисене çĕклерĕ.

– Халĕ эсир пурсăр та пĕр çемье тесе çакă шурсухалсем умĕнче пĕлтеретĕп, çӳлти турă ячĕпе пил паратăп: пĕрне-пĕри юратса ырлăхпа, сывлăхпа пурăнăр, чăваш ятне ан çĕртĕр, халăх ирĕклĕхĕшĕн çапăçма яланах хатĕр тăрăр. Халăх умĕнче эпир ачасем кăна пулнине ан манăр. Çапла пултăр!

– Çапла пултăр! – терĕç вичĕ хутчен пурте Хĕвеле хирĕç тăрса аллисене çĕклесе.

– Халĕ сире кунта мĕн пулса иртнине кăтартам, – терĕ Улăп Элпипе Юмана сăнав сăрчĕ çине хăпарма сĕнсе.

Чылайччен пăхса тăчĕç, ашшĕ ывăлне темиçе хут-

чен те унталла-кунталла тĕллесе кăтартрĕ. Вĕсен сăмахне илтмесессĕн те калаçу мĕн пирки пынине тавçăрса илме пулатех. Улăп аллипе сулчĕ. Таврана сăрнай сасси хупласа илчĕ. Ку вăл вăрçă вăййи паянлăха вĕçленнине пĕлтерет. Çар çыннисем саланма тытăнчĕç. Хĕвел те каç еннелле сулăннă ĕнтĕ.

Лешсем сăнав сăртĕнчен аннă тĕле турхансем те çитсе тăнă, Улăпа саламларĕç, ырлăх-сывлăх сунчĕç. Нарпи те кунтах, ватă кукашшĕне киле илсе каймалла ĕнтĕ. Элпипе Нарпи пĕрне-пĕри асăрхарĕç, анчах нимĕн те шарламарĕç, хăйсене пач палламан çынсем пек тытма тăрăшрĕç.

– Ку çамрăкки кам тата? – ыйтрĕ шăппăн Нарпи кукашшĕнчен.

– Улăп ывăлĕ вăл. Юман ятлă.

– Çак савăнăçлă хыпар ячĕпе сире пурсăра та хам пата хăнана чĕнетĕп, – терĕ пĕр турханĕ. – Ваттисене ларма кӳлнĕ утсене кунтарах илсе килме хушам-ха.

– Эпĕ каям-ха. Çамрăксем вăййа тухатпăр терĕç, – пĕлтерчĕ кукашшĕне Нарпи.

Çакна Улăп илтрĕ.

– Юмана та пĕрле илсе кай-ха. Çамрăксемпе паллаштар ăна, – терĕ.

Элпи темĕскер каласшăнччĕ, анчах Улăп хăй сăмахне малалла тăсрĕ.

– Амăшĕ хирĕç мар пуль тетĕп.

– Санăн ирĕкӳ, мухтавлă Улăп, – терĕ Элпи Нарпи çине шăтарас пек пăхса илсе.

– Çамрăксен çамрăксемпе пулмалла, кайччăр ĕнтĕ, – илтĕнчĕ тахăшин сасси.

## XI

Çамрăклăх вăл питĕ канăçсăр вăхăт, кунĕпе тырă вырсассăн та, утă çулсассăн та вăййа тухас килет, ывăнни те сисĕнмест. Вăрçă вăййи хыççăн та çавах иккен. Нарпипе Юман çитнĕ çĕре чылайăн пухăннă кунта. Ытларах каччăсем. Пĕр-пĕринпе кĕрешсе вăй виçеççĕ. Акă пĕри пурне те çĕнтерсе пычĕ. «Тата кам юлчĕ-ха? Тен, эсĕ тухатăн», – терĕ чи вăйли тинтерех çеç пырса тăнă Юмана.

Нарпи Юмана хăлхаран темĕскер каларĕ те лешĕ вара кĕрешме тухрĕ. Унччен айккинче тăракан хĕрсем те чупса пычĕç. Пурте курасшăн. Çитменнине тата пач палламан каччă кĕрешĕве тухнă.

Юман леш тĕреклĕ качча пилĕкĕнчен меллĕрех ярса тытрĕ те çӳлелле çĕклерĕ, анчах мĕн тумаллине тӳрех тавçăрса илеймерĕ. Çавăрса çапас – амантăн. Шăпах çав самантра Нарпи кăшкăрса ячĕ: «Юман! Яр ăна!»

Юман итлерĕ. Лешĕ вара чăнах та хăраса ӳкнĕ иккен, сăнранах паллă. Хăйне парăнтарасса Юман чышкине курсанах туйса илчĕ-ха вăл. Мĕн тăвăн-ха, пăрахса тарма юрамасть, хăв чĕнсе кăлартăн пулсассăн кĕрешмелле, чыса ӳкермелле мар.

– Кам вара эсĕ? – ыйтрĕ Юман парăнтарнă каччă.

– Улăп ывăлĕ Юман вăл, – пĕлтерчĕ Нарпи.

– Кун пек паттăр пурри япăх мар-ха вăл. Пирĕншĕн те хӳтлĕх, – терĕ пĕри.

– Ачасем, атьăр вăййă картине тăрар, – сĕнчĕ пĕр хĕрачи. – Юманпа Нарпие варрине тăратар.

Вăййă карти самай пысăкскер пулчĕ, пĕр аллă çын та пулĕ. Пĕр-пĕринпе алăран çавтăнса юрлама пуçларĕç. Нарпипе Юман варринче ыттисене хирĕç утса пычĕç.

Юманшăн, паллах, нихăçан курман япала, кунта кашни пулăм тĕлĕнтермĕш. Чăваш юррине те пĕрремĕш хут илтет вăл.

Шывĕ юхать, шывĕ юхать,
Шывĕ юхать шурă чулсем хушшипе,
Шывĕ юхать шурă чулсем хушшипе.
Вĕçрĕç анчĕç, вĕçрĕç анчĕç,
Вĕçрĕç анчĕç шурă акăш чĕпписем,
Вăй вылярĕç таса тăрă шыв çинче.
Юман паттăр, Юман паттăр,
Юман паттăр пирĕн Нарпи çумĕнче,
Юман паттăр пирĕн Нарпи çумĕнче,
Иккĕш утаç, иккĕш утаç,
Иккĕш утаç вăйă карти варринче,
Иккĕн утаç вăйă карти варринче.
Мĕн шутлаç-ши, мĕн шутлаç-ши,
Шутланине пире пурпĕр калас çук,
Шутланине пире пурпĕр калас çук.

Унтан çамрăксем хуса çитсе тытмалла вылярĕç. Анчах вăйă нумая пымарĕ. Юлашки вăхăтри улшăнусем каччăсене вăйăра та канăç памаççĕ иккен, аса илтерсех тăраççĕ.

– Каччăсем, выляса çитет пуль. Ыран каллех алла хĕç тытмалла. Атьăр-ха, хамăр юрра юрласа пăхар, – сĕнчĕ пĕри.

Çăлтăр витĕр çул курăнать,
Эпир каяс çул пуль çав.
Уйăх витĕр уй курăнать,
Эпир çӳрес уй пуль çав.
Хĕвел витĕр хĕр курăнать,
Эпир илес хĕр пуль çав.

Юрă вĕçленсен çамрăксем мăшăрăн-мăшăрăн саланчĕç. Кĕçех уйрăлу саманчĕ çитессе туяççĕ, паллах. Кашни кунах вăрçă вăййи ахальтен вылямаççĕ ĕнтĕ. Акă Юманпа Нарпи иккĕшех тăрса юлчĕç.

– Нарпи, кала-ха, – терĕ Юман çывăхарах пырса тăрса, – мĕнле пурăнăç вара ку. Хампа мĕн пулнине те, ăçта лекнине те тавçăрса илейместĕп. Юррисем тата...

– Улăп йăхĕ мĕн авалтанпах çапла пурăнать. Юрă вăл чăваш чунĕшĕн чи паха çимĕç шутланать. Чун эмелĕ тесен те юрать. Чăваш юрăсăр пурăнаймасть, савăннă чухне те, куляннă чухне те юрлать...

– Чĕремре темскер хуçаланма тытăнчĕ, хыттăнрах та тапать пек, çĕкленсе те илет пек. Тытса пăх-ха çакăнтан – терĕ Юман Нарпи аллине хăй кăкăрĕ çине хурса.

– Юман! Киле кайма вăхăт, аçу кĕтет, – илтĕнчĕ Элпи сасси. Вăл кунта мĕн пулса иртнине айккинчен сăнаса тăнă иккен. Ывăлĕ Нарпи аллине тытнине курсассăн чăтса тăрайман, сас пачĕ.

– Анне, анваскат-ха мана. Паян маншăн çав тери савăнăçлă кун. Вăйăра пулса куртăм. Юрать-ха, Нарпи илсе килчĕ...

– Çитĕ ĕнтĕ, вăййă вăл ыран та пулĕ. Вăрăм çул хыççăн выртса канмалла.

– Нимĕн чухлĕ те ывăнман эпĕ. Пушшех вăйланса кайнă пек туятăп хама.

– Ывăлăм, итле мана, хуллен ут эсĕ, эпĕ часах хăваласа çитĕп. Нарпипе калаçса илем-ха.

Юман Нарпи çине ăшшăн пăха-пăха илсе малалла утрĕ. Элпи вара пĕр самантрах сăнран улшăнса шăл витĕр калаçма пуçларĕ.

– Итле, Нарпи, асăрхаттаратăп сана, Юман çумне

ан çулăх. Сан валли мар вăл. Асту, эпĕ камне пĕлетĕн пулĕ. Улăп арăмне итлемесессĕн, макăрмалли те сиксе тухĕ. Ун чухне вара йăлăнсассăн та каçармăп.

– Юман амăшĕ тесе хăрататăн пуль ĕнтĕ. Ун пек тума сăлтав çук. Юман маншăн юлташ кăна.

– Пĕлетĕп сана, чăрсăр çынна. Улăп çумĕнчен те хăпма пĕлместĕн курăнать. Халĕ вара...

– Сан ывăлу кирлĕ мар мана. Эпĕ урăххине юрататăп.

– Апла пулин те текех пĕрле ан çӳре. Кай кунтан, куçăм ан куртăр сана.

Мĕн тăвăн ĕнтĕ, итлеме тивет. Элпи кĕçех ку таврари чи сумлă хĕрарăм пулса тăчĕ. Унпа хирĕçни ырри патне илсе пырас çук. Тавçăрусăр мар вĕт-ха вăл, Нарпи, тунсăх туйăмпа килнелле уттарчĕ. Каллех Алмаса аса илчĕ. Мĕн чул нумайрах кĕтетĕн, çавăн чухлĕ курас килни вăйланса пырать. Кĕтни вăл тĕл пулнинчен те асамлăрах самант иккен. Кĕтекен яланах шанать, лайăххине ăмсанать...

Çапла кун хыççăн кун иртсе пычĕ. Ашшĕпе пĕрле Юман та çар ĕçне кӳлĕнчĕ; ытти çамрăксенчен юласшăн пулмарĕ. Элпи малтан пит кăмăллах марччĕ, каярах вара килĕшрĕ. Паян та ав ăсатсах кăларса ячĕ.

Арçынсем тухса кайсассăн вăхăт чылай та иртменччĕ, Чĕкеç килсе кĕчĕ. Элписĕр пуçне урăх никам та çуккине курсан хуллен калаçăвне пуçларĕ.

– Элпи, пирĕн патшамăр, çакăнта килме хăюллăх çитернĕшĕн каçар мана.

– Кам пулатăн вара эсĕ?

– Кунтисемех эпĕ, пирĕн патшамăр.

– Мĕнле патша пирки эсĕ? Хуçа кунта Улăп мар-и-ха?

– Улăп вăл арçынсен патши, пирĕншĕн вара эсех ĕнтĕ. Кунта Эсрел патĕнчи пек мар, хĕрарăм сăмахĕ пушă сăмах мар. Хĕрарăм турхансем те пур кунта.

– Эсĕ мĕншĕн килнине пĕлеймерĕм-ха. Тен, санăн ыйтмалли пур?

– Çук, ыйтмалли мар, памалли...

Чĕкеç хĕвĕнчен чĕркенĕ япала туртса кăларчĕ те Элпие тыттарчĕ.

– Ку мĕн вара?

– Уçса пăх эсĕ.

Лешĕ чĕркеме сарса пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ. Ылтăн укçасем иккен.

– Ăçтан вара ку, кам пачĕ?

– Эсрел парса ячĕ.

– Эсрел? – хăраса ӳкрĕ Элпи.– Ăна ăçта куртăн тата?

– Куртăм çав. Вăл мана сан пирки чылай каласа пачĕ.

– Чим-ха, кунта темле ăнланмалла мар. Пĕлетĕп ăна, пĕр тенкĕ те ахаль парас çук.

– Çапла. Тата çакна пама хушрĕ. Улăп валли. Яшкана ярса пар та...

– Мĕскер эсĕ?! Халех тарçăсене чĕнетĕп акă, – терĕ Элпи хăйне мĕнле хăрушă япала тыттарнине сиссе.

– Лăплан, Элпи. Сан ывăлу валли çул уçмалла. Улăп пур чухне вăл нихăçан та чăваш патши пулаймĕ. Малтан хăв хуçалан, унтан Юмана пуçлăх ту. Улăпа пурăнса çитет ăна. Çак ĕçе тусан Эсрел айăпсене пурне те каçаратăп терĕ. Асту, вăраха яма юрамасть.

– Эх, çав Эсреле! Кунта та ун алли сисĕнет.

– Ытлашши ан ятлаç, пирĕн патшамăр. Эпĕ мĕн хушнине турăм. Ытти пурте санран килет. Юман пирки ан ман. Çамрăккинех çул памалла.

Чĕлхене ăна тепĕр чухне шухăша пытарма тунă теççĕ. Чĕкеç калаçура Юман ятне темиçе хут та асăнчĕ. Элпи кăмăлне çемçетес тесе ĕнтĕ. Хăй вара Алмаса асра тытса пычĕ. «Çамрăккине çул памалла», – тенĕ чухне те çавнах шута илчĕ. Асра пĕри – чĕлхе çинче тепри. Чăн шухăша ăна вăшăл-вашăл кăларса хумалла мар. Пурнăç вăл çăмăлттайрах Чĕкеçе те самаях вĕрентсе илчĕ-ха.

Алмаса хăтарас тесе никамах та тăрăшманнине курсан, Чĕкеç хăй кайрĕ, Эсрел патнех çитрĕ. Лешĕ кам та пулин пырасса кĕтнех, Чĕкеçпе калаçма вăхăт тупрĕ, хĕрарăма тĕрĕслес тесе пуль ĕнтĕ, чăваш тăрăхĕнчи ĕçсем, Улăп çинчен ыйтса пĕлчĕ. Тĕрĕссипе каласан, вăл кунта мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех пĕлсе тăрать, çавăнпа та çарне вăйлатас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлет, чăвашран илсе кайнисенчен вара вăрçа чи малтан кĕрсе каякансен ушкăнне хатĕрлет.

– Ватрас арăмĕ чирлĕ. Çавăнпа та мана ячĕç, – пĕлтерчĕ Чĕкеç. – Хăватлă Эсрел, чăвашсем санран Алмаса турхана лартма ыйтаççĕ, сан умри парăма çитес вăхăтрах парса татма сăмах параççĕ.

– Эпĕ хушнине пурнăçа кĕртсен, эсир ыйтнине пурнăçлама маншăн йывăрах мар. Улăпа леш тĕнчене ăсатсан Алмаса турхана кăна мар, пĕтĕм чăвашсен патшине лартăп. Улăп сывă чухне Алмасăн кунтах юлма тивет. Акă сире мĕн кирли, ыттине хăвăр пĕлĕр, – терĕ те Эсрел леш япаласене Чĕкеçе пачĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем Элпи аллинче.

Ах, çав ылтăна ăна? Мĕн тутармасть пуль çынсене. Ырă çын аллине лексен ырă ĕçе пулăшать. Усал аллинче вара çын хуйхине пысăклатать. Лайăххипе япăххи ылтăн çумĕнче юнашарах.

Чĕкеç каланисем Элпие самаях шухăша ячĕç, манас

тесен те вăхăтран-вăхăта аса илтерсех тăраççĕ. Çитменнине тата Улăп юратăвĕ ытларах ывăлĕ çине ӳкрĕ. Пĕрмаях пĕрле, килте те нушана кĕрсе ӳкнĕ халăха çăласси пирки калаçаççĕ, кашни кунах вăрçă вăййи мĕнле иртнине сӳтсе яваççĕ, асăрханă йăнăшсене тепĕр кунне тӳрлетме калаçса татăлаççĕ. Çакăн пек килĕшӳллĕ лару-тăрушăн Элпи малтанхи вăхăтра самаях савăнатчĕ. Ашшĕпе ывăлĕ калаçнине айккинчен пăхса тăрса киленетчĕ. Халĕ вара аплах мар, килнĕренпе те Улăп ытамĕнче пулса курманни канăç памасть ăна. Чун туртать, юн вылять, Улăп вара хăй юратăвне палăртмасть... Ватăлма пуçларĕ-ши е çар ĕçне пула вăхăтлăха арçын тивĕçне пурнăçлама манчĕ-ши? Эсрел ун пек марччĕ, Элпие асăрхамасăр иртсе каймастчĕ.



«Патша» сӑмах вӑл такама та илӗртет. Тепӗр тесен тата ҫак чаплӑ ята илтме Элпин те май пур вӗт-ха. Тулли пурнӑҫпа пурӑнса курас та кайран ҫак ята Юмана парас. Патша амӑшӗ пулни те хисеплӗ. «Ҫук, васкамалла мар, – чарчӗ хӑйне Элпи. – Малтан Эсреле ҫапса ҫӗмӗртӗр-ха. Унсӑрӑн кайран каллех лешӗн куҫӗнчен пӑхма тивет, хырҫӑ тӳлесси те пӑрахӑҫа тухас ҫук. Эсрел вӑл чее, эпӗ вара унтан та чеерех пулма тӑрӑшӑп. Курӑпӑрха унта кам ҫиеле тухнине». Ҫак ӗмӗтпе хавхаланчӗ, ҫак шухӑшпа кӑштах лӑпланчӗ чӑваш тӑрӑхне аякран килнӗ хӗрарӑм...

## XII

Вӑрттӑн сӑнаса тӑракансем пӗлтернӗ тӑрӑх, Эсрел хӑй ҫарне хуларан илсе тухса ятарласа тунӑ ӳплесенче тытать иккен, вӑрҫӑ вӑйӑйисем ирттерет. Ҫапӑҫу ҫӑмӑлах пулас ҫуккине чухлать вӑл, апла пулин те хӑй ҫыннисене шанать. Ку таранччен ун ҫулне пӳлекен ҫар пулманччӗха. Ахальтен мар ӗнтӗ таврари вуншар халӑх ӑна хырҫӑ тӳлесе пурӑнать. Эсрел паян нихҫанхинчен те пуян. Тин ҫеҫ, ав, хӑйӗн валли питӗ капмар кермен лартрӗ. Лашапа тӗве кӗтӗвӗсен шутне вара шутласа та пӗтерейменӗн. Ҫапах та Эсрелӗн чунӗ халиччензхи пекех лӑпкӑ мар. Енчен те хырҫӑ тӳлекен халӑхсем Улӑпа пулӑшма тытӑнсан?.. Килӗшӳллӗн пурӑнас тесе элчӗсем те ярса пӑхнӑччӗ ӗнтӗ, Улӑп йышӑнмарӗ...

Алла хӗҫ тытнӑ халӑх куҫ умӗнчех улшӑнса пычӗ. Паян вара пуриншӗн те питӗ яваплӑ кун, халӑх Эсреле хирӗҫ каякансене ӑсатма тухнӑ. Пӗтӗм таврара ҫарӑҫ* юрри янӑрать.

* Ҫарӑҫ – ҫар ҫынни.

Акă инçех те мар самай пысăк ушкăн курăнса кайрĕ. Хыçаларах тăванĕсем, тус-тантăшĕсем утса пыраççĕ. Макăракансем те пур. Вĕсене асăрхасан Элпипе Улăп çумĕнче тăракан Юман чăтса тăраймарĕ, хирĕç чупрĕ. Карталанса утса юрлаканскерсем ăна ушкăн варрине тăратрĕç.

Чашки-чашки мăйрине
Кампа ларса çием-ши?
Ни ати çук, апи çук –
Кам ăсатса ярĕ-ши?

Ати кил хушши çатма пек,
Çăмарта кусса каяс пек.
Çăмарта кусса каяс çук –
Эпир тухса каятпăр.

Пилеш хĕрлĕ – пăхма лайăх,
Çиме тăрсан пит йӳçĕ.
Çарăç ячĕ – çăмăл ят,
Кайма тăрсан пит йывăр.

Ик шур тутăр пĕр вĕçрен –
Хачă касса уйăрчĕ.
Эп савнипе пĕрлеччĕ –
Çарăç ячĕ уйăрчĕ.

Çамрăк çарăçсем йăлкăшса çунакан кăвайт патне çитсессĕн юрлама чарăнчĕç, йĕри-тавра карталанса тăрса кăвар умĕнче тупа турĕç, тем пек хăрушă самантра та пĕрне-пĕри хӳтĕлеме сăмах пачĕç. Унтан шăпăрçă хăй кĕввине пуçларĕ. Çарăçсем сăран аттисене хыврĕç те шĕл кăвара тикĕс сарса хурса ташлама тытăнчĕç, çарранах кăвар çине кĕрсе кайрĕç. Ташласа çаврăнса

пынăçемĕн Улăп кашнинех хĕç парса тăчĕ. Юман та кунтах, ун валли чи вăрăммине, йывăртараххине суйласа илчĕ. Çав самантра Элпи чупса пычĕ те:

– Халех хĕç тыттарма ан васка-ха, çамрăк вĕт-ха вăл, – терĕ.

– Амăшĕ, эсĕ ан чар-ха, çитĕннĕ арçын шутне кĕтĕр ĕнтĕ, – лăплантарма пикенчĕ Улăп. – Ан хăра, эпĕ ăна яланах хам çумра тытăп, хӳтĕлĕп...

Акă, çарăçсем вуншарăн, çĕршерĕн тăрса тухрĕç. Сăрнайçăсемпе ялавçăсем те хатĕрех тăраççĕ, Улăп алă суласса кăна кĕтсе тăраççĕ. Çарăçсен шутĕнче Нарпи те пур. Вăл ухăпа перекенсен ушкăнне ертсе пырать. Меллĕ самантпа усă курса Нарпи кукашшĕ патне чупса пычĕ те пил пама ыйтрĕ.

– Хĕрĕм, тăшмана ан шелле, – терĕ мăчавăр. – Тавçăруллă та сыхлануллă пул. Асту, сансăр пуçне манăн урăх никам та çук. Улăп хушнине итле. Çĕнтерӳпе таврăн. Турă сыхласа тăтăр сана.

– Эсĕ каланă пек пултăр, – терĕ те Нарпи ыттисем патне чупса кайрĕ. Кашниех кăкăр умне тĕве тирĕнчен тунă хӳтлĕх çакнă.

Çĕрпӳсемпе пинпӳсене пил панă хыççăн черет Юманпа Улăпа çитрĕ.

– Хăватлă Улăп, сана çакă çутă тĕнчене чăваш турри янă. Паллах, чăвашсене сыхлама. Санăн çулна хĕвелпе уйăх çутатса тăччăр, ывăнасран çĕрпе шыв вăй парса пыччăр. Эсреле тĕп туса çĕнтерӳпе килмелле пултăр.

– Çапла пултăр, – терĕ Улăп.

– Эсĕ вара, çамрăк Юман, чăн-чăн çар пуçĕ пулса таврăн.

– Çапла пултăр, – терĕ Юман.

Унтан мăчавăр иккĕн аран йăтса тăракан хĕççе Улă-

па пама хушрӗ. Лешӗ сылтӑм аллипе тытрӗ те каллӗ-маллӗ сулкаласа пӑхрӗ, инҫех мар ӳсекен ватӑ йӑмран мӑнтӑр туратне чалт кӑна касса ӳкерчӗ.

– Ҫак хӗҫҫе чи ӑста тимӗрҫӗсем ятарласа сан валли турӗҫ. Аллунтан ан ӳкер ӑна. Ун ҫивӗчлӗхӗ тӑшман пуҫне кастӑр.

– Ҫапла пултӑр! Халӗ ӗнтӗ кайма та вӑхӑт. Элпи, малашне кунти пурнӑҫа санӑн йӗркелесе пыма тивет. Ман вырӑна юлатӑн. Мӑчавӑрпа, кунта юлнӑ турхансемпе канашла. Хӑрушлӑх сиксе тухсан халӑха ҫӗкле, кирлӗ пулсан хӗҫ тыттар.

Элпи малтан Улӑпа, унтан Юмана ыталарӗ, йӗпеннӗ куҫне шӑла-шӑла илчӗ.

– Кайрӑмӑр! – терӗ те Улӑп аллине ҫӗклерӗ. Таврари шӑплӑха сӑрнай сасси ҫурса ячӗ. Темиҫе пин ҫынран тӑракан ҫар вӑрӑм ҫула тапранчӗ...

Кунти тавралӑх пушанса юлнӑ пекех туйӑнчӗ, темле лӑпкӑлӑх хуҫаланма пуҫларӗ. Апла пулин те пурнӑҫ хӑй йӗркипех шуса пычӗ. Йывӑрлӑхӗ ытларах хӗрарӑмсемпе ваттисем ҫине ӳкрӗ. Ачасем те вӗсен ҫумӗнчех, вылясси вырӑнне ӗҫлеме тивет.

Вӑрҫӑ вӑл ача вӑййи мар, унта темӗн те пулса иртет. Кӗҫех акӑ аманнисем килме пуҫлӗҫ. Вӗсене кӗтсе илсе сыватас ӗҫе вара Улӑп хушнипе Минеслу турханӑн йӗркелесе пымалла. Сурансене ҫыхма таса пир ҫите-лӗклех хатӗрленӗ ӗнтӗ. Ачасем вара улӑхра, анасем хӗрринче эмел курӑкӗ пухаҫҫӗ. Ку пит йывӑр ӗҫех мар-ха. Ҫарӑҫсем валли ҫӑкӑр пӗҫерсе хатӗрлесси вара пит тертлӗ.

Шӑпах ҫак ыйтупа кайрӗ те ӗнтӗ Минеслу Элпи патне. Ак тамаша, тӳрех кӗртмеҫҫӗ иккен. Хурал ҫав тери тимлӗ, ҫивӗч куҫлӑ.

– Тăхтама тивет, – терĕ хапха умĕнче тăракан ватă-рах арçын. – Элпи патша халĕ курăк шывĕпе çăвăнать.

– Мĕнле патша? – тĕлĕнсе пăхса илчĕ Минеслу.

– Хăйне вăл çапла чĕнме хушать. Çăвăнса тухнă хыççăн выртса канмасăр хăй патне никама та кĕртмест. Унччен кайкаласа çӳре. Каймалли çук пулсан çак каска çинче кĕтсе лар.

Минеслу кун пеккине кĕтменччĕ. Мĕнле-ха капла, юнашар йăх турханне кĕртмеççĕ. Тарăхнине пытармасăрах малалла утрĕ, анчах ун умне самай тĕреклĕ çамрăк арçын тухса тăчĕ, аллипе сулкаласа унталла кайма юраманнине пĕлтерчĕ.

– Мĕскер эсир? Ку тата мĕншĕн çарта мар? Пăх-ха ăна, çапăçас вырăнне хĕрарăмсене сыхласа пурăнать.

– Минеслу турхан, сана палларăм эпĕ. Апла пулин те ытлашши ан вăрç-ха, лăплан. Пирĕн мĕн хушнине итлемелле. Кăна та ан ятлаç, калаçаймасть вăл. Ун чĕлхине хăйсене хирĕç тăнăшăн Эсрел çыннисем касса татнă, – ăнлантарчĕ ватти. – Хăюллă çынччĕ вăл, халĕ вара хуçăлнă, унченхи пек мар. Тархасшăн ан ятлаç, веçех илтет вăл, анчах калаçăва хутшăнаймасть.

Çав хушăра килкартинчи пĕчĕк пӳртре хĕрарăмсем юрлани илтĕнсе кайрĕ. Юрри вара темшĕн çав тери салхуллăскер.

– Кусем камсем тата? – ыйтрĕ Минеслу.

– Ал ĕç ăстисем вĕсем. Элпи патша валли кĕпе çĕлеççĕ. Улăпа кĕтсе илме кирлĕ тет.

– Ав мĕнле иккен.

– Ахах-мерченне ĕнер тупса килчĕç-ха, халĕ тĕррине тăваççĕ. Кĕпи питĕ чаплă пулать теççĕ... Эсĕ килни çинчен кĕрсе калам-ха.

Лешсем çаплипех юрлаççĕ, чĕрери тунсăха юрăпа лăплантарасшăн.

Ука пĕрчи пек çӳçĕме
Якатман кун иртмерĕ.
Йĕс мерчен пек савнине
Асăнман кун иртмерĕ...

Кĕçех леш хурал тухрĕ те кĕме юранине пĕлтерчĕ. Минеслу пӳртелле васкарĕ.

Питĕ капăр хыçлă пукан çинче Элпи ларать. Те курăк шывĕпе çăвăннăран сăнĕ тин çеç мунчаран тухнă чухнехи пекех çиçет.

– Ырă кун пултăр, Элпи, – терĕ Минеслу ăшри хирĕçӳлĕхе пытарма тăрăшса.

– Элпи мар, Элпи патша темелле, – тӳрлетсе илчĕ Улăп арăмĕ.

– Мĕнле-ха капла, пĕр харăсах икĕ патша-и пирĕн?

– Улăп çапла хушса хăварнă.

– Апла эсĕ каланă пек пултăр эппин, Элпи... патша.

– Мĕн çăмăлпа килтĕн-ха, Минеслу турхан? Мĕн ыйтмалли пур?

– Ыйтмалли çук-ха манăн. Çарăççем валли çăкăр пĕçерессине лайăхрах йĕркелесчĕ. Çăнăх сахал, пухакансем те çукпа пĕрех.

– Хăв тата мĕн тăваканни? Сана хушнă пулсан, ĕçле.

– Хам йăхра йĕркеллех-ха, ыттисен турханĕсем çара кайнă вĕт-ха. Вĕсене хушу тăвасси сан ĕç мар-и-ха?

– Çук, ку ыйтупа мана чăрмав кӳмесен те юрать. Хăвах татса пар.

– Мĕнле-ха капла? Хăвна патша тесе чĕнтересшĕн, ĕçне тăвасшăн мар.

– Ăçтан пĕлсе пĕтерĕн кунти йĕркесене.

Элпи икĕ хутчен алă çупса илчĕ те пӳлĕмре Чĕкеç курăнса кайрĕ.

– Итлетĕп сана, Элпи патшамăр, – терĕ пуçне тайса.

– Минеслу турхан мĕн каланине шута ил те пулăшма тăрăш. Çарăçсем валли çăкăр çитмест тет вăл.

– Юрать, Элпи патшамăр, эсĕ каланă пек пултăр.

– Халĕ кайма пултаратăр... Мăчавăра чĕннĕччĕ унта...

– Кунтах вăл, Минеслу тухасса кĕтсе тăрать.

– Кĕтĕр эппин.

Канăçсăр пурăнăç мăчавăра та çапать. Мăнукĕ çара кайнă хыççăн сăнран та улшăннă пек. Ара, вĕри апат та вăхăтра лекмест те. Чаплă пукан çинче мăнаçланса ларакан Элпи умĕнче вăл юмахри чике варчăк* пек кăна курăнать. Элпи вара мăчавăра хисеплесе ура çине те тăмарĕ. «Кун пек пукан Улăпăн çукчĕ. Ятарласа тутарнă пуль ĕнтĕ», – шухăшласа илчĕ ыттисем пурте сума сăвакан варчăк*.

– Мĕскер, усал хыпар çитмерĕ пуль те? – ыйтрĕ мăчавăр кĕнĕ-кĕменех хăравçă сасăпа.

– Çук, урăххи пирки-ха. Питĕ сумлă ĕç хушатăп сана.

– Мĕн-ши ĕнтĕ?

– Улăп валли кермен лартмалла. Ун текех çакăн пек илемсĕр пӳртре пурăнмалла мар. Халăха пух та ĕçе пуçăн. Ниме тетĕр-и-ха? Халех пуçăнмалла.

– Чимĕр-ха, ниепле те тавçăрса илейместĕп. Мĕнпе тата кампа лартмалла вара керменне? Çак тапхăрта кермен пирки шутламалла-и вара?

– Улăп валли парне пултăр.

– Вăл çапла та-ха. Вăхăчĕ меллĕскер мар-çке. Кермен тесе калама çеç çăмăл. Ăна лартма чул та, вăрман та кирлĕ, пирĕн вара йĕркеллĕ ĕç хатĕрĕсем те, ăстисем те çук. Ватă-вĕтĕпе мĕнле кермен лартăн-ха. Тимĕр-тăмăр

* Варчăк – ватă арçын.

та чылай кирлĕ. Хăвах пĕлетĕн, пурне те хĕç тунă çĕре янă вĕт-ха.

– Мĕн кирлине тупăр. Укçине хам парăп.

– Çук, çук, çакна халăх йышăнас çук. Ку ĕçе чунăм пачах та туртмасть.

– Апла эс патша хушнине тăвасшăн мар-ха?! – хыттăн каларĕ Элпи.

– Мĕнле патша? Улăп кун пирки калаçмастчĕ-çке.

– Хальлĕхе патша эпĕ пулатăп. Мана итлемелле, мĕн хушнине тумалла.

– Ку вăл пĕччен татса памалли ĕç мар. Шурсу-халсемпе канашласа пăхам-ха. Мана хирĕç Минеслу тухатчĕ. Унпа калаçса пăхмарăн-и?

– Унăн хăйĕн ĕçĕ пур. Кăна вара сана хушатăп.

Элпи хăйĕннех перет, мăчавăр каланине хăлхана та чикмест. Калаçнăçемĕн сассине хытарса пырать тата. Мăчавăр, халиччен çакăн пеккине курманскер, аптрасах ӳкрĕ. Çапах та хăйне алла илчĕ.

– Элпи, хĕрĕм, хăв мĕн тума шутланине тавçăрса илетĕн-ши эсĕ? Шухăшу санăн çав тери сиенлĕ. Улăппа халăха хирĕçтерсе ярас çул çинче тăратăн эсĕ. Мĕнле вăхăтра пурăннине шута илместĕн.

– Тупнă вĕрентекен! Улăп килсен пĕтĕмпех каласа паратăп ак.

– Улăп ятне унталла-кунталла турткалама кирлĕ мар. Ăна эпир, тен, санран лайăхрах та пĕлетпĕр. Чăваш патшисем вĕсем халăх йăли-йĕркипе пурăнаççĕ. Эсĕ вара кермен лартса халăхпа Улăп хушшине савăл çапасшăн, ыттисенчен сивĕтесшĕн ăна. Тепĕр тесен тата çурт лар-тасси вăл пачах та ман ĕç мар. Ман ытларах чун керменĕ пирки шутламалла, тĕн йĕркине тытса пымалла. Усал ĕçпе турра кӳрентерес марччĕ. Чӳкне те вăхăтра тăвасчĕ.

Улăп сывлăхĕшĕн те кашни кунах кĕл тăватăп. Çакă çителĕксĕр-им вара? Е эсĕ ман ĕçе юриех нимĕн вырăнне те хурасшăн мар? Кереме пырса курмастăн та нимĕн те пĕлместĕн. Çынсем ав йĕркеллех çӳреççĕ, турăран пулăшу ыйтаççĕ. Тепĕр хут калатăп, кермен лартасси ман ĕç мар вăл. Ман пек ватăсăр пуçне урăх никам та çук-им вара? Кирлех пулсан çамрăкраххине туп.

– Асту! Улăп килтĕр-ха...

Мăчавăрпа Элпи килĕшӳ тупаймарĕç. Кашни хăй шухăшне мала хурса уйрăлчĕ. Мăчавăра Улăп хыççăн таçтан килсе кĕнĕ çак хĕрарăм вырăнсăр хушусем туни пачах та килĕшмерĕ. Хăйне пил панă ватăпа çапла калаçни самаях пăшăрхантарчĕ. Элпи тарăхăвĕ вара урăхларах. Кунти çынсем ăна патша вырăнне хурасшăн мар. Вăл хушнине итлемесен те пултараççĕ. Апла-тăк,



унăн парăнма юрамасть ыттисене итлеттермелле, хăй камне кăтартмалла.

Элпи алă çупса Чĕкеçе чĕнсе илчĕ те мăчавăрпа кă-мăлсăррине пĕлтерчĕ.

– Сирĕн хушăра çепĕç калаçу пулма та пулта-раймасть, – терĕ Чĕкеç. – Нарпи кукашшĕ вĕт вăл.

– Нивушлĕ çакăнта халăха ĕçлеттерме пултаракан çын çук вара? Тупса пар-ха çавăн пеккине. Керменте пурăнса курас килет манăн.

– Чăннипех патшана лариччен чăтмаллах ĕнтĕ. Хăвна итлеменнисене кайран тăна кĕртсе илĕн-ха. Сана пу-лăшма пултаракан çын пирки вара... Пур ун пекки, – аса илчĕ Чĕкеç уксах Миккана.

– Чĕнсе кил-ха ăна, калаçса пăхам.

Миккасем килте çук иккен. Чĕкеç вара тӳрех Амине патне васкарĕ. Урăх ăçта пулччăр-ха вĕсем? Чăнах та çавăнта. Ырă хыпарпа килмен иккен вĕсем кунта. Амине пĕрмаях Пăрчканпа калаçса выртать иккен. Вăхăтран-вăхăта хăйне ухмаха тухса кайнă çын пекех тыткалать. Паян тата тĕлĕнмелле сăмах персе ячĕ: Алмас ман ывăл мар терĕ, Чĕкеç ятне аса илчĕ, анчах мĕн калас тенине ăнланма йывăр, сăмахсене пăтраштарать.

– Питĕ вăхăтра çитрĕн-ха эсĕ, Чĕкеç, – терĕ хы-пăнса ӳкнĕ Калима. – Анне сан ятна асăнать.

– Чĕкеç, Чĕкеç, çаксене чар-ха. Мана темĕскер тăвасшăн вĕсем. Нимĕнле ылтăн та çук ман, – терĕ Амине Чĕкеçе курсассăн.

– Мĕскер эсĕ, анне... Санран нимĕнле ылтăн та ыйтмастпăр вĕт. Ун пирки текех калаçмăпăр та. Алмас пирки вара... Чирлĕрен çапла пакăлтататăн пулĕ.

– Ун пирки мĕн калать тата? – ыйтрĕ Чĕкеç тĕлĕн-нине пытараймасăр.

– Ман ывăл мар тет.

– Çук, ан ĕненĕр ăна, – татăклăн каласа хучĕ Чĕкеç кăштах шухăша кайса тăнă хыççăн. – Калима, эсир йĕкĕрешсем пулнине пурте пĕлеççĕ. Анчах астăвăр, çак сăмах çын çине тухсассăн Алмаса турхана лартасси кăткăсланать. Хăвăра мĕнле йывăрлăх кĕтнине чухлатăр пуль тетĕп.

– Анне, çак шухăша пуçран, тархасшăн, кăларса пăрах эсĕ, – пăшăрханса ыйтрĕ Калима. – Лăплан-ха, вилĕм алăкран шаккать теме пăрах. Пурăнмалла сан.

– Чирлĕ çынран темĕн те кĕтме пулать, – хутшăнчĕ калаçăва Микка. – Çывăрса кайрĕ-ха.

– Микка, эпĕ сан пата килнĕччĕ. Сана Элпи патша хăй патне чĕнет.

– Мĕскер сиксе тухрĕ вара? – хăраса ӳкрĕ Микка.

– Çук, çук, нимех те мар. Пĕр ĕç пирки санпала канашласа пăхасшăн вăл.

– Апла пулсассăн пырăп эппин.

– Васка, кĕтме юратмасть вăл, Элпи патша. Çипуçна та улăштар.

«Кайса тумланам-ха», – çапла каласа Микка килне васкарĕ. Чĕкеç те тухма тăнăччĕ, анчах Амине сасси чарчĕ.

– А-а-а, эсир каллех пĕрле иккен-ха. Ман Ватрас çумне ан çулăх. Куçу аванах курать-ха сан. Эсĕ кунта юриех куççăр çын пек тытатăн хăвна. Пăх-ха вĕсене, аларан çавтăнсах çӳреççĕ. Чим-ха, çитĕп-ха сирĕн пата. Пăрчкан, сана-и, сана эп...

– Пĕрмаях çапла аташать вăл, – пĕлтерчĕ Калима. – Çывăрнă чухне те калаçать.

– Ăнланатăп, çылăхĕ канăç памасть ăна.

– Мĕншĕн апла калатăн вара?

– Пăрчкан хăй вилĕмĕпе вилмен вăл. Амине самаях тăрăшрĕ.

– Мĕскер кирлĕ мара палкатăн эсĕ? Ун пек пулма та пултараймасть, – терĕ Калима хăраса.

– Пулать çав. Пăрчкан вăл Ватрасăн чи пирвайхи юратăвĕ. Анчах пĕрлешме май килмен вĕсен. Юрату туйăмĕ вара кайран та сӳнмен. Çакна аннӳ сиснех ёнтĕ. Курайманлăх та çуралнă.

– Мĕнле-ха капла, эпĕ хам суккăр иккен. Шухăшласа пăхсан, чăнах та, суккăр çав.

– Ну, юрĕ. Ман васкамалла. Амине хытă аптраса ӳксен, систер. Тăнĕ арпашăннă унăн. Пĕр сăмахне те ан ĕнен, Калима. Ытларах Алмас пирки шухăшла. Çавă килсен хăвна та çăмăл туйăн.

– Çапах та мĕншĕн-ха вăл Алмас çинчен калаçнă чухне сан ятна аса илет? Мĕнле вăрттăнлăх пур сирĕн хушăра? Ан пытар, кала ёнтĕ. Никама та нимĕн те шарламăп. Турă умĕнче сăмах паратăп.

– Юрĕ эппин... Çак япала эсĕ çуралнă кун пулса иртрĕ. Пĕр виçĕ кун маларах эпĕ те ача çуратнăччĕ.

– Хĕр пуçăнах-и? – пӳлчĕ Чĕкеç сăмахне Калима тĕлĕннине пытараймасăр.

– Ун чухне эпĕ ухмаха тухса каймаллах пĕр качча юратса пăрахнăччĕ. Çавна кăна качча тухас килетчĕ. Тен, ача çураласса пĕлсен манпа пĕрлешĕ тесе качча тухичченех парăнтăм. Анчах ĕç ăнмарĕ, тепри туртса илчĕ ăна. Кулянтăм ёнтĕ.

– Кам вара вăл? Эпĕ пĕлетĕп-и?

– Халĕ çук вăл, вилнĕ... Çапах та ун чухне пит макăрсах çӳремерĕм, варта ача аталанни лăплану пачĕ, юратнă çынран вĕт. Арçын ача çуралчĕ. Виççĕмĕш кун каçпала ман пата апăс карчăк хашкаса пырса кĕчĕ.

Ывăлăма та вăлах çураттарнăччĕ-ха. «Чĕкеçĕм, хĕрĕм, – пуçларĕ вăл сăмахне кĕнĕ-кĕменех, – итле мана. Ачине çуратма пулĕ-ха ăна, пăхса çитĕнтересси йывăр. Пĕччен пурнăçпа ачуна телейлĕ тăвайăн-ши? Арçын ача вĕт. Ашшĕне шырама пуçласан тата? Тавçăруллă пул, хĕрĕм. Тин çеç Ватрас арăмне ача çураттартăм. Каллех хĕрача. Ватрасĕ çук-ха. Анчах тепрер кунран çаврăнса килсессĕн Аминене пуçран шăлас çук. Вăл ывăл çуратасса шанса пурăнать тет. Хăй вырăнне турхан çитĕнтересшĕн ĕнтĕ. Чĕкеç, парса яр ывăлна».

Çак сăмахсене илтсен пуçăм çаврăнсах кайрĕ. Ниепле те тавçăрса илейместĕп. Мĕн тумалла, мĕн каламалла? Хам ача вĕт-ха. Анчах апăс карчăк каланинче те темĕскер пур пек. Турхан ывăлĕ каярах турхан пулатех ĕнтĕ...

«Чĕкеç, ман васкамалла. Аминен тепĕр ача та пур,



теприне çуратиччен кăшт канса илтĕр-ха. Эпĕ вара имлĕ курăк кайса илем тесе тухса килтĕм. Эсĕ халь çамрăк, татах ача çуратма ĕлкĕрĕн-ха, качча тухсах. Ку вара пуян çын килĕнче ӳстĕр. Тен, турхана та ларĕ. Эй, мĕн санпа ытлашши калаçмалла çак. Айван-ха эсĕ. Кайран мана тав тăвăн ак», – терĕ те ачана йăтса тухса кайрĕ...

– Ав мĕнле иккен. Алмас... Шăллăм... Çуралнипе пичче шутланать ĕнтĕ. Юнпа вара... Апла анне калаçнинче тĕрĕслĕх пурах иккен.

– Пур, Калима, пур. Калас терĕм ĕнтĕ. Чăн сăмахăн суйи çук теççĕ вĕт.

– Халь тин тавçăрса илтĕм эсĕ пирĕн пата мĕн сăлтавпа пĕрмаях пырса çӳренине.

– Çапла, хĕрĕм, çапла. Ывăлăма курас килетчĕ-çке.

– Чĕкеç аппа, каçар мана. Тен, тепĕр чухне йывăр сăмах та каларăм пуль.

– Сăмах мĕн вăл, Алмас çукки чуна çурать. Кашни кунах çавăншăн кĕл тăватăп. Эсир те çав... Пĕри те çине тăмарăр. Юрать-ха, Улăп çаврăнса килчĕ. Ывăлăма куратăпах пуль тетĕп-ха. Ну, юрĕ. Калаçу ытлашши вăраха кайрĕ. Тепĕр хут калатăп, çакна урăх никамăн та пĕлмелле мар. Ман халь васкамалла, – терĕ те Чĕкеç тухса вĕçтерчĕ.

Калима вара çывăракан амăшĕ патнерех çывхарса чылайччен шухăша кайса ларчĕ, ачалăхне аса илчĕ, Алмаспа выляса ӳсни те куç умĕнчех. «Эх, мăнтарăн, нимĕн те пĕлмест вĕт-ха вăл», – хĕрхенсе илчĕ вăл Алмаса. Паллах, унчченхи пек туйăмпа мар ĕнтĕ. «Тавах сана, Чĕкеç, каласа панăшăн. Апла, эппин, турхан килĕнчи пĕртен-пĕр тĕпкĕч эпĕ пулатăп», – пĕтĕмлетрĕ Калима. Уксах Миккана качча тухнишĕн те пăшăрханса илчĕ. Шаннă йăвара кайăк пулмарĕ. Ылтăн-кĕмĕлсĕр

тăрса юлнă хыççăн вара ыттисенчен нимĕнпех те уйрăлса тăмасть. Сăнран та ватăраххăн курăнма пуçларĕ.

Çак нумай çул хушши пытарса усранă вăрттăнлăха Чĕкеç те ахаль уçса парас çук. Саманчĕ çавăн пекскер çаврăнса тухрĕ. Енчен те Амине виличчен каламасан кайран ĕнентерме те пулмĕ. Леш апăс карчăк та тахçанах леш тĕнчере ĕнтĕ. Амине те хăвăрт кăнса выртсассăн вара... Темĕн чухлĕ кăшкăрса çӳресен те Алмас çумне çыпçăнаймăн. Кун пек çапах шанчăк пур, тăван амăшне пăрахмĕ. Енчен те турхана ларсассăн ĕмĕтленни те пурнăça кĕрĕ...

Микка килне çитсен малтан лашине кӳлчĕ. Унтан тумтирне улăштарса тăхăнчĕ те Улăп арăмĕ патне вĕçтерчĕ. Вăл çитнĕ тĕле Элпи шăпах килкартинче кĕпе çĕлекенсемпе калаçса тăрать, темле кăтартусем парать. Капăр тумланнă арçын чаплă урапапа çитнине курсан хĕрарăмсем патĕнчен пăрăнчĕ те хирĕç утса пычĕ. Микка урапа çинчен анчĕ те тилхепине чĕлхесĕр хурала тыттарчĕ. Лешĕ лашана айккинерех уттарса кайса кăкарчĕ.

– Ырă кун пултăр сана, Элпи патшамăр, – терĕ Микка пуçне тайса.

Элпи арçыннинчен ытларах хайскерĕн тумĕ çине пăхса илчĕ. Пачах та кунти çынсем пек мар, ытларах Эсрел çĕршывĕнчи пуянсем пек тăхăннă. «Мĕншĕн çакăн пек тумпа килчĕ-ши вара ку?» – шутласа илчĕ Элпи.

– Хăвшăн та ырă кун пултăр, – терĕ те хĕрарăм аллипе пӳртелле кăтартрĕ. – Микка терĕç сан пирки.

– Çапла, ырă патшамăр.

Çын кăмăлĕ вăл нумай вăхăт хушши туса пыракан ĕçрен те чылай килет. Миккапа та çаплах ĕнтĕ. Тарçăсемпе, ахаль çынсемпе калаçнă чухне хаярлăха мала

ярать. Турхансемпе Эсрел çыннисем хушшинче вара пачах урăхла. Халĕ те çавах, Элпие пысăка хурса хисеплекен çын пек тыткалама тăрăшрĕ. Кун пек калаçу кама ан килĕштĕр? Ку пачах та мăчавăр пек мар. Çавăнпа та Элпи шухăшне хирĕçлесе пĕр сăмах та шарламарĕ, килĕшнине палăртса пуçне сĕлтсе тăчĕ.

– Халăхне ĕçлеттерме пулĕ-ха ăна, – хушрĕ сăмах Микка. – Анчах çак ĕçе ертсе пыма çуртне мĕнлерех тумаллине лайăх курса тăракан ăста кирлĕ. Ман шутпа, ку вăл чăваш тăрăхĕнчи чи чаплă кермен пулмалла. Паллах, ăна лартма паха япаласем кирлĕ: илемлĕ чул, хыр-чăрăш пĕрене, тĕреклĕ юман. Çаксене тупасси тăкакпа çыхăннă. Укçа кирлĕ.

– Укçи пирки чăрмав çук, пăхăр та пур, ылтăн та. Ĕçĕ ăнтăрччĕ. Енчен те çакна хăв çине илсессĕн мĕнле тав тумаллине пĕлĕп. Эсĕ çак таврари чи ирĕклĕ çын пулса тăрăн.

– Тавах сана, Элпи патшамăр. Мана кунтан ытла нимĕн те кирлĕ мар. Ыранах ĕçе пуçăнăп, ялсене çитсе пăхăп, чулпа, йывăçпа ĕçлекен ăстасене тупма тăрăшăп.

– Çурчĕ пирки вара... Эсрел керменĕнчен кая юлмалла мар. Эсĕ ăна курнă-и?

– Ватраспа кайсассăн курнăччĕ, анчах шалта пулман. Асра юлман вăл çурт.

– Апла Улăп керменĕ мĕнлерех çĕкленмеллине хăйăр çине хам ӳкерсе парăп. Тарçăсене кала, пĕр-ик лав турттарса килсе тикĕслесе хуччăр.

– Вырăнĕ пирки вара мĕнле-ха?

– Ун çинчен шутламан-ха эпĕ.

– Апла-тăк, урапа çине ларар та тавралăха тишкерсе тухар. Ĕçе вăраха ярар мар.

Çакăн пек ăнăçлă калаçу Элпи кăмăлне тĕпренех

улăштарчĕ, шанчăк çуратрĕ. Хăюллă арçын иккен ку, иккĕленсе тăмарĕ. Кун пек çын сĕнĕвне мĕнле йышăнмăн-ха?

Акă вĕсем Миккан капăр урапи çине ларчĕç те çула тухрĕç. Темиçе çĕрте те чарăна-чарăна тăрса йĕри-тавра пăхкаласа тăчĕç.

– Мана çак вырăн килĕшет, – терĕ Элпи. – Симĕс çаран та куçа ачашлать.

– Ман шутпа, кермен валли инçетрен курăнса ларакан вырăн кирлĕ пек туйăнать. Акă, ял çине пăхса илер-ха. Çӳллĕрех вырăнта мĕнле çурт ларать-ха? Кĕлĕ тумалли керем, мăчавăр хуçаланакан вырăн. Улăп керменĕ вара унтан та çӳллĕрех çĕрте пултăр. Кам çурчĕ иккенни аякранах курăнтăр.

– Эсĕ каланипе килĕшетĕп, – улăштарчĕ шухăшне Элпи, уйрăмах кермен чи çӳллĕ вырăнта пулмалла тенине ырласа.

– Апла сăнав сăрчĕ патне кайса пăхар-ха, – сĕнчĕ Микка.

Чăнах та, кунтан пăхсассăн пĕтĕм тĕнче уçăлса каять, ӳпкери сывлăш та кăкăра сарса янă пек туйăнать. Ах, çав чăвашсене! Мĕншĕн-ши çуртне вăрттăнрах çĕре, вăрмана е çырмаллă вырăна лартма юратаççĕ-ши? Эсрелрен хăранипе пытанса пурăнма хăнăхнăран-ши? Хĕсĕк вырăн чуна та хĕсет тенине мĕншĕн маннă-ши? Тен, манман та, пурнăçĕ хĕссе çитернĕ курăнать.

Сăнав сăрчĕ патĕнчи вырăн Элпие килĕшни паллă ĕнтĕ. Çапах Микка тепĕр çĕре кайса пăхма сĕнчĕ. Ун халĕ çак меллĕ самантпа усă курса хăйне те лайăхрах кăтартмалла. Улăп арăмне ярăнтарса çӳреме кашнинех шанмаççĕ ĕнтĕ. Темиçе ял витĕр тухнă чух чарăна-чарăна тăчĕç, çынсем Элпие пуç тайнă чухне юнашарах Микка

тăни уншăн самай хумхануллă самант пулчĕ. Вăл каллех хăй вăйне туйма пуçларĕ. Çук, Микка пурăнать-ха. Кăтартĕ-ха вăл хăй камне! Микка вăйлă. Микка çивĕч. Микка вăл...

Хăйне патша вырăнне хурса тыткаласси кама килĕшмĕ ĕнтĕ. Ун пек чухне çурма ухмах та ăслă çын пек курăнать, сăнран начартараххи те илемлĕн туйăнать. «Патша» сăмахра унта калама çук пысăк вăй пытарăнса тăрать. Çакна Элпи паян тата лайăхрах туйса илчĕ. Яла вĕсем каçа хирĕç тин çаврăнса çитрĕç. Уйрăлнă чухне ĕçе ăнăçлă пуçарса яма тесе Элпи Миккана укçа та пачĕ. Чĕкеç кăштах пулăшнипе çапла пуçланчĕ унăн çĕнĕ пурнăçĕ. Енчен те вăл Миккана аса илмен пулсассăн ĕç çакăн пек ăнăçмастчĕ. Микка каллех кĕтесри пăтара çакăнса тăракан чĕн саламата аллине тытрĕ...

Элпи вара кунти хуçалăха йĕркелесе пыракан Чĕкеçрен Микка пирки тĕплĕнрех ыйтса пĕлме тăрăшрĕ. Ăна халь пысăк ĕç шанса панă. Эсрел парнеленĕ ылтăна ĕçлеттерекенни те вăлах.

– Урине ăçта амантнă вара вăл? Е çуралассах çапла? – ыйтрĕ Элпи Миккана хĕрхеннĕ пек сасăпа.

– Упапа çапăçнă чухне суранланнă теççĕ. Упа Микки тесен пĕлмен çын та çук. Хам та хăраттăмччĕ унран.

– Текех хăрама кирлĕ мар ĕнтĕ, иксĕр те мана пулăшакансен шутĕнче. Анчах пĕр япалана асра тыт: мĕн курни, мĕн илтни çак килтен тухмалла мар.

– Ăнланатăп, Элпи патшамăр.

– Апла ăçта-ха санăн сăру? Паянхи куна паллă тăвар.

Чăвашра сăра тума пĕлмен хĕрарăм çук. Ăсталăхĕ вара ăруран ăрăва куçса пырать. Ку таранччен Чĕкеç сăрине те никам та хурламанччĕ-ха. Элпи те килĕштерет.

Лайăх сăра ытларах ĕçсен пуçа аванах пырать, сисĕм-

туйăма та вылятать. Ку сăрана вара, тутлăлантăр тесе, кăштах пыл та янăччĕ. Те çавăнпа ĕнтĕ хĕрарăмсем чĕлхисене ирĕке ячĕç.

– Элпи, кала-ха, сана Эсрелпе пурăннă теççĕ. Çак сăмах тĕрĕсех-и?

– Кам калать?! – тарăхса кайрĕ Улăп арăмĕ. – Чĕлхине касса тататăп!

– Сăмахĕ сарăлнă ĕнтĕ, пуринне те касса татаймăн. Пĕринне, ав, хăвна сыхлаканнинне, унччен каснăччĕ. Эсĕ мана Улăппа савăшнине каласа пар-ха. Ăçта авса антарчĕ? Мĕнле чăтрăн? Йывăр пулмарĕ-и? – кулса илчĕ самаях ÿсĕрĕлнĕ Чĕкеç. – Тепĕр тесен, хĕрарăм темле арçынна та чăтать вăл. Хам пĕлетĕп. Капан айĕнче шăши вилмест теççĕ вĕт.

– Улăп пурришĕн сирĕн пурин те мана тав тумалла. Ун сывлăхне эпĕ сыхласа пурăннă, вилесрен те эпĕ çăлнă.

– Кунта вара Нарпи вăратса илсе килнĕ теççĕ.

– Çук, суять вăл. Çаврăнса килтĕр-ха, эп ăна...

– Çук ĕнтĕ, Улăп пур чухне эсĕ ăна нимех те тăваяс çук. Чăн-чăн патшана ларсан вара хăвăн ирĕк, мĕн тăвас тенĕ, çавна ту. Чим-ха, мĕншĕн пĕр ачапах çырлахнă вара эсир? Мĕн, Улăп юратайми пулчĕ-им?

– Чĕкеç, чарăн-ха, чĕремри сурана ан хускат. Атя, тепрер курка ĕçер те...

Элпи чаплă пукан çине вырнаçса ларчĕ те хушусем тума тытăнчĕ. Малтан юрласа пама ыйтрĕ. Юрласси вăл Чĕкеçшĕн нимех те мар, халĕ – пушшех. «Ăçта каян, Чĕкеç, çумăр витĕр...» – шăрантарчĕ вăл аллипе сулкалашсах.

– Халĕ вара ташласа кăтарт, – терĕ вăхăтлăх патша.

– Ташлама... Пĕччен пит меллех мар çав.

– Кама та пулсан чӗн, эппин.

Чӗкеҫ алӑк уҫса пӑхрӗ те чӗлхесӗр Ишетере чӗнсе кӗртрӗ, пӗрле ташлама сӗнчӗ. Лешӗ тӗлӗннипе кӑнн пӑхса илчӗ те ӑнланма йывӑр сӑмахсем персе ячӗ. Чӗкеҫ вӑл те чӑннине калать, те кӑштах куласшӑн, ӑҫтан пӗлӗн-ха.

– Атя, Ишетер, Элпи патшамӑра чӑваш ташши ташласа кӑтартар, – терӗ те Чӗкеҫ вӑйпитти арҫынна аллинчен пырса туртрӗ. Лешӗ тухасшӑн мар турткаланчӗ.

– Малтан сӑра ярса пар-ха ӑна, – хушрӗ Элпи.

Пыллӑ сӑра куркине пушатсан Ишетер кӑмӑлӗ кӑштах улшӑнчӗ, иккӗмӗш курка хыҫҫӑн вара куҫӗ те савӑнӑҫлӑрах ҫиҫме пуҫларӗ. Халӗ ӗнтӗ ташлама та юрать. Чӗкеҫ ташӑ хусканӑвӗсем туса Ишетер умне ҫывхарчӗ те ура тапрӗ. Лешӗ ташша тухрӗ. Маттур иккен вӑл, ташӑ ӑсти темелле.

– Эсӗ алӑ ҫуп-ха, – хушрӗ Элпие Чӗкеҫ хӑй ҫупса кӑтартса. – Ун пек ташлама ҫӑмӑлрах.

Элпи пукан ҫинчен тӑрсах алӑ ҫупрӗ. Лешсем вара самаях сикрӗҫ, хашкана ерчченех.

– Ну, ҫитӗ. Халӗ канма вӑхӑт, – терӗ Элпи.

Лешсем хӑвӑрт тухса кайрӗҫ. Элпи каллех пукан ҫине пырса ларчӗ, шухӑша путрӗ-ши е кӑштах канса илчӗ – пӗлме ҫук.

Тӗксӗм пӳлӗме сасартӑк ҫиҫӗм ҫути сӑрхӑнса кӗчӗ. Чылай инҫетрен. Аслати сасси кунталла аран-аран кӑна ҫитет. Ҫапах пӗччен шиклентерет. Элпи алӑк уҫрӗ те кӑшкӑрчӗ:

– Эй! Хӑшӗ пур унта? Мӗншӗн халӗ те ҫурта ҫутмастӑр?!

Ҫутнӑ ҫуртана Ишетер илсе кӗчӗ те вырнаҫтарса лартрӗ. Тухма тесе алӑк патнелле ҫывхарнӑччӗ ӗнтӗ, Элпи сӑмахӗ чарчӗ.

– Ишетер, кил-ха кунтарах, ĕçсе пар, – терĕ вăл куркана сăра тултарса. – Хăвăн тивĕçне лайăх туса пынăшăн хăналам.

Кăштах именсе тăнă хыççăн лешĕ сăра куркине тытрĕ.

– Ĕç, ĕç, хăраса ан тăр. Хамăн та ĕçес кăмăл пурха, анчах пĕччен меллех мар.

Элпи хăй валли те тултарчĕ. Ĕçрĕç.

– Эх, Ишетер, пĕлесчĕ сан пĕччен мĕнле тунсăххине. Паçăр пăхса лартăм та тĕлĕнтĕм, савăнăç çынна пачах урăхла кăтартать иккен. Эпĕ сана пачах та ун пек тесе шутламан.

Ишетер темĕскер каларĕ-ха, анчах «сана», «патша» сăмахсем евĕрлĕ илтĕннисĕр пуçне урăх тавçăрса илме çук. Элпи арçын патне çывхарчĕ те хĕрхеннĕ пек туса



хулпуççийěнчен сăтăрса илчě. Лешě хăранипе айккинерех кайса тăчě.

– Ан хăра, кунта эпир иксěмěр кăна, – терě Элпи. – Кил, кăштах ачашлам сана.

Ишетер кунта мěн пулса иртнине тавçăрса иличчен хăюлланса çитнě хěрарăм хăй хуралçине чуптуса илчě те вырăн çине тěллесе кăтартрě. Лешě килěшмесěр аллипе сулкалашрě. Хěрсе кайнă Элпи нухайкка ярса тытрě те Ишетере çурăм тăрăх темиçе хутчен туртса илчě. Аптранă арçын аттине хыврě те вырăн патнелле утрě. Çурта сӳнчě...

Хěрěнкě пуç тунă йăнăша урă пуçăн тӳрлетме тивет. Ирех вăраннă Элпин те шухăшламалли çук мар. Харлаттарсах çывăракан Ишетер кунта мěн пулса иртнине çынсене пěлтерсен? Йěркеллě калаçаймасть та, анчах алли пур вěт. Арçынсен вěсен пěр-пěрин умěнче мухтанас йăла та пур. Çук, сăмах халăх çине ан тухтăр. «Леш, Чěкеç панă «кучченеç» мěнлерех ěçлет-ши?» – çиççе илчě шухăш ултавçă хěрарăм пуçěнче. Куркана сăра тултарчě те мěн кирлине сапрě, Ишетере вăратрě. Лешě хăвăрт сиксе тăчě те тумланчě.

– Çакна ěçсе пар та кӳлěрен шыв ăсса кил-ха, – сěнчě Элпи.

Ишетер васкаса тула тухрě. Çутăлма пуçланă, анчах çынсем тутлă ыйхăпах çывăраççě-ха. Унта-кунта йытă вěрни, автан авăтни кăна шăплăха хускатать. Патша майри ытамěнче çěр каçнă арçын икě витре илчě те кӳлě хěрне васкарě. Çыран хěрне çитсе тăнăччě кăна, Ишетер хăйне япăхрах туйма пуçларě, хăсас килчě, куç та тěтреллě кăтартать иккен, пěрле пынă йытă та темиçен курăнать. Акă, вăл пěтěм вăйне пухса пěр витрипе шыв ăсса илчě те чěркуçленсе ларса ěçме пикенчě. Пěр-

ик ҫавар сыпнӑ хыҫҫӑн хӑсса ячӗ те курӑк ҫине тӳнсе кайса йӑваланма пуҫларӗ, кӳлле кӗрсе ӳкрӗ. Тухас тесе тапалашрӗ, анчах тӑнне ҫухатрӗ...

Кӑшт вӑхӑт иртсен Элпи тухса пӑхрӗ. Ишетер курӑнмарӗ. Каялла кӗчӗ те тӗкӗр тытса хӑй ҫине урлӑ та тӑрӑх пӑхкаласа илчӗ. Сӑра чӗресне айккинерех кайса лартрӗ, арҫынпа ҫӗр каҫнӑ вырӑна тепӗр хут тӳрлетрӗ. Шӑп ҫав самантра Чӗкеҫ чупса кӗчӗ.

– Элпи патшамӑр! Чӗлхесӗр Ишетер вилнӗ, шыв ӑсма кайнӑ та кӳлле кӗрсе ӳкнӗ. Хӗрринчех выртать. Мӗншӗн тухайман-ши вара вӑл?

– Ӳсӗрпе ӗнтӗ. Нивушлӗ кунта ӗҫнипех тӳнсе кайнӑ вара вӑл? Таҫтан тупса ӗҫнӗ? Ӗҫме те пӗлмелле иккен. Мӑчавӑра калӑр, пытарассине йӗркелетӗр.

– Ун пирки калӑп-ха, анчах пӗр япала тӗлӗнтерет.

– Мӗн тата?

– Юнашарах йытӑ вилли выртать. Ҫакӑ вара тарӑн шухӑша ярать. Ӑш-чик питӗ пӑтраннипе Ишетер хӑсса пӗтнӗ курӑнать. Йытти вара ҫав хӑсӑка ҫинипе кӑнса выртнӑ-ши?

– Мӗскер калаҫан эсӗ? – чӗтренсе илчӗ Элпи ҫак сӑмахсене илтсен. Чӗкеҫ шухӑшӗ ӑҫталла пӑрӑннине чухларӗ вӑл. Лешӗ вара шӑтарас пек пӑхса тӑрать, Элпи хӑйне мӗнле тыткаланине сӑнать.

«Чухлать, шуйттан хӗрарӑмӗ. Мӗнле пӑхать вӑл. Сӑмахсӑрах айӑплать».

– Каланӑ сана мӑчавӑр патне кай тесе. Тата... Ак сана укҫа. Лайӑххрах тумлан. Патша килӗнче вӗт-ха эсӗ.

Чӗкеҫ укҫашӑн тав турӗ те хӑвӑрт тухса утрӗ. Ку вара шухӑша кайса алӑкӑн-тӗпелӗн уткаласа ҫӳрерӗ. Унӑн аллинче питӗ хаяр япала иккен. Тӗрӗслесе пӑхни пулчӗ ӗнтӗ ҫакӑ. Кун пек хӑват такама та ҫапса ӳкерӗ.

Кĕçех уксах Микка персе çитрĕ, кĕнĕ-кĕменех сăмахне пуçларĕ:

– Ĕçсем япăх, Элпи патшамăр.

– Мĕскер тата? Вăрçăран япăх хыпарсем килмерĕç-и?

– Çук, çук. Сана сыхлакан Ишетере такам вĕлернĕ те шыва пăрахнă теççĕ. Хăй тĕллĕн шыва сикес çук вăл. Усал вăйсем алхасма пуçларĕç курăнать. Санăн та сыхланулларах пулмалла. Ахальтен хурала вĕлермен ĕнтĕ. Калама лайăх мар та, сан патна кĕрес текенсене чарнăран мар-ши?

– Ун пекех ан хăрат-ха эсĕ. Ахаль те ăш вăркать. Юман та, Улăп та инçе.

– Ăшне ăна пусарăпăр-ха, усал вăйсем алхасма пуçлани хăрататать. Хурал ĕçне хам çине илмелле мар-ши?

– Юрать. Кермен пирки ан ман тата.

– Çук ĕнтĕ, ĕçре харсăррисене паянах пухатăп.

Çапла калаçкаласа килкартине тухрĕç, Микка урапи çине ларчĕ те вĕçтерчĕ, Элпи çĕвĕçсем патне кĕчĕ...

## XIII

Кăштах пушă вăхăтпа усă курса Алмас шăхличне илчĕ те пахчана тухрĕ. Çак асамлă япалана курсан леш усал йытă та лăпланать. Халĕ те ав Алмас шăхличе тути патне тытасса кĕтет, хӳрине вылятса илчĕ. Каллех хурлăхлă кĕвĕ шăранчĕ.

Сасартăк çӳллĕ хӳмене урам енчен шаккарĕç. Кĕвĕ ытамне кĕрсе ӳкнĕ çыншăн çакă вăл шарт! сиктерекен япалах. Чун çемĕçсе çитнĕ самант вĕт-ха вăл. Ун пек чухне кашăк-чашăк сасси те, çын калаçни те чĕрене касать. Темшĕн çакна ăнланмаççĕ-çке, пакăлтатаççĕ те пакăлтатаççĕ. Кусем вара хӳмене кĕрĕслеттереççĕ.

– Алмас! Улăп вăраннă! Улăп вăраннă...

Кун пек хыпаршăн кам пăшăрхантăр? Савăнăçлă кĕвĕ каламалли кăна юлать. Улăп вăраннă... Миçе çул кĕтнĕ çакна чăвашсем!

Алмаса тепĕр куннех Эсрел патне чĕнсе кайрĕç. Патша керменĕ патĕнче Озал кĕтсе тăрать. Çурчĕ вара, чăнах та, юмахри пекех: йĕри-тавра чечек, шалта кавир, паха савăт-сапа... Питĕ тимлĕ сыхлаççĕ курăнать, ăçта пынă унта сăнă тытнă тĕреклĕ арçынсем тăраççĕ. Акă, Озал пĕр пысăк алăка уçрĕ те Алмаса кĕме сĕнчĕ. Кĕчĕç. Ятарласа çӳлĕлетнĕ вырăнта, питĕ паха пукан çинче, Эсрел ларать. Тумĕ хĕвел пек йăлкăшать, ылтăн нумайран ĕнтĕ. Кусем кĕрсенех Эсрел ура çине тăчĕ.

– Чĕркуçлен часрах, – шăппăн хушрĕ Озал. Хăй вара пуçне усрĕ.

Тĕреклĕ Эсрел пĕр-ик утăм тусанах Алмасăн ура вăйĕ чакнă пек туйăнчĕ, хăй сисмесĕрех чĕркуçленсе ларчĕ.

– Тăр, тăр, – терĕ хулăн сасăпа Эсрел. – Ав мĕнлескер иккен вăл Ватрас ывăлĕ. Мĕн ятлă терĕç-ха?

– Алмас, – каларĕ хăй ятне çамрăк турхан ура çине тăрса.

– Эсĕ кайса пăх-ха, мĕнлерех хатĕрленеççĕ унта?– хушрĕ Эсрел Озала. – Кайран лереваска. Эпир те кĕçех çитĕпĕр.

Лешĕ пуçне тайса илчĕ те кутăн чакса пырса тухрĕ. Алмас çакна пĕтĕмпех асăрхарĕ. Апла Эсрел çывăхĕнче çурăмпа тăма юрамасть. Ку çеç те мар-ха, çак хăватлă çын хăйпе калаçакана витĕр пăхса пăталасах лартать иккен, куçне илмесĕр калаçать.

– Алмас, сан пирки элчĕсем килсе кайрĕç, сана турхана лартма ыйтаççĕ.

– Атте хушнипе-и вара? Е хăй те пĕрлеччĕ-и? Мĕншĕн ман пата пырса каймарĕ вара вăл?

– Алмас, ывăлăм, аçу сан текех çук ĕнтĕ, вилнĕ вăл, пытарнă ăна.

– Ĕненместĕп, ĕненместĕп çакна, – терĕ Алмас макăрас пек сасăпа.

– Тĕрĕссине калатăп. Манăн унта шанчăклă çынсем пур, хыпарсене пĕлтерсех тăраççĕ.

Кун пек хыпар хыççăн ăçтан чăтса тăрăн-ха, куççулĕ хăй çулне тупатех. Çапах та Алмас хăйне çирĕпрех тытма тăрăшрĕ. Эсрел умĕнче макăрса тăни тăшманшăн савăнăç кăна. Макăрса тăшмана савăнтарас мар-ха.

– Ытлашши ан хуçăл, текех аçу вырăнне хам пулăп, – терĕ Эсрел Алмаса тĕреклĕ аллипе çурăмĕнчен лăпкаса. – Сана пăрахмăп.

– Ыр сăмахшăн тавах та... Ман вара халь мĕн тумалла, киле каймалла-и? Турхан туйи кам аллинче вара?

– Сана эпĕ аçу вырăнне лартасшăнччĕ, анчах çулу çинче тепĕр тăшман тупăнчĕ. Турхан туйи халĕ Улăп аллинче, пĕтĕм халăх умĕнче мăчавăр тыттарчĕ тет. Ку çеç те мар-ха, çав чăрсăр Улăп турхансене пĕтерсе пĕртен пĕр пуçлăха – чăваш патшине тухасшăн тет. Манăн шухăшăм вара пачах урăхла: чăваш патши санăн пулмалла. Ватрас ывăлĕ вĕт-ха эсĕ, турхан йăхĕнчен. Сан çулна уçас тесессĕн пирĕн иксĕмĕрĕн туслă пурăнмалла, Улăппа та пĕрле кĕрешмелле. Патша пуканне ăна вăйпа çĕнсе илмелле.

Çамрăк турханăн мĕн каламалла-ха ĕнтĕ? Тавçăрса илме те хĕн. Капашсăр пысăк шухăшсем капланса килчĕç, пуçра уçăмлăх çук. Çĕнсе илме те вăй çитмест. Пурте кĕтмен çĕртен вĕт-ха. Çамрăк пуçăн ăçта кайса кĕмелле, мĕнле хурав памалла, мĕнле тусассăн тĕрĕс? Никампа калаçса пăхма та çук, ашшĕ те çук...

– Ну çитĕ, кайса апатланар-ха. Паян эсĕ манăн сумлă хăна. Кун каçиччен калаçмалăх пур-ха.

Эсрел алă çупса сас турĕ те юнашар пӳлĕм алăкĕ уçăлчĕ, кĕтсе илекен арçын курăнчĕ, сăмсана тутлă апат шăрши кăтăкласа илчĕ. Чăнах та, самай пысăк пӳлĕмре сĕтел авăнас пек апат-çимĕç лартса тултарнă, мĕн кăна çук. Кун пек сĕтеле çамрăк турхан пĕрремĕш хут курать.

Тем тесен те чăваш йăли çапларах çав: апат çиессине пит пысăк вырăнах хумасть, тепĕр чухне кăшт-кашт çырткаланипех çырлахать. Алмас чухăн килте ӳсмен-ха ĕнтĕ, çăкăр-тăвар çителĕклĕччĕ, çапах та кунти пек мар. Нивушлĕ вара Эсрелĕн сĕтелĕ кашни кунах çакăн пек? Тен, чăнах та çамрăк турхана сума суса хатĕрленĕ çакна?

Вырнаçса ларсанах Эсрел ылтăнпа илемлетнĕ кăкшăмран кĕмĕл куркана сыпмалли ячĕ те пĕрле тумалли



ĕçсемшĕн тесе пушатрĕ. Алмасăн та ĕçмеллех ĕнтĕ, хăйне çитĕннĕ арçын пек тытмалла. Тутлă шерпет иккен, ĕçме çăмăл. Шерпет тути – пыл тути тесе ахальтен каламаççĕ. Алмас хăйне асăрханулла тытма тăрăшрĕ, Эсрел хăш çимĕç хыççăн хăшне çинине сăнаса пырса апатланчĕ. Урам урлă каçсанах урăхла йĕрке теççĕ вĕт. Кунта вара урам урлă каçни çеç мар, пач урăхла тĕнче. Арçынсем ĕçсе-çинĕ çĕрте пĕр хĕрарăм та çук. Çимĕç йăтса кĕрекенĕ те арçын.

Сыпкаланă хыççăн Эсрел чĕлхи чаракне çухатрĕ, самаях мухтанчĕ. Мĕн кăна çук иккен хăйне тĕнче пуçлăхĕ тесе шутлакан Эсрелĕн, каласа та пĕтереес çук. Чи чапли вара темиçе пинрен тăракан çарĕ, паян тесен паян Улăпа çапса çĕмĕрме хатĕрскер.

Эсрел аллине çупса илчĕ, пӳлĕме аллине хăнкăрмаллă пĕчĕк параппан тытнă хĕрарăм чупса кĕчĕ те ташша пуçăнчĕ. Вăрăм йĕмпе, çинçе пилĕкĕ уçах, кăвапи те курăнать. Хура куçĕсем пĕрре Эсрел çине, тепре Алмас çине питĕ илĕртӳллĕн пăха-пăха илеççĕ. Чаплă кавир çинче çаруран çĕлен пек явăна-явăна ташлать. Пилĕкне вылятса илнĕ чухне хăв ăçта ларнине те манса кайăн.

– Ну, мĕнле, килĕшет-и? – ыйтрĕ Эсрел çамрăк çын куç илмесĕр пăхса ларнине асăрхаса. – Кала, именсе ан тăр. Енчен те унпала уйрăм вырăнта выляса пăхас тесен, нимĕнле чару та çук. Хăнан кунта хăйне ирĕклĕ туймалла.

Ак чĕмере, ташлакан хĕрарăм Алмас патне вĕтĕ утăмсем туса чупса пычĕ те алăран тытса тăратрĕ, хăй патнелле туртрĕ. Мĕн амакĕ вара ку? Ура вăйĕ таçта кайса кĕнĕ, шăнăрсем те çемĕçнĕ. Нивушлĕ шерпет çапла тăвать? Алмас аллине карт! туртса илчĕ те хăй

вырӑнне ларчӗ. Лешне вара Эсрел хӑй патне чӗнсе илчӗ те шерпетпе хӑналарӗ. Хӗрарӑм питӗ вӗттӗн чупса тухса кайрӗ.

– Ура пачах та итлемест, – терӗ Алмас.

– Нумая пымасть вӑл, иртсе каять. Халӗ вара хам хӗрӗмсене кӑтартам. Ольган-ханума кала-ха, чӗнсе килтӗр, – хушрӗ хуҫа айккинче тӑракан арҫынна, – Чӑваш патшине тивӗҫлӗскерсем вӗсем. Суйла. Вӑхӑт ҫитсен тӗнчипе паллӑ туй туса ирттерӗпӗр.

Алӑк уҫӑлчӗ те тӑваттӑн кӗрсе тӑчӗҫ.

– Иртӗр, иртӗр, ман ҫамрӑк тусӑмпа паллашӑр. Ольган-ханум, кунтарах килсе тӑр-ха.

Ак тамаша, ханум текенни Ольга иккен. Вӑл та Алмаса тӳрех палласа илчӗ, утса пынӑҫемӗн пичӗ мӑкӑнь чечекӗ пек курӑнма пуҫларӗ. Именет ӗнтӗ. Ольга Эсрел патне пычӗ те питӗнчен чуп туса илчӗ, унтан – хӗрӗсем.

– Ольган-ханум, ячӗсене каласа тух-ха.

– Ку – Зангиджа, ку – Туркан, ку – Роксана, – паллаштарчӗ Ольга.

– Ку вара чӑвашсен пулас патши Алмас турхан.

Хӗрсем Алмас умне пӗрерӗн пырса пит-куҫне кӑтартса йӑл кулса илчӗҫ те пӗр сӑмах чӗнмесӗр чакса тӑчӗҫ. Пурте вӑрӑм тумпа, алли-ури пачах та курӑнмасть. Сӑнран вара самай илемлӗскерсем. Пӗри, Роксана ятли, тӳрех Нарпие аса илтерчӗ. Мӗн тӑвӑн-ха, тӗрлӗ ҫӗрте ҫуралсан та пӗрпеклӗх тупӑнать. Тумӗсем пирки каламӑпӑр та ӗнтӗ. Чи капӑрри вара Ольгӑн. Ҫамрӑк арӑмӑн та ун пек пулмасан тата? Эсрелӗн вӗт.

«Ахалех тӑрӑшатӑр. Ман пуҫра халь пачах урӑххи. Мӗншӗн алӑ вырӑнне ҫунат мар-ши? Килелле вӗҫӗттӗм те кайӑттӑм». Сан хӗрӳсем кирлӗ мар теес патнех ҫитнӗччӗ, ҫапах та Алмас хӑйне алла илчӗ. Тыткӑнра вӗт.

Хуçаран иртейместӗн. Паян капла та, ыран темле-ха... Тен, çавна шута илсех çамрӑк турхан чӗрре кӗме шутламарӗ, хӑна йӑлине пӑсмарӗ, çӑкӑр-тӑваршӑн тав турӗ те ура çине тӑчӗ. Хӗрарӑмсем тухса кайсанах Эсрел алӑ çупса леш арçынна чӗнсе илчӗ те Алмаса урӑх тум тӑхӑнтарма хушрӗ. Тепӗр пӳлӗме куçма тиврӗ. Çамрӑк турхан валли çар çыннин тумне хатӗрленӗ иккен.

– Ку мӗн тума тата? – ыйтрӗ тӳрех Алмас тӗлӗннине пытармасӑр.

– Çарӑçсем патне кайма ӗнтӗ, – хуравларӗ ку çинçе сасӑпа.

«Мӗнле арçынсем вара кунта, пур çӗрте те хӗрарӑм сассипе калаçаканскерсем», – шутласа илчӗ Алмас. Ӑçтан пӗлтӗр-ха ӗнтӗ вӑл кунти хуçалӑха тытса пынӑ çӗрте евнухсем, урӑхла каласассӑн, кастарнӑ арçынсем ӗçленине? Темиçе арӑмлӑ хуçа ун пек шанчӑклӑрах туять хӑйне.

Алмас тухнӑ çӗре Эсрел пысӑк кӳме патӗнче тӑрать. Юнашар – юланутлӑ хурал. Малтан турхан хӑпарса ларчӗ, унтан – Эсрел. Иккӗшӗ те йывӑр, кӳме тӗнӗлӗ авӑннӑ пекех туйӑнса кайрӗ. Кӗçех хускалчӗç. Акӑ вӗсем хуларан тухрӗç, ку хутӗнче çурçӗр енчи хапхаран. «Апла кунта тӑватӑ енче тӑватӑ хапха иккен», – шутларӗ Алмас унччен çӳренисене аса илсе. Тӑпра купалакансем те йышлах мар, хула хӳмине туса пӗтернӗпе пӗрех. Кӑштах кайсан юртӑсем, ӳплесем, сӑнӑ тытнӑ çынсем курӑнма пуçларӗç. Вӑрçӑ вӑййи пырать иккен. Кусене вара Озал кӗтсе тӑрать. Эсрелпе Алмас хӳмерен тухсанах çарӑçсем пурте чӗркуçленсе ларчӗç. Хуçа аллине çӗклесенех сӑрнай сасӑ пачӗ, каллех вӑрçӑ вӑййи тапранса кайрӗ.

– Лешсем ӑçта тата? – ыйтрӗ Эсрел хӑйӗн чи çывӑх çыннинчен.

– Çав йывăçсем патĕнче, – терĕ Озал айккинелле тĕллесе кăтартса.

– Чи тĕреклĕ чăвашсене суйласа илсе уйрăм çар турăмăр, – пĕлтерчĕ Эсрел. – Эсĕ вара, Алмас, вĕсен ертӳçи пулатăн.

Ак тĕнче! Сăнă тыттарнă чăвашсем ретĕн-ретĕн тăрса тухнă та пĕрре выртаççĕ, тепре сиксе тăрса малалла чупаççĕ. Кăшкăрса ятлаçни те илтĕнет, чăваш чĕрине касакан сăмахсем те лăк тулли.

Эсреле курсан чарăнчĕç те ушкăнсене пайланса ретпе тăрса тухрĕç. Асли чупса пырса вĕрентӳ мĕнлерех пынине пĕлтерчĕ. Хăш-пĕрисем итлесшĕн мар.

– Каланă сире ун пек чухне пурин умĕнче вĕрентсе илмелле тесе! – кăшкăрса пăрахрĕ Озал. – Итлеменнисене сăнăпа тирĕнтерсе çĕклĕр...

– Çак çарăçсене сана шанса паратăп. Çапăçма вĕрентессине ыттисем те тăвĕç, эсĕ вара ытларах сăмахпа ĕçле, хăв майлă çавăрса Улăпа хирĕç çĕкле, – хушса хăварчĕ Эсрел. Озал кунтах юлчĕ, ыттисене çар пуçлăхĕпе паллаштарчĕ, кайран ăна çарăçсем выртса тăракан юртăсене кăтартса çӳрерĕ. Алмас валли уйрăм юрта хатĕрленĕ иккен. Паянтан уншăн çарăç пурнăçĕ пуçланчĕ...

Алмаса пĕр шухăш канăç памасть: мĕншĕн-ха чăвашсем унпала калаçасшăн мар, пĕри те сăмах чĕнмест. Мĕне пĕлтерет ку? Чĕлхесĕр мар вĕт-ха вĕсем. Çапах та шухăшлакан пуç шыраса тупатех. Тен, хăйсен ертӳçисенчен, вунпӳсемпе çĕрпӳсенчен хăраççĕ вĕсем? Лешсем пурте Эсрел çыннисем вĕт-ха, вĕсен хаярлăхне çамрăк турхан пĕрремĕш кунах курнăччĕ ĕнтĕ. Çарăçсем хăйсене капкăнри пекех туяççĕ.

Акă, Алмас ыттисенчен айккинерех канма ларнă

ушкăн патне пычĕ те аслине шăппăн темĕнле ĕç хушрĕ. Лешĕ апат пĕçерекенсем патне утрĕ.

– Мĕнле пурăнатăр, мĕнле ыйтусем пур? – ыйтрĕ чăвашлах çар пуçлăхĕ.

Çарăççем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç, куççем те урăхларах йăлкăшма пуçларĕç.

– Пире чăвашла калаçма чараççĕ. Тӳрех патак тивет, – терĕ пĕри.

– Халĕ вара мĕн каламаллине калăр. Итлетĕп.

– Эсреле сутăннă турханпа мĕн калаçмалли пур, – персе ячĕ тепри тарăхнине палăртса.

Ав, мĕнре иккен калаçма кăмăл туманнин сăлтавĕ. Алмаса йышăнасшăн мар вĕсем.

– Эсĕ марччĕ-и-ха çырмаран чул йăтнă чухне нухайккапа çапса тăраканни, – хушса хучĕ тепри.

Мĕн калăн ĕнтĕ, чĕлхе те çаврăнмасть, сăмах та тупăнмасть.

– Чăвашсем, каçарăр мана, каçарăр. Çак ĕçе хам ирĕкпе туман эпĕ. Пĕтĕмпех Эсрел хистенипе.

– Пире кампа çапăçма хатĕрлеççĕ вара? Улăпа хирĕç тенине илтнĕччĕ, – пăрса ячĕ калаçăва çулĕпе ыттисенчен аслăраххи. – Санăн пĕлмеллех ĕнтĕ. Ахальтен Эсрелпе юнашар ларса çӳреместĕн пуль. Кунта эпир хамăр ирĕкпе килмен вĕт-ха. Мĕншĕн Улăп пире халăх тăшманĕ тесе сивлет? Ăçта кайса кĕмелле-ши? Ав, виççĕшĕ тарса пăхрĕç, ĕç тухмарĕ. Хăваласа çитсе тытса килчĕç те сăнăпа чиксе çĕклерĕç.

Алмаса тӳрех Озал каласа пани аса килчĕ. Ун сăмахне ĕненсен Улăп шухăшне лерен кунта тарса килнĕ çын пĕлтернĕ, имĕш. «Никама та каçармастăп», – тесе калать тет Улăп.

Кун пек хыпар, паллах, шухăша ярать. Тен, çакă

ёнтӗ вӑл пӗр чӗлхе тупма май паракан сӑлтав. Чӑваш патшине ларасах тесен Эсреле пулӑшмах тивет. Тепӗр тесен тата кам ҫӗнтересси те паллӑ – чӑвашсен вӑйлӑ ҫар ҫук.

Шухӑш вӑл тӗпсӗр ҫӑл куҫӗ пекех, пӗрмаях ҫӗнелсе тӑрать. Ӑна нихӑҫан та пӗтӗмпех каласа пӗтерме ҫук. Ҫарӑҫсем хушшинче вӑрҫӑ хускалчех-тӗк, пӗтӗм йышпа Улӑп енне куҫас шухӑш та пур. Анчах ӑна Алмаса пӗлтерес текен тупӑнмарӗ. Паллӑ ёнтӗ, кун пек шухӑша чи шанчӑклӑ ҫынна кӑна калама юрать.

Ҫын шутласа тупнӑ япаласенчен вӑрҫӑ пек хӑрушши, ирсӗрри урӑх нимӗн те ҫук. Мӗншӗнни те паллах ёнтӗ. Ҫын пурнӑҫӗ вӑрҫӑра ниме те тӑмасть: ӳкет те вилет, е ӗмӗрлӗхе сусӑрланса юлать. Чылай чухне ҫарӑҫсене пурне те вилессине пӗлсех ҫапӑҫӑва кӗртсе яраҫҫӗ. Алмас ҫарӗ те ҫавӑн пеккисен шутӗнче. Эсрел шучӗпе, ӑна ҫапӑҫӑва чи хӑрушӑ та йывӑр самантра кӗртсе ямалла. Вӗсен хыҫӗнчен ухӑҫсен пымалла, чӑвашсене чакма памалла мар, каялла ҫаврӑнса пӑхсанах персе пӑрахмалла. Умра вара Улӑп ҫарӗ. Урӑхла каласан, Алмас ҫарӗн ҫӗмрен ырӑнне пулса тӗп вӑйсене ҫул уҫса памалла. Анчах ҫакна хальлӗхе никам та пӗлмест-ха. Кун пек шухӑш вӑл икӗ ҫын вӑрттӑнлӑхӗ, Эсрелпе Озал шанӑҫӗ. Чӑваш чӑваша вӗлерни вӗсемшӗн калама ҫук пысӑк савӑнӑҫ, курай-манлӑх вучахне чӗртсе ямалли мел. Ҫапӑҫса пурӑнччӑр вӗсем. Ун пек халӑх никамшӑн та хӑрушӑ мар.



## XIV

Хăй кĕпине илемлетсе пĕтернĕ хыççăн Элпи Юман валли капăр шупăр çĕлеме хушнăччĕ. Шăпах çĕвĕçсемпе калаçса тăнă вăхăтра Минеслу кĕчĕ. Сывлăх сунчĕ те тӳрех хăй сăмахне пуçларĕ.

– Микка кам хушнипе аппаланать вара вăл? Мĕнле çурт пирки пакăлтатса çӳрет? Паян, ав, çынсене ĕçе хăваласа тухнă. Эсĕ хушнипе-и вара?

– Кермен лартаççĕ вĕсем. Улăп валли парне хатĕрлес тетĕп-çке.

– Ăнланма май çук сана, упăшкупа ывăлу вăрçăра асап кураççĕ, виççĕмĕш кун ĕнтĕ хĕрӳ çапăçу пырать, эсĕ вара хăвна питĕ çăмăлттайла тытатăн. Сан пуçунта хитре кĕпе те чаплă кермен...

Минеслу кётмен çёртен килсе кёрсе çапла калаçни Элпие, паллах, килёшмерё. Çитменнине тата ыттисен умёнче хирёлет. Çёвёçсем, ав, Элпи патшана курсанах пуçне чиксе кётсе илеççё. Ку вара кёнё-кёменех тёпчесе ыйтма тытăнчё. Калаçăва кунтах малалла тăссассăн тем те сиксе тухё.

– Минеслу турхан, – хăйне аран алла илсе сёнчё Элпи. – Атя-ха хам пата каяр, унта калаçар.

Картишне тухнăччё кăна, хёрарăмсене хирёç туя тытнă Улăп çумё хирёç пулчё, хытă уксахлать. Сулахай аллине шурă пирпе çыхса мăйёнчен çакса янă.

– Сывлăх сунатăп сире, Элпи, хыпарсем чаплах мар, – терё арçын сурансем ыратнипе çўçенсе илсе.

– Юман аманман пуль те? – хăраса ўкрё хёрарăм.

– Вёсем иккёшё те сывах-ха, паттăррăн çапăçаççё. Эпё ав... Хăвăрах куратăр, текех вёсене пулăшаймăп ёнтё. Аманнисем чылайăн, çавсене илсе килтём.

– Вёсем ăçта тата? – хыпăнса ўкрё Минеслу.

– Килёсене яма тиврё. Мён туса пурăнатăр вара эсир кунта? Мёншён халё те сыватмалли çурт хатёрлемен?

– Ёлкёреймерёмёр. Курăксем хатёрленё-ха. Çителёк-лех. Вилнисем те пур-и вара?

– Вăрçă унсăр пулмасть ёнтё.

– Атьăр-ха, кёрер, ларсах калаçар, – сёнчё Элпи сусăрланнă арçын ура çинче аран тăнине асăрхаса.

Улăп арăмё кёнё-кёменех чаплă пукан патне васкарё, вара тин кусене ларма сёнчё. Калаçăва малалла Улăп юлташё тăсрё, вăрçăри лару-тăру çинчен тёплёнрех пёлтерчё. Хёçсем, ухă йёпписем çитмеççё иккен. Çарăç-сем те сахалланса пыраççё.

– Чим-ха, мёншён тимёрçё лаççинче мăлатук сасси илтёнмест вара? Халăх ăçта?

– Кермен лартнӑ ҫӗрте вӗсем, – персе ячӗ тарӑхнипе чӑтаймасӑр Минеслу.

– Мӗнле кермен?

– Улӑп валли, – пӗлтерчӗ Элпи.

– Ӑна халӗ кермен мар, хӗҫӗ кирлӗ. Улӑп сана ҫапла хушса ячӗ: мӗнпур укҫана, пуянлӑха тимӗр илнӗ ҫӗре ятӑр терӗ. Тӳрех калатӑп, вӑхӑтра пулӑшмасан пӗтетпӗр. Е эпир, е вӗсем...

– Укҫине ӑҫтан тупӑпӑр-ха?

– Кунта ларнипе нимӗн те малалла каймасть. Санӑн халех халӑх умне тухмалла, – сӗнчӗ Минеслу.

– Мӗн калӑп-ха эпӗ ӑна?

– Тӗрӗссине каламалла. Эсӗ пуҫласа кӑна пар, ыттине веҫех хам каласа парӑп, – терӗ аманнӑ ҫарӑҫӑ. – Ялсем тӑрӑх каяр, ҫынсенчен пулӑшу ыйтар.

«Енчен те Эсрел ҫӗнтерсе килсессӗн мӗн кӗтет-ха мана? Е Юмана тыткӑна илсессӗн?.. Ирӗклӗх пулӗ-ши?.. Ҫук, Эсреле тӗп тумаллах ӑна. Вара ӗмӗтленни те пурнӑҫа кӗрӗ», – турӗ пӗтӗмлетӳ чее хӗрарӑм Элпи. Пукан ҫинчен тӑчӗ те чаршав хыҫне кӗрсе кайрӗ, унтан енчӗкпе тухрӗ.

– Акӑ, мӗн пуррине пӗтӗмпех паратӑп. Ыттине хӑвӑр пӗлӗр. Ман енчен чару ҫук, – терӗ Элпи. Кун пек ҫӑмӑлрах та, хӑвӑн чупса ҫӳресси ҫук. Хӑйсемех тем тума та хатӗр. Енчен те ӗҫсем ӑнӑҫлӑ вӗҫленсен чапӗ пурпӗрех Элпие тивет.

Ҫак самантра кусем патне иккӗн, амӑшӗпе хӗрӗ, кӗрсе тӑчӗҫ. Пӗрин аллинче хушпу, теприн – тухья.

– Элпи патшамӑр, йышӑнсам пирӗнтен ҫак япаласене, – терӗ амӑшӗ. – Аманса килнӗ упӑшкам веҫех каласа пачӗ. Май килсессӗн ҫак кӗмӗлпе хурҫӑ туянса хӗҫ тутар.

– Ку тухьяна кукамай парса хăварнăччĕ. Çĕнтерÿшĕн пултăр, – терĕ хĕрĕ.

– Хĕрĕме ухăран пеме вĕрентрĕм. Кирлĕ пулсан ăна та çара илĕр.

– Юманпа пĕрле çапăçма хирĕç мар эпĕ.

– Чылайăшĕ, ав, юлашки тимĕр япаласене йăтса тимĕрç лаççине утрĕ, – пĕлтерчĕ амăшĕ.

– Юрĕ. Çынсене пухăр. Калаçар эппин, – тинех татăклăн каларĕ сăмахне пур енчен те хĕссе çитернĕ Элпи.

Лешсем тухса кайсанах Чĕкеç кĕчĕ, юлашки хыпарсене пĕлтерчĕ. Аманнисем килнине пĕлсенех кермен лартма тытăннисем пăрахса тарнă иккен, усал Микка та тытса чарайман вĕсене. Майĕ те çук, кашнин тăванĕ вăрçăра чухне унти хыпара кĕтмен çын çук.

– Кала-ха, халăх умне мĕнле тумпа тухас-ши? Тен, çĕнĕ кĕпепе?

– Темле çав. Ĕççем мĕнлерех пынине шута илсессĕн ытла чаплă тума килĕштерĕç-ши?

– Юрĕ эппин, ăна тăхăнмалли самант çитĕ-ха. Мĕн калăп-ха çынсене?

– Чеерех пул, вăрçă пĕтсессĕн савăнăçлă пурнăç пуçланать те, хăв майлă çавăрма тăрăш. Сăмах пама ан ÿркен. Халăх ĕненет вăл. Асту, хаярлăхна пĕр пĕрчĕ те ан кăтарт. Санăн патшана лармалла. Паян сана унччен шарламаннине калатăп.

– Мĕн пирки тата?

– Эсĕ, мĕн, Улăпа пурте килĕштереççĕ тетĕн-им? Çук çав, уйрăмах сыпма юратаканнисем кăмăлсăр. Ытлашши нумай ĕçлеттерет текенсем те пур.

– Юрĕ, эсĕ кайса пăх-ха. Эпĕ халех тухăп, – терĕ Чĕкеçе Элпи.

Хĕрарăм патша йĕсрен якатса тунă тĕкĕр тытрĕ те çи-пуçне тӳрлеткелерĕ, майланчĕ-юсанчĕ. Çав самантра ун умне сасартăк Ишетер сăнĕ тухса тăчĕ. Хăй чĕлхипе темĕскер каласшăн, анчах хăраса ӳкнĕ Элпи тĕкĕре ывăтса ячĕ.

– Эй, турă! Тĕлĕк-и ку? Каçар мана, турă, каçар!

– Ха-ха-ха... Çук ĕнтĕ, турă текех сан майлă мар, – илтĕнчĕ арçын сасси.

Элпи хăранипе урама чупса тухрĕ. Унта çынсем пуррине курсан чарăнса тăчĕ, хăйне алла илме тăрăшрĕ. Инçетри тимĕрç лаççинче хĕç туптани илтĕнсе кайрĕ...

Çынсем килĕсене саланса пĕтнĕ хыççăн Микка пĕччен тăрса юлчĕ. Мĕн тумалла-ха? Элпи патне каяс-ши? Вăрçса тăкĕ те... Çук, тăхтамалла кăштах, вăхăт иртсессĕн хаярлăх та чакĕ.

Килĕнче ăна ача амăшĕ пулма хатĕрленекен Калима кĕтсе илчĕ, яланхи пекех апат сĕнчĕ.

– Çук-ха, темшĕн çиес килмест, – терĕ упăшки.

– Мĕншĕн ытлашши тунсăхлă вара эсĕ. Кулянмалли сиксе тухмарĕ-и?

– Килте ларса нимĕн те пĕлместĕн-ха эсĕ. Яла аманнă çарăçсем килнĕ. Çав хыпара илтсенех ĕçлекенсем тарса пĕтрĕç. Ниепле те чараймарăм.

– Пĕçернĕ апата çимеллех ĕнтĕ, – сĕнчĕ тепĕр хут Калима.

Ăна та ăнланмалла, çиекен вăл апатне кăна курать, тутлă пулнине ырлать, япăхраххи лексен – шарламасть, е кун пирки уççăнах калать. Апат пĕçересси мĕнле кăткăс ĕç иккенне тепри пачах та чухламасть. Унта хĕрарăмăн чи авалтан пыракан пултарулăхĕ, сыпăкран сыпăка куçакан ăсталăхĕ-çке-ха. Ах, япăх яшка пĕçересчĕ-ха текен хĕрарăм çук ĕнтĕ вăл. Çапах та пур

чухне те пӗр пек пиҫмест, мӗнле те пулин уйрӑмлӑх пурах.

Микка юлашки вӑхӑтра самаях ҫепӗҫленнӗ арӑмне кӳрентерес темерӗ, апат ҫиме ларчӗ. Шӑп ҫав самантра урампа юланутҫӑ тапӑртаттарса иртсе кайрӗ: «Пурин те пухӑнмалла! Элпи патша калаҫать!» тесе кӑшкӑрса хӑварчӗ.

Микка кайма шутламарӗ, унта мӗн калаҫнине тӑнласа тӑма Калимана ячӗ.

Ҫыннисем вара таҫтан та пухӑннӑ, паллӑраххисенчен Микка кӑна ҫук. Пӗлнӗ пекех килӗнче ларса юлчӗ. Вӑл пуҫарнӑ ӗҫе сивлесе калаҫнӑ май Микка ятне темиҫе хутчен те аса илчӗҫ. Элпие ятлаҫса калаҫакансем те тупӑнчӗҫ. Пуху Улӑпшӑн, ҫӗнтерӳшӗн кӗл тунипе вӗҫленчӗ. Ҫакӑншӑн мӑчавӑр питӗ ҫине тӑчӗ.

«Эппин, Элпи те пӗтӗм пурлӑха ҫара пулӑшнӑ ҫӗре ямалла тесе калаҫать. Енчен те кермен лартма панӑ укҫана каялла ыйтсан?..» – шухӑша кайрӗ Микка арӑмӗ каласа панине тӑнланӑ хыҫҫӑн. Тепӗр тесен, самани ҫапла ҫаврӑнса кайни, тен, япӑх та мар? Анчах алӑри ылтӑна мӗнле упраса хӑвармалла-ха? Пуҫ миминче хурав ҫук.

– Итле-ха, – сӑмах хушрӗ Калима, – ҫурт тума укҫа панӑ теттӗнччӗ, пӗтертӗн-и вара?

– Укҫи хам ҫумрах-ха, малашне темле пулӗ.

– Хамӑр алӑран вӗҫертмелле мар ӑна.

– Анчах мӗнле хӑварӑпӑр-ха. Элпи ыйтсассӑн мӗн калӑп-ха?

– Тен... Чим-ха... Сан кӗҫӗрех ют ҫӗре тухса каймалла. Эпӗ вара Элпи ыйтсан ҫурт тӑвакан ӑстасене тара тытма кайнӑ тейӗп. Эсӗ вара тепӗр икӗ кунтан кил те укҫана вӑрӑсем туртса илчӗҫ, хӗнесе пӗтерчӗҫ те.



Çапла турĕç те, Микка укçине питĕ тĕплĕ çĕре пытарса хучĕ те лаша çине утланса ялтан тухса вĕçтерчĕ. Тĕттĕмлениччен çитес тенĕ çĕре çитрĕ. Акă, умра вăрман варринчи уçланкă, сунарçă ӳпли, кăвайт чĕртсе какай ăшаламалли вырăн...

Лашине курăк çине янă хыççăн Микка кăштах утса çӳрерĕ те ӳплене кĕрсе выртрĕ, çывăрса кайиччен кунта пулса иртнĕ ĕçсене чылайăшне аса илчĕ.

Çамрăк та вăйлă Миккана Ватрас турхан яланах хăйпе пĕрле илсе çӳретчĕ, шанатчĕ ăна. Мĕн кăна курман çак уçланкăра Микка? Çапах та пуринчен малтан аса килекенни иккĕ. Пĕри вăл çак ӳплере пĕрремĕш хут хĕрарăм ытамĕнче юрату çимĕçне тутанса пăхни. Тепри вара каярах пулса иртнĕччĕ.

Пĕрре çапла пуш уйăхĕнче çак вырăна пăлан йĕрĕпе

килсе тухнăччĕ. Йытăпахчĕ. Вăл питĕ вĕрнĕ çĕре Ватрас чупса пырать. Ак тамаша, йытта хирĕç упа мĕкĕрсе тăра парать. Сăнă йăтнă турхан ун умне самай çывăх сиксе тухнипе вăрман хуçи тата хытăрах тарăхса кайрĕ, Ватрас çине сиксе ӳкрĕ. Лешĕ пĕтĕм вăйран кăшкăрать. Çакна Микка илтет те ыттисенчен маларах чупса çитет. Упа Ватраса тарăн юр çине пусса та антарнă. Микка нимĕн шухăшласа тăмасăр вăрăм çĕççине туртса кăларать те упа çине сиксе ларать, чĕререн лектерме тăрăшать. Темиçе хут яшлаттарнă хыççăн упа тӳнсе каять. Ыттисем те персе çитеççĕ, хăранипе тăнне çухатнă, упа айне лекнĕ Ватраса туртса кăлараççĕ, унтан – Миккана. Урине амантнипе тăраймасть иккен вăл. Хăй пĕтĕмпех юнланса пĕтнĕ...

Инçех мар упа шăтăкĕ пулнă иккен. Йытă вĕрнипе вăл сиксе тухнă курăнать. Тинтерех çеç çуралнă çурине хӳтĕлес тесе урса кайнă ĕнтĕ вăл. Упа çури тăлăха юлать, Ватрас килĕнче ĕне сĕчĕпе, килти çимĕçпе ӳсет.

Ачалăхăн савăнăçĕ выляса ӳсесси, упа çурин те çавах. Мĕн чухлĕ савăнăç кӳмерĕ пуль вăл килтисене. Çĕлĕк пысăкăш чĕрчуна упа сăнĕ кĕрсе пычĕ, самаях вăйланчĕ. Пĕррехинче çакскер, килтисем çук чухне, пӳртри япаласене веçех сирпĕтсе пĕтернĕ, минтерсене туртса çурнă, уйрăмах тиртен çĕленĕ тумтирсене хытă тулană. Темле юратса, ачашласа ӳстерсен те тискер чĕрчун тискерех çав вăл, вăрманаллах туртăнать... Хăйне тупнă вырăнах кайса яма тиврĕ. Çак ĕçе вара Ватраспа Микка иккĕш пĕрле турĕç. Леш упа тирĕ вара халĕ те Ватрас килĕнче урай варринче сарăлса выртать...

Çапла икĕ каç вăрманта çĕр каçнă хыççăн Микка лаши çине утланса ларчĕ те килелле çул тытрĕ. Вăрмантан тухас умĕн чарăнса унчченех шухăшласа хунă

ёҫне турӗ: ватӑ юман патне пырса тӑчӗ те ҫамкипе темиҫе хутчен тӑрслаттарчӗ, шӑйӑрттарса илчӗ. Юн палкаса тухрӗ. Шӑпах ҫакӑ кирлӗччӗ ӗнтӗ Миккана. Тумтирне темиҫе ҫӗртен ҫурчӗ те хӑй юнӗпе вараларӗ. Вара тин – килелле хыпаланчӗ.

Ял хӗррине ҫитсен Микка лаша ҫурӑмӗ ҫине урлӑ выртрӗ те сулланса тӑракан аллипе темиҫе хутчен ҫапса илчӗ. Лешӗ ӑна хӑй тӗллӗнех киле илсе ҫитерчӗ. Пӗрре вӗреннӗ ҫула пӗлетех, янавар. Микка ҫапла килнине курсан кӳршӗ хӗрарӑмӗ Калимана кӑшкӑрчӗ, лешӗ тухсан та пӗрлех пулма тӑрӑшрӗ.

Хӑраса ӳкнӗ Калима нимӗн тума аптранипе Миккана тӳрех Элпи патне илсе кайрӗ, хӑй лашине ҫавӑтрӗ, леш хӗрарӑм ҫамкаран юхакан юна чарас тесе шӑнӑр курӑкӗпе тытса пычӗ. Ҫитнӗ-ҫитменех Элпи хуралҫисем Миккана лаша ҫинчен антарса ҫӗр ҫине хучӗҫ.

– Ӑҫта пулнӑ вара вӑл? – ыйтрӗ тӳрех Элпи.

– Ҫурт тӑвакан ӑстасене тара тытма тесе тухса кайрӗ те...

Тӑнсӑр выртакан арҫынна шыв ӗҫтерме пикенчӗҫ, суранне тасатса пуҫне шурӑ пирпе ҫыхрӗҫ.

– Мӗн сиксе тухрӗ вара? – тесе ыйтса тӗпчерӗҫ.

– Вӑрӑсем ҫаратрӗҫ, – терӗ. Урӑх нимӗн те шарламарӗ.

– Веҫех сана пула! – вӑрҫма тытӑнчӗ макӑракан Калима Элпие. – Ман ачана ашшӗсӗр тӑратса хӑварас терӗн-им? Урӑх ниҫта та ямастӑп.

– Ытлашши ан хуҫӑл-ха эсӗ, вилмен вӗт вӑл.

– Пуҫран ҫапнине куратӑн пулӗ, тӑнсӑр тӑрса юлсассӑн вара? Мӗнле пурӑнмалла тет.

– Юрӗ, юрӗ, сире пӑрахмӑп, пулӑшсах тӑрӑп.

Миккана урапа ҫине майлаштарса хучӗҫ те леҫсе

ячӗҫ, пӳрте йӑтса кӗрсе нар ҫине вырттарчӗҫ. Лешсене ӑсатса янӑ хыҫҫӑн Калима пӳрт умӗнчи ҫӳпҫерен таса тумтир илсе кӗчӗ. Нар ҫинче ларакан Миккана курсан чӑннипех макӑракан арӑмӗ чутах тӳнсе каятчӗ. Упӑшки ахӑлтатса кулса ярсан тин тавҫӑрса илчӗ, хӑй те пӗрле кулма пуҫларӗ...

Микка темиҫе кун хушши килтех ларчӗ, хӑйсем патне ҫын пынине асӑрхасан – тӳрех вырӑн ҫине чӑмрӗ. Каярах вара туяпа ҫӳреме тытӑнчӗ. Элпи енчен укҫатенкӗ пирки калаҫу хускалмарӗ. Кермен лартасси те пӑчланчӗ.

## XV

Юлашки вӑхӑтра Эсрел керменӗнчи лару-тӑру самаях улшӑнса пынӑ пек туйӑна пуҫларӗ. Ҫакӑ, паллах, хуҫа хӑйне мӗнле тыткаланинче те сисӗнет: вӑхӑта ытларах хула тулашӗнче ирттерет, ӗҫӗнче йывӑрлӑхсем пурри ывӑнтарать ӑна, харкашуллӑ калаҫусем сике-сике тухаҫҫӗ, тарҫӑсене силлесе тӑкасси нимӗн те мар унӑн.

Ольга ҫакна асӑрхатех ӗнтӗ. Уйрӑмах ӑна Алмаса сумлӑ хӑна вырӑнне хурса йышӑнни тӗлӗнтерчӗ. Хуҫа хӑйне ырӑ ҫын евӗрлех тыткаларӗ. Те чеелӗх, те такамран хӑрани ҫапла хушрӗ. Алмаса уйрӑм ҫар ӗртӳҫине лартни те Ольгӑна самаях шухӑша ячӗ. Керменте пурӑнакансенчен Улӑп ятне илтсессӗн ун пирки тӗплӗнрех ыйтса пӗлме тӑрӑшрӗ, анчах йӗркеллӗ каласа паракан тупӑнмарӗ.

Пуҫа шухӑшлама тунӑ, ӗҫлеттермелле ӑна, пурӑннӑ чухне усӑ курса юлмалла. Шел пулин те, чылайӑшӗ пуҫ хӑватне хӑйпе пӗрле леш тӗнченех илсе каять. Ун пек ҫыннӑн пурнӑҫри йӗрӗ те часах ҫухалать.

Эсрел мĕншĕн-ха Улăп ятне илтсенех сăнран хăвăрт улшăнать? Çак канăçсăр ыйту Ольгăна унччен хăйне апат пĕçерсе çитерекен Ахмата аса илтерчĕ...

Çамрăк арăм упăшки çĕр каçма хăй патне пырасса кĕтрĕ, кĕтсе илеймерĕ. Черет çитмерĕ-ши? Вăхăчĕ темшĕн ытла та хуллен шăвать-çке, те питĕ кĕтнĕрен çавăн пек туйăнать. Пĕрремĕш хут çапла. Кирлĕ чухне юратман çынна та курас килет иккен.

Акă, каç енне кĕтнĕ ура сасси илтĕнсе кайрĕ. Эсрел çывхарни уттинченех паллă. Ун айĕнче урай хăми те чĕриклетсе авăнать.

Арçын вăл, тĕрĕссипе каласан, çитĕнсе çитнĕ ача кăна. Çакă вăл уйрăмах хĕрарăм çумĕнче паллă. Ачашлăх ытамне лексен хаярлăх та çухалать. Эсрел те çавах, паян уйрăмах: Ольга çине тăнипе, упăшки çумĕнче туйăмне ирĕке янипе унăн кăмăлĕ самаях çемçелчĕ. Çепĕç аллипе Эсрелĕн çăра çăмлă сарлака кăкăрне шăлкаласа илнĕçемĕн çамрăк арăм калаçăва хуллен çар ĕçĕ еннелле пăрса ячĕ.

– Алмас турхана хăвна усăллă ĕçе явăçтарни япăх мар-ха. Кусене вара, Остаппа Махмуда, мĕншĕн ахалех çитерсе усрамалла. Е эсĕ вĕсене килĕсене ярасшăн-и?

– Çук, ун пирки калаçу та çук. Вĕсене ярсанах хырçă тӳлеме пăрахас хăрушлăх пур. Хальлĕхе вара ашшĕсемпе калаçма та çăмăл.

– Тен, вĕсене хĕç тыттармалла та хула сыхланă çĕрте усă курмалла? Эпĕ ăнланнă тăрăх, халĕ санăн кашни вăйлă арçын шутра.

– Тĕрĕс ăнланатăн эсĕ, Ольган-ханум. Кун пирки Озала калăп-ха.

– Унăн ахаль те ĕç нумай, кунĕпех çарăçсемпе аппаланатăр вĕт. Кун пек пĕчĕк ĕçе хам та пултарăп. Патша

арăмĕ мар-и-ха эпĕ? Кирлĕ чухне хам та хĕç тытăп.

Арçынна упăшкипе пĕрешкел шухăшлакан арăм мĕншĕн ан килĕштĕр? Ольга ыттисем пек мар. Лешсем вĕсем Эсрел ĕçĕ пирки сăмах та чĕнмеççĕ, ытларах юрату ĕçне мала хураççĕ. Ольгăн вара пурте вырăнлă, ăсĕпе те аптрамасть.

Махмудпа Остап иккĕшĕ те пысăк ăру пуçлăхĕсен ачисем. Апла вĕсене кăштах сумлăрах ĕç хушмалла, калăпăр, Эсрел керменне сыхлама шанмалла. Ахмата вара апат пĕçернĕ çĕре илмелле. Шухăшланă – хуçа килте çук чухне пурнăçа та кĕртнĕ. Çумра шанчăклă çынсем пурри ытлашши мар. Меллĕрех май тупса Ольга Ахматран Улăп пирки ыйтса пĕлчĕ. Эсреле хăратма пултаракан вăй та пур иккен. Çакна хуçа хăй те чухлать-и, тен. Ахальтен мар çарне паян-ыран вăрçа кĕрес пек тытать. Сăннисем те тимĕр вĕçлĕ, хĕçсем çирĕп хурçăран. Çыннисем пĕри тепринчен тĕреклĕ: ачаран çар ĕçне вĕрентсе ӳстернĕскерсемпе пĕрле ытти çĕртен суйласа илсе килнĕ каччăсем. Алă вăйĕпе кăна çапăçас-тăк Эсрел çарне çĕнекен ниçта тупăнас çук. Çапах ал-ура вăйĕнчен иртterекен япала та пур иккен, вăл – ăс-тăн хăвачĕ. Мĕн кăна тумаççĕ çынсем пĕри теприн шухăшне пĕлес тесе: вăлтса ыйтакан та, вăрттăн итлесе тăракан та пур. Урăхла мелпе усă куракан та тупăнать.

Акă Архан урампа пыракан Ахмата тĕл пулчĕ те калаçмалли пур тесе айккинерех кайса тăма чĕнчĕ. Тен, тăван енрен килнĕ хыпарсене пĕлтерĕ тесе Ахмат кăмăлпах пĕрле утрĕ. Пĕр çурт хыçне çитсен Архан ăна хирĕç çаврăнса тăчĕ те:

– Кала тĕрĕссине, Эсрел арăмĕ санпа мĕн пирки калаçрĕ? – тесе тĕпчеме пуçларĕ.

Пач кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ыйту Ахматшăн пуç-

ран çапнă пекех туйăнса кайрĕ. Ольгăпа калаçнă чухне никам та çукчĕ вĕт-ха. «Кам хушнипе пĕлесшĕн-ши вара ку?» – тӳрех çуралчĕ хирĕçле ыйту.

– Эпир мĕн калаçни сана мĕн тума кирлĕ? Кала, çакна кам хушнипе ыйтатăн? Кам майлă эс? – тесе хирĕç лаплаттарчĕ.

– Сан пĕлмесен те юрать. Кала тĕрĕссине!

– Тутлă апат пĕçерме мĕнлерех çимĕçсем кирлине кăна пĕлтертĕм ăна.

– Çук, суятăн. Апла мĕншĕн вăрттăн çĕрте калаçрăр?

«Улăп майлă пулсан мĕншĕн уçăмлăн пĕлтерместши? Эсрел хушнипе мар-ши? Çук, кун умĕнче чĕлхене ирĕке ямалла мар» – шухăшларĕ Ахмат.

– Мĕншĕн ыттисен умĕнче сӳтсе явмалла вара çак ыйтăва? Эсрел килĕ валли апат пĕçересси вăл çав тери пысăк яваплăх пулнине чухламастăн-им? Ахальтен мар ĕнтĕ малтан ман хамăн çисе кăтартмалла. Вара тин ыттисем çиеççĕ.

Архан сасартăк çĕçĕ туртса кăларчĕ те шĕвĕр вĕçĕпе Ахмат пырне тĕллерĕ.

– Кала тĕрĕссине! Е çакăнтах сĕрсе пăрахатăп, – терĕ куçне чарса.

– Ну, юрĕ, юрĕ, каласа парăп эппин, йĕркипех, – лăплантарма тăрăшрĕ Ахмат урса кайнă Архана. Чиксе те пăрахĕ. Анчах Ольгăпа калаçни вырăнне мĕн каласа ĕнентермелле-ха ăна, мĕнле сăмах тупмалла? Чăн сăмаха Ахмат никама та калас çук.

– Эсрел çинчен калаçрăмăр, – персе ячĕ Ахмат.

– Мĕн пирки вара?

– Хĕрарăма ăçтан пĕлсе пĕтерĕн ăна? Эсрел çапăçура вилсен кунти пуçлăха хăш ывăлĕ ларĕ-ши тет.

– Ав мĕн пирки иккен. Вăрçи пуçланман та, вĕçĕ

вара халех канăç памасть. Чим-ха, хăйĕн пуçлăх пулас килмест-и-ха унăн? Шан ăна, чее хĕрарăма.

– Тӳрех калатăп: ку вăл ман ĕç мар. Ольган-ханума та çаплах каларăм. Маншăн пурпĕрех, хăш ывăлĕ ларассине хăйсемех татса парĕç.

– Пĕри те пулмасть, – пытараймарĕ хăй шухăшне Архан. – Вĕсем иккĕн те Эсрелĕн пĕр кача пӳрнине тă-маççĕ. Çитменнине тата тĕрлĕ хĕрарăмран. Патша пуканне хăшĕ йышăнмалли уçăмлах та мар.

– Çулпа аслăраххи пуль ĕнтĕ.

– Леш пĕрмаях хĕрарăмсемпе алхасса выртаканни-и? Ăна пĕр шит те шанма çук. Тилхепене Озал аллине памалла та...

Халь тин Архан камшăн çине тăни палăрчĕ. Озалăн вăрттăн ĕçлекен тусĕ иккен вăл, урамра, пасарта, кермен çывăхĕнче çынсем мĕн калаçнине хăлха тăратса итлесе çӳрекенни, кам кампа тĕл пулнине хуçине пĕлтерекенни. Халĕ вара вăл Ахматпа Ольга мĕн калаçнине çĕçĕпе хăратсах ыйтса пĕлчĕ.

Хуть те мĕнле япала та пĕр енлĕ çеç пулмасть. Çак тĕлпулу пирки те çавнах каламалла. Ахматшăн та усăсăр мар вăл. Халĕ паллă ĕнтĕ: Эсрел пуканне йышăнас текенни хăй çумĕнчех çӳрет иккен. Тен, паллах, Архан калани вăл ун шухăшĕ кăна, ăçтан пĕлсе пĕтерĕн вĕсене. Çапах та Архантан илтнине Ольгăна пĕлтермеллех.

Ку хутĕнче вара Ольга хăйне тата хăюллăрах тытрĕ, ирĕке тухас тесен пурин те пĕр шухăшлă Улăпа пулăшма тăрăшмаллине пĕлтерчĕ. Эсрел пусмăрне тӳсекен халăхсен шанăçĕ пĕртен-пĕр Улăпра ун шучĕпе. Анчах ăна пулăшма мĕнле май тупмалла-ши?

## XVI

Улăп çар пухнине пĕлсенех Эсрел чикĕ хĕррине ухăран ăста перекен юланутçăсене ячĕ. Вĕсен кĕтмен çĕртен сике-сике тухса кунталла килекен Улăп çарне тапăнса пăхмалла, лешĕ мĕнлерех шайрине тĕрĕслемелле çапла майпа. Тен, сиен кӳрсе хавшатма та май килĕ? Ун пек чухне кăшт çыртса пăхни те теме тăрать. Юланутçăсем çапла турĕç те. Васкамасăр куçса пыракан тĕп вăйсене асăрхасан сиксе тухрĕç те темиçе хутчен ухă йĕпписем вăркăнтарчĕç. Лешсем хирĕç пеме пуçличчен тарса ĕлкĕрес тесе каялла çаврăннăччĕ кăна, Улăп юланутçисем сиксе тухрĕç те çавăрса илчĕç, пĕр çын юлми шĕкĕлчерĕç. Ĕç çапла сиксе тухасса Улăп малтанах чухланă çав, çара сыхлакан ушкăнсем тунă та вĕсене маларах янă. Çакăн хыççăн Улăп çулĕ çинче текех нимĕнле чăрмав та сиксе тухмарĕ. Ыттисем тапăнма хăраса тăчĕç. Вĕсен текех Улăп вăйлă çарпа килнине Эсреле пĕлтермелли кăна юлчĕ апăршасен.

Анчах лешĕ те тĕплĕн хатĕрленнĕ. Малти хуралсем пĕлтернĕ тăрăх, Улăп çарне таса уйра кĕтсе илме шутлаççĕ иккен вĕсем, çарăççене те вырнаçтарса тухнă. Кам ăçтан сиксе тухмаллине, кам – маларах, кам хыçаларах пымаллине пĕлеççĕ.

Улăпа вара пĕр шухăш канăç памасть. Мĕншĕн-ха вĕсене тăшман хăй çĕрĕ çинче кĕтсе илет? Тĕп хули те ытлашши инçех мар-çке. Мĕнле те пулин вăрттăнлăх, чеелĕх çук-ши кунта? Вара вăл Эсрел суйласа илнĕ уя хăй кайса пăхма шутларĕ. Çарăççене апатланса канма хушрĕ, асли шутĕнче, паллах, Юмана хăварчĕ.

Акă Улăп çӳллĕрех вырăнтан лаши çинчен анмасăр тавралăха питĕ тимлĕн тишкерет.

– Мĕнле шутлатăн эсĕ, юланутçăсене ăçта вырнаçтарма пултарнă вăл? – ыйтрĕ Улăп хурал пуçлăхĕнчен.

– Калама пултараймастăп, тен, çакă вăл ун тĕп çарĕ те мар.

– Э-э-э... Çук, Эсрел ухмах мар вăл. Куратăн-и, айккинче пысăках мар вăрман татăкĕ пур.

– Куратăп.

– Юланутçăсене шăпах çавăнта тытать те ĕнтĕ вăл. Тепĕр енче, ав, çӳллех мар сăрт курăнать. Ун хыçĕнче те юланутçăсем тăма пултараççĕ. Вăрттăн çитсе килмелле унта. Тĕрĕслесчĕ. Вăрманĕ пирки вара нимĕнле иккĕленӳ те çук манăн. Пăх-ха эсĕ ăна, Эсрел шучĕпе пирĕн тӳрех çаксемпе тытăçса каймалла ĕнтĕ. Çав хушăра икĕ енчен юланутçăсем сиксе тухмалла та пире хĕскĕче хупса лартса тураса тăкмалла. Çу-у-у-к, Эсрел, кĕтсе илеймĕн çакна.

Çарăç вăл ахаль çын пек мар. Кăмăлĕ те урăхла. Алла сăнă тытрăн, эппин, çапăçмалла. Ахальтен-и чылай вăхăт хушши тĕплĕн хатĕрленнĕ!

Улăп каялла таврăнчĕ те Юманпа канашласа пăхрĕ, чылай пысăк шурă чул çинче пĕр самант нимĕн шарламасăр ларчĕ, унтан тин çĕрпӳсемпе пинпӳсене чĕнсе илчĕ. Çапăçу йĕркине сӳтсе яврĕç, çарăççене, лашасене, тĕвесене ыран ирччен кантарас терĕç, çывăрма выртассине тĕттĕмлениччен кĕтме хушмарĕç. Улăпăн хăйĕн те канса илмелле. Тен, ыран Эсрелпе тытăçма тивĕ?

Çĕрлехи вăхăт вăрттăнлăхпа пуян. Тем те сиксе тухма пултарĕ, уйрăмах икĕ вăйлă çар хире-хирĕç тăнă чухне пăтравлă. Çавăнпа та Улăп Юмана каçхи хурала вăйлатма хушрĕ. Ывăлĕ ашшĕ хушнине пурнăçларĕ, унтан пулас çапăçу хирне хăй ятарласа кайса пăхрĕ. Нихăçан сухаласа тырă акман вырăн. Леш вăрмантан кăшт кунтарах пĕч-

ченшерӗн ӳсекен йывӑҫсем пур. «Юланутҫӑсем ҫавӑнтан сиксе тухаҫҫӗ пуль ӗнтӗ», – шутласа илчӗ ашшӗ каланине аса илсе. «Чим-ха, енчен те ҫав сайра йывӑҫсенчен лайӑх карӑнтарса тӗреклӗ пӑявсем ҫыхса хурсассӑн?..»

Ҫак шухӑш пӗрле пӑхса тӑракансене те килӗшрӗ. Анчах мӗнле пурнӑҫламалла-ха ӑна? Ытла та хӑрушӑ вырӑн вӗт. Эсрел ҫыннисем асӑрхасан? Ҫапах та хӑюллӑ ҫарӑҫсем тупӑнчӗҫ, ҫур ҫӗр ҫывхарнӑ тӗле пӑяв ҫыххисене илчӗҫ те тухса шурӗҫ...

Хӗвел тухнӑ-тухманах пурне те сӑрнай сасси вӑратрӗ. Паян калама ҫук яваплӑ кун, мӗн парнелет-ши вӑл чӑвашсене: пурнӑҫ е вилӗм? Пӗрле килнӗ ҫамрӑк мӑчавӑр йӗркеленипе пурте хӗвеле хирӗҫ чӗркуҫленсе ларчӗҫ те турӑран, хӗвелтен, вилнӗ ватӑсенчен ҫӗнтерӳ ыйтрӗҫ. Вара тин ирхи апата ларчӗҫ.

Кӗҫех темиҫе пинлӗ ҫар ҫапӑҫу хирне тухса тӑчӗ. Лешсем те кӗтсех тӑнӑ, ретӗн-ретӗн тӑрса тухнӑ. Малтисем пурте  вӑрӑм сӑнӑ тытнӑ. Акӑ, икӗ ҫар пӗр-пӗрин патне тата ҫывӑхарах пырса тӑчӗ, вӗсен хушши ик ҫӗр утӑмран ытла та мар. Улӑппа Эсрел те пӗр-пӗрне палласа илчӗҫ ӗнтӗ.

Авалхи йӗркепе малтан икӗ паттӑрӑн тухса ҫапӑҫмалла. Улӑп Эсреле кӗтнӗччӗ, анчах вӑл хӑй тухмарӗ, Озала кӑларчӗ. Ҫакна курсан Юман хӑйне кӑларма ыйтрӗ, тархасласах ҫине тӑчӗ. Улӑп хӑй тухнӑ пулӗччӗ, анчах ку ҫын Эсрел мар вӗт, ӑна ҫӗнтерсен те чысӗ пысӑках мар.

– Ывӑлӑм, халӑх вӑйӗ сана пултӑр! – терӗ те Улӑп аллипе малалла тӗллерӗ.

Юман лаши ҫапӑҫу вырӑнне тапса сикрӗ. Акӑ, вӗсем хӗҫҫисене ҫӗклерӗҫ, сулахай аллисенче ҫӳхе тимӗртен тунӑ хӳтлӗх. Ҫирӗп хурҫӑ янравӗ аякранах илтӗнет,

kaçхине пулсан, тен, хӗм сирпӗнни те курӑнатчӗ-тӗр. Лашисем те чӗввӗн тӑраççӗ, мӗн пулса иртнине чухлаççӗ вӗсем те. Çамрӑккипе асли çапӑçаççӗ. Озалӑн ӑсталӑхӗ пысӑкраххи сисӗнет, Юман вара тӗреклӗрех, вӑйлӑрах. Вӑл сулса янӑ хӗçӗ тӗл лекес-тӗк, ӑнӑçу пулмаллах! Акӑ, лашисем кӑштах каялла чакрӗç те каллех пӗр-пӗрин патнелле ыткӑнчӗç, Юман хӗçне вӑйпа сулса ячӗ те лешӗн хӗççи сирпӗнсе кайрӗ. Çакӑ çамрӑк паттӑра татах та хӑюллӑрах çапӑçма хистерӗ. Озал хӳтлӗхе сылтӑм алла куçарса сыхланма тӑрӑшрӗ, анчах ӗç тухманнине сисрӗ те каялла тарма шутларӗ. Юман лаши кайӑк пек вӗçсе çитсессӗн паттӑр хӗççи хӗвел çинче йӑлкӑшса илчӗ те Озал пуçӗ сирпӗнсе кайрӗ. Пуçланчӗ вара...

Эсрел малтан вӑрӑм сӑнӑ йӑтнӑ чӑвашсене кӗртсе ячӗ. Ниçта кайса кӗме çук, малта хамӑрӑннисем, хыçалта ухӑ перекенсем. Ирӗксӗрех çапӑçма тивет. Пурпӗрех вилӗм. Акӑ, пӗри хыттӑн кӑшкӑрса ячӗ: «Чӑвашсем! Эсреле хирӗç каяр!» Çакна илтсен темиçе çын сӑнӑсене каялла тӗллерӗ, вӗсем хыççӑн – ыттисем...

Çакна çӳллӗ вырӑнтан пӑхса тӑракан Эсрел курчӗ, вӑрман еннелле çаврӑнса аллине сулчӗ. Лерен юланутçӑсем вӑркӑнса тухрӗç. Ак чӗмере, чи малтисен лашисем пӗрин хыççӑн тепри сирпӗне-сирпӗне кайрӗç. Вӑрттӑн карнӑ пӑявсем хӑй ӗçне турӗç. Çитменнине тата çав самантра Улӑп та хӑйӗн утлӑ çарне кӑларса ячӗ. Эсрел сӑрт еннелле çаврӑнса аллине сулчӗ. Каллех лашасем курӑнса кайрӗç. Кусен çулне те Улӑп юланутçисем пӳлчӗç. Вӑрçӑ хирӗ хӗç янравӗпе, лашасем тулхӑрнӑ, çынсем кӑшкӑрнӑ сасӑпа тулса ларчӗ.

Эсрел çумӗнче тӑракансем кунтӑксене уçрӗç те кӑвакарчӑнсене кӑларса ячӗç. Лешсем пӗр ушкӑна пухӑнса вӗçсе çаврӑнчӗç те хуланалла васкарӗç. Çакӑ вӑл çапӑç-

нăçемĕн чакса пымаллине пĕлтерет. Каярах вара чупсах тарчĕç.

Юман-паттăр хыçалтан хăваласшăнччĕ, анчах ăна Улăп тытса чарчĕ. Ытла хĕрӳллĕскер, вăрçă йĕркисене пурне те пĕлмест-ха вăл. Унта темле чеелĕх те сиксе тухма пултарĕ. Таçталла илĕртсе кайĕç те кунта юлнисене хӳтĕлекен тупăнмĕ. Аманнисене те, вилнисене те тирпейлеме хушусем тумалла. Çав хушăрах тата тăшмана ытлашши инçе кайма та памалла мар. Меллĕ вырăн тупса вырнаççсан пысăкрах сиен кӳме май пур.

Кăштах сывлăш çавăрса ярсан – тăшман хыççăн малалла. Эсрел вара ниçта чарăнса тăмасăр тарчĕ. Хулан тăватă енчи тăватă хапхи ун çарне кĕтсе уçă тăрать. Улăп çарĕ çитнĕ çĕре хула хапхисем хупăнса питĕрĕнчĕç. Акă, Эсрел çыннисем çӳллĕ хӳме тăрне улăхса тăчĕç те ухăпа пеме пуçларĕç. Сăнă ывăтакансем те пур. Патне те ямаççĕ. Хăйсене лектерме ниепле те май çук, кăкăр таран çеç курăнаççĕ, сăннине пенĕ хыççăн пĕшкĕнеççĕ те курăнми пулаççĕ. Вăрăм пусмасемпе хăпарма пулĕ-ха, анчах вĕсене çителĕклĕ таран туса хатĕрличчен вăхăт нумай кирлĕ. Мĕн тумалла-ха?

Эсрел хăй хули тавра хӳме тытни çинчен Улăпа пĕлтернĕччĕ-ха, анчах çакăн пек çӳллĕскер тесе шутламан. Юман та нимех те сĕнеймест. Кун пек çарăçсене пĕтерни çеç.

Шăпах çапла пуç ватса тăнă вăхăтра Улăп патне Ахмата илсе пычĕç. Лешĕ, çар пуçлăхне пĕрремĕш хут кураканскер, тӳрех чĕркуçленсе ларчĕ те пуçне усрĕ.

– Каламалли пур тет вăл, анчах Улăпа хăйне кăна тет, – пĕлтерчĕ хурал.

– Апла пулсассăн ыттисем кайччăр. Юман эсĕ кунтах юл.

– Улăп паттăр, итле мана. Çарăççен пĕр ушкăнне инçетрен çаврăнса кăнтăр енчи хапха патне илсе тух. Кусем вара çакăнтанах йĕкĕлтесе тăччăр. Шалта унта хапхана уçма хатĕр çынсем пур. Ыттине вара хăвăр пĕлĕр.

– Кам пулатăн эсĕ? – ыйтрĕ Юман.

– Ахмат эпĕ, Минеслу йăхĕнчен.

– Апла кайрăмăр! – терĕ Ахмата Улăп хăйĕн ирĕклĕ лаши çине утланма сĕнсе.

Юман кунта мĕн тумаллине ăнланчĕ, пĕрмаях тапăнса тăмалла. Лешсем вара юланутçăсемпе каялла чакнă пек турĕç те Ахмат хыççăн кайса кăнтăр енчи хапха патнелле вĕçтерчĕç.

Эсрел çурçĕр енчи хапха патĕнче кăтартусем парса тăнă вăхăтра Ольгăпа ун майлисем, вĕсен шутĕнче Остаппа Махмуд та, хапха патне пычĕç те чарăнчĕç. Ольга хапхана сыхлакан ушкăн пуçлăхне айккинерех чĕнсе илчĕ те хăй шухăшне пĕлтерчĕ.

– Пĕтетпĕр вĕт. Улăп патне хам каятăп. Кăларса яр мана.

– Çук, çук, – хăраса ӳкрĕ лешĕ, – Эсрел никама та уçма хушман. Мĕншĕн хăй патĕнчен тухмастăн тата?

– Пăх-ха, мĕн мăкăрланать унта?

Чăнах та, хулара пушар пуçланнă иккен. Пĕр тавçăруллă чăвашĕ ухă йĕппи вĕçне çĕтĕк чĕркет те ирĕлтернĕ тĕве çăвне пуçса илет, унтан çунса тăракан кăвайтран чĕртсе ярса ухха хӳме урлă тĕллет. Кĕçех çавăнталла вуншар сăнăпа ухă йĕппи вĕçме пуçлать. Унта та кунта пушар сиксе тухать. Çакна Эсрел пачах та кĕтмен.

Хула çунма пуçланине курсан хапха хуралĕ хăраса ӳкет. Ольга вара çине тăрсах тархаслать, ĕç ăнăçлă вĕçленсен кусене кермен сыхланă çĕре илме сăмах парать,

аллине ылтӑн укҫа тыттарать. Лешӗ парӑнать. «Кӑшт кӑна уҫатӑп, эсӗ вара хӑвӑрт тухса кай», – тет.

Ҫав хушӑра хапха тӑрринче тӑракан Махмуд сӑнӑ вӗҫне тутӑр ҫыхса суллать. Хапха кӑшт уҫӑлсанах айккинерех тӑракан Остаппа юлташӗсем чупса пыраҫҫӗ те хурала ҫапса пӑрахса хапхана яриех уҫса яраҫҫӗ. Малта Ахмат вӗҫтерсе пырать, ун хыҫҫӑн хӗҫӗ тытнӑ юланутҫӑсем. Улӑп та вӗсемпех. Ольга вара аран пӑрӑнса ӗлкӗрчӗ. Ахмат лашине кӑштах чарчӗ те сиксе анчӗ, Ольга патне чупса пычӗ. Ҫав хушӑра вӗсем ҫинелле хӳме тӑрринчен сӑнӑсемпе ухӑ йӗпписем вӑркӑнчӗҫ. Иккӗшӗ те ҫӗр ҫине тӗшӗрӗлсе анчӗҫ...

Шал енче хӳме тӑррине хӑпармалли сӗвек вырӑнсем пур иккен. Юланутҫӑсем ҫакна хӑвӑрт тавҫӑрса илчӗҫ те лашисене ҫавӑнталла хӑваларӗҫ. Лешсем вара хӑраса ӳкнипе унталла та кунталла сикме тытӑнчӗҫ.

Улӑппа Эсрел шӑпах кермен умӗнчи тӑваткӑлта тӗл пулчӗҫ, хӗҫҫисене хытӑ чӑмӑртаса тытрӗҫ те ҫапӑҫма пуҫларӗҫ. Усалпа Ырӑ хушшинчи кӗрешӳ. Ҫӗр чӗтресе тӑрать, ӑнсӑртран хӗҫ тивнӗ йывӑҫсем тӳне-тӳне каяҫҫӗ. Улӑп кун пек хаяррӑн ҫапӑҫнине ку таранччен никам та курманччӗ. Лешӗ те парӑнасшӑн мар, пӗтӗм вӑйне хурать. Ҫапах та Улӑп хӗҫҫи хӑй ӗҫне турӗ, Эсрел пуҫӗ татӑлчӗ...

Хула хапхисем пурте уҫӑ иккен. Нарпи те кунтах. Остаппа аманнӑ Махмуд ыттисем пулӑшнипе Ольгӑпа Ахмата йӑтса килчӗҫ те Эсрелпе юнашар выртрарчӗҫ. Виҫӗ вилӗ – икӗ шӑпа. Пӗри тӗнче пуҫлӑхӗ пуласшӑн сӗкӗнчӗ, иккӗшӗ ирӗклӗхшӗн пуҫне хучӗҫ.

Улӑп патне Эсрелӗн аслӑ ывӑлне илсе пычӗҫ. Кӗҫӗнреххи ҫапӑҫура пуҫне хунӑ иккен. Ку вара вӑрҫӑ пуҫлансан та ҫуртӗнчен тухман, чиперккесен ытамӗнчех юлнӑ.

– Çĕнтерӳçĕ умĕнче пуçăма таятăп. Эсĕ хушнине, Улăп-паттăр, пурне те тума хатĕр. Пуçăма кăна ан кас.

– Мĕншĕн çапла калатăн вара? Улăп çын юнĕшĕн кăна çунать тетĕн-им? Çук, айăпсăр çынна тĕкĕнме аллăм çĕкленмест. Текех кунти хуçа эсĕ пулатăн. Улăпа хирĕç вăрçăпа тухмастăп тесе сăмах пар. Пĕтĕм халăх илтмелле кала.

Лешĕ хĕпĕртесех сăмах пачĕ, хăйне чĕрĕ хăварнăшăн тав турĕ.

– Мана пурĕ те икĕ япала кăна кирлĕ. Пĕри – туртса илнĕ çĕрсене каялла тавăрасси, тепри – кунти чурасене киле ярасси.

Çав хушăра Нарпи Юмана хăлхаран темĕскер каларĕ.

– Эпĕ хирĕç мар, – терĕ Эсрел ывăлĕ.

– Кунта Алмас ятлă çамрăк турхана вăйпа тытса усранă теççĕ, çавна курасчĕ, – ыйтрĕ Юман.

– Алмас тенине илтнĕччĕ, анчах вăл ăçтине калаймастăп.

– Эсрел ăна кунти чăвашсенчен йĕркеленĕ çарăçсене ертсе пыма уйăрса лартнăччĕ. Вăрçă хирĕнче ĕнтĕ вăл, – пикенчĕ ăнлантарма пирпе çыхса янă аллине çӳлелле кăнтарса тăракан Махмуд.

«Апла вăл çапăçăва чи малтан кĕнисен шутĕнче пулнă иккен», – тавçăрса илчĕ Нарпи.

– Улăп-аттемĕр, ирĕк парсам мана Алмаса шырама кайма.

– Тупсан калăр, ман унпа калаçмалли пур, – терĕ Улăп.

Юман та пĕрле пыма шутларĕ, темиçе юланутçăна суйласа илчĕ те Нарпие хăй умне лартса лашине хăваларĕ...

– Улăп-паттăр, тавах сана пире ирĕке кăларнăшăн, –

терĕ Остап. – Анчах çакна пурте кĕтсе илеймерĕç. Акă, вĕсем хапха уçса кĕртекенсем, иккĕшĕ те юнашар выртаççĕ.

Улăп вара Ахмата пĕрле илсе кайма хушрĕ. Ольгăна кунтах пытарас терĕç.

– Улăп-паттăр, ман калаçмалли пур. Кермене кĕрсе чыс тумăн-ши? – сĕнчĕ Эсрел ывăлĕ.

– Юрать, эсĕ патша пуканĕ çинче мĕнле ларнине курам, эппин. Анчах эпĕ нумайлăха мар, каçчен çар вырнаçнă çĕре çитмелле.

Акă вĕсем Эсрелĕн капăр пӳлĕмне кĕчĕç. Патша пуканĕ çинче пĕр хĕрарăм лара парать, Эсрелĕн пĕрремĕш арăмĕ иккен. Çавă хуçа пуласшăн.

– Ывăлăм, васкама кирлĕ мар. Сана çак пукан çине ларма иртерех-ха. Малтан çăмăлттай шухăшсене пăрахасчĕ. Сана эпĕ пĕр çуллăха Улăп патне яратăп. Эсĕ вара, Улăп-паттăр, унтан чăн-чăн арçын тума тăрăш, ĕçлеттер, пурнăçа вĕрент, çынлăхне вăрат. Ашшĕ хаярлăхпа пуçне хучĕ, кун вара ясарлăхпа пĕтес хăрушлăх пур.

– Çук, çак ватсупнăна ан итле. Вăл тем те калĕ. Кай кунтан, – терĕ те ывăлĕ амăшне çӳллĕ пукан çинчен туртса антарчĕ.

Çакăн пек намăса курас мар тесе Улăп тухса утрĕ. Унта ăна каялла кайма хатĕрленнĕ çĕнтерӳçĕсем кĕтсе тăраççĕ.

Нарпипе Юман çитнĕ çĕре аманнисемпе вилнисенчен чылайăшне пĕр çĕре пуçтарнă ĕнтĕ. Анчах вĕсен хушшинче Алмас курăнмасть.

– Нарпи! Алмаса тупрăмăр! – кăшкăрчĕ тепĕр арçынна йăтса килекенсенчен пĕри. Нарпи чупса пычĕ, чăнах та Алмас иккен, чĕрех, анчах питĕ йывăррăн сывлать.



– Алмас! Алмас! – чĕнчĕ Нарпи. Лешĕ нимĕн те шарламарĕ, тăнне çухатрĕ.

Акă ăна шăналăк çине вырттарчĕç. Нарпи кăнтарса тăракан ухă йĕппине туртса кăларчĕ те кăшкăрса ячĕ:

– Эй, Турă! Мĕн туса хутăм-ха эпĕ!? Ку ухă йĕппи манăн вĕт! Алмас, каçар мана. Инçетрен паллаймарăм сана. Эх, çав Эсреле ăна!?

Чунĕ тăвăлса çитнипе куççульне çăтса йĕрекен Нарпи ухă йĕппине хуçрĕ те айккинелле печĕ, унтан хулпуççи урлă çакнă ухха вăркăнтарса ячĕ. «Куçăм ан куртăр çак япаласене», – терĕ.

– Суранне курăк шывĕпе сĕресчĕ, – илтĕнчĕ тахăшин сасси.

– Çук ĕнтĕ, ухă йĕппи наркăмăшлă.

Нарпи пурпĕрех парăнма шутламарĕ, Алмас кĕпине

туртса çурчĕ те кăкăртан тапса тăракан юна ĕмсе иле-иле айккинелле сурчĕ. Ӳчĕ вара çамрăк турханăн кăвар пек вĕриленсе кайнă, тутана пĕçертет.

Çакăнта пулса иртнине Юман нимĕн шарламасăр пăхса тăчĕ. Нарпи çав тери çине тăни ун кăмăлне самай хускатрĕ. Алмас вырăнĕнче хăйĕн пулас килнĕ самант та сисĕнчĕ, паллах, суранланнă сăлтавпа мар ĕнтĕ. Сывлăх йĕркеллĕ чухне çакăн пек таса туйăм курасчĕ унăн. Савăннипе пĕлĕте çити вĕçсе кайĕччĕ. Анчах мĕн тăвăн-ха, Нарпи Алмаса савать.

Нарпи çĕрĕпех Алмас çумĕнчен хăпмарĕ, куçне пĕртте хупмарĕ. Аякра-аякра кашкăрсем чылайччен хурлăхлăн уларĕç. Хĕвел тухнă тĕлелле турхан куçне уçрĕ те Нарпи çине питĕ тимлĕн пăхса илчĕ. Лешĕ хĕпĕртенипе пĕрремĕш хут чуптуса илчĕ те: «Маттур, Алмас, маттур», – терĕ сылтăм аллипе пуçĕнчен шăлса. Анчах çак самант нумая пымарĕ, Алмас пĕтĕм вăйне пухса хыттăн туртăнса илчĕ те куçне хупрĕ, тепĕр самантран сывлами пулчĕ. Сывпуллашрĕ, мĕскĕн. Çут тĕнчемĕр çине юлашки хут пăхса илчĕ. Нарпи куçĕ шыва ӳкнĕ шăрçа пек куççуль ăшне путрĕ, йăлкăшса тăракан ирхи хĕвел те ăна хăмăр тĕслĕн курăнчĕ. Чĕре те, темĕскер тухса ӳкнĕ пек, пушанса юлчĕ, шанчăк сӳнчĕ.

## XVII

**А**кă, аслă çулпа ял еннелле икĕ юланутçă вĕçтерсе пыраççĕ. «Улăп таврăнать! Юман-паттăр килет! Çĕнтерӳпе килеççĕ!» – тесе кăшкăрни аякранах илтĕнет. Тахçантанпах кĕтнĕ ырă хыпар халăха хăвăрт пухрĕ. Элпи те кунтах, питĕ капăр тумпа. Унтан инçех мар туя çине тайăннă ватă мăчавăрпа Минеслу тăраççĕ.



Кӗҫех лаша ҫинче мӑнаҫлӑн ларакан паттӑрсем курӑнса кайрӗҫ. Улӑппа Юман кӑшт маларах пыраҫҫӗ. Таврана сӑрнай сасси хупласа илчӗ. Улӑп ҫывхарнӑҫемӗн пӗтӗм халӑх чӗркуҫленсе ларчӗ. Элпи кӑна тӑрать. Лешсем пӗр самантлӑха чарӑнчӗҫ те лашисем ҫинчен анчӗҫ, кунталла ҫуран утса ҫывхарчӗҫ. Улӑп хыҫалтан пыракан ҫарӑҫран Эсрел пуҫне илчӗ те Элпи умне пӑрахрӗ, Юман – Озал пуҫне.

– Атте Эсреле тӗп турӗ, эпӗ Озала ҫӗнтертӗм, – пӗлтерчӗ Юман мӑнаҫланса, вара амӑшне пырса ыталарӗ.

– Текех чӑваш ҫӗрӗ ҫине ҫичӗ ют ури пусмӗ! – терӗ хыттӑн Улӑп-паттӑр.

Халӑх ура ҫине тӑчӗ те юрласа ячӗ.

Мухтав турра,
Мухтав турра,
Мухтав паттăр Улăпа!
Вăрçăран çĕнтерсе таврăнсан та,
Хĕççене алăран ярар мар.
Çичĕ ют çывăхра пулмасан та,
Хĕççене хăйрама манар мар!
Мухтав турра,
Мухтав турра,
Мухтав паттăр Улăпа.

Часах çарăççемпе тăванĕсем пĕр-пĕрин патне чупса пырса ыталанса илчĕç. Шăп çав самантра аманнисемпе вилнисене турттарса килнĕ лавсем те çитсе чарăнчĕç. Çынсем макăра-макăра тăванĕсене шырама тытăнчĕç. Акă икĕ çарăç Алмас турхан ӳтне урапа çинчен антарчĕç те халăх умне пырса хучĕç. Калима ăна палласа илчĕ те чĕркуçленсе ларсах макăрма тытăнчĕ, уксах Микка та куçне шăла-шăла илчĕ. Çав самантра хыçаларах тăнă Чĕкеç çынсене тĕке-тĕке мала тухрĕ те икĕ аллипе пуçне тытса ниçта кайса кĕрейми çаврăнса илчĕ, унтан Алмас кăкри çине ӳкрĕ. Мĕн пулса иртнине тавçăрса илеймен халăх шăпланчĕ.

– Эй, тĕнче! Ывăлăм! Каçар мана. Ватрас килне паман пулсассăн, пурăнаттăн, ылтăнăм...

Çынсем тепĕр хут шавласа кайрĕç, тĕлĕннипе пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ. Калима та айккинерех кайса тăчĕ те кăштах лăпланчĕ. Вăл тӳрех Чĕкеç пĕрмаях пырса çӳренине, юлашки вăхăтра тата Алмаса илсе килес пирки ятлаçса калаçнине тепĕр хут аса илчĕ. «Ман тăван пичче мар вăл. Апла пулсассăн турхан йăхĕнчен эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм...»

Кукашшĕпе юнашар тăракан Нарпи те куççульне тытса чараймарĕ, Чĕкеç патне пырса тăчĕ. Лешĕ Нарпие: «Санăн пиччӳ пулать вăл, пĕр аттерен çуралнă эсир»,–терĕ.

Çак сăмахсем вара чĕререн çĕçĕпе яшлаттарнă пекех туйăнчĕç. Нарпи аллинчен вĕçерĕннĕ ухă йĕппин мĕншĕн-ха Алмаса тивмеллеччĕ? Мĕншĕн-ха çак вăрçă Нарпишĕн çапла ăнăçсăр вĕçленчĕ?

Çынсем саланма пуçларĕç, хăшĕсем вăрăм туя çине тăхăнтарнă Эсрелпе Озал пуçне питĕнчен сура-сура иртсе кайрĕç. Улăп мăчавăр патне пычĕ те вилнисене тирпейлесе пытарасси пирки асăрхаттарчĕ. Чĕкеç Алмаса хăй патне илсе кайрĕ. Лав хыçĕнчен Чĕкеçпе пĕрле Нарпи утса пычĕ.

– Эсир киле кайăр-ха. Манăн турхансемпе калаçмалли пур, – терĕ Улăп Элпипе Юмана.

Чылайччен калаçрĕç пуçлăхсем. Мĕн çинченни паллă ĕнтĕ: пурнăçа пачах урăхла йĕркелесе ярасси çинчен. «Чĕрĕлӳ», «çĕнетӳ» сăмахсем те тупăнчĕç. Ирĕке тухнă халăхăн тулăх пурнăçпа пурăнмалла. Туса илнĕ пурлăх та кунтах юлмалла.

Улăпа килĕнче Элпипе Юман кĕтсе илчĕç. Ывăлĕн çийĕнчи капăр шупăра курсассăн ашшĕ питĕнче кулă çиçсе илчĕ.

– Анне парни ку, – терĕ Юман.

Элпи тĕпелтен илемлĕ куркапа сăра йăтса тухрĕ.

– Паттăртан та паттăр Улăп, ĕçсе парсам çак çĕнтерӳ куркине. Çĕнтерӳшĕн пултăр.

Улăп куркана тытрĕ те васкамасăр тута патне илсе пычĕ. Çав самантра алăк яр! уçăлса кайрĕ те Нарпи кăшкăрса ячĕ:

– Улăп! Ан ĕç! Наркăмăшлă сăра вăл! Ĕçсенех вилсе выртатăн!

– Мĕн кирлĕ мара палкатăн? Юри тунă техĕмлĕ сăра вăл. Тухса кай кунтан! Кам чĕннĕ сана!?

– Апла малтан хам ĕçсе парам-ха, – терĕ Юман куркана ашшĕнчен илсе.

Элпи пĕр самантрах сăнран улшăнчĕ, пичĕ çине хĕрлĕ пăнчăсем сике-сике тухрĕç. Юман патне хуллен утса пычĕ те чĕтрекен аллипе сăра куркине туртса илчĕ.

– Ĕненместĕр пулсан... Ывăлăм... Хам ĕçсе парам эппин...

Тен, ĕçмелле те мар, наркăмăшлă куркана вăркăнтарса ямалла та... Кун пек те çăлăнăç пулас çук. Улăп урса кайĕ те... «Ывăлăм, сывă пул», – ăшра сывпуллашрĕ те Элпи Юман çинчен куç илмесĕр куркана тĕппипех ĕçсе ячĕ. Тăм курка çĕре ӳкрĕ, аври айккинелле сирпĕнсе кайрĕ. Куçне чарса пăрахнă хĕрарăм аран-аран утса чаплă пукан çине пырса ларчĕ, пуçне пăркаласа аташуллă сăмахне пуçларĕ:

– Улăп, эсĕ мар, эпĕ – патша!.. Улăп, эсĕ те мар, эпĕ те мар, Юман – патша... Ывăлăм, Улăп пур чухне эсĕ патша пулаймăн...

Элпи ура çине тăма хăтланчĕ, анчах урайне тăсăлса ӳкрĕ. Юманпа Нарпи чупса пычĕç те йăтса тăратма пикенчĕç. Ĕç тухмарĕ. Урисем пачах та тытмаççĕ. Вырăн çине майлаштарса вырттарсан кĕçех питĕ кĕскен кăна сывлама тытăнчĕ. Нарпи Элпие шыв ĕçтересшĕнччĕ, лешĕ çăварне хытă çыртса лартнă иккен.

– Анне! Мĕншĕн çапла турăн? – ыйтрĕ Юман. Çăлма май çуккине ăнланчĕ ĕнтĕ вăл.

– Сан сăмахху тĕрĕсех, хĕрĕм. Ăçтан пĕлме пултарнă вара эсĕ çакна? – тĕлĕнчĕ Улăп.

– Чĕкеç аппа каларĕ. Элпин усал шухăшне пур-

нăçлама парас марччĕ, чуп-ха часрах терĕ. Юрать-ха, вăхăтра çитрĕм.

– Усал шухăш хăйнех пырса çапрĕ, – терĕ Элпи мĕншĕн çапла хăтланнине тинех чухласа илнĕ Улăп. Урăх нимĕн те шарламарĕ.

Нарпи Чĕкеç патне васкарĕ. Ыран вĕсен Алмаса тирпейлесе пытармалла. Ку килте те çав ĕçех пусăнмалла...

Ирĕклĕхшĕн пуçне хунă паттăрсене пурне те пĕрле вырттарса пытарас терĕç. Пысăк шăтăк чаврĕç, йĕритавра çирĕп пĕренесенчен пура тытрĕç. Çын пĕтĕмпех вилмест вăл, çĕр çинчен кайсан урăхларах пурнăçа куçать. Унта кирлĕ япаласене те пĕрлех хурса ямалла: чустаран тунă лаша кĕлеткисем, сăнăсем, хĕçсем, ухăсем...

Вил тăприне вара питĕ çӳллĕ купаларĕç, таçтанах курăнса ларать.

Вăхăт иртнĕçемĕн чĕрери сурансем хуллен тӳрленеççех. Кашни кун мĕн те пулин çĕнни илсе килет. Туй та пулать, ачасем те çуралаççĕ, пурнăç малаллах талпăнать.

Акă, каллех каçсерен вăйă юрри илтĕнме пуçларĕ. Вăйă карти те пысăкланса пычĕ. Тыткăнран çăлăнса килнĕ каччăсемпе хĕрсем те тухрĕç. Юманпа Нарпи те кунтах...

Пĕр кунхине Улăп ытти çĕрти чăвашсем мĕнлерех пурăнаççĕ-ши тесе вăрăм çула тухрĕ. Юмана та пĕрле илчĕ. Вăл та куртăр, халăхпа паллаштăр. Ялран-яла çӳрерĕç, турхансемпе, шурсухалсемпе тĕл пулса калаçрĕç. Пур çĕрте те çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç, сăрапа хăналарĕç, юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

Пысăк иккен Чăваш Çĕршывĕ! Мĕнле илемлĕ вырăнсем: юханшывсем, кӳлĕсем, вăрмансем, тулли пу-

чахлă анасем... Çурт лартмашкăн чул нумай, кирпĕч çапмашкăн – тăмĕ, хăйăрĕ, тимĕрç лаççине юрлаттармашкăн шурлăхлăрах вырăнсенче тимĕр тăпри пур. Пуян иккен Чăваш Çĕршывĕ!

Çапла курса çӳренĕ хыççăн чăвашсен тĕп хулине лартас шухăш çуралчĕ. Халĕ ĕнтĕ вырăнĕ те паллă, кунтан инçех те мар, Атăлпа Шур Атăл пĕрлешнĕ тĕлерех. Турхансем сĕннипе малтан Улăп керменне лартас терĕç. Халăх мăн нимене йышлăн тухрĕ.Шӳтлесе, юрласа çурт тунă çĕрте Микка нухайкки никама та кирлĕ пулмарĕ...

Кĕçех таврана тепĕр хыпар сарăлчĕ. Улăп хăй ывăлне авлантарасси çинчен пĕлтерчĕ. Юманшăн вара çакă калама çук пысăк савăнăç. Ун пулас арăмĕ Нарпи иккен. Эппин ĕмĕтленни пурнăçа кĕрсе пырать. Çапах та ăш вăркать. Улăппа мăчавăр калаçса татăлни паллă-ха, Нарпи хăй мĕн калĕ-ши?

Юман паян хĕвел çине пăха-пăха ятлаçкаласа та илчĕ.Темшĕн ытла хуллен шăвать-çке, каç еннелле васкамасть. Каччă чăтса тăраймарĕ, тĕлпулу вырăнне çитсе те тăчĕ. Нарпи килмен-ха, иртерех. Акă, унччен хăвăт та çитрĕ. Курăнмасть. Мĕн пулчĕ-ши вара, чирлемерĕ-ши? Ыйту хыççăн ыйту. Кĕтнĕ чухне мĕн кăна пырса кĕмест пуçа.

– Юман! – илтĕнчĕ васкаса çывхаракан Нарпи сасси.

– Нарпи! – чупса пычĕ хирĕç хĕпĕртесе ӳкнĕ каччă. Пĕрне-пĕри ыталаса илчĕç те пĕр самант нимĕн шарламасăр тăчĕç. Хыттăн тапакан чĕрисем икĕ çамрăкăн ĕмĕчĕсем пĕр евĕрлех пулнине сăмахсăрах пĕлтерчĕç...

Туя туй пек тумалла ĕнтĕ, лайăх хатĕрленмелле. Улăп ывăлĕ авланать вĕт-ха, хĕрĕ те сумлă йăхран, мăчавăр

килӗнчен. Туй вӑл ҫав тери пысӑк пӗлтерӗшлӗ самант. Унта ҫӗнӗ ҫемье ҫуралать, ҫыннӑн чӑн-чӑн пурнӑҫӗ пуҫланать. Пӗччен пурнӑҫ вӑл ҫурма пурнӑҫ кӑна, тӗллевӗ те пит паллах мар. Мӑшӑрланнӑ хыҫҫӑн вара пачах урӑхла: камшӑн пурӑнни те паллӑ, пурнӑҫ ҫулӗ те уҫӑмлӑрах.

Туй чӑрмавӗ, канӑҫсӑр ӗҫ пӗтӗмпех Чӗкеҫе тиврӗ. Иккӗшӗн те амӑшӗсем ҫук. Икӗ ватӑ арҫынтан, Улӑппа мӑчавӑртан, усси пит нумаях мар. Апат-ҫимӗҫ валли тупса парӗҫ-ха, анчах пӗҫерме пӗлмелле вӗт-ха, сӑрине те пички-пичкипех туса лартмалла. Юрать-ха, ун пек чухне тӑвансем хастар хутшӑнаҫҫӗ, йӑх ятне ӳкермелле мар. Ку ҫеҫ те мар-ха, тӑвансен чи пысӑк тивӗҫӗ вӑл хӗр тупри хатӗрлесси. Пуян хӗрӗн чапӗ те, сумӗ те пысӑкрах. Нарпи хӑй те пултарать-ха, анчах пулӑшу кирлех. Кӗҫех мӑчавӑр килӗнче алӑстисем юрлани илтӗнме пуҫларӗ.

Улӑп керменӗнче те хӗвӗшӳ пырать. Арҫын туйне хатӗрленеҫҫӗ. Кунти пурлӑх пахалӑхӗ патша шайӗнче пулмалла: турхансем тата чӑваш ҫӗрӗнчи ытти сумлӑ ҫынсем килмелле...

Чаплӑ туй пӗр эрне кӗрлерӗ. Ӗҫкӗ-ҫикӗ пурне те ҫитрӗ. Туй сӑри тутанса пӑхман ҫын та юлмарӗ.

Ырӑ хыпар ытти халӑхсем патне те ҫитнӗ иккен. Хӗвел анӑҫ енчен Остап килчӗ, кӑнтӑртан – Махмуд. Ольга сывӑ юлнӑ пулсассӑн, тен, вӑл та килетчӗ? (Йывӑр тӑпри ҫӑмӑл пултӑр). Кусем вара парнесемпех килнӗ. Махмуд Юмана ӑратлӑ лаша пачӗ, Нарпи валли Остап тинӗс сухӑрӗнчен тунӑ пӗчӗк арча илсе килнӗ. Шала вара сӑн-пите хитрелетмелли хатӗрсем хунӑ. Ҫамрӑк мӑшӑра ырлӑх-сывлӑх, телей, пӳрт тулли ача сӗннисӗр пуҫне Улӑпа та тав турӗҫ, хӗҫпе пырса ирӗке кӑлар-

нине нихăçан та манмăпăр терĕç. Эппин, тăрăшни сая каймарĕ, çĕнĕ ăру валли такăр çул уçăлчĕ. Юманшăн çакăн пек шанчăклă туссем тупăнни хăех мĕне тăрать. Çакна курсассăн нихăçан макăрса курман Улăп куçĕнчен савăнăç куççулĕ сăрхăнса тухрĕ. Çулсем иртнĕçемĕн кăмăл та çемĕçсе пырать-мĕн.

Чăваш хăй те хăнана пушă алăпа çӳремест, килнĕ хăнана та кучченеçсĕр ямасть. Кунта пурнăçĕнче пĕрремĕш хут активнĕ сăрапа шăрттана Юман тусĕсем хĕпĕртесех йышăнчĕç.

Çамрăк мăшăра вара Улăппа мăчавăр юнашар тăрсах телей пиллерĕç, вăрман пек пуян, уй пек аслă, тапса тăракан çăлкуç пек таса пулăр, иккĕн выртса виççĕн тăрăр, ваттипе ватă пек калаçăр, çамрăккипе – çамрăк пек, мĕн ватăличчен пĕрле пурăнăр, чăваш ятне ан çĕртĕр, чăваш туррине ан манар терĕç. Ку сăмахсен пĕлтерĕшĕ паллă ĕнтĕ, туйăн йĕрки çапла. Анчах тĕлĕнмелли те тупăнчĕ. Улăп хăй хĕççине илчĕ те: «Çакна сан аллуна паратăп. Тăван халăхшăн шанчăклă хӳтĕлĕх пул!» – терĕ. Юман йăлтăртатса тăракан хĕççе тытрĕ те чуптуса илчĕ.

Çакна курсассăн чылайăшĕн пуçĕнче канăçсăр ыйту çуралчĕ: «Нивушлĕ патша пуканне те Юмана парĕ?..»

Пур япалан та вĕçĕ пур. Акă туй та шавласа иртсе кайрĕ. Пур çĕрте те лăпкăлăх хуçаланать. Кĕçĕн çынпа упăшки те ире хирĕç пушшех канлĕ çывăраççĕ. Тен, ырă тĕлĕк курса киленеççĕ. Улăп вара килте çук. Каярах та курăнмарĕ.

Анчах çынсем тепĕр япалана асăрхарĕç: тул çутăлнă тĕле паттăрсен масарĕнчен инçех мар питĕ çӳллĕ сăрт ӳссе ларнă, аякранах курăнать. Тимлĕрех пăхсассăн унта Улăп сăнне асăрхатăн. Сăрт пулса тăнă иккен вăл. Чăваш

çĕршывĕн чиккисене асăрхаса тăрать ĕнтĕ. Халăхшăн йывăрлăх сиксе тухас пулсассăн чĕрĕлсе тăрса çапăçăва кĕме хатĕр.

Çав сăртăн пĕр енчи шурă тăмлă вырăнĕнчен арман пĕви патнелле тăрă шыв сăрхăнса тухать. Çынсем ăна Илемпи куççулĕ теççĕ, сывлăха тесе ĕçеççĕ, таçтан инçетрен килекенсем те йышланса пыраççĕ. Çав шывпа йĕпеннĕ шурă тăма пите сĕрсессĕн – илемшĕн теççĕ.

Улăп пурне те курать, кам мĕн тунине асăрхать. Вăхăтра çумăр çăвасси е çăвĕпе вĕри хĕвел хĕртсе калчана типĕтсе лартасси пĕтĕмпех Улăпран килет теççĕ. Ун кăмăлĕ вара – чăвашсем мĕнле пурăннинчен иккен. Туслă пурăнар, усал ĕçпе пĕр-пĕрне кӳрентерер мар, Улăпа çиллентерер мар.

Çапла пултăр!
Çапла пултăр!
Çапла пултăр!

*2001, нарăс.*